К84.89(=Чув)
Э53
Ч-40178

Валентина
ЭЛЬБИ



# Пепке çуралсан...

Пепке çуралсан...
Валентина ЭЛЬБИ

Национальная библиотека ЧР
4-040178

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

84.89(=Чув)
Э53

Валентина ЭЛЬБИ

# Пепке çуралсан...

Повеçсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
2006

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув) 6—4
Э 53

Ч-40178

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

ПРОВЕРЕНО
20 13 СЕН 2017

**Эльби В.А.**
Э 53 Пепке çуралсан...: Повеçсем. — Шупашкар, Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. — 255 с.

Кĕнекене виçĕ çĕнĕ повесть: «Уйăх çинчи пике курнă...», «Пепке çуралсан...» тата «Юнтарнă пĕлĕт» кĕнĕ. Хайлавсенчи тĕп сăнарсем — таса та тӳрĕ чунлă çамрăк хĕрарăмсем. Ăмсанакансен элекĕ сахал мар ура лартать вĕсене пурнăçра. Апла пулин те çамрăк хĕрарăмсем пуçа усмаççĕ, темле йывăр килсен те малаллах талпăнаççĕ.

ISBN 5-7670-1450-7

© Эльби В.А., 2006
© Чăваш кĕнеке издательстви, 2006



# УЙĂХ ÇИНЧИ ПИКЕ КУРНĂ...

## 1

Ĕнтĕ тарăн çырмасем юр шывне сиктере-сиктере шавлăн юхтарса ăсатрĕç Аталалла, çĕр пичĕ хĕл кирĕкĕнчен çăвăнса тасалчĕ. Йывăç-курăк сатур ешерет апат-çимĕç паракан нӳрлĕ тăпрапа киленсе. Сывлăш — сим пыл. Пурте кăкăр туллин сывлать. Ял çынни вара пĕр пысăк ĕçрен пушанчĕ — çĕр улми лартрĕ.

Шăп çак кунсенчен пĕринче Çырмапуç ялĕнче хыпар сарăлчĕ. Питĕ хăвăрт. Тĕрĕссипех каламалла, хыпарĕ лайăххи, халăха хавхалантараканни.

— Фельдшер килчĕ. Паян ăна ял администрацийĕн пуçлăхĕ Карп Сидоровичпа медпункта ертсе кайрăмăр, — терĕ медпунктра тахçантанпах техничкăра ĕçлекен тăлăх арăм Сухви шыв колонки патĕнче тĕл пулнă кӳршине, Анук тăхлачăн кинне.

Путех, çак хыпара çил ачисем хăйсен çунатти çине лартрĕç-тĕр. Вĕçтерчĕç урамсем тăрăх, кĕрсе тухман пĕр кил хăвармарĕçех. Шĕкĕлченчĕ пулĕ пурин çăварĕнчех, вара кашнин ăшĕнче пин ыйту çуратрĕ-тĕр ку хыпар.

— Фельдшерĕ мĕнлескер? Арçын-и, хĕрарăм-и? Ватă-и, çамрăк-и?

Хуравĕ акă мĕнле:

— Çап-çамрăк хĕр пĕрчи. Ячĕ — Умрай, хушамачĕ — Пушака.

Чăваш тени мĕн илтнипе çеç çырлахмасть, унăн куçпа курса ĕненмелле. Утрĕç вара урам тăрăх. Ваттисен хăйсен сăлтавĕ пур. Вĕсем аптрасах çитнĕччĕ-ха, ара, мĕн те пулин ыратсан никамран та пулăшу çукчĕ. Йĕкĕтсен

хайсен тĕллевĕ: фельдшерĕ чăнахах та çамрăк пулсан ăна арăм тума май килмест-и? Юлашки çулсенче авланма вăхăт çитнĕ яшсем йышланчĕç. Сăлтавсăр мар, ара, ялта çитĕннĕ пĕр хĕр упраç юлмарĕ. Тăван кил çывăхĕнче ĕç тупайман пирки чылайăшĕ хулана тапрĕ.

Ав туя тытнă карчăк-кĕрчĕк, ятарласа капăр тумланнă каччă-терĕш иртет пысăк чӳречесемлĕ, уй хĕрринче ларакан шултра хыр пĕренесемлĕ медпункт çурчĕ умĕн. Пурте тинкерсе пăхрĕç. Алăкĕ хупă. Курчĕç: хуралта — «салтак» — пысăк çăра. Кантăкран та тулалла никам пăхмасть. Шел, кашниннех кăмăл хуçăлчĕ вара. Ăçта-ши пурте курма ĕмĕтленнĕ çынни?

* * *

Умрай Пушака фельдшер çак вăхăтра ял çăвинче вилтăприсен речĕсем хушшипе такăрлатнă сукмаксем тăрăх çӳрет. Айккинчен пăхсан ăна пукане тейĕн. Кашта евĕр вăрăм мар вăл, тунката пек лутра тесе те калаймăн. Чух эппин. Пилĕкĕ çип-çинçе, тупата, ним мар йĕп çăрти витĕр тухать. Çакă халĕ уйрăмах куçа курăнать: унăн çийĕнче хура костюм, кофти — пилĕклĕ. Сарă çӳçĕ вăрăм. Ăна çивĕтлемен, çурăм çийĕпе ярт янă. Калăн, çӳç пайăрки мар, тутăр шерепи. Пуçĕнчи кăвак тĕслĕ беретне çамкине хупласах пусса лартнă. Куçĕ хĕсĕкрех унăн. Чакăр тĕслĕренши, çăлтăр евĕр йăлтăртатать.

Умрай çăва çине амăшĕн вилтăприне шырама килнĕ. Вăл унран пил ыйтасшăн, ара, хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче пуçласа ĕçе кӳлĕнет-çке-ха. Кăçал медицина училищинчен вĕренсе тухрĕ, ĕçлеме çак Çырмапуç ялне вырнаçрĕ.

Ăçтарах выртать-ши мĕскĕн? Паллах, чаплă палăк айĕнче мар. Нимле паллăсăр тĕмеске курсан тăрать Умрай пĕр кана чарăнса. Ун йышшисем кунта сахал мар. Тен, амăшне çак масар çине те пытарман? Кам ăна ăнлантарĕ? Пур-ши çутă тĕнчере çакна тĕплĕн пĕлекен?

— Пур!

Кам çапла хăюллăн сас парать?

— Тавçăру, туйăм, курни!

— Кураканӗ кам?

— Уйăх çинчи кĕвентеллĕ пике курнă. Вăл йăлтах пĕлет. Илмелле çеç алла унăн темиçе çул каялла çырнă

кун кĕнекине. Вуласан куç умне акă мĕн-мĕн тухса тăнă пулĕччĕ.

...Çуркунне. Юр ирĕлет. Сĕлкĕшленнĕ çулпа хĕрарăм утать. Эпĕ ăна тахçантанпах пĕлетĕп. Маньакка тесе чĕнеççĕ ăна. Ытти çынсем пек калаçаймасть вăл — чĕлхесĕр. Аллинче çич-сакăр уйăхри хĕр ача, Умрай ятлăскер.

Маньакка ача çуртне кайма тухнă. Пепкине вăхăтлăха унта вырнаçтарасшăн. Çамрăк-çке-ха вăл — вун саккăрта çеç. Ӳлĕм пурăнмалли пайтах. Кирлĕ ĕмĕт тытнă: чĕлхесĕрсен шкулне вĕренме кĕресшĕн. Кайран, вĕренсе тухсан, ĕçе вырнаçсан, пепкине каллех ача çуртĕнчен хăйпе пĕрле пурăнма илсе каять.

Акă вăрăм çул ача йăтнă Маньаккана тарăн çырма хĕррине илсе çитерчĕ. Ун урлă каçсанах — ача çурчĕ. Çывăх вăл, алă тăссан çитмелле. Анчах çул пат! татăлчĕ. Çырма тĕпĕнче шавласа та явăнса çурхи шыв юхать. Пăхрĕ те Маньакка — хăранипе тăр-тăр-р чĕтресе илчĕ. Хăрушă. Ун урлă мĕнле каçмалла тет? Пултарассăн туйăнмасть. Апла каялла каймалла-и? Киле çитме çăмăл-и? Асту. Билет туянса пуйăс çине ларасси хăй мĕне тăрать! Мĕн каласси пур, чăрмав! Шыв сарăлнă айлăмсем те тĕл пулаççĕ. Тепĕр тесен, килте савăннипе алă сарса ыталакан çын çук, нихăçан та пулман. Эппин, нимле хăрушлăха, чăрмава уямасăр малаллах тапаçланмалла.

Тăрать-ха Маньакка çырма хĕрринче. Пусĕнче çырмари шыв юххи пекех шухăш пăтранать. Хырăм та выçă. Анчах хутаçра çăкăр чĕлли мар, тĕпренчĕк те юлман. Ачи те лăпкă мар, йĕрмешет, вăл та чĕчĕ ĕмесшĕн. Чухласчĕ, кăкринче пĕр тумлам сĕт çук, юхса тухнă кĕрпе хутаççи пек пушанса юлнă. Паçăр Маньакка ăна ăшă çăкăр чăмлакĕ хыптарнăччĕ-ха, тăранайман ĕнтĕ пахăр чунĕ.

— Лĕ-лĕ-лĕ, — йăпатать Маньакка пепкене. — Ан йĕр, няням. Халех çитетпĕр. Унта сана ырă кăмăллă аппасем тутлă яшка çитерĕç, пылак тӳттӳ ĕçтерĕç. Манни пăтти, ах, тутлă-çке...

Чĕлхи «калаçать», куçĕ çырма тĕпĕнче кĕрлесе юхакан çурхи шыв çинчен пăрăнмасть.

Маньакка пусĕнчи пысăк тутăрне салтрĕ те унпа ачине кăкăр çумне пăчăртаса çыхрĕ. Капла тинĕсри тăвăл хумĕ те пепкине тăпăлтарса илеймĕ. Чи кирли: икĕ алли

те ирĕклĕ. Кирлĕ документсене чикнĕ пĕчĕк енчĕкне пиншак кĕсйинчен кăларса ачин хĕвне чикрĕ. Ĕнтĕ хатĕр çурхи шывлă çырма урлă каçма. Тĕрĕслемелле сылтăм ура пуçне шыва чиксе чўхекелерĕ, тўрех ўт-пĕве чĕтрентерсе илчĕ. Тен, тĕпĕ тарăнах та мар. Унăн уринче резин боти. Эппин, шыв витмĕ те-ха. «Атя хăюллăрах пул! — хăйне хăй хĕтĕртрĕ Маньакка. — Эпĕ пĕччен мар, хĕрĕмпе иккĕн. Кайрăмăр. Малалла!»

Мăкăртатнă май сăхсăхрĕ вăл. Леш енне ăнăçлă каçарма тилмĕрчĕ Турăран. Çитменнине, каç чаршавĕ усăннăçемĕн усăнать. Ярт! пусрĕ. Пўлĕхçĕм, çырлах! Юхан шывăн тĕпĕ çук-няк. Юр шывĕ боти ăшне лакăртатсах тулчĕ те ура тунине çĕлен пек явса илчĕ, пĕç тăрăх çўлелле хăпарчĕ те хăпарчĕ, самант пилĕке ярса илчĕ. Ых-х! Хумсем ăна кимĕ çине вырттарнăн туйрĕ Маньакка. Чиперех юхать. Ишесчĕ. Алăсем итлемеççĕ. «Лĕ-лĕ-лĕ!» — кăшкăрчĕ вăл. «Пулăшă-ăр-р! Пулăшă-ăр-р!» тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Ах, çывăхра пĕр çын та çук-çке. Хăтаракан тупăнмĕ çав. Çăвара шыв кĕрет, сăмсана та хупларĕ. Хумсем ытла чăрсăр, сикеççĕ те сикеççĕ пуç урлă. Хĕрхенсемĕр! Ан асаплантарăр! Ахаль те вăл телейсĕр. Астăвăр, унăн аллинче пĕчĕк çын. Çын! Çурхи шыв, шелле! Пĕтме ан пар. Кирек камăн та пурăнас килет. Çын çĕр çине пурăнма çуралнă.

Çурхи шыв чунсăр çав. Тем пулчĕ тата? Юхăм ал арманĕ евĕр çаврăнма тытăнчĕ. Э-э-э, кукăра пырса çапăннăмĕн. Тўрĕ çул уçма вăй пухать. Акă хоп! пыра-пыра çапать çырана хăйĕн вăйлă çунаттипе. Шыв хăпарать шĕпĕл-шĕпĕл шĕпĕлтетсе. Тен, ку унăн юрри çапла, тен, чăрмава сирĕлме тилмĕрет. Тыт парне: шурă чечек — кăпăк! Ўкĕтлени пулăшрĕ-ши, çул тупăнчĕ кукăртан çăлăнса тухма. Халĕ текех чăрманасшăн мар пулас хăйĕн çиййĕн йывăр япалана юхтарса пыма. Тен, çакна ăнланчĕ юр шывĕ: ара, чĕрĕ çынсем-çке-ха вĕсем, амăшĕпе хĕр ачине сăмсаха пăрахса хăварчĕ. Пепки каçса кайсах йĕрет, вăл пăчăртаса çыхнă татăкран хăтăласшăн хирĕнет. Пĕчĕк пулин те ăнланать ахăр хăйсем хăрушлăх аллинче иккенне.

«Лĕ-лĕ-лĕ», — мăкăртатрĕ Маньакка. «Лăплан, сар кайăкăм, çăлăнтăмăр», — тени пулчĕ ĕнтĕ ку. Пуçĕ ĕçлетха. Çĕр çинче вăрахчен выртма юрамасть, чиперех шăнса пăсăлан. Кўлепе чул пек хытнă, пачах хускаласшăн мар.

Чылайччен тăрмашсан-тăрмашсан ура çине тăчĕ-тăчех Маньакка. Хăй тăрăх пăр пек сивĕ шыв юхать. Унччен те пулмарĕ, çавăнтах пăчкăпа касса татнă хурăн пек тӳп! кайса ӳкрĕ. Ӳкрĕ те тек тăраймарĕ мĕскĕнскер. Чĕри çурăлчĕ, чунĕ тухрĕ. Юрать-ха, хĕр ачин пурăнас кун-çулĕ пулнă. Ĕмĕрĕ пур та-ха, анчах пĕчĕккĕскере кам çăлĕ? Вăл тĕнчере пĕр-пĕччен, унăн тăван-пĕтен çук. Вăл — тинĕс хумĕ çинчи пĕчĕк кимĕ. Пайтах ăскĕ-ха ăна тăвăл. Ахалех каламан ваттисем тăлăххăн пурăнни — куççуль тăкни тесе.

Сахал-и, нумай-и вăхăт иртет, çырма хĕррине çулпа утакан арçын ушкăнĕ çитсе чарăнать. Вĕсем — вăрман касакансем. Кашнин хулпуççийĕ çинче вĕрлĕк. Çырманалла анчĕç. Тĕрĕсех, шутланă пекех пулса тухрĕ. Ав явăнса юхать çурхи шыв. Утса каçаймăн. Мĕнех, вĕсем çакна пĕлсе хатĕрленсе килнĕ те. Вăйпитти арçынсене хăратаймăн. Вĕсем çурхи çанталăкăн тискерлĕхне сирме хатĕр. Мĕнех, хĕвел аннă пулин, ун вырăнне тӳпере уйăх хуçаланать, çутă ярăмне тĕттĕмленнĕ тавралăха ăсатса тăрать.

Арçынсен ушкăнĕ ĕçе тытăнчĕ. Хăйсем вăрмантан çĕклесе килнĕ вăрăм йывăç вуллисене кĕрлесе юхакан çурхи шыв урлă хучĕç, меллĕ кĕпер хатĕр. Ăнăçлах каçрĕç. Ăнăçлăх кашнинех савăнтарчĕ. Ав пĕри, уçă сасли, савăк кăмăлли, юрласа ячĕ:

Упи каçман çырминчен
Эпир каçса килтĕмĕр...

— Чим-ха, ан ĕрлеш! — чарчĕ ăна юнашар утаканĕ. — Илтрĕр-и? Арçури! Ав ача сассипе епле йĕрет. Илтрĕр-и?

Тăп тăчĕç пурте шăпланса. Тăнлаççĕ.

— Атьăр тарар, атьсемĕр! — хĕтĕртет лешех, чи малтан ача йĕнине илтниех. — Усал ырă тумасть.

— Тĕнчере нимле арçури те çук, — терĕ юрă пуçланă йĕкĕт. Ыттисем пекех тăрса тăн-н итлерĕ. Вара хыттăн каларĕ: — Ара, ку, юлташсем, чăн-чăн ача йĕрет. Çапла, ача сасси. Такам инкеке лекнĕ. Тен, çурхи шыва ӳкнĕ. Шырăр, атьсемĕр!

Сасă илтĕннĕ еннелле çыран тăрăх темиçен чупрĕç.

Çитрĕç. Курчĕç. Пăрлă, юшкăнлă çĕр çинче хĕрарăм выртать. Унăн кăкăрĕ çинче — ача. Вăл каçăхсах йĕрет.

— Инке, тăрсам! Мĕн-ма сивĕ çĕр çинче выртан?
— Вилмен пулĕ те? — терĕ тепри.

— Сывламасть-няк!

— Вилнӗ. Чӗрӗ ҫын ним чӗнмесӗр выртмӗ.

— Ачине алла илер пулӗ, юлташсем, — терӗ вӑрман касакансен бригадирӗ, виҫӗ ача ашшӗ.

— Ан йӗр, пӗчӗк путене, — тытӑнчӗҫ йӑпатма вӗсен умне чӗркуҫленнӗ тетесем. Ача те ыратнипе, те ют ҫынсенчен хӑранипе-ши тата хытӑрах тытӑнчӗ йӗме. Ӑна амӑшӗ хӑй ҫумне пысӑк тутӑрпа ҫыхса лартнӑ. Ӑслӑ тунӑха ҫапла, аттушӑн тухса ӳксе шыва путатчӗ.

Арҫынсем майӗпен тутӑрне салтрӗҫ. Ача ирӗке тухрӗ. Ӑна пӗри ҫӗклесе илчӗ те ӑс парса тӑракан бригадира тыттарчӗ. Ача ашшӗ темерӗн, ав епле йӑпатма тытӑнчӗ:

— Пипи-и сан, няня? Ан йӗр, халех ӑшӑнӑн. — Ҫапла пуплесе бригадир хӑйӗн ҫийӗнчи туллатнӑ чӗркуҫҫи таран вӑрӑм кӗрӗк пиншак тӳмисене вӗҫертрӗ те пепкене кӑкӑр ҫумне пӑчӑртарӗ аракӗсемпе витсе. Кӑшт вӑхӑт иртсен ача лӑш пулчӗ.

— Тӳпен ҫеҫен хирӗнче пӗр татӑк пӗлӗт ҫук. Ҫап-ҫавраха уйӑх ирӗкре, вӑл пӗтӗм ҫӗр питне ҫутатать, — тӗлӗнет ушкӑнти пӗр ҫамрӑк. — Кӗвентеллӗ хӗр пирӗн ҫине шӑтарасла пӑхать.

— Ҫак вилнӗ хӗрарӑма шеллет ахӑр, — калаҫӑва хутшӑнчӗ юнашар тӑраканни. — Юхан шыв урлӑ каҫма вӑй ҫитернӗ-ха, апӑрша. Ӑҫта кайма тухнӑ ҫавнашкал вӑхӑтра? Вилӗмне ҫакӑнта тупнӑ. Мӗншӗн?

— Турӑ ҫырнинчен иртеймӗн.

— Пӳкле вилӗмрен пӳлӗх те ҫӑлайман тенӗ ваттисем.

Малалла мӗн пулнӑ? Уйӑх ҫинчи кӗвентеллӗ хӗрӗн кун кӗнекине малалла вуланӑ пулсан акӑ мӗн пӗлме пулать.

...Ҫурхи юхан шыв урлӑ хӑйсем хатӗрленӗ кӗпер урлӑ каҫнӑ вӑрман касакансен йышӗ тавҫӑруллӑ пулчӗ. Пепкене тӳрех ача ҫуртне илсе кайрӗҫ. Маньакка та ҫӗр ҫинче выртса юлман. Ҫывӑхри масар ҫине пытарчӗҫ. Унӑн вилтӑприн тӗмескине ӗнтӗ кӑнтӑрла ҫурта ҫутса шырасан та тупаяс ҫук, ара, ун ҫумӗнче нимле документ та пулман...

Хӗрӗ Умрай ҫакна пачах тӗшмӗртмест, вӑл амӑшӗн ятне те пӗлмест, ҫӳрет кӑлӑх ӗмӗтпе чунне пӑшӑрхантарса. Уйӑх ҫинчи кӗвентеллӗ пикен кун кӗнекине вуласанччӗ, анчах унашкал меслете ку таранччен ӑсчахсем шухӑшласа кӑларайман.

Акă Умрай тăпри путса аннă, армути тĕмĕсем ашкăрнă шăтăк тĕлĕнче чарăнса тăчĕ.

— Аннем, эсĕ выртмастăн-ши кунта? — пуплерĕ вăл хăйпе хăй. — Чухлатăп, санăн ĕмĕрлĕх кил-çуртна тирпейлекен никам та тупăнман. Мансăр пуçне, путех, тек ачу-пăчу та пулман тен. Ыран кĕреçе йатса килĕп тăпруна юсама. Ӳлĕм сан тавра тĕрлĕ чечек чĕлтĕртетĕ.

Умрай, шăтăк хĕрринче тăраканскер, сумкинчен кулач татăкĕ кăларчĕ те ăна хуçкаласа шăтăкалла пăрахрĕ. «Юратнă аннем, пилле, тутлă кулач умăнта пултăр», — тесе мăкăртатрĕ. Ку малтанхи сăмахсем пулĕç. Вара мĕн паянччен мĕнле пурăнни, вĕренни, çак çывăхри яла ĕçлеме килни çинчен тăхçаларĕ. Малаллахи ĕмĕчĕ пирки те калама манмарĕ вăл: «Халĕ эпĕ фельдшер çеç, ӳлĕм вĕренсе тухтăр пуласшăн. Ĕçлесе ура çине тăрăп та института вĕренме кайăп. Амăшĕсĕр ӳснĕ тăлăх ача пурнăçĕ вăл — йӳçĕ кăшман. Пар мана, аннеçĕм, пил. Пиллĕх илсен пин ылтăн тенĕ ваттисем. Вара пурнăçăм ăнăçлăн тĕвĕленсе пырĕ».

Çак вăхăтра çурăм хыçĕнче тахши кăшкăрчĕ:

— Аннем, илтетне, сан пата кинӳ килнĕ!

Ялт! çаврăнса пăхрĕ Умрай. Хыçра тăра парать çар тумĕллĕ йĕкĕт. Аллинче хăйĕн тимĕр кĕреçе.

— Мĕн терĕн эсĕ? — чăр-р пăхрĕ Умрай салтак çине.

— Аннем вилтăпри умĕнче чипер пике тăнине куртăм та çавăнпа каларăм «сан пата кинӳ килнĕ» тесе.

— Эпĕ хальлĕхе никам кинĕ те мар.

— Ку йăнăша хăвăрт юсама пулать. Мана качча тух.

— Качча тухма эпĕ ӳссе çитеймен-ха.

— Çав кун хăçан çитет? Каламăн-и?

— Сахалтан та пилĕк-ултă çултан.

— Ай-уй! Туя тытса çӳрекен кăрчамине тем тусан та анне кин тумастех.

— Тепĕр пилĕк-ултă çултан эпĕ ватăлатăп тесшĕн-и?

— Тĕрĕс ăнланнă. Ватăлса йӳтес мар тесен паянах, халех, качча тух мана. Анне пил парса ятăр пире.

— Эх, йӳтер. Хăв темиçе те авланнă пулĕ-ха. Килĕнте сак тулли ачу-пăчу йĕрсе ларать-тĕр.

— Йăнăшан. Авланма вăхăт пулман. Çар хĕсметĕнчен паян ирхине çеç таврăнтăм. Атя паллашар, — алне тăсса хăй ятне каларĕ вăл: — Эхтюк.

— Умрай, — терӗ хӗр те ал парса.

Сӑмах пине ҫитрӗ-ши? Сасартӑк чӗлхисем ҫыхланчӗҫ вӗсен. Йӗкӗт ӗҫе пуҫӑнчӗ, кӗреҫипе шӑтӑка тӑпра ыврӑтрӗ.

— Вӑй патӑр, — ырӑ сунчӗ Умрай ӑна. Вара каяс шухӑшпа айккинелле пӑрӑнчӗ.

— Тӑхта-ха, Умрай, — ӗҫе пӑрахсах чупса пырса хӗр пӗрчине аллинчен ярса тытрӗ Эхтюк. — Санӑн аннӳн вилтӑпри ӑҫтарах?

— Пӗлместӗп.

— Эппин, ӑна пӗрле шырӑпӑр.

— Васкатӑп ҫав.

— Чим-ха, эсӗ кам хӗр ачи пултӑн ҫак? Ҫара кайиччен сана курнине пачах астумастӑп.

— Эпӗ сирӗн ялсем мар.

— Ан култар! Эппин, аннӳн вилтӑприне мӗншӗн пирӗн ял масарӗнче шыран? — кулса ячӗ каччӑ.

— Ытахальтен, — терӗ Умрай.

— Чухлаймарӑм...

— Эсӗ тӑрӑш тавҫӑрма.

— Аннӳне хӑвӑр ял ҫӑвине пытарнӑ ахӑр.

— Манӑн тӑван ял ҫук.

— Ха-ха-ха, — кулчӗ каллех салтак. — Сӗм вӑрманта ҫуралса упа шӑтӑкӗнче ӳснӗ тесшӗн-и?

— Мӗншӗн упа шӑтӑкӗнче? Ача ҫуртӗнче ӳснӗ. Мана сирӗн яла ӗҫлеме ячӗҫ. Эпӗ — фельдшер. Паян ирпе ҫеҫ ҫитрӗм. Тепӗр сехетрен ӗҫе кӳлӗнетӗп.

— Саламлатӑп! Ӑнкартӑм: сан хыҫҫӑн аннӳ те пирӗн ял ҫӑвине килсе выртнӑ. Халӗ масар хапхи патне ҫити ӑсатса яма ирӗк пар.

Хӗр пӗрчи кӑшт туртӑнкаларӗ. Анчах ҫӑва тӑрӑх пӗччен ҫӳрени аванах та мар. «Ӑсаттӑрин», — шухӑшларӗ вара.

Чиперкке хирӗҫлеменнине сисрӗ те Эхтюк юнашар утма тытӑнчӗ. Вӑл пикепе ҫывӑхрах паллашас шутпа хӑй хушаматне пӗлтерчӗ: — Иванов. Хӗрӗнне те пӗлчӗ — Пушака.

— У-у-у! Илтме хӑнӑхман ку хушамата.

— Ача ҫурчӗ панӑ хушамат. Ҫавӑ ҫеҫ.

Каччӑн нумай ыйту ҫуралчӗ, пикен хуравӗ те сахал мар. Вӑл пуранна ача ҫуртӗнче питӗ хулӑн кӗнеке упранать. Унта кашни пепке ҫинчен ҫырнӑ сыпӑк пур. Умрай ӳссен ҫав кӗнекере хӑй ҫинчен ҫырнине тупса вуланӑ.

Ача çуртне ăна çĕрле илсе пынă. Çуса тумлантарнă, апат çитерсе кравать çине вырттарнă. Кунти ĕçченсем пепке çинчен çырма тытăннă вăхăтра пуш уйăхĕ вĕçленсе ака уйăхĕ пуçланнă самант пулнă. Икĕ уйăх ятне çыпăçтарнă та — ме сана хушамат — Пушака. Ячĕ такам тупса паниех. Унăн хĕвĕнче амăшĕ метрика чикнĕ пĕчĕк хутаç упраннă. Анчах шывпа йĕпенсе сўсленнĕ хут татки çинче ята çырнă сăмаха çеç вулама май килнĕ.

Масар тăрăх мар, пĕр-пĕр сад пахчинче утаççĕ тейĕн ку каччăпа пике. Ав йывăç тураттисем хушшинче вĕсем çине ăмсанса пăхакан сар кайăксем юрă шăрантараççĕ. Путех, вĕсене кăмăлланипе саламласа юрлаççĕ ахăр.

Пĕрре тĕл пулсах ăçтан тĕпчесе пĕтерĕн йăлт, юлтăрин ўлĕме. Вĕсем çăва хапхи патне çитрĕç.

— Ал памастăп, — терĕ Эхтюк. — Часах тĕл пуласса шанатăп. Тĕрĕс калатăп-и?

— Эрнеччĕ те, анчах эрне кун мар çав паян, — йăлйăл кулса илчĕ те Умрай чупнă пекех хăвăрт утрĕ малалла, ял еннелле.

## 2

Амбулаторин алăкĕ те, чўречисем те янках уçă. Сухви кĕрмешет мар-и. Васкасах сĕтел-пукана нўрлĕ пир татăкĕпе шăлчĕ. Фельдшера çеç мар, кунта килекен çынсене те таса пўлĕм хĕвел çутипе йăлтăртатса тăнипе тĕлĕнтересшĕн пулас. Сывлăшĕ те техĕмлĕ. Шурă чĕнтĕрлĕ пĕркенчĕкпе капăрланнă çĕмĕрт, чўречерен кармашнăскер, хăйĕн тутлă шăршăллă духийĕпе пĕрĕхет.

Сухви хăлхи — мулкач хăлхи. Илтрĕ. Алкум картлашкипе тахши шутсăр сыхланса хăпарать. Унăн кушак ури, нимле сас-чў кăлармасăр шăвать. Йăш пăхрĕ Сухви. Курчĕ. Мăнтăр Варуççа иккен. Ял купăсĕ. Такам çинчен те тем те пĕлет. Илтнине такам çине йăвантарать, элеке ĕнентересшĕн сăхсăхать. Ялта пĕр çын юлман унăн ал арманĕ витĕр тухманни. Сухви çинчен те тем те пĕр туртса кăларнă. Техничкăра ĕçлесе пĕтĕм медпункта çаратса пурăнать тесе ял-йыш умĕнче ят ярать. Тарăхнипе пĕррехинче, урамра тĕл пулсан, Сухви ăна вирлех пăсăрлантарчĕ. Йытă çимен, йышăнмасть, пачах тунать.

Çын çинчен суя халап-юмах сарма май пур унăн. Вăл

иртнĕ кĕркунне, хальхилле каласан, предприниматель пулса тăчĕ. Çĕршывра пăтрашуллă самана пуçлансан нумайăшĕ суту-илÿпе айкашма тытăнчĕ. Мăнтăр Варуççа та Мускава кайса тутăр, кофтăсем туянать те ялта хаклă хакпа кил тăрăх сутса çÿрет. Нумаях пулмасть лавкка уçрĕ. Çÿрекенсем пур. Пĕри туянать, тепри курма пырать.

Халĕ, лавккине уçас чух, Мăнтăр Варуççа ир-ирех мĕншĕн килнĕ медпункта? Сухви чĕнмесĕр чăтаймарĕ:

— Йытă сăмсупа мĕн шăршласа çÿрен?

— Эх, ача, шартах сиктеретĕн! — кăшкăрса ячĕ хайхискер. Чĕрине тытанçи турĕ. — Фу-у! Чун тухса ÿкетчĕ.

— Пур-и вара сан чун-чĕрÿ?

— Пулмасăр. Эпĕ йывăç тункати мар пулĕ?

— Ненай... Ма килтĕн, амак çыпçăнчĕ-и-мĕн?

— Хальлĕхе таса-ха. Çапах та халсăрланасси часах.

— Фельдшер çук. Тухса кай.

— Эпĕ шăпах ăна курма килсеттĕм.

— Мĕн курмалла тет ăна? Çын çынах. Йĕркеллĕ.

— Ха-ха-ха! — кулса ячĕ Мăнтăр Варуççа. — Каларăн та. Вăл — юхха! Ĕçе пуçăнма ĕлкĕреймен — çамрăк пуçĕпе масар тăрăх арçынпа сĕтĕрĕнсе çÿрет. Ых-х! Хальхи çамрăксем вилнисене те канăç памаççĕ.

— Эсĕ куртăн-и? — Сухви урай шăлмалли щетка аврине ярса тытрĕ.

— Вăрман хăлхаллă, уй куçлă! — какăлтатать хур ами пек, Варуççа. Анчах хăрать Сухви патакласран, çавăнпа кăшт чакса тăчĕ.

— Юнăхнă пуçупа тем мурĕ те шухăшласа кăларатăн çав. Тьфу! — сурса илчĕ Сухви. — Тухса кай, атту лекет. Куратна ман алăра мĕн пуррине?

— Эпĕ мар, пирĕн кÿршĕри Çтаппан курнă тет.

Çтаппанпа тĕл пулнине суймарĕ Мăнтăр Варуççа. Чăнах та, лешĕ çĕнĕ хыпар пĕлтернĕ. Ара, вăл ирхине ял администрацийĕн пуçлăхĕ Карп Сидоровичпа Сухви хĕр фельдшера амбулаторие ертсе кайнă чух вĕсемпе тĕл пулнă. Ăна çĕнĕ çынпа паллаштарнă. Кайран, пăру шыранă вăхăтра, хĕр фельдшера çăва çинче курнă. Анчах Эхтюка паллайман вăл. Варуççа кирек мĕне те хура тĕспе курать. Хĕр фельдшер ял урамĕнче мар, çăва çинче салтакпа çÿрет тĕк — вăл путсĕр юхха. Халĕ ăна чунĕ

кăсăкланни сĕтĕрсе килнĕ медпункта. Элек хутаççине тултармасăр кунтан хăпса каяймасть ĕнтĕ.

— Мĕншĕн халĕ те килмест фельдшер? Ĕç пуçланас вăхăт çитнĕ, — аллисене сулкаласах çатăлтатать Варуççа.

— Столовайне кĕрсе ирхи апата ларчĕ ахăр.

— Пĕччен мар ĕнтĕ, леш салтакĕпех. Эрехне те янклаттараççĕ пулĕ. Çар çыннине хăйпе пĕрлех илсе килнĕтĕр...

— Ых-х, чĕлхӳ çине шуйттан сурасшĕ, — тарăхса тулхăрчĕ Сухви. — Хăвна мĕн кĕтнине чухламастăн. Çӳрен айванланса. Фельдшерĕ хамăр яла ура ярса пусма ĕлкĕрчĕ çеç, эсĕ пур, кĕл хутаççи, элек сарма тытăннă та. Эсĕ чирлемен. Тухса кай кунтан. Пшо-ол!

Сухви хĕрарăма пӳлĕмрен çеç мар, картлашка тăрăх тĕртсех антарчĕ. Мăнтăр Варуççа питĕ тарăхрĕ, анчах хирĕç тăма шикленчĕ. Ирĕксĕрех чакрĕ-чакрĕ те алкум вĕçнех анса çитрĕ. Кунтан тухса кайĕ-и? Тем парсан та. Элек çимĕçне тупса тутанмалла. Техничка ăна канлĕх памасть. Пытанмалла. Вăл пӳрт кĕтессине кайса тăчĕ. Вăраххчен кĕтме тивмерĕ. Курчĕ кама куçлама ĕмĕтленнине. Амбулаторин вĕрлĕк хапхине сиктерсе картишне пăхса ытармалла мар çамрăк хĕр кĕчĕ. Йăр-йăр утса вăл часах çурта кĕрсе çухалчĕ. Пытанса тăнă Мăнтăр Варуççа антăхнипе вырăнтан тапранаймарĕ. «Эх, ача, ярса параççĕ те районтан пукане. Пĕрре пăхсах паллă — вĕлтĕрккескер. Ăçтан чирлĕ çынна сыватайтăр? Тен, тухтăр та пулмарĕ-тĕр, пĕрпĕр якăлти».

Унччен те пулмасть, тĕлĕнтермĕш асăрхарĕ. Юманов учитель килет. Пĕччен мар, унпа юншара тахши утать, çар тумĕ тăхăннăскер. Шăтарасла пăхсан ăна та палларĕ: Эхтюк иккен. Хăçан таврăннă-тăр çартан? Мĕнле сăлтав сĕтĕрсе килет вĕсене? Нивушлĕ чирленĕ?

Варуççан темле элек те авăртса кăларакан «ал арманĕ» чăлханчĕ. Икĕ каччăна кунта ертсе килнĕ сăлтавне чухлаймарĕ çав. Тăрать вĕчĕхсе.

Эхтюк та, Юманов учитель те чирлемен. Вĕсене кăсăк кăчăк туртса илĕртет.

...Паçăр Эхтюк масар хапхи умĕнче Умрайпа уйăрлсан унăн ăшне çавра çил вăркăнса кĕчĕ тейĕн. Сасартăк вăл çак хĕр фельдшера шутсăр хытă юратса пăрахнине

туйрӗ. «Умрай, эпӗ сана юрата-а-а-тӑп!» — терӗ вӑл хыттӑн. Ҫава карти ҫумӗнченех аякка-аякка тӑсӑлакан сӗм вӑрман та унпа пӗр шухӑшлӑ-няк: унсӑрӑн кӑшкӑрмӗччӗ: «...а-а-тӑп!»

Ӑшра пурӑнаканни, ялан хирӗҫлекенни, йӗкӗлтекенни, лешӗ, «такам», лӗх-лӗх-лӗх шӑл йӗрсе илчӗ. «Машука мантӑн-и? — тет. — Ҫартан таврӑнсан туй тума пултӑниҫ. Унӑн умне мӗнле пит-куҫпа пырса тӑрӑн?» «Мӗнле-мӗнле, — витлесе илчӗ Эхтюк лешне, «такама». — Ҫара кайиччен юратнӑ пултӑр. Унтанпа Атӑлта пайтах шыв юхса кайнӑ. Туйӑм тени, ачамккӑ, кӑкшӑмра нумайччен упраннӑ сӑра пекех сӗвӗрлет. Ку хӗр пӗрчи вара тин ҫеҫ пиҫсе ҫитнӗ хурӑн ҫырли. Кам татасшӑн пулмӗ хӗп-хӗрлӗ, сӗтеклӗ ҫырлана ешӗл курӑка сирсе! Сывӑ пул, ҫӗнӗ юрату!» — аллине ҫӳлелле ҫӗклесе сулкаларӗ.

Паттӑрланнӑ Эхтюк амӑшӗн вилтӑприне юсаса хӑшкӑлмарӗ. Мӗнех, ыран та кун пур-иҫ. Тимӗр кӗреҫине амӑшӗн вилтӑпри путса аннӑ шӑтӑкра ашкӑрса ӳсекен вӗлтрен тӗмӗ ӑшне вӑркӑнтарчӗ. Халӗ мӗн тумалла? Юлашки вӑхӑтра вӑй илме тытӑннӑ хура мӑйӑхне вӑта пӳрни вӗҫӗпе якаткаларӗ, унтан тӑнлавне ал лаппипе хупласа тӑчӗ. Шухӑшсем пӗве умӗнчи пӑр катрамӗсемлӗ ҫурхи шыв евӗр пӑтрашӑнаҫҫӗ. Пуҫа мӗнле кӑна ӗмӗт пырса кӗместши? Акӑ амбулаторие чупса кӗрес те хӗр умне чӗркуҫленсе ларас! «Юрататӑп! Юрататӑп!» — тес, аллисене хытӑ кӑна чуптӑвас, чуптӑвас... Ҫавӑнтах хӑйӗн айванлӑхӗнчен ахӑлтатса кулчӗ Эхтюк. Кун пек йӑлан ӗмӗрӗ тахҫанах путланнӑ. Ӗлӗк ӑна пуян ҫын кавалерӗсем ҫапла муталаннӑ. Халӗ ҫӗнӗ самана. Тен, ҫыру ҫырнӑ хута чӑмӑрласа уҫӑ форточкӑран ывӑтас? Каллех пӑрахӑҫларӗ. Ачалла ку. Шкулта вӗреннӗ чух вӗлтӗркке хӗр пӗрчисем патне (килте ашшӗ-амӑшӗ ҫуккине пӗлсен) ҫапла майпа ҫыру ҫитернӗ. Халех тытас та пырса тӑрас хӗр умне, ӗҫӗ те пӗтнӗ. Ах, мӗн-ма пур-ши ҫынра вӑтанас йӗрке? Ӑҫта хӑюлӑх? Ҫарта чух нимле хӑрушлӑх умӗнче те чӗтресе тӑман. Юрату хӑюлӑхӗ урӑхла-ҫке ку. Пӗччен ҫӗнтерме йывӑр. Иккӗн каймалла. Вӗлле хурчӗ те пӗччен пыл тӑваймасть. Ҫын та ҫавах. Иккӗн иккӗнех. Пӗри пӗр сӑмах, тепри — тепӗр. Юхӗ вара калаҫу кӗвӗллӗн. Акӑ сана — капан тӑрланчӗ те, пике — санӑн.

Эхтюкӑн ҫывӑх тус пур, вӗсем ачаран пӗрле ӳснӗ, пӗр парта хушшинче ларнӑ. Халӗ шкулта ӗҫлекен Карачӑм Юманов — математика учителӗ.

Масартан чиперех тухрӗ Эхтюк. Ун-кун пӑхкаларӗ. Турра шӗкӗр. Ҫывӑхра никам та ҫук. Вара яра пачӗ сиккипе. Чупать. Калӑн, чӑн-чӑн спортсмен. Пырса кӗчӗ яла пӑравус пек хашкаса. Касран каса куҫсан ҫитсе тӑчӗ вӑл шултра хыр пӗренеллӗ ҫӗнӗ ҫурт умне. Урамалла кӑларнӑ виҫӗ чӳречин кантӑкӗсем ҫийӗн тӳпенелле хӑпаракан хӗвел пайӑркисем ялтӑртатаҫҫӗ кӑна. Пырса хӑшӗнчен шаккамалла-ши? Суйланӑ май пӗр вырӑнта кӑшт тӑпӑртаткаларӗ вӑл. Пахча енчине суйларӗ хайхискер. Утса пычӗ те чӗрне вӗҫӗпе тӑкӑртаттарчӗ кантӑкран. Сас памасть. Илтмест-ши? Хӑнӑхнӑ кӑнтӑрлаччен ыйхӑ ҫапма, ара, чӑрмантаракан ҫук. Ҫурт лартнӑ та пурӑнать канлӗн. Упа! Авланмасть йӗксӗк. Васканӑ чух пӗр минут — хӑй пӗр кун. Тарӑхнипе Эхтюкӑн чӗлхинчен виҫ-тӑват хутлӑ сӑмахсем сирпӗнчӗҫ. Тӳсӗм вӗҫне ҫитрӗ, тытӑнчӗ чӳрече хашакӗнчен чӑмӑрӗпе тӳнклеттерме! Усси пулчӗ.

— Кам ашкӑнать? Кам кирлӗ?

Сас илтӗннӗ еннелле пуҫне пӑрчӗ Эхтюк. Яри уҫӑлнӑ калинкке анинче тӑра парать сарлака хул-ҫурӑмлӑ йӗкӗт. Ун ҫийӗнче майка ҫеҫ.

— Мана ҫак кил хуҫи кирлӗ, — терӗ Эхтюк калинкке патнелле утса.

— И-и-ихи! — хӑй хыҫӗнчен калинккене хупса салтак еннелле утрӗ. — Ара, эсӗ тем ку, Эхтюк! Хӑҫан таврӑнтӑн? Усси ӳстернӗ те ху, тӳрех паллаймарӑм!

— Халех санӑн аяк пӗрчисене шутлатӑп! — тет лешӗ.

— Ай-уй, аплах ан эрлен-ха. Мӗн пулнӑ? — хирӗҫ утрӗ Юманов хӑй патнелле ҫиллес пит-куҫпа ҫывхаракан Эхтюкран кулкаласа.

— Ыйхӑ чӑпти эсӗ. Кам ҫывӑрать ку таранччен? Шаккаса хӑшкӑлтӑм.

— Йӑнӑшан, юлташӑм, — йӑл-йӑл кулкаларӗ Юманов сарӑ вӑрӑм ҫӳҫне аллипе каялла вырттарса. — Эпӗ пахчара ӗҫлесе. Пыл хурчӗсем валли чечек акрӑм.

Ыталанчӗҫ. Пӗр-пӗрне ҫурӑмӗнчен кӳпкелерӗҫ савӑнса.

— Паян ҫитрӗн-и? — тӗпчет Юманов.

— Илĕм-тилĕмпе киле çитрĕм. Пушă пӳртре тăма чăтăм çитмерĕ, — пуплерĕ Эхтюк. — Кĕреçе илтĕм те анне патне — çăва çине. Унта вутăш куртăм.

— Ак тата, — тĕлĕнчĕ Юманов. — Мĕнле вутăш?

— Ăнлантарса тăма вăхăт çук. Атя кайрăмăр.

— Ăçта?

— Хĕр çураçма!

— Мĕн-ма çав териех хыпаланатăн? Васкакан арăмĕнчен савăнман тет.

— Мĕшĕлтетсен сан йышши хурахсем вăрласа кайма пултараççĕ.

Карачăм Юманов тусне апатланма сĕнчĕ. Выçă лаша йывăр туртаймасть. Эхтюк апат çинчен илтсен унăн çăварĕ сурчăкпа тулчĕ. Вăл хăçан çинине те астумасть. Килте ăна апат-çимĕçпе никам та кĕтсе илекен çук çав. Тӳсеймерĕ вăл халĕ юлташĕ сĕнĕвĕпе килĕшмесĕр. Пӳрте кĕчĕç. Юманов самантрах сĕтелне апат-çимĕçпе тултарчĕ. Хуплусăр пуçне вĕри çатмара çăмарта хăпартни чăшăлтатрĕ. Сăра пырса лартрĕ, эрех те тупăнчĕ. Тытăнчĕç ĕçме-çиме! Карачăм ним те шарламасть. Вăл ыйтусем парса тусне апатланма чăрмантарас темерĕ. Эхтюк хыпаланать, кăпкап хыпкалать. Пĕрер черкке ĕçсенех чĕлхи салтăнчĕ. Калаçрĕ, калаçрĕ. Юманов чармарĕ ăнтĕ. Йалт пĕлчĕ вара Юманов юлташĕн ĕçĕ-хĕлне. Хĕр пĕрчине амăшĕн вилтăпри умĕнче тĕл пулнă. Ячĕ унăн — Умрай. Ку ялта фельдшерта ĕçлеме пуçлать. Эхтюк ăна вилесле хытă юратса пăрахнă.

Сĕтел хушшинче вăрах ларма юрамасть. Часах тухрĕç. Юманов килĕшрĕ Эхтюкпа пыма. Вăл хăй те хусах. Авланма хĕр шырать. Пурнăç вăл — чăн-чăн асамçă. Сасартăк... Юрĕ, куç курĕ унта.

* * *

Мăнтăр Варуççа тăрать-ха пытаннă кĕтесре. Карачăм Юмановпа салтак тумĕллĕ йĕкĕт амбулатори кĕрсе кайнине курсан вăл куян пек ялт сикрĕ чӳрече умĕнчи çĕмĕрт айне. Каялла çыхнă тутăрне хăлхи çинчен сирчĕ. Халĕ ĕнтĕ пӳлĕмре мĕн калаçнине пĕр сăмах илтмесĕр юлмĕ.

...Алăка шаккарĕç.

— Кĕрĕр. Мĕншĕн иккĕн тан? Эпĕ пĕр харăс теми-

çе çын калаçнине итлейместĕп. — Ку фельдшер сасси ĕнтĕ.

— Пире иксĕмĕре те пĕр чир ернĕ. — Кăна Юманов каларĕ.

— Карачăм, мĕн кирлĕ мара пакăлтататăн. Кунта чирли эпĕ çеç.

Варуççа ăнланчĕ: кăмăлсăррăн калаçаканни Эхтюк пулчĕ. Мĕне пĕлтерет? Ай-уй, мĕн перкелешет Юмановĕ? «Çак пӳлĕме кĕрсен мана та юлташăм чирĕ лекрĕ. Пире юрату ыталарĕ».

— Ăнлантăм. Сире ку чиртен сывалма хăватлă эмел кирлĕ, — терĕ хĕр фельдшер.

— Тĕрĕс, тĕрĕс! — иккĕн тан çирĕплетеççĕ.

— Эмелĕ хальлĕхе аптекăра çук, — тет фельдшер. — Ăçта туянма май пуррине тĕллесех кăтартса яма пултаратăп. Çав хаклă эмеле ял хĕрĕсем пытарса усраççĕ. Юратăр вĕсене. Мана тек ĕçлеме ан чăрмантарăр. Сире кайма алăка уçатăп.

— Эмелĕ — эсĕ! — терĕ Эхтюк.

— Кĕме юрать-и?

— Кинеми, ирт! Лар ав сĕтел умĕнчи пукан çине...

Урама тухрĕç Карачăм Юмановпа Эхтюк Иванов. Мăнтăр Варуççа та хӳтлĕхрен çăлăнчĕ. Курăни-курăнми йăпăртатрĕ йĕкĕтсем хыççăн. Лешсем калаçнине итлесе хыçалта пырать.

— ...Итле-ха, Эхтюк, санăн савни пур. Машук сана юратать, — пуçларĕ сăмахне Юманов. — Шутсăр килĕшрĕ ку пике. Пĕрре курсах юратрăм. Тен, мана чăрмантармăн, э?

— Машук хулара пурăнать. Вăл яла килмест.

— Хĕр фельдшера качча илсен çав хăрăк-харăк пӳртре усрас тетĕн-и? Манăн хăть кантур пек çĕнĕ çуртăм пур. Тупата, пурăнма кăмăллă. Эсĕ хулана Машук патне пурăнма куç. Ялта ĕç те тупаймастăн.

— Айван эсĕ, Юманов. Мĕн тăвать вăл сан çуртупа? Умрай мана юрататъ. Асăрхаймарăн-и-мĕн? Хĕр мана пăхса ăшшăн кулчĕ.

— Мана та пайсăр хăвармарĕ, йăл кулса шап-шурă тикĕс шăлĕсене кăтартрĕ, — çапла калаçнă май Карачăм юлташне çурăмĕнчен кӳпкелесе илчĕ.


Ч-40178
Национальная библиотека Чувашской Республики

— Ай-ай! Ыраттаран! Эсӗ тӳпелешесшӗн-и-мӗн? — терӗ ҫиллес сассипе Эхтюк. Унччен те пулмарӗ, вӑл тантӑшӗн кӑкринчен йӑпӑр-япӑр ярса тытрӗ.

— Кӗпене ҫуран! — терӗ Юманов юлташӗн аллинчен ярса илнӗ май.

Икӗ йӗкӗт тытӑҫнине кура тӑркачах хыҫалта пыракан Варуҫҫа кӑшкӑрса ямасӑр тӳсеймерӗ:

— Эй, камитсем! Тупнӑ камшӑн тӳпелешме! Айвансем! Эсир пӗлместӗр-ха, вӑл ахрамат хӗр! Паян ир-ирех масарта хӑй ертсе килнӗ ҫар ҫыннипе сӗтӗрӗнсе ҫӳренӗ.

Йӑшт! ҫаврӑнса пӑхрӗ Эхтюк хыҫалалла. Тӳрех палларӗ хайхискере.

— Варуҫҫа инке, эсӗ халӗ те тислӗк купине сыналла чакалама пӑрахман-ҫке! Сывалас вырӑнне юшкӑна тата ытларах путнӑ. Юрать-и вара таса ҫынна ҫапла варлама? Ыранах суда парӗ вӑл сана, кӳнтеленӗ хамах пулатӑп.

— Тӗрӗсшӗн пуҫа кастарма та хатӗр, — парӑнмасть Варуҫҫа. — Ӑна пирӗн кӳршӗ Ҫтаппан мучи курнӑ. Хӗрӗ чупкӑн, мӗн каласси пур.

— Тӑнла, вупкӑн карчӑк, ҫав хӗр пирки пӗр усал сӑмах ҫеҫ вӗҫерт — хӑвна айӑплӑн.

Юманов та юлташӗпе килӗшсе Варуҫҫана хирӗҫле сӑмахсем вӗҫертрӗ. Каччӑсем ҫийӗнчех пӗрне-пӗри алӑ парса уйрӑлчӗҫ. Вӗсенчен кӳлешекен хӗрарӑм шӑртланнӑ кӑмӑлӗпе тӑчӗ юлчӗ пӗччен. Нихӑшне те таварӑймарӗҫке. Апла юрӗ-и? Питлес шухӑшпа Эхтюк хыҫҫӑн чупма пикенчӗ. Кам хӑйӗ тытса чарма? Хӑрарӗ. Акӑ мӗн. Эхтюк, тин ҫеҫ ҫартан таврӑннӑскер, вӑйлӑ, ӑна ним мар тарӑн ҫырмана тӗртсе хӑварӗ. Никам унтан хӑпарма пулӑшас ҫук. Хӑват кӗчӗ тейӗн. Юманов хыҫҫӑн чупма пикенчӗ. Ӑҫта унта? Тем мурӗ ура хучӗ, ӳкрӗ такӑнса. Ура ҫине тӑрсан аллине тӑсса юнарӗ ятлаҫнӑ май. Пуҫне каҫӑртса тӳпенелле пӑхрӗ. У-у-у! Хӗвел хӑпарнӑ-ҫке ҫӳле. Хӑйӗн лавкки асне килчӗ те шартах сикрӗ. Тавар туянакансем кӗтессӗн туйӑнчӗ. Хытӑ утать пек, утӑмӗ ӳсӗнмест. Унччен те пулмасть, тӑкӑрлӑкран тухакан Анаткасри Илемпие курчӗ. Вара Варуҫҫа ӑна аллипе кӑчӑк туртса ҫухӑрашрӗ:

— Кил-ха, кил, чиперккем, кулӑш итлеме.

Лешӗ уттине хӑвӑртлатрӗ. Ҫывхарсан ыйтрӗ пит-куҫне йӑлкӑштарса:

— Мӗнле хыпарпа мана кaҫӑхтарасшӑн эсӗ?

— Эх, ача, эсӗ илтнӗ-и, нумайччен хупӑнса тӑнӑ хыҫҫӑн амбулатори уҫӑлнӑ. Ӗҫлеме ҫӗнӗ хӗр фельдшер килнӗ. Эх, ача! Хӗрӗ — юхха. Килнӗ-килмен масарта, вилнисен ялӗнче, каччӑпа явӑшса ҫӳренӗ. Пӑх-халӗ ӑна, астарать, хирӗҫтерет ял ҫамрӑкӗсене.

— Мӗнле майпа?

— Кӗрт ами хыҫҫӑн миҫе йытӑ чупнине чухлатӑн пулӗ. Карачӑм Юмановпа Чанук Эхтюкӗ, ҫартан паян ҫеҫ таврӑннӑскер, эмел ыйтма пынӑ хайхи тухтӑр патне. Иккӗшне те куҫ хӗснӗ хайхи хӗр. Ун патӗнчен тухсан урамра, ман куҫ умӗнче, ах тӳпелешрӗҫ. Хӗре пайлаҫҫӗ мар-и. Юманова пӗлен ӗнтӗ, унӑн пӗр алли мӗне тӑрать, чӑн-чӑн султан! Сулса ячӗ те — Эхтюк кушак ҫури пек кайса ӳкрӗ, вара кӑлтӑрмач евӗр айккинелле кусса кайрӗ. Вӗсенчен тахшин аллинче вӑрӑм ҫӗҫӗ хӗҫ пек ялтӑртатрӗ. Тепле пӗр-пӗрне чиксе пӑрахмарӗҫ. Юрать, хам чартӑм.

— Ха-ха-ха, — кулчӗ Илемпи. — Мӗнле паттӑр эсӗ, Варуҫҫа. Хӗр фельдшер ҫава ҫинче каччӑпа ҫӳренине те куран, икӗ йӗкӗте вилӗмрен те хӑтаран...

— Ӗненместӗн-и? Эсӗ хӑвна ытла мӑнна хуран. Хӑвӑн ҫине ҫаврӑнса пӑх.

— Мӗнле пакӑҫ хӗрарӑм эсӗ, Варуҫҫа. Санӑн шутупа, ялта пӗр путлӗ ҫын ҫук. Чӗлхӳне касса йытта памалла. Анчах вӑл ҫиме мар, шӑршласа та пӑхмӗ ҫав.

— Эсӗ, Илемпи, ытла ан сик. Шенер Яхутинпа пурӑнтӑн, анчах вӑл сана качча илмерӗ, ялтан тухса тарчӗ. Ҫыру ҫырмасть, санран тӗплӗ пытаннӑ. Тӗрӗс тунӑ.

— Ытлашши нумай пӗлен. Часах шалчу тулать, — ихиклетсе кулчӗ Илемпи. — Сана тарӑн ҫырмана ывӑтаҫҫӗ акӑ. Унтан темӗн чухлӗ тапаҫлансан та тухаймӑн.

— Кам хӑять тет мана ҫапла мӑшкӑллама? — ӳлесе йӗме тытӑнчӗ Варуҫҫа.

— Кам пултӑр, хӑвӑн элекӳ.

Урам тӑрӑх чупрӗ хайхискер ахлатса.

Илемпи сукмакпа утрӗ. Элекҫӗ хӗрарӑм калаҫнӑ тӑрӑх ялта хӑй пирки мӗнле сас-хура ҫӳренине ӑнкарчӗ.

## 3

Умрай медпункт алăкне уçнăранпа темиçе хутчен те сарă хĕвел тӳпенелле хăпарса хăйĕн ĕмĕрхи çулĕпе анăçалла шурĕ.

Малтанах çынсене амбулаторие ыратни мар, кăсăк çавătса пычĕ. Чирлисем те тӳсеймерĕç ытлашши тăхтама. Нуша уямасть, хăвалать. Ара, сусăра тӳсме хĕн. Чирчĕртен хăтăлни — чĕрĕлĕх тумламĕ.

Халăх мĕнле тапхăрта пурăнать, унăн юмах-халапĕ те çавна май. Куллен кирлĕ ытти таварсем пекех, эмелсем те шутсăр хаклă. Тухтăрсем çырса панисене çынсем, уйрăмах ваттисем, туянаймаççĕ. Ку тĕлĕшпе паянхи йывăр пурнăçа питлекенсем туртса кăларнă сăмах çӳрет халăх хушшинче. Медсестрана çапла вĕрентнĕ имĕш: эсĕ çамрăксене чиртен сывалма эмел ĕçтер, алă çултан иртнисене сăмахпа сыват.

Йĕкĕлтевçĕсен халапĕнче тĕрĕслĕх çук мар. Сывлăхсăр çынна кирли эмел çеç-и вара?

Умрай медучилищĕре вĕреннĕ чухне вăхăта больницăра пайтах иртгернĕ. Унта ыррине те, шырлăхне те сахал мар курнă-илтнĕ. Кунта вăл чи кирлине хăйĕн ăшне хывнă. Чирлĕ çыншăн чи пахи, эмелрен те хакли — сыватаканăн ăшă кăмăлĕ, çепĕç чĕлхи. Çак меслете тĕпе хурса ĕçе тытăнчĕ Умрай Пушака фельдшер.

Унăн сĕтелĕ çумĕнчи пукан çине кун каçа тĕрлĕрен çын ларать. Ыратăвĕ те кашнин расна. Чирлин ятне-шывне, мĕнпе асапланнине йăлтах хут çине çырать хĕр фельдшер. Медицина саккунĕ çапла хушать. Пуринчен ытла ку пуласлăхра пулăшĕ тесе шутлать вăл. Ĕмĕчĕ пысăкçке унăн — тухтăра вĕренсе тухмалла.

Çак кĕске вăхăтра унăн асран кайми пациентсем пулчĕç. Акă Наçтуç аппа. Вăл çитмĕл пиллĕк урлă каçнă, фронтра пулнă. Хĕр пуçĕпе хаяр фашистсене хирĕç çапăçса Тăван çĕршыва хӳтĕленĕ. Маттур мар-и ĕнтĕ вăл!

— Белоруç шурлăхĕсем тăрăх çӳренисем халĕ аптратаççĕ мар-и. Чĕркуççисем ыратаççĕ, — пуплет фронтовичка сăпайлăн.

— Чĕркуççисем халиччен те ыратнă-и? Мĕнпе сиплеме тивнĕччĕ? — йăвашшăн тĕпчет хĕр фельдшер.

Наçтуç аппана чĕркуççи ыратни мар, пачах урăххи

илсе килнӗ иккен. Анчах ҫап-ҫамрӑк хӗр пӗрчи умӗнче хӑйӗн чӑн-чӑн ыратӑвӗ пирки шарлама вӑтанчӗ малтанах. Ҫамрӑк фельдшер хӑйне пулӑшайманнине те чухлать-ха. Ҫапах та ӑшри пӑр катӑкне ирӗлтерме пултарчӗ Умрай ҫепӗҫлӗхӗпе. Темшӗн чунра мӗн пуррине, нихҫан шарламаннине, уҫса парас килчӗ кинемейӗн. Тем те тӳсме тивнӗ-ҫке вӑрҫӑри хӗр упраҫа. Нихӑҫан манӑҫа тухман хӗнасапсем халӗ ҫавра ҫил пек вӑркӑнса кӗҫӗҫ пуҫа. Чӗлхе вӗҫӗнчен вӗҫертмесӗр тӳсеймерӗ. Пӗлччӗрин, ара. Пуласлӑх ҫамрӑксенче, вӗсен тӗнче тӑнӑҫлӑхне упрамалла. Вӑрҫӑхарҫӑна амаланма памалла мар.

Фронтра Наҫтуҫ связист пулнӑ. Вӑрҫӑ хӗр упраҫ ӗҫӗ мар. Унта хӗҫ-пӑшал алхасать, унта вилеҫҫӗ, сусӑрланаҫҫӗ. Ҫамрӑклӑха чечекленме ним те чараймасть. Юрату суккӑр, вӑл пӗлмест йӗри-тавра вут-ҫулӑм кӗрленине. Мӑшӑрланаҫҫӗ. Тепӗр чух йӑнӑшасси те пулать. Анчах та ҫие юлнӑ хӗр вӑрҫӑра тек салтак мар. Ӑна киле, аякри тыла, ӑсатнӑ. Теприсем, вӑрҫӑ нушине тӳсес килменнисем, лӑпкӑ пурнӑҫа ӑмсанакансем, юриех йывӑр ҫын пулма тӑрӑшнӑ. Ахаль каламан ӗнтӗ ваттисем: тӗменре тӗрли пур. Паллах, хӑйсене йӗркеллӗ тытнӑ хӗр упраҫ шучӗ йышлӑ пулнӑ. Анчах та хӑш-пӗр ҫар пуҫлӑхӗсем меслет шухӑшласа тупнӑ. Тухтӑрсем уйӑх хушшинчен хӑтаракан укол тунӑ. Ҫак нихӑҫан илтмен хыпара Умрай Пушака Наҫтуҫ фронтовичкӑран пӗлчӗ.

Вӑрҫӑ хыҫҫӑн Наҫтуҫ киле тӗрӗс-тӗкелех таврӑннӑ. Ӗнтӗ укол самани иртнӗ. Апла пулин те уйӑх хушши килес вӑхӑтра вар-хырӑм ыратни шутсӑр асаплантарнӑ. Юрать, кашнинчех майне чухлакан кӳршӗ хӗрарӑмӗ пулӑшнӑ. Качча кайсан ачасем ҫуратнӑ. Халӗ Наҫтуҫ инке ватлӑх каҫалӑкӗнче. Пурпӗрех тӑсӑлать чуна касакан ырату.

Пулӑшмалла! Ку Пушакан тӗп ӗҫӗ. Анчах мӗнле? Вӑл хальлӗхе тухтӑр мар. Ӳлӗм, темиҫе ҫул иртсен, мединститут пӗтерсен, пӗр сӑмахпа каласан — тухтӑра тухсан пурне те чир-чӗртен сыватӗ. Халӗ чупса килмелле мар-и ӑс ыйтма Наҫтуҫ кӳршӗ хӗрарӑмӗ патне? Вӗренттӗр. Ку ӗмӗт ҫил варкӑшне лекнӗн сӳнчӗ. Кӳршӗ хӗрарӑмӗ — халӑх ӑсчахӗ, сыватаканӗ тахҫанах ҫӗре кӗнӗ-мӗн.

Пулӑшмалла! Мӗнле? Ҫынна ҫав тери пулӑшас, ырӑ тӑвас килни яланах ҫӗнӗ шухӑшсем парнелет. Умрай

паян-ыранах кил тăрăх çÿреме тухĕ. Камăн мĕн ыратать? Чирлисене шута илсе специалист тухтăрсене яла чĕнĕ. Сăлтав тупăнчĕ те Наçтуç инкене лăплантарма.

— Пирĕн пата часах гинеколог килĕ, — терĕ Пушака фельдшер. — Ун чух сире ятарласа систерĕп. Тен, тухтăр сире больницăна вырттарсах сыватĕ.

— Тем пекехчĕ, — сăмах хушрĕ Наçтуç фронтовичка. Ăшĕнче йăл-йăл кулкаларĕ. Килĕшрĕ ăна çап-çамрăк фельдшер. Вăхăт иртнĕçемĕн аслă пĕлÿллĕ врач пулатех. Ав епле хайлаллăскер, çыпăçуллă чĕлхеллĕскер. Канашсем те пама пултарчĕ, çамрăк те вара ăна.

Малтанхи кунсенче амбулаторие пынисенчен тата тепĕр хĕр асра юлчĕ.

Вăрăм пÿ-силлĕ вăл. Çÿçĕ шăп йĕтĕн çурăмĕ. Темшĕн çивĕтлемен. Пилĕкĕ çинçе-ши унăн? Паллă мар. Çутă хăмăр тĕслĕ çитсăран çĕленĕ юбка, шалпар кофти те çавăн тĕслех. Икĕ куçĕ — хĕвел ÿкнĕ икĕ сенкер кÿлĕ. Пит çăмартине темле асамлă писев (шурăпа хĕрлĕ хутăш) сĕрнĕ-ши? Кăлтăксăр, таса. Чăнах, сăнасарах пăхсан куçа тивекен тутăх тĕслĕ лаптăк пур сылтăм хăлха çывăхĕнче. Ку ăна йĕп çăрти чухлĕ те пăсмасть.

«Шăп çакнашкал пикесене килĕштереççĕ-тĕр ял каччисем», — шухăшларĕ Умрай хăй ăшĕнче. Хĕре Илемпи тесе чĕнеççĕ-мĕн. Вăл — электрик. Ĕне ферминче ĕçлет. Сăпайлă калаçать. Вăл Умрайпа тахçанах туслă пурăнать тейĕн.

— Эсĕ питĕ чипер иккен, — мухтарĕ вăл Умрая. — Хитре ялан çынсене хăй патне туртать.

— Кăна мана йĕкĕлтенĕ вырăнне йышăнатăп, — асăрхаттарчĕ Умрай. — Эпĕ илемлĕхпе никамран та уйăрăлса тăмастăп.

— Каçар. Кÿрентерес теменччĕ. Эпĕ çапла катрам чĕлхеллĕ çын. Атя иккĕн тус пулар, — аллине тăсрĕ Илемпи.

— Тус пулма хирĕç мар, — алне пачĕ Умрай.

— Атя пирĕн пата пурăнма.

— Тавтапуç. Манăн хваттер пур. Сухви хăй патне илсе кайрĕ пурăнма.

— Сухви кăмăллă хĕрарăм. Анчах унпа мĕн çинчен пуплеме пĕлес? Тунсăхласа вилĕн, чăнах. Вăл упăшки вилнĕренпе пĕр арçынпа ăшшăн тусланса курман. Çамрăк хĕрсен хăйсен халап-юмахĕ.

— Анчах эпӗ те пӗр каччӑпа та туслӑ пулман.

— Сан малта-ха йӗкӗтсемпе савниленесси. Хӑв юратнӑ каччӑ сана пыл пек пылак сӑмахсемпе йӑпатнине хӑвӑн чӗрӳнте ҫеҫ усрама май ҫук. Вӗсем чи ҫывӑх ҫын чунне кӗрсе тухасшӑн. Пул эсӗ манӑн чи ҫывӑх тус.

— Эпӗ хатӗр.

— Савӑнтаратӑн. Чӑн-чӑн медик ҫын вӑрттӑнлӑхне сапаламасть. Шанатӑп, мана сутмӑн. — Илемпин ҫӑварӗ типрӗ-ши, тӑхтаса тӑчӗ. — Вӑрттӑн сӑмаха ҫил ҫине кӑларакан ҫын вӑл — элекҫӗ, тӗнчере пурӑнма та тивӗҫсӗр.

Илемпи апла та, капла та пуплерӗ. Вӑл ҫывӑх тус шыранине Умрай ӑнланчӗ. Ахальтен мар иккен. Илемпин пӗччен татса пама пултарайман пысӑк ӗҫ пур. Унӑн ҫие юлнӑ, анчах вӑл ҫуратасшӑн мар.

— Пулӑш мана хырӑм ӳкерме, — тилмӗрчӗ хӗр.

— Район больницине кай. Укҫа тӳле те, тархасшӑн. Хут ҫырса паратӑп, — терӗ Пушака фельдшер.

— Ӑна хам та пӗлетӗп. Анчах аборт тӑвас вӑхӑт иртнӗ.

— Мӗншӗн ҫуратасшӑн мар?

— Ача ашшӗ эпӗ юратнӑ ҫын мар, ӑнсӑртран тупӑннӑскер ҫеҫ. Парсам мана хӑватлӑ эмел, ӗҫсен уйӑх хушши пек тухтӑр та ӳктӗр.

— Манӑн, ялти фельдшерӑн, унашкал ирӗк ҫук.

Илемпи ӑнланчӗ. Ку фельдшер — медицинӑн чӑн-чӑн тӳрӗ кӑмӑллӑ тарҫи.

Умрай ҫамрӑк-ха. Вӑлтса та йӑпатса ҫын чунне кӗрсе тухма пӗлмест. Тен, кирлӗ те мар. Тархасшӑн, ҫын хӑйӗн вӑрттӑнлӑхӗпе хӑй ҫырлахтӑр.

Сывпуллашса тухса кайрӗ Илемпи.

* * *

Каллех ҫӗнӗ кун пуҫланчӗ. Амбулаторире ӗҫ кунӗ пуҫланнӑранпа самай вӑхӑт иртрӗ. Пӗри те килмерӗ. Иккӗшех лараҫҫӗ Умрайпа Сухви.

— Э-эх, — ассӑн сывлать фельдшер, — эпир никама та кирлӗ ҫын мар иккен.

— Куншӑн вара пачах кулянма кирлӗ мар, савӑнмалла ҫеҫ, — тет Сухви. — Никамӑн та нимӗн те ыратмасть. Ҫӑва тухрӑмӑр, кам йӳҫӗ эмел ӗҫтӗр халӗ. Серте, вӗлтрен — чи паха витамин. Серте яшкине ҫӑмах турасан, турилк-

кене хăйма ярсан, тупата, чĕлхӳне çăтăн. Сан эмелӳ аякра тăтăр.

— Манран ним усси те çук тесшĕн-и эсĕ, Сухви? — унăн куçĕнчен чăрлаттарса пăхрĕ Умрай.

— Турă çырлахтăр, — Сухви хăй çине хĕрес хывса илчĕ, — апла шухăшлани çылăх пулĕччĕ. Петĕр пиччене вилĕмрен çăлтăн. Пуртăпа каснă уринчен чарлаттарса юн юхнине чартăн. Çамрăк хĕре Нинука та инкекрен çăлтăн.

Нинук вун икĕ çулта çеç. Вăл çуркунне юхан шыв урлă каçнă чух пăр айне путнă. Юрать-ха ăна çынсем вăхăтра туртса кăларнă. Шăнни ахаль иртмен. Çăмах пысăкăш ӳпне çăпан шăтнă кăкăрĕ çине. Ыратнине тӳсеймесĕр пынă вăл медпункта. Шыççине касма тивнĕ. Шыçă — хăрушă чир, юн сиенленсе вилме те пултарнă хĕр ача.

Акă эрне иртрĕ. Ку эрнере яла килнĕренпех ĕмĕтленнĕ ĕçе турĕ Пушака фельдшер. Ял тăрăх çӳрерĕ, кĕрсе тухман кил хăвармарĕ. Чи пахи — нумай-нумай çынпа паллашни. Тавах, чирлисем нумай мар. Кӳлĕ хĕрринче, лăпсăркка йăмрасем айĕнче, ларакан килте пурăнакан хĕрарăм вара утса çӳреймест. Ывăлĕпе çеç пурăнать вăл. Кунĕпех пĕччен.

— Ăçта ывăлăр? — ыйтрĕ Умрай.

— Аксар ĕçре, вăл — кĕтӳç. Ял çыннисен ĕнисене уйхир, вăрман катисем тăрăх çитерсе çӳрет.

Ывăлĕн сăн ӳкерчĕкĕ стена çинче çакăнса тăрать. Ялт! пăхса илчĕ сăн ӳкерчĕке Умрай. «Чипер каччă пулас», — шухăшларĕ вăл.

— Тавтапуç ăраскала, вĕренет...

Ăçта, мĕне вĕренет? Тĕпчемерĕ. Çак вăхăтра хĕре чӳречерен шаккаса чĕнчĕç. Вăл пӳртрен васкаса тухрĕ.

— Тухтăр, тухтăр! Хреççи аппа урамрах ӳкнĕ! — пĕлтерчĕ пĕри, çамрăксем хушшинче тăраканскер. Ертсе кайрĕç ăна инкек пулнă çĕре. Часах çитрĕç. Касса янă хурăн пек выртать çамрăк хĕрарăм. Хăшĕсем ăна тăратса лартас шутпа хулĕсенчен ярса тытнă. Теприсем «Васкавлă пулăшу» чĕнме хушаççĕ.

— Чимĕр-ха, ан тапратăр ăна, — хушрĕ Пушака фельдшер. Вăл васкаса юн пусăмне тĕрĕслерĕ, ик çĕр алла çитнĕ. Юн пусăмне чакаракан эмел кирлĕ. Юрать-ха хĕрарăм часах тăна кĕчĕ. Вăл хăй чирне аван пĕлет, эмелсĕр пурăнмасть. Пĕр çамрăк йĕкĕте чуптарчĕ хĕрарăм килне.

Лешӗ часах тупса килчӗ. Тахӑшӗ килӗнчен стаканпа шыв ӑсса тухнӑ. Ӗҫтерчӗҫ эмел.

— Суха пуҫӗпе сухаласа ҫӗр улми пӑрахасшӑнччӗ. Вӑхӑт иртет. Кая юлсан каю шӑтать...

* * *

Пушака фельдшер темиҫе кун каялла пуҫланӑ ӗҫе вӗҫлерӗ. Пурин патне те кӗнӗ тесе калаймӑн. Сывӑ пурӑннине пӗле тӑркачах мӗн-ма чӑрмантармалла. Сӑмахран, Варуҫҫасен пӳрчӗ умӗнчен те ахалех иртрӗ, хапхи питӗрӗнсе тӑратчӗ. Уҫӑ пулсан та кӗме шутламан. Хӑй те, ҫемйи те чирлемест. Кунашкаллисем татах пур.

Умрай лӑпкӑн кӑна урампа утса пыратчӗ. Ӑна ял администрацийӗн пуҫлӑхӗ Карп Сидорович хирӗҫ пулчӗ.

— Сана шыраттӑм-ха, — терӗ вӑл. — Тӗл пулни питӗ аван.

— Мӗншӗн кирлӗ пултӑм-ши?

— Варуҫҫа лавккине каймалла. Ҫӑхав пур, — терӗ те вӑл ҫула май сӑлтавне ӑнлантарса пачӗ.

Пӗр хушӑ курӑнманччӗ-ха Варуҫҫа: те Мускава, те урӑх ҫӗре тавар туянма кайса килнӗ. Халӗ вӑл лавккинче ҫӑм ҫиппинчен ҫыхнӑ кофтӑсем ҫеҫ мар, ҫӳлӗк ҫине ҫимеллисем те кӑларса хунӑ. Тахӑшӗ ҫӑхав панӑ: Варуҫҫа апат-ҫимӗҫе таса мар кӗлетре сутать.

Ҫитрӗҫ. Тӗрӗслерӗҫ. Ҫӑхавра ним те суйса ҫырман. Ҫимелли сутма чармалла. Сутӑҫӑн сывлӑхӗ пирки илнӗ справка та ҫук. Ҫак сӑлтавсене кӑтартрӗҫ те актра.

Пӗччен тӑрса юлнӑ Варуҫҫа чӑннипех урчӗ. Мӗн кӑна каласа ятлаҫмарӗ-ши? Аллипе сулла-сулла юнарӗ. Унӑн ылханӗ ҫитсен-тусан Умрайпа Карп Сидорович паян хӗвел аничченех леш тӗнчене ӑсанмалла.

Ним кӗтмен-туман ҫӗртен лавккана Карачӑм Юманов пырса кӗчӗ.

— Мӗн пит тулашан, Варуҫҫа? Тавар туянакансем кӳрентерчӗҫ-и?

— Ҫӳреҫҫӗ йӗке хӳресем! — чун ыратӑвне самантрах юхтарса пачӗ лешӗ. Анчах унӑн чеелӗхӗ те пур. Ҫумӑр хыҫҫӑн хӗвелӗ те хӗртсе пӑхать. Йӑл-йӑл кулкаласа пит ҫӑмартине ал тупанӗпе сӑтӑркаларӗ. Каламалли сӑмахӗ тупӑнчӗ те: — Туянсам савнӑ чиперккӳ валли парне.

— Чиперукне тупаймарӑм-ха.

— Ан суй, — ихӗлтетсе илчӗ лавкка хуҫи. — Пушакаран сивӗнтӗн те-и?

— Вӑл мана юратмасть. Унӑн каччи пур — Эхтюк.

— Туртса ил. Тыт та авлан.

— Юлташа епле кӳрентерӗн?

— Тепӗр тесен, сур. Шухӑ хӗр вӑл. Качча кайсан та улаха чупӗ. — Варуҫҫа икӗ майлӑ ҫаптарать. Вӑл Умрая мӑшкӑл тӑвасшӑн. Качча ан кайтӑр, типпе тӑрса юлтӑр. Унтан ӳсӗрем пек тукаларӗ те суйса та хучӗ: — Пӗлентӗр, Эхтюк Машук патне кайса килнӗ. Туй пулатех.

— Ҫапла-и? Туянам-ха ав ҫӳҫеллӗ тутӑра.

Укҫине тӳлерӗ те лавккаран тухса кайрӗ Юманов. Эхтюк Машукпа пӗрлешсен Умрай ӑна качча тухасса шанать.

* * *

— Ай-уй, — аллипе пӗҫне шарт! ҫапса илчӗ кантӑкран урамалла пӑхса тӑракан Сухви. — Медпункта Мӑнтӑр Варуҫҫа килет. Асту, унпа мӗнле калаҫмаллине ан ман.

Умрай пуҫне сӗлтсе илчӗ. Варуҫҫа ун ҫинчен элек сарса ҫӳренине пӗлет, ҫавӑнпа та ӑна кӑшт ӑса кӗртмелли меслет шыраса тупнӑ.

Ӑшӑ кӑмӑлпа йышӑнчӗҫ «чирлине».

— Мӗн ыратать, чиперех сывлатӑн-и? — тӗпчет хайхискере фельдшер.

— Тавтапуҫ Турра. Ман нимӗн те ыратмасть. Сана инкекрен ҫӑлас шухӑшпа килтӗм, — йӑвашшӑн пуплет Варуҫҫа. — Эх, ача, Эхтюк савниййӗ Машук сана тытса силлесшӗн шӑл хӑйрать.

— Мӗншӗн? — ун куҫӗнчен чӑрлаттарса пӑхрӗ Умрай. Ҫавӑнтах ҫӗркаҫ вӑйӑран хӑйне Эхтюк ӑсатни аса килчӗ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр калаҫрӗ, шав качча тухма хистет. Ирӗксӗрлесех вӑта пӳрнене ылтӑн ҫӗрӗ тӑхӑнтартрӗ.

— Мӗншӗн тетӗн-и? Эх, ача! Вӗсем пӗр-пӗрне вилмелле юратаҫҫӗ, пӗрлешме тахҫанах калаҫса татӑлнӑ. Анчах Эхтюк патне эсӗ ҫыпӑҫать тет-и?

— Ҫапла, пӗр-пӗрне юрататпӑр. Ҫӗркаҫ та вӑйӑран вӑл ӑсатса ячӗ. Тем тӑвас ку ял арҫыннисене, — куляннӑн

ахлаткаласа илчĕ Умрай. — Каччăсем çеç мар, авланнисем те çыпăçаççĕ.

— Эх, ача! — куçĕ алтăр пысăкăш чарăлчĕ, сывлайми пулчĕ Варуççа. Ара, вăл çĕнĕ хыпар пĕлчĕ-çке. Тухтăр патне авланнисем те чупаççĕ. Унăн халех урама чупса тухас, тĕл пулакансене çĕнĕ хыпарпа каçăхтарас килчĕ. Ура çине сиксе тăчĕ, каллех лак ларчĕ. Пĕлмелли тата пур.

— Кам-кам упăшкисем çӳреççĕ, юрататăп тесе илĕртеççĕ сана?

— Мур пĕлет-и? Эпĕ палламастăп-иç сирĕн упăшкăрсене, — терĕ Умрай хаваслă сасăпа.

— Мĕнле сăмахсем калаççĕ?

— Акă пĕри, мăйăхлăскер, пĕр куçĕ кăштах чалăшрах, иртме ирĕк памасть, хăйне качча тухма ыйтать.

Варуççан чĕри яш! чиксе илчĕ. Тем тесен те çав этем унăн упăшки. Вара пăшăрхануллă сасăпа ыйтрĕ:

— Çав арçыннăн арăмĕ пур тет-и?

— Паллах. Арăмне килĕштермест, чăтмалла мар элекçĕ тет.

— Сана качча илсен ăçта пурăнасшăн путсĕрскер?

— Хулана илсе каясшăн. Килĕшес шухăшăм та пур, ара, тем тесен те хулара пурăнма кăсăклăрах. Унта кино, театр. Ялта пурăн кунта элек итлесе.

Варуççа тек юмахласа тăмарĕ, лавккана уçма вăхăт тесе пуçран çапнă пек тухса кайрĕ.

— Ну-у, эсĕ, Умрай, чăн-чăн артист, — ахăлтатсах кулать Сухви. — Пултаран. Варуççа ăнланчĕ унăн упăшки сана качча илесшĕн тăрăшнине. Халĕ ĕнтĕ пĕçерккĕ парать мăшăрне.

— Эсĕ, Сухви, айăплă, — лĕх-лĕх кулчĕ Умрай. — Мĕнле юмахлама хушрăн, йăлт каларăм.

— Мĕскĕн упăшки мĕнле тӳсĕ. Тен, кун хыççăн хăйне ăс кĕрет, юсанĕ, çынсем çинчен элек сарма чарăнĕ.

— Нинай, кукăр патака тӳрĕ тăваймăн. Çитĕ Варуççа çинчен юмахлама. Эпĕ Козловсем патне кайрăм, ачине вĕрилентерсе пăрахнă терĕç.

Сухви медпунктра пĕччен юлсан витрепе шыв илсе кĕчĕ те урай çума тытăнчĕ, унтан юрласа ячĕ:

Ан авăн, шĕшкĕ, ан авăн та...

## 4

— Эхе-хе-хе! Иванова-а!

Хайне чӗннине илтрӗ Машук, ҫӳлте-ҫӳлте кранпа хӑпартнӑ ещӗкре тӑраканскер. Вӑл пуҫӗнчи чӑпар косынкине юсакаласа илчӗ. Унӑн ёнси хыҫӗнче хытӑ туртса ҫивӗтленӗ икӗ ҫивӗчӗ хурҫӑ канат пек курӑнать. Вӑл ӗҫри хӗр юлташӗпе ҫӳллӗ ҫуртӑн виҫҫӗмӗш хутри акт залӗн чӳрече хашакӗсене сӑрлатчӗ. Аялалла пӑхрӗ Машук. Ҫӗрте аллинчи конверта сулласа трест секретарӗ тӑрать.

— Ҫыру камран? — ыйтрӗ Машук. «Ҫарти савниренǃ» — тенине илтес килчӗ ун. Ара, Эхтюкран тахҫанах хыпар-хӑнар ҫук.

— Ялтан пулас, — терӗ секретарь.

— Куракова парса хӑвар эппин, — хушрӗ Машук.

— Ку ҫыру, Машук, савнӑ каччунтан, — тет шӑл йӗрен крановщик-водитель Кураков машина кабининчен тухса аллине ҫыру илнӗ май. — Вуласа парас-и?

— Ан хайнӑ пул, мӑйна пӑрса татӑп! — кӑшкӑрать Машук ҫӳлтен аллинчи сӑрӑ милкипе юнаса.

— Юрӗ-ҫке, ан пӑшӑрхан, тивмӗп, — лӑплантарчӗ хӗр пӗрчине Кураков.

Эхтюкран ҫыру кӗтет Машук. Чунӗ ҫырӑва вуласшӑн шутсӑр вӗчӗрхенет. Вуласчӗ часрах. Кураков кранне усӑсӑр шутармасть. Техникӑна пӗр ухтарса, пӗр антарса тӑма ача вӑййи мар тет. Ҫынни вӑл ҫавнашкалскер, хайне ытлашши мӑнаҫлӑ тыткалать.

Машукӑн халӗ ёнтӗ Эхтюк ҫинчен шухӑш сирӗлмерӗ. Вӗсем иккӗшӗ те пӗр ялта ҫуралса ӳснӗ, шкулта та пӗр класра вӗреннӗ. Иккӗшӗ те вӑтам шкул пӗтерсен хулана кайрӗҫ. Анчах Эхтюк университета вӗренме кӗчӗ, Машук экзамен тытаймарӗ, ҫителӗклӗ балл пухаймарӗ. Йӗчӗ, йӗчӗ. Анчах куҫҫуль юхтарни мӗн усӑ парать? Пурӑнӑҫ татӑлман-ҫке, ал-ура сывах. Пуҫ та вырӑнтах. Хӑй пек ларса юлнӑ хӗр пӗрчисем пухӑнчӗҫ, калаҫрӗҫ. Пӗри техучилищӗне кайма сӗнӳ пачӗ. Хаваспах илчӗҫ вӗсене вӗренме. Вӑхӑт иртсен, ыттисем пекех, Машук та тытӑнчӗ ӗҫлеме. Вӑл — маляр. Ӗҫ килӗшрӗ ӑна. Укҫине те сахал мар параҫҫӗ. Хайне валли лайӑх тумтир туянчӗ. Капӑр тум илем, хисеп кӳнине такам та чухлать. Каччӑсем ун тавра пыл хурчӗсем чечек ҫийӗн нӑрласа ҫаврӑннӑн явӑнатчӗҫ. Эх-

тюка юратнипе кăна ытти йĕкĕтсене çывăха ямастчĕ. Пĕр хуларах пурăннăран Машука вăл час-часах кинона е театра илсе каятчĕ. Пĕр-пĕрин çумне çыхса лартасси ăнсăртран пулса иртрĕ.

Çу пуçламăшĕнче Эхтюка пĕр çулталăка çара илчĕç. Ăна ăсатма Машук хуларан яла таврăнчĕ. Ăсатăва кӳлĕ хĕрринче, ватă йăмра айĕнче йĕркелерĕç. Вăйă-кулăн хаваслă сасси ялти кашни çын чĕрине хускатрĕ. Хăшĕсем аса илчĕç-тĕр иртсе кайнă ырă самантсене. Савниллисем чее. Малтанах ура тупанĕ хăпарса тухиччен ташларĕç, вара никам сисиччен тĕттĕмре çухалчĕç. Эхтюк та Машука çавăтса пăрăнчĕ. Утрĕç, утрĕç урам, тăкăрлăк тăрăх. Вĕсем хыççăн укăлча хапхи хупăнса юлчĕ. Ял çумĕнчи ката пĕлет çамрăксен вăрттăнлăхне упрама. Йывăççем айĕнче çӳрерĕç, çамрăк чăрăш айне ларчĕç, чуптурĕç, çĕр çине йăванчĕç... Çак каç Машук хĕрлĕхне çухатрĕ. Тăрса тирпейленсен тытăнчĕ ĕсĕклеме. Ах, айванкка.

— Мĕншĕн куççуль тăкан çак? Килĕшмерĕ-и-мĕн? — терĕ Эхтюк.

— Пĕлмĕше ан пер-ха, — ӳлесех йĕрет хĕр. Ăнланчĕçке-ха Машук: инке арăмран каялла хĕр пулмасть.

— Ăнланатăп-ха, — Эхтюк ăна хĕрхенем пек турĕ, ыталарĕ. — Санăн малтан шухăшламаллаччĕ.

— Халь кам ĕнтĕ эпĕ? — тĕпчет Эхтюка. — Арăму-и е чупкăн, юхха?

— Çартан таврăнсан туй тăвăпăр.

— Ай-ай! Хăçан вăл?

— Кая юлтăмăр. Тата тепĕр ик-виç сехетрен манăн тухса каймалла. Анчах хăвна упра.

— Юрĕ. Каланă сăмахна ан ман. Эпĕ кĕтетĕп, — пуçне каçăртрĕ Машук. — Тен, ача юлчĕ ман?

— Кун пирки ан пăшăрхан. Эпĕ сыхлантăм.

Машук ним калама пĕлмерĕ. Çак каçчен вăл хăйне çав тери танлă тытатчĕ. Каччă мăшкăлне тӳснĕ хĕрсенчен вăрттăн ихик! кулатчĕ. «Хăйсем айăплă», — тетчĕ. Халĕ унăн мăнкăмăллăх чечекĕ шанчĕ. Хĕр тенине тасалăх, хĕрлĕхе упрани пуçа каçăрттарать.

Эхтюкпа уйрăлсан Машук пĕр вăхăт пуçа чиксе, ассăнассăн сывласа çӳрерĕ. Тепĕр йĕкĕт хăтана пырсан (темĕн чухлĕ килĕшсен те), Турă сыхлатăр, качча тухаймăн.

Пулас упăшка чунтан юратмĕ. «Мана Эхтюк пăрахманиç, мĕн-ма çынсенчен куçа тартса çÿрес? Килтĕр. Туй тума сăмах панă. Енчен кутăнлансан, пăрăнса урăх сукмакпа кайсан маххă памăп, пĕтĕм чĕрнемсене кăларăп, чăрмаласа пăрахăп». Вара тытăнчĕ хаваслă çÿреме. Анчах темшĕн, усаллине сиснĕн, ал чăмăрне пушатмарĕ. Вăхăт иртет. Халь-халь Эхтюк таврăнмалла. Хăçан киле çитес пирки пĕлтерессе кĕтет вăл халĕ.

* * *

Кăнтăр апатне ларма аранах вăхăт çитрĕ. Крановщик чÿрече хашакĕсене сăрлакан малярсене антарчĕ. Тинех Машук хăй ячĕпе килнĕ çырăва алла илчĕ. Пăхрĕ тинкерсе. Конверт çинчи почерк кăмăлне хуçрĕ, ку — кĕтнĕ çыру мар. Чĕре кăрт! туса илчĕ. Ĕмĕт сÿнчĕ. Çыру — çырăвах, пурпĕрех паха. Ялтан килнĕ. Варуççа çырнă. Вуларĕ. Пĕлчĕ çĕнĕ хыпарсем. Эхтюк çартан таврăннă. Тĕлĕнтермĕш! Хурах! Вăл ялта савни тупма ĕлкĕрнĕ, çитменнине, авланасшăн. Арăм пуласси — ялти медпункта ĕçлеме килнĕ çĕнĕ фельдшер. Хыпар Машук ăш-чикне çулăм пулса кĕчĕ. «Ых-х, мур çимен, пĕлет-ши çав хĕр эпĕ Эхтюка хĕрлĕхе парнеленине? — хăй тĕллĕн мăкăртатрĕ Машук. — Эхтюкĕ тата манчĕ-ши вара хамăр кавара?»

Кăçал Машук юриех туй пуласса кĕтнипе отпуск илменччĕ-ха. Яла канмалли кун кайса килме шутларĕ. Киле ирех çитрĕ. Амăшĕн савăнăçĕн вĕçĕ-хĕрри çук. Ара, чăн-чăн хăна мар-и вара? Мĕн каласси пур — хăйĕн пепки. Çитменнине тата, киле час-часах килеймест. Сĕтел çине тутлă апат-çимĕç хурасшăн каллĕ-маллĕ чупкаларĕ кăна. Мĕн пуррине йăлт кăларса лартрĕ: тăпăрчă, хăйма, услам çу (ĕне усрать-иç), хуплу (ĕнер пĕçернĕ, хĕрĕ килессе чунĕ сиснĕ ахăр), пыл, тин çеç пĕçернĕ тинкĕле.

Сĕтел хушшине ларчĕ те Машук ним шарламасăр апатне ишрĕ нихăçан çимен пек. Амăшĕ калаçасшăн, час-часах курнăçмаççĕ-çке-ха, ыйтса пĕлмелли лăках. Вăл пур, сăмах ваклашмасть, пуçне çеç сĕлткелесе илет.

Ĕнтĕ хырăм тутă. Амăшне апатшăн тав тумарĕ те, манчĕ-ши е васкарĕ-ши? Хыпалансах тĕкĕр умне пырса

тăчĕ. Ун çине çаврака пит-куçлă хĕр пăхать. Хура куçлă вăл. Сăмси лапчăк. Сулахай пит çăмартинче (куç айĕнче тесен тĕрĕсрех те пулĕ) çĕвĕк пур. Пĕчĕк чух урамри ашкăнчăксем рогаткăпа пенĕччĕ. Аялти тути палăрмаллах тачка, кăшт таврăнчăк теме те юрать. Калаçнă чух тута кĕтесĕсенче сурчăк кăпăкĕ тухать. Вăл хăй çакна сисетмĕн. Вăрăм çӳçĕ хĕвел çаврăнăш чечекĕ евĕр — сап-сарă. Яла килес умĕн пĕр кун маларах ятарласа парикмахерские кайса пĕветтерчĕ. Çӳç тĕсĕ унăн сăн-сăпатне урăхлатрĕ. Тата куç харшисене хура кăранташпа сĕрсе сăмса кăкĕ тĕлĕнче пĕтĕçтерчĕ. Çине шурă брюкиллĕ костюм, урине çӳллĕ кĕлеллĕ (шурă тĕслĕ каллех) туфли тăхăнчĕ. Тинкерсе пăхрĕ тĕкĕрте хăйне. Çук, тиркемерĕ, йăл! çеç кулчĕ. Вара ылтăн тĕссемпе капăрлатнă ридикюльне алла илчĕ.

— Часах таврăнатăн-и? — тĕпчерĕ амăшĕ тухса каякан Машукран. — Кăмакаран кукăль кăларнă çĕре таврăнма тăрăш!

— Мĕн кукли?

— Çăмартапа симĕс суханран хупатăп!

— Юрĕ.

Машук урам варрипе утрĕ. Пусмассерен ури кăпăшка тусан ăшне пута-пута пынипе туфли пичĕ те, брюки вĕçĕ те кăшт хуралчĕ. Кăна асăрхамарĕ-ха вăл. Унăн пуçĕнче шухăшсем явăнаççĕ. Пĕтĕм ĕмĕчĕ — пулас упăшкине тытса илекен хĕре тавăрасси. Анчах мĕнле? Хăй нимле май та тупаймасть, Варуççа пулăшасса кăна шанать. Вăл çур тухатмăш, тĕшмĕш йĕркисене пĕлет, кирек кам çинчен те хăрушла элек туртса кăларма ăста, никам çĕнтереймен вичкĕн чĕлхеллĕ хĕрарăм. Çавăнпа та тӳрех унăн лавккине çул тытрĕ. Тата Варуççана пăхăнтаракан пысăк сăлтав та пур. Суту-илӳ ĕçне тытăнма (лавкка уçма хатĕрленнĕ самантра) Машукран укçа пысăк сумма кивçен илнĕччĕ. Парса татасси пăхса курăнмасть. Çавăнпа та ĕнтĕ Машука йăпăлтатса кăна тăрать Варуççа. Ара, калаççĕçке, парăмăн çынна пăхăнтарас йăла пур.

Акă пырса кĕчĕ Машук лавккана.

— Ай-уй! Хăçан килтĕн? — хыпăнса ӳкенçи турĕ Варуççа. — Ман çырăва илтĕн-и? Хыпар пĕлетĕн-и?

— Çавăнпа килтĕм те, — тавăрчĕ Машук йӳççĕн. — Мĕнле унта? Юхха çаплах çӳрет-и ман варлипе?

— Эх, ача-а! Сас-хура ҫӳрет: Эхтюк авланма хатӗрленет имӗш.

— Кама качча илет? Тен, мана?

— Мур пӗлет-и, — терӗ Варуҫҫа. Вӑл Машук авӑнса ӳкесрен шикленчӗ те тӗрӗссине калама тытӑнса тӑчӗ. Ытахальтен ӑс паракан пек турӗ: — Кай-ха, кӗрсе тух Эхтюк патне.

— Аюк, — терӗ Машук шӑл витӗр. «Юрӗ, халех каятӑп», — тесен хӑй унпа тахҫанах хӗрлӗхе ҫухатнине Варуҫҫа тавҫӑрасран шикленчӗ. — Ҫапах та эпӗ мӑн кӑмӑллӑ хӗр, хама кӗҫӗне хурса ҫӳремӗп. Вӑл мана качча илсен сӑмах чӗнтермӗ: «Эсӗ ху йӑлӑнтӑн, мана ирӗксӗрлесе авлантартӑн», — тейӗ. Лешне, медпунктра ӗҫлекеннине, мӗн те пулин тумалла.

— Ай, эпӗ тупрӑм! — хи-хик кулса илчӗ Мӑнтӑр Варуҫҫа. Савӑнӑҫлӑн ихӗлтетнӗрен тулли кӑкӑрӗсем чӗтренсе илчӗҫ.

— Чӑнах-и? Кала хӑвӑртрах, — хӗпӗртесе ӳкрӗ Машук. — Ну, мӗн?

— Ухмаха ертекен курӑк тымарне ярса вӗретнӗ шыва ӗҫтермелле.

— Ах, маттур ҫак эсӗ, Варуҫҫа, — Машукӑн тута хӗррисене сурчӑкӑн шурӑ кӑпӑкӗ тухрӗ. — Ҫавӑнпа сана хисеплетӗп, парӑма тавӑрса пама та васкатмастӑп.

Варуҫҫа хӗвел пек йӑлкӑшса тӑрать хайне мухтанипе савӑнса.

— Сана, Машук, питӗ юрататӑп-ҫке-ха.

— Чим-ха, Варуҫҫа аппа, курӑкӗ сан пахчунтах ӳсет-и? — кӑсӑкланчӗ Машук.

— Ман пахчара мар, вӑрманта. Ыран илӗм-тилӗмпех Лашман вӑрманне иккӗн кайӑпӑр. Курӑк тымарне хӗвел тухиччен тӑпӑлтармалла.

Каланӑ — тунӑ. Тымар вӗретнӗ шыв хатӗр. Анчах ӑна Умрая мӗнле ӗҫтермелле? Варуҫҫа патне тем чухлӗ чӗнсен те килмест.

— Эх, Турӑ! Ултавӑн ҫулӗ шуҫлак теҫҫӗ-ҫке, — хаш-ш! сывласа илчӗ Варуҫҫа.

— Сухви килне кай та ларт, — сӗнчӗ Машук, — пӗрпӗр савӑтпа.

— Тупата, ҫапла тӑвас, — ҫатӑлтатнӑ май пӗҫҫине ҫатҫат ҫапса илчӗ Варуҫҫа.

— Виççĕшĕ те кăнса выртаççĕ.

— Вара маншăн тĕрме алăкĕ уçăлать, — йынăшса илчĕ Варуççа. Анчах çавăнтах вĕçертнĕ кайăка ярса тытнăн савăнăçлăн кăшкăрчĕ. — Тепĕр тесен Сухвие тахçанах шăл хăйраса çӳретĕп. Унăн ывăлĕ нумай пулмасть шкулта тĕртсе ярса манăн пепкем урине хуçрĕ. Ним те тумарĕç. Директорĕ те, учительници те йăлт ун майлă çаптарчĕç. Ман вĕсене çавăншăн тавăрмалла.

...Варуççапа Сухви ывăлĕсем иккĕмĕш класра вĕреннĕ. Хĕрĕх пилĕк минут урокра ларни ача-пăчана çав тери ывăнтарать. Тăхтав вăхăтĕнче вĕсен ăшне шуйттан çурисем кĕрсе лараççĕ тейĕн: чупаççĕ, такăнаççĕ, пĕр-пĕрне ура хурса ӳкереççĕ. Ку çитмест, çавăнтах тытăнаççĕ тӳпелешме. Пĕри сăмсине ватать, тепри тутине катать. Йĕреççĕ, кулаççĕ, кăшкăрашаççĕ. Анчах никамăн та ĕç çук.

Инкек пулнă кун тулта шартарса хĕвел пăхнă, юр ирĕлнĕ, шăнкăртатса шыв юхнă. Илĕртет-çке ачасене çуркунне!

«Урама!» — чĕнет шăпăрлансене хĕвеллĕ çурхи кун. Ыткăнать вак çамрăк халăх ниме уямасăр. Иккĕмĕш класра вĕренекенсем пырса тăвăнаççĕ пĕрремĕш хута анмалли картлашка умне. Малтисен пĕчĕк урисем ёлкĕреймеççĕ пусмаран пусма çине анма. Вĕçĕччĕç! Ăçта çунат? Хыçалтисем тӳсĕмсĕр. Умрисене мĕнпур вăйран тĕртеççĕ. Ай! Пĕтрĕ пуç, пĕри ӳкнĕ. Çухăрса ячĕ. Тăраймасть. Вăл айлатать. Кайрисен мĕн ĕç? Вĕсем — тăвăнса аннă шыв сикки. Чăрмав чараймасть, тĕллев патне ыткăнмалла!

— Кам ӳкнĕ?

— Панти! Варуççа ывăлĕ.

— Ури хуçăлнă! Тăраймасть.

— Кам тĕкнĕ? Камччĕ ун хыçĕнче?

— Юра! Сухви ачи.

Йĕри-тавра анăш-тавăш шав.

Вĕрентекене чĕнеççĕ. Пантие аслă классенче вĕренекенсем медпункта çĕклесе каяççĕ. Фельдшер ачана район центрĕнчи больницăна кайма хушать.

Панти амăшĕ, Варуççа, ах тулашрĕ. Пурне те ятлать, ылханать. Сухви ачин урине хăй çапса хуçма пулчĕ.

— Сухви, халех пин тенкĕ панă пултăр мана. Унсăрăн ачун урине хам тытса хуçатăп!

Хăраса ӳкнĕ Сухви çав кунах иккĕмĕш класс учительницине пин тенкĕ кайса пачĕ.

Ку хыпар Варуççа хăлхине часах пырса кĕчĕ. Савăннипе тринк! сикрĕ, урай хăмисем йывăрăшне тӳсеймен енне шатăртатса илчĕç. «Ку укçапа хам валли сăран атă туянатăп-ха», — хĕпĕртет хăй тĕллĕн юмахласа. Сухвие вара мĕн кăна каласа хăртмарĕ-ши. Юрать, çурăм хыçĕнче кăшлать. Вăл вăрă та — медпункта çаратать, вăл (упăшкасăр пирки ĕнтĕ) йĕвенсĕр кĕсре те, вăл тилĕ пек чее те — тухтăрне хăй патĕнче усраса услам курать.

Часах упăшки ачипе киле таврăнчĕ.

— Мĕн терĕç тухтăрсем? Ĕмĕр уксах юлать терĕç-и? — çиллессĕн ыйтрĕ Варуççа лара-тăра пĕлмесĕр.

— Ача-пăча пăтăрмахсăр ӳсмест. Часах тӳрленет. Гипсне илсен каллех тиха пек чупма тытăнĕ.

Варуççа учительница патне Сухви укçине илме кайрĕ.

— Парăр часрах кити-миттине. Ачана ури хăвăртрах юсанма пĕремĕк илсе çитересшĕн.

— Педсоветра сӳтсе яврĕç. Суд çеç Сухвирен укçа шыраса илме пултарать терĕç. Эпĕ тавăрса патăм.

— Ĕненместĕп! Ман ывăлăм урасăр ларать, — ятлаçать Варуççа. Кăмăлĕ шутсăр хуçăлчĕ. Ĕмĕчĕ, Сухви укçипе атă туянасси, ывăçри хăйăр пӳрне хушшинчен юхса тухнăнах сӳнсе çухалчĕ.

Унтанпа вăхăт нумай иртрĕ. Ачи те качака путекки пек тăрăс-тăрăс сиккелесе çеç çӳрет. Виççĕмĕш класра вĕренеççĕ. Инкек тахçанах манăçа тухнă. Апла пулсан та Варуççа лăпланаймасть. Сухвие çеç мар, Пушака фельдшера та кураймасть: Сухви патĕнче пурăннăшăн тата хăйĕн упăшки ăна юратнăшăн. Ара, пĕррехинче Умрай хăех юптарнăччĕ-çке-ха, ăна авланнă çын качча илсе хулана пурăнма илсе каясшăн терĕ. Варуççа çав çын хăйĕн упăшки пулнине ĕненет, мăшăрне кун памасть — шав ятлать, килтен тухса кайма хӳтерет. Халĕ Варуççа тавăрасшăн. Умрая çеç мар, Сухвипе ывăлне те.

Тымар (курăк ятне Варуççа хăй те пĕлмест, кукамăшĕ тахçан каласа ăнлантарнăччĕ) ярса пĕçернĕ наркăмăш хатĕр. Ав сĕтел çинче ларать шĕвек тултарнă кĕленче. Иккĕн тан Варуççапа Машук шăтарасла пăхаççĕ ăна.

— Халё Сухви килне каятпăр, — терĕ Варуççа шĕвек янă савăта сумкине лартса.

— Каçар мана. Эпĕ санпа пыраймастăп, — терĕ Машук. Хăйĕн сасси темле чĕтренсе тухрĕ.

— Мĕнле апла пыраймастăн? — тулхăрса кайрĕ Варуççа. Вăл сумкинчен кĕленчене кăларса сĕтел çине шак! лартрĕ. Ку ĕнтĕ уççăнах хирĕçлени. Çавнашкал хура ĕç тума вăл пĕччен каймасть.

Кил хуçи хăтланăвне курмăша хыврĕ Машук. Çавăнтах йĕплĕ сăмахĕсене шăл витĕр вĕçертрĕ.

— Варуççа, эсĕ кивçен илнĕ укçана паян тавăрса парха. Хула хĕрĕсем тăхăнакан йышши моднăй кĕрĕк туянасшăн эпĕ.

— Тепĕртак кĕт ĕнтĕ, — тилмĕрчĕ Варуççа мĕскĕн сассипе. Вăл Машук талăрса каясран шикленчĕ. Вара наркăмăш кĕленчине ытахальтен çеç кăларса лартнине ĕнентерес шутпа вĕлт илсе каллех сумкине чикрĕ.

— Укçи хама кирлĕ.

— Ăнланатăп. Каярахпа проценчĕпе пĕрле пĕр лав укçа илĕн.

— Лавĕпех-и? — хи-хик кулса илчĕ Машук. — Тупата, савăнтарма пĕлетĕн эсĕ, Варуççа. — Шурă тутăр кăларса сурчăкĕпе йĕпеннĕ тутине шăлкаларĕ. — Манăн çак самантрах хулана тухса каймалла. Ĕçре кĕтеççĕ.

— Юрĕ ĕнтĕ. Пĕчченех кайăп Сухви патне.

Урама тухсан сывпуллашса уйрăлчĕç.

Варуççа эххĕм-эххĕм ӳсĕркелесе пырса кĕчĕ Сухви килне. Килте çын пуррине пĕлесшĕн ĕнтĕ.

— Мана кам та пулин кĕтсе илет-и? — терĕ хайхи.

Сухви ывăлĕ (вăл паян диктант çырассинчен хăраса шкула кайман) Варуççа хапхаран кĕнине курчĕ, анчах унран шикленнипе (ара, Панти урине хуçсан миçе хутчен тытса вĕтме пикенчĕ) кăмака кукрине кĕрсе пытанчĕ.

Килте никам та çуккине ĕненчĕ Варуççа. Вăл кухньăна кĕчĕ. Ун-кун пăхкаларĕ. Шырать. Акă куç тĕлне чейник лекрĕ. Алла илсе тĕрĕслемелле. Пушах. Вара сумкинчи кĕленчене кăларчĕ те унти шĕвеке чейнике пĕл-пĕл-пĕл-л юхтарчĕ. Ĕçне тунă, тухса шурĕ çăмăллăн.

Вăрман хăлхаллă, уй куçлă тенĕ ваттисем. Йăнăшнă Варуççа. Унăн хура ĕçне Сухви ывăлĕ Юра кăмака кĕте-

сёнчен вӑрттӑн йалт курса тӑчӗ. Ачан ӑсӗ пур. Ырӑ мара чухларӗ. Варуҫҫа ярса хӑварнӑ шӗвеке тӑкмарӗ, чӑлана тӗплӗн пытарчӗ кӑна. Хай шкула тухса вӗҫтерчӗ.

Сухви ӗҫрен килсен чей вӗретсе ӗҫесшӗнччӗ, анчах чейнике тупаймарӗ. Ӑш хыпнине мӗнле ирттермелле-ши? Асне илчӗ — уйран пур-иҫ! Ывӑлӗ шкултан таврӑнсан тинех пӗлчӗ вӑл унӑн килӗнче мӗн пулса иртнине.

— Асту, Варуҫҫа! — ҫиллессӗн чӑмӑрӗпе юнарӗ Сухви. — Ҫын валли шӑтӑк чавакан унта хӑех кӗрсе ӳкет тенӗ авалхи ҫынсем.

Юра пытарнӑ ҫӗртен чейнике илсе кӗрсе амӑшне тыттарчӗ. Лешӗ ҫавӑнтах килтен тухса кайрӗ.

— Лавккине час хупмасть-ха Варуҫҫа, — мӑкӑртатрӗ Сухви хӑйпе хӑй. — Килӗнче никам та пулма кирлӗ мар.

Хайхи кӑн-кан пӑхкаласа пӳрте кӗчӗ. Пӗри те ҫук. Ку хавхалантарчӗ ӑна. Кӑмака умне иртрӗ. Сӗтелӗ ҫинче ҫуман чашӑк-тирӗк лӑках. Шӑнасем ырӑ кураҫҫӗ. Чейникри шӗвеке ӑҫта юхтарса хӑвармаллине ширать. Сак айӗнче кӑкшӑм ларать. Алла илсе пӑхрӗ. Пушӑ мар. Шӑршласа пӑхрӗ. «Сӑра! Им-ҫама кунта ярас. Ӗҫтӗр сӑрапа хутӑш. Варуҫҫа — хӑвӑн хӑрушӑ ӗҫӳ хӑвнах пырса ҫаптӑр. Кашкӑр пулӑшсан вӑрӑм туна та лашана ӳкерет тенӗ».

Чейник пушансан Сухви пуҫран ҫапнӑн Варуҫҫа пӳртӗнчен тухса сирпӗнчӗ, тӳрех — ҫӑл патне. Аллинчи савӑтне хӑйӑрпа сӑтӑрса ҫурӗ-ҫурӗ — ҫирӗм хут та пулӗ. Юлашкинчен чейнике тӑрӑ шыв тултарчӗ те тӳрех амбулатори уттарчӗ.

* * *

Ҫак кун медпункт ҫын сассипе тулчӗ, ара, район больницинчи тухтӑр килнӗ тет. Хӑйсен сывлӑхне тӗрӗслеттерме ял ҫыннисем йышлӑн пухӑннӑ.

Тухтӑрпа фельдшер малтан медпункта килейменнисем, йывӑр чирлисем, патне киле кайрӗҫ. Акӑ палисадниклӑ ҫурт. Кунта шалкӑм ҫапнӑ Униҫҫе инке пурӑнать. Ун патне кӗчӗҫ. Пӗчченех вӑл.

— Кампа пурӑнатӑн? — кӑсӑкланчӗ тухтӑр. — Ай-яй, пӳртре ытла хӑтлӑ сан. Хӗр ачу ӗҫчен пулӗ-ха?

— Ывӑлӑм манӑн ҫапла тасана юратать. Кашни ҫул тенӗпе пӗрех пӳрт-алкум урайӗсене сӑрлать. Ӗҫрен килсен

самант çуса каять. Кĕпе-йĕме, вырăн таврашне çĕтсе пĕтерчĕ.

— Хăех ухать-и?

— Çу-у-ук! Машина туяннă вăл.

— Пĕр-пĕр инженер пулĕ-ха.

— Аксар-и? И-и-и, хальлĕхе инженер мар-ха. Вăл — кĕтÿç кăна. Ял çыннисен ĕнисене кĕтет.

— Маттур. Ĕççĕр сулланса çÿремест.

Униççе инкене Умрай хывăнма пулăшрĕ.

— Вилмелле те, пурăнатăп çынсене асаплантарса.

— Вилнинчен мĕн усси?! Сывататпăр та, ак чупакан пулăн.

Тухтăр тем-тем пкаларĕ фельдшера. Униççе ăнланаймарĕ вĕсен калаçăвне.

— Инке, малашне сан пата укол тума çÿрĕп. — Ăна фельдшер вырăн çине выртма пулăшрĕ.

Вĕсем сывпуллашса Униççе инке патĕнчен тухрĕç. Умрай тухтăра тепĕр мучи патне илсе кĕчĕ.

Тата тепĕр ик çын патне кĕрсе тухсан тухтăрпа фельдшер медпункта таврăнчĕç. Кунта та хăйсен сывлăхне тĕрĕслеттерме килнисем кĕтеççĕ. Вĕсен хушшинче Наçтуç фронтовичка та ларать. Тухтăр майĕпен пурне те йышăнчĕ. Канашĕ питĕ паха — чĕрĕ сывлăш. Çапах та пĕрин диагнозĕ тухтăра чăннипех хурлантарчĕ.

Наçтуç фронтовичкăна онкологи больницине кайма хут çырса пачĕç.

Тек тухтăр патне кĕрес текенсем çук. Тинех аслипе кĕçĕнни хушшинче кирлĕ калаçу пуçланчĕ. Умрай фельдшерăн паян-ыран ял ачисене, пĕчĕккисене кашнинех полиомиелитран прививка тумалла.

Вăхăт шурĕ те шурĕ. Уйрăлмалла. Тухтăр каять. Картишĕнче машина кĕтет. Ăна ăсатсан Умрай амбулатори çуртне таврăнчĕ. Уçă чÿрече умне пычĕ. Çĕмĕрт чечекне тăкнă та-мĕн. Çавна хĕр сиссе те юлман.

Пÿлĕме Сухви вирхĕнсе кĕчĕ. Пичĕ-куçĕ хумхануллă.

— Мĕн пулнă сана?

— Ăçтан лăпкă пулăн, — аллинчи чейнике сулласа илчĕ Сухви. — Паян виççĕмĕр те кăнса выртаттăмăр. Турра кĕлту, инкекрен хăтăлтăмăр.

— Ан хăрат-ха! Кала часрах: мĕн пулчĕ?

Сухви мĕн пулса иртнине тĕпĕ-йĕрĕпе каласа пачĕ.

— Мĕнле наркăмăшпа тĕп тăвасшăн пулчĕ-ши пире Варуççа? Шел, чейникре шĕвек юлман, — кулянчĕ Умрай. — Чим-ха, им-çамлă шĕвеке ĕçсе Варуççа çемйипех вилсен?

— И-и, вилеççĕ сана! Пахчари вĕлтрене тем чухлĕ кăкласан та каллех ашкăрать.

## 5

Вырсарни кун. Медпункт хупă. Умрай фельдшер çĕр выртмаллах хулана кайнă. Сухви килте. Вăл вăрманта çулса типĕтнĕ утта ирех машинăпа киле илсе килчĕ. Шоферне укçа тӳлерĕ те пӳртне кĕчĕ. Хырăмĕ выçнине туйрĕ. Мĕн çимелле? Ун-кун пăхкаларĕ. Кастрюльте шурă кăмпа пурччĕ-çке. Ĕнер вăрманта тупнăччĕ. Çут çанталăк ĕçчене хаклă кучченеçпе хăналать. Кăмпа ăшалас шухăшпа кухньăна кĕчĕ. Стена çумĕнчи сехет: «Мана кур! мана кур!» — тенĕн шăк-шак! шаккать çаплах. Унччен те пулмасть, тăăн-н! янăрарĕ. Сухви кухньăран тухса сехет çине пăхрĕ.

— Аппай! Кăнтăрла иртни икĕ сехет! — тĕлĕнчĕ вăл. — Унпа-çке хырăм хыр тăрне кайнă.

— Анне, кукăль касса пар-ха. Çав тери çиес килет, — найкăшать ывăлĕ, сĕтел хушшинче тем çыркаласа ларакансker.

— Халех апатланăпăр. Яшка хатĕр. Унччен тарасаран шыв ăсса кĕр-ха, — амăшĕ Юрăна пушă витре тыттарчĕ. — Асту, витрине тулли ан тултар, йывăр çĕклеме юрамасть сана, атту ӳсейместĕн.

— Юрĕ! Эсĕ каланă пек тăватăп, — пуш витрепе тухса кайрĕ ача.

Каç енне сулăнсан Умрай çитрĕ. Вăл кутник çине икĕ йывăр сумкине лаш-ш! хучĕ.

— Килте кам пур?

Сас илтнĕ Сухви кухньăран чупса тухрĕ.

— Çитрĕн-и? — савăннипе пырса ыталарĕ Умрая. — Мĕн пит нумай пурăнтăн? Умрай, хĕрĕм, апат хатĕр. Яшка пĕçертĕм. Шурă кăмпа ăшаларăм. Аллуна çу, Юра ав шыв ăсса килнĕ.

— Тавтапуç.

Апатланса сĕтел хушшинчен тухсан Сухви Умрайăн

йывăр сумкинче мĕн пуррипе кăсăкланчĕ. Унта кĕнекесем чиксе тултарнă-мĕн. Ял библиотеки валли пулĕ тесе ăнланчĕ. Апла пулсан йăнăшнă Умрай. Библиотека иртнĕ эрнерех хупăннă. Кĕнеке туянма пĕр пус укçа та уйăрман. Киввисене шкула панă. Çӳлĕк çине майласа хунă май ячĕсене сасăпа каласа пычĕ: «Версты любви», авторĕ Анатолий Иванов; «Царь-рыба» Виктор Астафьевăн; «Плаха»...

— Кала-ха, Сухви, кам çырнă çак кĕнекене? — ыйтрĕ Умрай.

— И-и-и, ара, эпĕ вырăсла çырнисене уçса пăхнă тетĕн-и? Пур ман килте пĕр юратнă кĕнеке — «Салампи». Содержанийĕшĕн мар, илемлĕ çырнăшăн ялан вулатăп.

— Чим-ха, ку хăмăр хуплашкаллă тачка кĕнеке мĕнлескер? — терĕ Сухви кĕнекене алла илсе. Ятне те вуларĕ: «Судебная медицина». Чирлисене мĕнле эмел ĕçтермелли çинчен, ахăр.

— Йăнăшатăн, Сухви аппа. Кӳр-ха кĕнекене. Халех сана каласа ăнлантарам...

Умрай сăмахне вĕçлеймерĕ, алăка тахăшĕ шаккарĕ. Пӳрте Эхтюк кĕрсе тăчĕ. Вăл пылак сăмахсемпе саламларĕ. Кăмăлĕ хаваслă. Ку унăн сăн-питне пăхсах паллă.

— Атьсемĕр, чей ĕçме вăхăт. Кукăльне паçăрах касса вакларăм, — тытăнчĕ Сухви калаçма. — Сана, Эхтюк, хуняму саваканни пулать. Эсĕ телейлĕ. Ман упăшкам та аннепе пĕр чĕлхеллĕччĕ. Ялан ăна хӳтĕлетчĕ.

Сухвие çуратнă чух амăшĕ çур ĕмĕре пурăнса çитнĕ. Кунашкалли, аллăра ача çуратаканни, сайра пулать. Çăмăллансан вăл часах вĕрĕлет. Хăй чирленĕшĕн пепкене айăплать айванскер. Юрать, кӳршĕ хĕрарăмĕ, ырă кăмăлăскер, пĕчĕк хĕр пĕрчине вилме памасть, пыра-пыра кăкăр ĕмтернĕ. Сухви ашшĕ ăслă çын пулнă. Вăл арăмĕн кăмăлне çемçетме пĕлнĕ. «Эсĕ, амăшĕ, йăнăш çул çинче. Хĕрӳллĕ юрат хамăрăн чи кĕçĕннине. Вăл сана пăхаканни пулĕ. Асту!»

Тĕрĕсех, ашшĕ сăмахĕ чăна килнĕ. Сухви ватă амăшне чунтан хисепленĕ, ача пек пăхнă. Амăшĕ те хакланă хĕрĕ уншăн тăрăшнине. Вилес умĕн хăй çуратнă хĕрне пил панă. Ашшĕ-амăш пилĕ ачи-пăчишĕн питĕ хаклă. Пил илнĕ ывăл-хĕр телейлĕ пулать, пурнăçĕ ăнса пырать.

Кăшт сыпсан Сухвин мухтанас йăли пур: «Мана паян, укçа-тенкĕллĕ пурăнма анне пилĕ пулăшать. Эпĕ нихăçан та выçă ларман. Манăн картиш тулли выльăх-чĕрлĕх».

— Сухви, пулас арăмăн амăшĕ çук пулсан ун вырăнне кам савĕ? — ыйтрĕ Эхтюк.

— Арăмун ашшĕ.

— Умрай, санăн аçу ăçта? — Эхтюк ун çумне пырса ларчĕ.

— Мĕн-ма кирлĕ сана ман атте пирки пĕлни? — Умрай чăр-р пăхрĕ Эхтюк куçĕнчен. — Эпĕ санăн пулас арăму мар пулĕ?

— Эсĕ манăн, — терĕ Эхтюк уссине пўрнисемпе якаткаласа.

Умрай илтмĕше хыврĕ.

— Атте пирки хамăн та пĕлес килет, — сăмахне тăсрĕ хĕр. — Тĕнчере кирек кам та ашшĕллĕ. Эппин, манăн та атте пур. Кам вăл, ăçта вăл? Вăрттăнлăх чул айĕнче.

Пĕри те сас памарĕ. Кăмака шăтăкĕнчи шăрчăк çеç чарăнми чĕриклетет.

— Пăхăр-ха, пăхăр! Тĕлĕнтермĕш! — шăплăха сирчĕ чўрече умĕнче тăракан Сухви ывăлĕ Юра. — Тўпере катрам пĕлĕт айĕнчен çаврака çăкăртан та пысăкрах кĕмĕл уйăх шуса тухрĕ.

Пурте карах пырса тăчĕç чўрече умне.

— Уйăх, эсĕ йăнăшнă, — терĕ Сухви, — хĕвел пур чух санăн çуту никама та кирлĕ мар.

«Умрай, эпĕ курнă санăн аçуна, — тĕрĕ уйăх çинчи кĕвентеллĕ пике. — Ун чухне çырнă манăн кун кĕнекипе паллаш».

Май çуккине пĕлтересшĕн уйăх çинчи пике.

* * *

...Умрайăн ашшĕ Минас ятлă. Маньаккапа иккĕшĕ юхан шыв хĕрринчи ялта çуралса ўснĕ. Минас ялти вăтам шкула пĕтерсен çар шкулне вĕренме кайнă.

Пĕррехинче, çуллаччĕ ун чух, Минас яла таврăнчĕ. Вăл ĕнтĕ — лейтенант. Амăшĕ ывăлĕ виçĕ кунлăха çеç киле килнине пĕлсен хыпăнса ўкрĕ. Васкасах сăра турĕ, кукăльпўремеч пĕçерчĕ. Иккĕмĕш кун сĕтел сăйпа тулчĕ. Тантăшĕсем пуçтарăнчĕç. Хĕр упраç та юлман. Хăналанчĕç.

Пурне те савӑнӑҫ ыталарӗ. Ташӑ-юрӑпа чӳрече кантӑкӗсем тӑнкӑртатрӗҫ.

Ӗнтӗ тёттӗмленчӗ. Ҫамрӑксен ушкӑнӗ кил хуҫине тутлӑ сӑйшӑн тав туса урама тухать. Ҫӳрерӗҫ вара хапха умӗнчи вӑйӑран вӑйӑа. Пур ҫӗрте те купӑс янӑрать, кӗвӗ майӑн — ташӑ. Юлашкинчен йӗкӗтсем хӗрсен савнийӗсене ҫавӑтса унталла та кунталла пӑрӑнчӗҫ. Минасӑн ялта савни ҫук. Вӑл сиссе те юлмарӗ пӗр-пӗччен тӑрса юлнине. Чылайччен ҫӳрерӗ пӗр урамран тепӗр урама каҫса. Ниҫта никам лармасть. Ӗнтӗ ҫур ҫӗр те иртрӗ, автансем хӑйсен юррине ав епле шӑрантараҫҫӗ. Кӑмӑл ҫӗкленӳллӗ, чун таҫта туртать. Минас сасартӑк тӑп! чарӑнса тӑчӗ кӗтесри хӑлтӑр-халтӑр кивӗ пӳрт умӗнче. Кунта чӗлхесӗр хӗр Маньакка пурӑнать. Писсе ҫитнӗ ҫырла. Унӑн илемӗ кирек мӗнле йӗкӗте те кӑчӑк туртать. Пилӗкӗ ҫип-ҫинҫе, йӗп ҫӑрти витӗр тухӗ. Хӑйне хавасла та тирпейлӗ тытать. Паллах, каччӑсен аллинче сарӑхман. Ҫулӗпе самай кӗҫӗн-ха вӑл.

Сасартӑк каччӑн пӳ-сине арҫынлӑхӗ чӗтретсе илчӗ. Халиччен тутанманнине тутанас килчӗ. Ӗҫ тухсан ун-кун пирки никам та пӗлес ҫук, ара, хӗрӗ нимуй, вӑл нӑйкӑшнине никам та ӑнланаймасть. Тата каччӑ ыран ирех килтен тухса каять. Тыт унӑн хӳрине...

...Мӗскӗн хӗр пӗрчи. Иҫмасса, алӑкне те питӗрмен. Ара, ку таранччен ун патне ҫӗрле никам та кӗмен. Акӑ паттӑр каччӑ вырӑн умне пырса тӑчӗ. Курать: пике мӑшлаттарса ҫывӑрать. Айӑплӑ хӑлхисем илтмеҫҫӗ, вӗсем вӑратмарӗҫ Маньаккана ыйхӑран. Куҫӗсем те вӑхӑтра уҫӑлаймарӗҫ. Унччен те пулмарӗ, хӗр пӗрчи хӑй ҫине темӗскер лап! выртнине туйрӗ. Ыйхӑран вӑранса а-а-а! кӑшкӑрчӗ. Хурах! тени пулчӗ ӗнтӗ ку. Лешӗ — «вупӑрӗ» чуптӑвинччӗ, ачашлинччӗ пикене. Тӳрех унӑн аялти кӗпи-йӗмне хывса ывӑтасшӑн тӑрмашма тытӑнчӗ. Хирӗҫ тӑчӗ хӗр. Ак хайхи, палласа илчӗ каскӑна. Ятлаҫрӗ. Парӑнмасӑр кӗрешрӗ вӑй ҫитнӗ таран. Анчах ятарласа, тӗллевпе кӗнӗ этем итлӗ-и? Хӑйӗн киревсӗр ӗҫне тумасӑр чарӑнмарӗ йӗксӗк. Арҫын туйӑмне канӑҫтарсан тин тухса кайрӗ. Маньакка вӗри куҫҫуль тӑкса, кӑшкӑрса юлчӗ пӗр-пӗччен. Мӗншӗн ҫук-ши пуласлӑхӑн чӳречи. Нихӑшӗ те ним те курмарӗ. Ара, ҫын вӑрлӑхӗ варӑнчӗ пулӑхлӑ ҫӗре. Вӑл — пулас Умрай, ҫийӗнчех аталанма тытӑнчӗ.

Эх, Минас, хӗр ылханӗ ҫитнӗ пулсан-и, эсӗ тӗнчере пӗр кун та пурӑнайман пулӑттӑн. Эрех ӗҫни те астарчӗ-тӗр. Пулнӑ, иртнӗ, ӗнтӗ чавса ҫывӑх та — ҫыртаймӑн.

Киле Минас ҫутӑпа таврӑнчӗ. Ҫӑвӑнчӗ. Инкек килсе кӗресрен хӑранӑн васкасах пуҫтарӑнма тытӑнчӗ.

— Минас, ывӑлӑм, ма пит сахал пурӑнтӑн, элле япӑх пӑхатӑп сана?

— Кирлӗ мара ан пупле-ха. Пӗлен-ҫке, эпӗ ҫар ҫынни, манӑн калана вӑхӑтра ҫитмелле.

— Тата хӑҫан ҫаврӑнса ҫитетӗн ӗнтӗ?

— Ан пӑшӑрхан. Май пулсанах килетӗп.

Ҫылӑхлӑскер тухса кайрӗ ялтан. Ҫулталӑк ҫитиччен амӑшӗ ҫӗре кӗчӗ. Тек Минас тӑван йӑвана вӗҫсе килмерӗ.

Кунсем кайӑк хур карти евӗр пӗрин хыҫҫӑн тепри иртрӗҫ те иртрӗҫ. Маньаккан хырӑмӗ ӳсме тытӑнчӗ. Мӗн иккенне ӑнланчӗ вӑл. Каллех куҫҫуль тӑкрӗ. Мӗн усси?..

Минас Ҫурҫӗрте пурӑнать. Вӑл ҫар ретӗнчех. Ҫемьеллӗ, ывӑлпа хӗр пур. Анчах вӗсем Чӑвашра тӑван аппӑшӗ пурӑнни ҫинчен пачах пӗлмеҫҫӗ. Нихӑҫан та паллашаймӗҫ...

* * *

Тахӑш енчен сисӗнчӗксӗр шуса ҫитрӗ пӑрҫа лавӗ евӗр тӑхлан пӗлӗт, хупларӗ ҫавра уйӑха. Ҫухалчӗ уйӑх ҫинчи кӗвентеллӗ пике. Шел. Чӗптӗм те улшӑнмарӗ Умрайӑн кун-ҫулӗ. Унччченхи пекех вӑл ашшӗсӗр — тӑлӑх турат. Ӑсчахсене ятламалла-ши, ара, мӗн паян кунччченех уйӑхпа ҫыхӑну тытас ӗҫе туса ҫитереймеҫҫӗ. Ку тӗлӗшпе ҫӗр ҫинче пурӑнас ӳлӗмхи ҫынсем телейлӗ.

— Уйӑх пытанчӗ, — терӗ Юра.

— Вупӑр ҫирӗ ӗнтӗ ӑна, — сӑмах хушрӗ Сухви. — Ӗлӗк ҫапла калатчӗҫ ваттисем уйӑха пӗлӗт хупласан.

Умрайпа Эхтюк нимӗн те шарламарӗҫ. Сухви кухньӑна кӗрсе кайрӗ. Вӑхӑт самант та иртмерӗ, вӑл унтан чашкӑракан сӑмавар йӑтса тухса сӗтел ҫине лартрӗ.

— Тархасшӑн, чей ӗҫме чӗнетӗп пурне те.

Эхтюк савӑнӑҫлӑ. Вӑл йӑл-йӑл кулкаласа аллине портфель илчӗ. Унтан хитре хупӑллӑ курупка туртса кӑларчӗ.

— Ай! Шӑккалатлӑ канфет! — кӑшкӑрса ячӗ Юра.

— Шарламаҫҫӗ ӑна. Шӑп пул! — хӑтӑрчӗ ывӑлне амӑшӗ.

Эхтюк курупкӑна сӗтел ҫине хучӗ. Килтисем те, хӑна

та сётел хушшине вырнаçрёç. Пӳлёмре чей кашӑкёсем шӑкӑртатни, сӑмавар сӑмсинчен шыв шӑнкӑртатни илтёнсе тӑрать. Кашнин аллинче канфет. Эхтюк киленсех чей ёçрё. Пушаннӑ куркине чашки çине ӳпёнтерсен сӑмах пуçларё:

— Умрай, хăçан куçатăн эсё ман пата? Иксёмёрён сайпа тулнӑ сётел хушшинче çапла ларас килет. Кала-ха, ырӑ курмалли самантсене мёншён сая яратпӑр?

— Мён-ма васкас? — йӑл-йӑл кулкаласа илчё хёр пёрчи. — Хайма та виçё кунтан тин пуçтарӑнать. Тепёр тесен...

Мён тесшёнччё-ши Умрай! Çак вӑхӑтра алӑк уçӑлчё те пӳрте Карачӑм Юманов кёчё тӑчё.

— Ман килес, — терё хайхи. — Ырӑ çын патне чёнмесёрех хӑна килет. Аван пурӑнаççё-и? Аху-у! Кунта тем ятпа сӑй пырать-няк?

— Ним сӑлтавсӑрах. Апат çинё хыççӑн чей ёçетпёр, — терё Сухви. — Атя ирт-ирт тӳрех сётел хушшине. Хӑна пул, Карачӑм.

— Хаваспах, — кулкаласа илчё Юманов. Вара вӑл кёсйинчен эрех кёленчи кӑларчё те сётел çине шап! лартрё. — Эпё ахаль çӳреместёп, пӑру шыратӑп.

— И-и-и! Апла иккен... Кунта темён пӑру тавраше çук пек туйӑнать, — ихёлтетсе илчё Сухви.

— Пӑрӑва урамра шыраççё, — йӑх-йӑх кулчё Умрай.

Эхтюк куçне чарнӑ та ним калама хӑяймасть.

— Тӳрех калам хам тёллеве: хёр çураçас шухӑшӑм пур. Эпё, Умрай, вырӑссен йӑлипе аллуна ыйтатӑп. Хирёçлемесен халех манпа çавтӑн та кайрӑмӑр — тӳрех çырӑнма. Вара манӑн кантур пек çёнё кил-çуртӑм алӑкё яри уçӑлё те пире кётсе илё.

Умрай çамрӑк çынна тӳрех вӑрçтарса яма шутламарё. Вӑл хӑйён сӑнёнчен шӳт йёрёсене самант пытарчё.

— Хаклатӑп сана, Юманов юлташӑм. Эсё ырӑ кӑмӑллӑ каччӑ, — çемçен тухрё Умрай сасси. — Санашкал йёкёте мёнле хёр тиркеме хӑйтӑр.

Эхтюк сасартӑк сётел хушшинчен çёмрен евёр сирпёнсе тухрё. Юманов çине кашкӑрла сиксе ӳкрё. Ӑна чышкӑлать кӑна. Лешё аран-аран тӑна кёчё пулас.

Пуçланчё ахӑр самана. Пӳртре вулкан тухрё! Сирпёнет вёри кёл, чул катрамё. Пёри теприне урайне çёклесе çапать. Хӑрушӑ!

— Эхтюк, сан арăм пур!

— Эсĕ авлантартăн-и мана?

— Машука пăсрăн. Çартан таврăнсан авланма сăмах панă. Ăçта санăн çынлăху?

— Вăт ил ăна качча. Вăл мана кирлĕ мар. Эпĕ Умрая юратрăм ĕмĕрлĕхе. Ăна качча илесшĕн.

— Çук, çук! Сана таса хĕре варалама памастăп! Вăл халех манпа пырать мăшăрлă пурăнăç пуçарма! — кăшкăрать Карачăм Юманов. — Умрай, тĕрĕс-и?

Сухвипе Умрай йĕкĕтсене лăплантарасшăн тăрăшаççĕ. Кусем чарăнĕç-и? Иккĕшĕн те тутисем хăпарса тухнă, юн сăрхăнать. Мĕнле инкекпе вĕçленетчĕ-ши вĕсен айванлăхĕ? Пўрте хĕрарăм кĕрсе тăчĕ.

— Ай-уй! Мĕнле вăрçă пырать кунта? Е камит кăтартаççĕ! Манăн хуйхă, хĕрĕм вилет! — ўлесе йĕме тытăнчĕ кинеми. — Мана тухтăр кирлĕ!

Вăрçчансем пĕр-пĕрне чышкăласа илчĕç те такам вĕсене шывпа сапнăн тăпах чарăнчĕç.

Пўрте кĕнĕ инке ыттисем илтесрен Умрая хăлхинчен пăшăлтатрĕ:

— Илемпин хырăм ўкнĕ хыççăн юн вăйлă каять. Сăнпичĕ пир пек шуралчĕ, вилет пулĕ. Атя-ха, тен, пулăшайăн.

— Халех пыратăп! — терĕ те Умрай эмел сумкине илсе хĕрарăм хыççăн тухса сирпĕнчĕ.

## 6

Илемпи савнирен çыру илсен çил вĕрнине хăй майлă ăнланчĕ. Ара, вăл пахчи хыçĕнчи таса уйра пĕр-пĕччен кашласа ларакан юман патне мĕн чухлĕ чупман пулĕ. Аслă çил унăн йышлă турачĕсем çине канма тытăнса тăратех. Ыталатчĕ те юманăн мăн вуллине хўхлетчĕ вара çўлелле пăхса: «Аслă çилĕм, илсе çитер ман сăмахсене савни патне! Унăн ячĕ — Шенер. Асту, ан ман. Тилмĕрĕвĕм çапла: Юратнă савниçĕм, кайрăн та çухалтăн. Ăçта эсĕ? Пĕлтер. Е ху кил, е эпĕ пыратăп. Тин çеç пĕрлеччĕ эпир санпа. Астăватăн-и, ачаш сăмахсемпе чуптăваттăн мана. Ĕмĕре пĕрле иртерме пултăмăр. Шывпа юхса кайрĕç-ши сăмахусем? Эпĕ çаплах пĕччен. Мĕншĕн юлтăм-ши санран? Кайран тĕлпулу пыл пек пылак пулĕ

терём-ши...» Çил — маттур. Вăл Илемпи хÿхлевне Шенер патне илсе çитернĕ. Унсăрăн вăл темиçе çул иртсен тин çыру çырмĕ. Хăй патне чĕнет. Каясса каять, анчах паян-ыран мар. Ара, чăрмантаракан сăлтав калама çук пысăк. Шенер хăй айăплă, мĕншĕн виçĕ çул ытла иртсен тин сас пачĕ-ши?

...Илемпи училищĕрен вĕренсе тухсан чирлĕрех амăшне хĕрхенсе тăван ялнех таврăннă. Ĕне ферминче электрике ĕçлеме кĕнĕ. Ялта кичем. Тантăшсем йăлтах хулара. Вĕсем çеç те мар, çамрăк йĕкĕтсем те юлман. Çитменнине, ватă хусахсем хăтана пырса тарăхтараççĕ. Килтен тухса тарас патнех çитрĕ Илемпи, амăшĕ те чарма шутламасть. Ара, ăнланать мар-и, хăй те хĕр пулнă-иç.

Сасартăк шухă çил варкăшĕ кăкăра уçăлтарса ячĕ. Районтан клубра ĕçлеме культработник ярса пачĕç. Вăл — хаваслă çамрăк каччă.

Мĕнле яш-кĕрĕм пурăнать-ши кунта? Паллашма васкарĕ хайхискер. Часах клуб умĕнчи такăр лаптăкра иртекен ташă каçне чĕнчĕ. Ку вăхăтра хулара вĕренекенсем те каникула килнĕ ĕнтĕ. Йыш самай пухăнчĕ.

Культработник чи малтан малашнехи ĕç планĕпе, вара хайпе паллаштарчĕ: «Мана Шенер тесе чĕнĕр, хушаматăм — Яхутин». Унтан кăштах чĕнмесĕр тăчĕ вăл. Кам кăскăлантăр ÿлĕмхи ĕçпе? Пурте тенĕ пекех паян пур та, ыран — çук. Çакна чухлать ĕнтĕ сисĕмлĕ çын. Вара тăсса ячĕ хут купăсне. Шутсăр ăста калать. Музыкăна туякан чунсем тÿсеймерĕç ташша тухмасăр. Мăшăрсем кĕвĕ майăн çаврăнчĕç, тăпăртатрĕç. Иртрĕ темиçе ташă. Тен, юрă шăрантармалла? Алăра-çке купăс. Вăл пулăшать. Пуçланчĕ чăвашсен чи авалхи юрри «Пирĕн урам аналалла». Юрра пурте хутшăнчĕç — чăн-чăн хор.

— Шурă вальс! — пĕлтерчĕ çĕнĕ вăйăç.

Шенер куçĕ умĕнче пĕтĕм хĕр тăрать. Хăшĕ чĕнĕ-ши ăна хайпе ташша тухма? Паçăр, хăй купăс каланă чухне, пĕри ăна питĕ килĕшрĕ. Ытла сăпайлă тыткаларĕ вăл хăйне. Ытти хĕрсем час-часах суйланса юлкаларĕç, кăна вара ялан ташша илсе тухрĕç. Çÿçĕ вăрăм унăн. Пичĕ-куçĕ илемлĕ, тăпăлкка пÿ-силлĕ. Ури йĕтĕн варри чăрки пек. Кĕске хура юбка, шурă кофта тăхăннă. Ячĕ мĕнле-ши? Анчах унăн умне пачах урăх хĕр пырса тăчĕ. «Аюк!» теме юрамасть.

Ку ташă вĕçленчĕ, çĕнни пуçланчĕ. Халĕ ĕнтĕ Шенер хăй килĕштернĕ хĕре чĕнчĕ ташша тухма. Тинех паллашрĕ, ыйтса пĕлчĕ ятне. Пуплеттерчĕ. Унăн ыйтăвĕсене Илемпи йăлтах хуравламарĕ, хăш-пĕрисене ихĕлтеткелесе çеç ирттерчĕ. Çапах та хĕр хăй ăçта ĕçленине каларĕ.

— Эсĕ, Илемпи, чăнах та, хăвăн яту пекех илемлĕ, — терĕ Шенер. Малтанхи паллашурах Илемпи каччăран чуна илĕртекен сăмахсем илтрĕ.

Ял çамрăкĕсене культработник Шенер Яхутин килĕшрĕ темелле. Чи кирли — ĕçлеме пултарни. Çакна ĕненчĕç. Унтан та пахи тата вăл — купăсçă. Сăнĕ те илĕртӳллĕ. Хăшĕ-пĕри пек пĕкĕрĕлчĕк мар — яштака. Çӳçĕ кăна мĕне тăрать! Тĕлĕнтермĕш! Çĕлĕк тăхăннă тейĕн: çăра, кăпăшка, кăтра. Çийĕнче — çухине, аркине тĕрленĕ шурă кĕпе. Пилĕкĕнче шерепеллĕ пиçиххи. Вăл — чăваш. Унăн тăван ялĕ — Тутар Республикинче.

Маттур культработник. Яш-кĕрĕме хăй майлă çавăрчĕ. Тытăнчĕç клуба çӳреме. Ташă-юрă кĕрлет-ха. Ку аван. Анчах вăхăт иртнĕçемĕн кичем пусма та пултарать. Ахаль каламаççĕ халăхра: «Пĕрмай çисен пыл та йĕпхĕртет». Эппин, урăххи те кирлĕ.

Пĕррехинче, ташă вĕçленсен, сăмах тапратрĕ Яхутин:

— Манăн спектакль лартассăм килет. Сирĕн хушăра выляс кăмăллисем пур-и?

— Тупăнаççĕ!

— Эпĕ пьесине тупăп. Артистсене ыран вун сакăр сехете клуба килме чĕнетĕп.

Чылаййăн пухăнчĕç. Чăрмавĕ те çавăнтах сиксе тухрĕ. Каникулти яшсемпе хĕрсем часах каяççĕ ялтан. Çапах та майлаштаркаларĕ Яхутин. Вăл инкесемпе пиччесене йыхăрчĕ. Пурах халăхра артист чунлисем. Пьесăри тĕп рольсене (хĕрпе каччă рольне) Илемпи тата хăй, Шенер Яхутин, вылярĕç. Ырра-ши е хурлăха, вĕсем пĕр-пĕрне чăннипех юратса пăрахрĕç.

Спектакле пĕр хут çеç кăтартма май килчĕ. Куракансем лăках пухăнчĕç. Халăхшăн меллĕ вăхăт пулчĕ мар-и: тыр-пула пухса кĕртнĕ. Пахча çимĕç ĕнтĕ нӳхрепре. Хуралта — йĕпе-сапаллă çанталăк. Çумăр лӳшкет. Ку кивĕ хуралтăсемшĕн — инкек. Шӳнĕ хăма-пĕрене япăхать. Ишĕлчĕ клубăн пĕр кĕтесĕ. Вара унăн алăкне хăмапа урлă-

пирлё çапса лартрёç. Ял халăхне чун çимёçё паракан кётес хупăнчё. Уçăлать-ши вăл хăçан та пулин? Юсама укçа çук. Ку çеç-и? Культработнике ёçшён тӳлеме укçа уйăрман. Шенер Яхутин тăрса юлчё вара çурхи шывпа юхакан пăр катăкё çинче. Мён тумалла? Ирёксёрех ку ялтан кайма тивет. Анчах юратнă хёрпе мёнле уйăрăлмалла? Ара, вёсем ёнтё пёрле, пёр вырăн çинче уйăха яхăн выртса тăчёç. Юлас кунта? Ёç çук ăна юрăхли. Хёрарăм ёçлесе илнипе пурăнма килёшмест вăл. Тухса каймаллах. Анчах ăçта? Хăй те чухламасть. Çакна çеç шантарать йёрекен Илемпие:

— Каятăп. Чăн-чăн ёç тупсанах сана хам пата чёнсе илетёп. Вара пурăнăпăр мăшăр акăш пек пыл та çу.

— Эпё çил пек вёçтерсе пыратăп. Вăрах ан кёттер. Сансăр мёнле пурăнăп-ха? — çаплах йёрет Илемпи.

— Кётме пёлер. Пёрле пурăнас самант аякра мар.

Мён тăвăн? Илемпи чармарё Шенере. Ӳлёмхи ырлăхшăн кăшт кётни çылăх мар.

Ăсатрё вара Илемпи юратнă çыннине. Ăçта? Уçăмсăрлăх тёнче кётессине. Ларса кайрё Шенер автобуспа.

Кунсем пёрин хыççăн тепри иртрёç те иртрёç. Йёчёйёчё. Тăкăннă куççуле пухнă пулсан пӳрт умёнче кӳлё çап-çут çуталса выртмалла. Икё çул иртрё. Пёререн-пёр çыру килмерё Шенертен.

Çак вăхăтра хёр уйри ватă юман патне чупрё-чупрё. Вуллине ыталаса тăррине канма ларнă Аслă çиле тилмёрчё Шенер Яхутина акă мён пёлтерме: «Эпё, Илемпи, сана чунтан кётетёп. Килсем ман пата хăвăртрах. Эпё типсе вилетёп сансăр. Хăв килеймесен çыру та пулин çыр». Кăлăхах пулчё кётни. Шенер сас памарё. Пуçа урăхла шухăш кёме тытăнчё. Каплипе пурăнсан çамрăк ёмёр иртет. Часах усал ят та туртса кăларёç: «И-и, ара, Илемпи ёнтё кёрчеме тытăннă». Ан тив, хёр мар пултăр, анчах арăм та мар-çке. Шенерпе çырăнман. Пёр вырăн çинче çывăрни «арăм» тетермест. Качча каймаллах-тăр. Çак тёллев Илемпие час-часах минретме тытăнчё. Тен, ун çулне час-часах ватă хусах Курье пӳлме тытăннăран? Çынни вăл укçаллăскер. Çăм таптаракан арман тытать ял çумёнчи юхан шыв çинче.

Илемпие пёрре-иккё тёл пулсанах Курье авланас пирки сăмах тапратрё. Илемпи темшён хирёçлемерё,

те хайёнчен темиçе çул аслăрах пулнипе шанчĕ, те урăхран нихăçан та хайне тантăш каччă тупасса ёненмерĕ.

Курьен кил-çурчĕ кивелсе халтăртатман. Выльăх-чĕрлĕх те тытать картиш туллиех. Хуçалăхра чи кирли — ёне те пур. Лар та су. Пуçа кирлĕ мар шухăшсемпе анратма вăхăт пачах пулмĕ. Чăн-чăн юрату пурнăçра пĕрре çеç. Тек ăна кĕтни кăлăхах. Çак ĕмĕтсемпе Илемпи Курье патне пурăнма куçрĕ. Тепĕртакран унăн çие юлчĕ. Тăвата уйăха яхăн йăтнăччĕ ĕнтĕ Илемпи хырăмне. Турă çырлахах! Ăша сасартăк çавра çил вăркăнса кĕчĕ. Тĕлĕнтермĕш! Юрĕ, йĕркипе.

Пĕр ир кантăка шаккарĕç. Илемпи чўречене уçрĕ почтальона курса.

— Сана, Илемпи, заказлă çыру пур. Ме алă пус, — тетрадьпе ручкине те çырупа пĕрле тăсрĕ.

Тятюк почтальон пули-пулми калаçмасть. Чи кирли — сăмах вакласа ял тăрăх аласа çўременти. Вăл усал хыпар сарасран пĕрре те пăшăрханма кирлĕ мар.

— Тятюк инке, пархатар кур, — сунчĕ ăна Илемпи.

Илемпи чўречине хупрĕ, çырăвне тинкерсе пăхрĕ. Кам çырать? Конвертне васкаса уçрĕ те тўрех вĕçне пăхрĕ. Вуларĕ: Павел Кринкин. Пачах палламан çын. Мĕн çырать? Мĕн кирлĕ ăна? Куçсем чупрĕç йĕркесем тăрăх. Вĕçне çитрĕ. Тĕлĕннипе чутах кайса ўкетчĕ. Пĕр сăмахпа каласан — Шенер тупăннă. Урра! Унăн юратнă çынни пурăнать. Ăна хăй патне чĕнет. Ним тума аптранă енне урай варрине тухрĕ те яра пачĕ ташша сăвă кала-кала:

> Çырма хĕррине пуссассăн та
> Кули ура йĕпенмест,
> Чун савнине курсассăн та
> Кули чунăм савăнмасть...

Ташлама, савăнма никам та чараканни çук. Килте вăл пĕчченех.

Павел Кринкин хайён çырăвĕнче тĕлĕнтермĕш пĕлтерет: Шенер Яхутин Америкăна çитсе тĕпленнĕ. Тĕлĕнтермĕш мар-и-ха ку? Павел Кринкин — унпа пĕрле пурăннă юлташĕ. Халĕ вăл Шупашкара амăшĕ патне канма таврăннă. Илемпие пĕр тăхтаса тăмасăр хăй патне чĕнет. Мĕн тума? Чĕннĕ çĕре каймасăр мĕнле чăтăн? Хăпăлхапăл пуçтарăнчĕ, никама систермесĕр килтен тухса

вăркăнчĕ. Ял çумĕпе иртекен аслă çул хĕрринче, ăна кĕтнĕнех, автобус тăрать, шăпах Шупашкара каяканни.

Çитес çĕре çитрĕ. Çыру çыраканĕ хăй хăш урамра, çуртра, хваттерте пурăннине кăтартнă. Пурте тĕрĕс. Чиперех йышăнчĕ. Павел Кринкин уçăмлă çын. Шенер пирки тĕплĕн ăнлантарчĕ. Ĕлĕкхи пекех юратать хĕре, хăй патне пурăнма чĕнет.

— Мĕнле, каятăн-и? — кăсăкланчĕ Павел Кринкин.

— Кайăттăм та, анчах Америка Шупашкар мар, — пуçне сулкаларĕ Илемпи. — Тата манăн ĕç укçипе Мускавран ытла ниçтах та çитеймĕн.

— Йăнăшан, Илемпи. Хуйхă-суйхă сирĕлтĕр, — пичĕ çуталчĕ Павăлăн. — Савнă каччу йăлт шута илнĕ. Вăл сан валли çул укçи парса ячĕ.

Кил хуçи çийĕнчех шкапне уçрĕ те унтан укçа пачкисем туртса кăларчĕ.

— Куратни? Укça ку!

— Ай-уй! Нивушлĕ йăлтах мана? — тĕлĕнчĕ Илемпи.

— Ку укçан хăйĕн ячĕ пур — доллар, — мухтанчĕ Павел Кринкин. — Ку çеç те мар, тата унта çитме çул уçса паракан документсем. Виза теççĕ ăна.

— Шенере шыраса тупасси манран пулмасть, — ахлатса илчĕ Илемпи.

— Ан пăшăрхан. Пĕрле каятпăр.

— Çапла пулĕ те... — çăварне хупма ĕлкĕрчĕ. «Эпĕ йывăр çын-çке-ха», — тесшĕнччĕ.

Павел Кринкин те сисрĕ ăна-кăна. Тытăнчĕ хĕрсех хавхалантарма:

— Пĕтĕм йывăрлăхсене сир. Шенер ырă кăмăллă çын. Унпа çăтмахри пек пурăнăн.

Кирлĕ çĕрте хут тутарассине Кринкин хăй çине илет. Илемпин мĕн-мĕн тумаллине пӳрне хуçсах каларĕ.

Ку чухнехи лару-тăру, пысăк ĕмĕт Илемпие шĕл кăвар çине пăрахрĕ. Çулăмпах çунать. Вăл чунтан юратать-çкеха Шенер Яхутина. Çак самантра тухса вĕçĕччĕ. Анчах... Паспорчĕ таса-ха унăн. Юрать, Курьепе çырăнма ĕлкĕреймен, чиркĕве кайса венчет те туман. Турра шĕкĕр. «Чимха, — пуçра юхакан шухăшсене картларĕ Илемпи, — йышăнĕ-и-ха вăл мана, пĕтĕскере? Тата мĕнле пит-куçпа пырса тăрăп ун умне?»

Илемпи хăйĕн çак пысăк вăрттăнлăхне пĕлтермерĕ. Кринкин — ют çын. Чăннине пĕлсен илсе те каймĕ.

Çула тухрĕ. Киле май вăхăчĕ те хăвăрт иртет. Яла çитнĕ çĕре тĕттĕмленчĕ. Ăшĕ çунать Илемпин. Ара, умĕнче юплĕ-юплĕ, лакăм-тĕкĕмлĕ çулсем-кунсем. Хăш юппи телей патне илсе çитерĕ? Вăл ниçта та кĕмерĕ. Каç тĕттĕмне уямасăр тăкăрлăк тăрăх утса уя тухрĕ хăйĕн чĕмсĕр тусĕ патне. Çав çеç ăс-хакăл, канăç парассăн туйрĕ. Каш-ш кашласа кĕтсе илчĕ ватă юман. Ун вулли çумне ларчĕ те чун ыратăвне тăхçаларĕ. Йĕчĕ-йĕчĕ.

— Эпĕ телейсĕр. Савнă çын патне каяймастăп, — пуçларĕ хăйĕн хӳхлевне. — Хам айăплă, вĕçне çити кĕтме пĕлмерĕм, тӳсĕм çитерeймерĕм. Халĕ ĕнтĕ ман юратман ватă çынпа ĕмĕр иртгермелле.

Çак кун унăн чĕрине хавшатрĕ пулас. Ара, мĕн чухлĕ çĕнни пĕлчĕ-илтрĕ, савни патне çитме мĕн чухлĕ тĕпсĕр çырмасем чăрмантараççĕ. Хăй те сисмерĕ — пуçĕ лăнк! кайрĕ. Унччен те пулмасть, унпа сăмах пуçларĕ тахши:

— Кирек епле йывăрлăхран та çăлăнма май пур.

— Ĕненместĕп, — тет Илемпи.

— Хырăмна ӳкер, ĕçĕ те пĕтĕ.

— Кая юлтăм. Халĕ тин тухтăрсем аборт тумаççĕ.

— Шыракан мелсем тупать...

Шарт сиксе вăранчĕ Илемпи.

— Ай-уй, тĕллене-тĕлленех çывăрнă-çке.

Илемпи ваштах сиксе тăчĕ, юмана ыталаса чуптурĕ те амăшĕ патнелле уттарчĕ. Унăн пуçĕнче тĕлĕкре илтнĕ канаш (ăна юман сĕнĕвĕ тесе ĕненчĕ вăл) амаланма тытăнчĕ. «Шенер, — сасăпах чĕнчĕ Илемпи, — кĕт мана, канăççăр кĕт! Эпĕ пыратăп, пĕр пăшăрханмасăр. Эпир савнисем çеç мар, эпир — упăшкипе арăмĕ, ара, пĕр вырăн çинче выртса тăнă. Эпĕ йывăр çын, анчах ачу санăн мар. Унран хăтăлăп, унсăрăн ялан сиксе тухĕ харкашу иксĕмĕр хушăра. Манăн питĕ туслă, пĕр-пĕрне тĕлĕнмелле юратса пурăнас килет. Кĕтсе илсем. Пырса тăрăп умна ĕлĕкхи пекех — яштака».

Шухăш-ĕмĕтĕн тилхепи те, йĕвенĕ те çук. Хăшĕ те пĕр пулни-иртни алăкне уçать. Тархасшăн, йăлт умра: кур, илтсем. Акă Илемпин асĕнчи пĕр пĕрчĕ çуталчĕ. Кукамăш калаçăвĕ чĕрĕлчĕ: «... ăна вăрçă вăхăтĕнче тĕрмене лартнă

сăмакун туса сутнăшăн. Унта вăл тус тупнă — эпи карчăк (карчăк мар, хĕрĕхелле сулăннă хĕрарăм кăна). Саккуна пăснăшăн хытах айăпланӑ хайхискере. Вăл хĕрарăмсене ача çураттарнă тата вăрттăн, укçалла, хырăм ӳкерттернĕ. Ун чухне больницăра аборт туман. Çав «карчăкăн» хĕрĕ те, мăнукĕ те мединститут пĕтернĕ, гинеколог пулса ĕçлеççĕ». «Акă ăçта çăлăнăç!»

Чĕлхе Киева та илсе çитерет тенĕ ĕлĕк ваттисем. Тĕпчерĕ, пĕлчĕ Илемпи. Тепĕр кунне тухса кайрĕ. Тупрĕ, паллашрĕ. Сӳрĕкленме пуçланă туслăх çиппи сыпăнчĕ. Чăнах, мĕн-ма татмалла тет ăна? Шăкăл-шăкăл калаçу юхрĕ, юхрĕ. Ĕнтĕ кил хуçисем ханан нушине те пĕлчĕç. Хĕрхенчĕç. Ырри вĕсенчен килет. Шăп. Илемпи кĕтет, ара, сăмах пине çитнĕ çĕре ĕç-пуç татăлмалла. Çын çынна пулăшмалла, унсăрăн мĕнле-ха?

— Укçине хĕрхенместĕп. Мĕн чул ыйтатăр, эпĕ тӳлетĕп, — мăкăртатрĕ Илемпи. Чăрсăрланать те-ха, анчах хăйĕн çурăмĕ тăрăх шăши чупса хăпарнăн туйрĕ. Мĕн каласси пур, ăшран ачана тăпăлтарса илесси хырăм çумне çыпăçнă милĕк çулçине хăпăтса илесси мар, вилĕм те çири кĕперен çывăх теççĕ-çке. Пуçа çавăнтах тепĕр майлă шухăш çĕмрен пек шăтарса кĕчĕ: «Савнă çынсăр пурăнични вилни аванрах. Ăнăçу тертсĕр, хăюлăхсăр пулмасть».

— Укçи кирлĕ-ха, — терĕ çамрăкраххи.

— Мĕн терĕр? — шартах сикрĕ шухăшсенчен вăраннă Илемпи.

— Укçа кирлĕ терĕм. Япăх пурăнатпăр.

— Çапла çав. Ĕç укçи вăхăтра паманни касать. Ман çумра пур...

— Эсĕ ан васка, ан пăшăрхан. Анне те нумай ăс панă, тата институтра та лайăх вĕрентнĕ, хамăн ĕç те çителĕклĕ, — ăнлантарать «эпи карчăк» хĕрĕ, пенсионер, кăшт тĕлĕрсе тăнă хыççăн татах калаçрĕ. Асăннă ĕçе тума хăех килне пырать. Хăш кун, миçе сехетре кĕтмеллине те пĕлтерчĕ Илемпие.

Пĕртте кĕттермерĕ Илемпие «эпи карчăк» хĕрĕ. Каланӑ сăмахĕ — чăн. Ĕçне турĕ, укçине илчĕ. Халĕ ĕнтĕ чăваш каланӑ пек — тыт ман хӳрене.

Çур тĕллевĕ пурнăçланчĕ ун. Пăх та кур — яштака. Хырăм çĕкленине кам ĕнентĕр?

— Эх, хӗрӗм, ҫылӑха кӗретпӗр-ҫке, — кулянать амӑшӗ.
— Ҫылӑх ҫилӗм мар, ҫыпӑҫса лармӗ.

Ваттисен йӗркипех, виҫҫӗмӗш кунне Илемпи амӑшӗ илӗм-тилӗмпех ачана хунӑ пӗчӗк ещӗке хул айне хӗстерсе ҫӑва ҫине кайрӗ. Хайхискер карта ҫумӗнчен аякрах та мар меллӗ вырӑн тупрӗ те тытӑнчӗ ӗҫе. Васкасах чаврӗ. Шӑтӑкне ытла тарӑнлатма кирлӗ мар.

Ҫулӑма улӑм ӑшӗнче пытарса усрама май ҫук. Курье арманӗнчен киле каятчӗ. Вӑл утнӑ-мӗн масар карти ҫумӗпе. Сасартӑк курах каять Илемпи амӑшӗн ӗҫне. Теме сиссе унӑн чӗри карт! тапса илет. Мӗн амакӗ? Мӗн тӑвать ку кинеми? Пӗлес килет, анчах ҫывхарма хӑяймарӗ. Илемпи тухса кайнӑ хыҫҫӑн хӑйне аван мар пек туйрӗ мар-и. Ӗҫне пӗлмеллех. Пытанчӗ вара йывӑҫ хыҫне. Шухӑша кайрӗ вӑл. Мӗнле сӑлтава пула Илемпи ӑна пӑрахса кайрӗ? Пӗр хутчен ятлаҫинччӗ. Нумай ҫул унран аслишӗн тиркерӗ ахӑр. Пӗртен-пӗр сӑмах ҫеҫ вӗҫертрӗ: «Каятӑп». Тытса чарма хӑяймарӗ. Ара, хӗрарӑм кушак ҫури мар, ирӗксӗр мӗнле усрӑн? Хӑй йывӑр ҫынччӗ-ха, иҫмасса. Ача ҫуратсан хӑех каялла пырасса та шанчӗ.

Йывӑҫ хыҫӗнче тӑнӑҫемӗн кӑсӑкланни иртес вырӑнне тата хытӑрах амаланчӗ. Мӗн пытарать карчами? Тӗпӗ йӗрӗпе пӗлмесӗр чунӗ канмастех. Армана кайса тимӗр кӗреҫе илсе килчӗ. Кинеми ҫук, вӑл ӗҫне тӑрланӑ. Ӗнтӗ никам та чӑрмантармасть. Чаврӗ, ещӗк туртса кӑларчӗ. Хуппине уҫсан мӗн курни ӑна хӑратса пӑрахрӗ. «Ача-ҫке ку?!» — кӑшкӑрсах ячӗ вӑл шутсӑр тӗлӗннипе. Пичӗ тӑрӑх куҫҫуль шӑпӑртатса анчӗ. — Манӑн пӗртен-пӗр ачам. Ҫураличченех вилтӗн-и?»

Пырса кӗчӗ яла! Утрӗ урампа. Сывлӑм ӳкнӗ ешӗл курӑк унӑн тӑпрапа вараланнӑ пушмак пуҫне ҫуса тасатрӗ. Тухӑҫра, пӗлӗтпе ҫӗр пӗрлешнӗ ҫӗртен, хӗвел пуҫне ҫӗклерӗ те йӑл-л пӑхса илчӗ Курье ҫине. Вӑл та шутсӑр шеллерӗ ахӑр. Ашшӗн куҫҫульне унӑн пичӗ ҫинчен шӑлса типӗтме хал ҫитереймен енне йӑкӑш шуса кӗчӗ тачка пӗлӗт айне. Ҫынсем ыйхӑран вӑранса ҫитеймен. Курье хапха умне ҫитсе чарӑнчӗ. Питӗрӗнчӗк-мӗн. Вара вӑл чӳрече умне пырса кантӑка пӳрнисемпе тӑкӑртаттарчӗ. Часах Илемпи пырса тӑчӗ. Мӗн курни ӑна ҫӗре ҫӗклесе ҫапрӗ. Тӑнне ҫухатрӗ мӗскӗн. Унччен те пулмасть Илемпи амӑшӗ курӑнчӗ.

— Чемчекесем! Мĕн турăр ман ачана? — кăшкăрчĕ Курье.

— Илемпин хырăм ӳкнĕ, — тытăнчĕ ăнлантарма хĕрарăм. — Йывăр çĕклени юраман ĕнтĕ.

* * *

Илемпи тăна кĕчĕ. Выртрĕ, выртрĕ мачча хăминчи турат куçне пăхса. Кăнтăрла çитнĕ тĕлелле — инкек, шарлаттарсах юн кайма тытăнчĕ.

— Ах, çырлах! Ара, капла вилетĕн-иç, хĕрĕм, — йĕрет амăшĕ.

— Анне, кайса чĕнсем Умрай Пушака фельдшера, — хушрĕ Илемпи амăшне.

— Паян канмалли кун. Тупайăп-и ăна?

— Сухви патне килне чуп! Вăл ман пата килетех, канмалли кун тесе кутăнлашмĕ.

Тĕрĕсех, темиçе минутран амăшĕпе фельдшер килсе те кĕчĕç. Илемпи пичĕ — шăп катан пир. Йĕркеллĕ калаçаймасть те. Умрай тĕпчесе тăмарĕ. Вăл чухларĕ мĕн пулса иртнине. Хыпалансах сумкинчен эмел кăларса ĕçтерчĕ. Ним тăхтамасăр больницăна ăсатмалла. Телефон ял администрацийĕн çуртĕнче çеç пур. Чирлине пăрахса хăварма хăрарĕ. Турра шĕкĕр, эмел пулăшрĕ пулас. Юн юхма чарăнчĕ. Пурпĕрех кайса васкавлă пулăшу машинине чĕнчĕ. Тепĕрттакран Илемпие больницăна илсе кайрĕç.

Иккĕн тан тăрса юлчĕç хапха умĕнче.

— Хамăн та пĕрле ларса каймаллаччĕ пулĕ, э? — тет Илемпи амăшĕ, хыпăнса ӳкнĕскер.

— Халĕ эсĕ ним усă та параймăн. Ыран ирех каймалла, — сĕнет Умрай. — Хĕрӳ нумай юн çухатнă. Тутлă апат кирлĕ. Илсе кай.

— Тутли тем ĕнтĕ вăл?

— Улма-çырла сĕткенĕ, ĕне юр-варĕ: сĕт, хăйма, сар çу, чăкăт. Пыл та лайăх. Шурă çăкăр илме те ан ман.

Умрай часах сывпуллашса уйăрăлчĕ. Утрĕ вăл урам тăрăх. Майĕпен пырса тухрĕ Сухви çурчĕ тĕлне. Ав вăл хăй те ларать хапха умĕнчи сак çинче.

— Турă çырлах, тинех килтĕн, — ура çине тăрса хирĕç утрĕ Сухви.

— Мĕн пулнă? — кăсăкланчĕ Умрай.

— Ара, лешсем, икӗ упăте, пӳртӗме ишсе хăварасран чун юлмарӗ. Тата вӗсем пӗр-пӗрне сусăрлатасран сехӗрлентӗм. Мирлешкелерӗҫ. Санăн юлашки сăмахна кӗтме пулчӗҫ.

— Мӗнле сăмах? — тарăхрӗ Умрай.

— Хăшне юратан? Чăннине кала. Унсăр иккӗш те ҫунаҫҫӗ.

— Ҫунăҫин. Ман ӗҫ ҫук. Ку ялта ӗмӗр иртерме шутламастăп. Вӗренме каятăп. Манăн тӗллев — тухтăра тухасси. Эхтюк та, Юманов та аслă пӗлӳллӗ. Паллах, вӗсен ҫемьеленмелле.

## 7

Ӗҫ вăхăчӗ вӗҫленчӗ. Амбулаторие тек никам та килмест. Сухви урай ҫуса тахҫанах тухса кайрӗ. Умрай пӗчченех. Вăл пӗчӗк ачасене прививка туса пӗтерни ҫинчен ҫырнă отчета татах тепӗр хут пăхса тухрӗ те темиҫе кун каялла вулама тытăннă «Унесенные ветром» кӗнекене алла илчӗ. Чаплă роман, малалла мӗн пулнине пӗлес килни вулаттарать. Хаҫатра та асăннăччӗ-ха, ҫак кӗнекене Лев Толстойăн «Война и мир» романӗпе танлаштараҫҫӗ. Вăрҫă. Пӗтӗм ҫӗр кисренет. Анчах юрату пурăнать, ăна хăрушă хӗҫ-пăшал алхасни те пӗтерейместь. Ку произведени тăрăх кино та ӳкернӗ, Чăвашра та кăтартнă. Анчах Умрайăн ăна курма май килмен. Скарлетт рольне Вильен Ли артистка вылянине те пӗлет. Ҫак кӗнеке Умрайăн хăйӗн хальлӗхе ҫук-ха, хăҫан та пулин туянатех. Ӗмӗт пурнăҫланасса шанать. Чирлӗ Униҫҫе инкене укол тума кайсан вӗсен килӗнчи ҫӳлӗк ҫинче курчӗ те тӳрех куҫ хыврӗ. Аксар (Униҫҫе инкен ывăлӗ) маттурскер. Кала ӗнтӗ ăна ял ачи — тӗттӗмскер тесе. Сухви сăмахӗ аса килчӗ: «Аксар вăл — кӗтӳҫ. Ял кӗтӗвне вăрман, уй-хир тăрăх ҫӳретет юлташӗпе».

Хӗр ҫӳлӗк ҫинчи кӗнекесене ытарайми пăхнине асăрхарӗ те Униҫҫе мухтанас шухăшпа ҫапларах каласа хучӗ:

— Ах, ҫав Аксара, укҫине кӗнеке туянсах пӗтерет.

— Ăҫта тупать-ха ҫак паха литературăна? — тӗпчерӗ Умрай. Пӗлчӗ вара.

Аксар Шупашкарта ял хуҫалăх академийӗнче иккӗмӗш ҫул заочно вӗренет. Сессие кайсан кашнинчех пӗр чăматан кӗнеке йăтса таврăнать.

Çак вăхăтра пӳрте Аксар кĕчĕ. Ăна амăшĕ Умрайпа паллаштарчĕ.

— Kaçарăр, сирĕн тем пирки хĕрӳллĕ калаçу пыратчĕ пулас? — йăл-йăл кулкаларĕ Аксар. — Сана, анне, тухтăрсем хăçан сыватса çитерме шантараççĕ?

— Ах, ачам. Чир тени вăл хапхаран кĕрет те — йĕп çăртинчен тухать.

Умрай çамрăк каччăран именнипе шăпăрт тăчĕ.

— Аксар, хĕр тухтăр кĕнекӳсене ăмсанса пăхать, — терĕ амăшĕ. — Эсĕ лайăххисене туянма пултарнинчен тĕлĕнет.

— Чăнах-и? — савăнăçне пытармарĕ Аксар.

Умрай «Унесенные ветром» романа вăхăтлăха пама ыйтрĕ. Лешĕ килĕшмест. Килĕнчен кĕнеке кăларасшăн мар: вулама тесе илсе каяççĕ те тавăрса памаççĕ. Çавна пула библиотека юхăнса юлнă имĕш.

— Шанмастăр пулсан çĕр тенкĕ сĕтел çине хурса хăваратăп, — терĕ те Умрай сумкине уçрĕ.

— У-у-у! Çаплах-и? Юрĕ. Укçи çухалĕ тата. Илсе кайăрах, — терĕ те Аксар çӳлĕк çинчи кĕнекесене шутаркаласа хĕр кăмăлланине туртса кăларчĕ, алăран тыттарчĕ. Умрай тав туса хăвăрт тухса кайрĕ.

Унтанпа виç-тăват кун иртрĕ. Акă ёнтĕ хăйĕн ĕçĕсене вĕçлесен вулама тытăнчĕ.

Умрай нумаях вулаймарĕ, алăка шаккарĕç.

— Кĕрĕр. Питĕрмен! — сас пачĕ вăл.

Темшĕн кĕриклетсе уçăлчĕ алăк. Пӳлĕме Аксар кĕрсе тăчĕ. Ун çине чăр-р пăхса илчĕ хĕр фельдшер. Мĕн мурĕ? Чĕрене йăк! чиксе илчĕ çĕмрен сăнни. Ара, умра тăраканни — юмахри паттăр! Çийĕнче ун шурă майка. Хĕвелпе пиçсе кĕреленнĕ çан-çурăмне ку темле хăйне май илем кӳрет. Сарлака кăкăрĕ çинче мăй тавра çавăрса усăнтарнă темле амулетлă вăчăра. Килĕшет ăна çакă, илĕртӳллĕ. Ал, кăкăр мускулĕсем илемлĕн хăпарса тăраççĕ. Типшĕмрех пит-куç. Кĕске çӳçне вирелле туранă. Куç лупашкине чакăр шăрçа вырнаçнă.

Иккĕшĕ те темшĕн тӳрех сăмах тупаймарĕç. Тем самантран Аксар сывлăх сунчĕ.

— Салам, — тавăрчĕ Умрай. Сасартăк унăн амăшне асне илчĕ те ыйтрĕ: — Аннӳ япăхланмарĕ пулĕ те?

— Анне çавнашкалах-ха. Эпĕ сирĕн валли кучченеç —

паян ирхи кӳлӗм татнӑ хӑмла ҫырли илсе килтӗм, — алкумне йӑпӑш тухса кӗчӗ. Вара ҫырла тултарнӑ пурака тӑсрӗ: — Мейӗр.

— Ай-уй, мӗншӗн чӑрманан? Аннӳ валли илсе каймалла марччӗ-ши? — текелесе именнӗ Умрай ҫырла пуракне ниҫта лартма пӗлмен енне пӗр вырӑнта тӑпӑртатрӗ.

— Эпир ӗнтӗ ку ҫырлана ҫисе йӗпхӗрнӗ, — пуплерӗ Аксар. — Варени те пӗҫертӗмӗр, хӗлле валли те типӗтрӗмӗр.

— Ӑҫта ӳсет ҫав териех ҫырла? — тӗпчерӗ Умрай, сасси вӑтаннипе тытӑнчӑклӑрах тухрӗ, каччӑна куҫран та пӑхаймарӗ.

— Ӗнесене ҫитерме вӑрман вӗтлӗхне илсе кӗретпӗр. Унта хӑмла ҫырли аврисем лӑках. Ҫырлисем ав епле шултра.

— Спаҫҫипӑ сана, — тав турӗ хӗр йӗкӗте. — Хирӗҫ мӗн парас-ха? — йӗри-тавра пӑхса илчӗ Умрай.

— Чи кирлине! — шӳтлерӗ лешӗ.

— Ай-уй, мӗн вӑл чи кирли? Манӑн ним те ҫук.

— Суян! — хи-хик! кулчӗ йӗкӗт куҫ айӗн пӑхса. Шапшурӑ шӑлӗсем ярӑм шӑрҫа пек курӑнчӗҫ. — Пур, пур!

— Тупата Туршӑн тавҫӑраймастӑп.

— Питӗ шел. Шухӑшла, тавҫӑрӑн тен.

— Ах-у, «Унесенные ветром» кӗнекене илсе каясшӑн, — кулкаласа илчӗ Умрай. — Вӗҫне ҫитнӗпе пӗрех, тепӗр тытмалӑх юлнӑ.

— Хӗр те вара сана. Пурте пур, чи кирли хывӑнман, — тухса кайрӗ Аксар.

Аксар ку хӗре тахҫанах курнӑ, вӑрттӑн юратнӑ. Ҫывхарма юраман. Хӗр тени вӑл пӗлӗтрен ҫӑлтӑр татса пама пулакана юрататъ. Аксар ун йышши мар, халӗ ӑна нуша хулпуҫҫи урлӑ вӑрӑм пушӑ ҫактаратъ. Пурнӑҫ пӗрех ансӑр сукмак ҫинче тӗл пултаратех. Ун чухне ан тӑр тӗлӗрсе.

Умрай пӗччен юлсан тӳрех алла кӗнеке тытрӗ. Кирлӗ страницине те уҫрӗ, хӑш тӗле вуласа ҫитнине те тупрӗ. Вулатъ. Мӗн амакӗ? Пӗр сӑмахӗ тӑна кӗмест. Пӗтӗм пуҫ Аксарпа тулнӑ. «Аса ил ӑна, шухӑшла ун пирки...» — тет такам. «Лайӑх йӗкӗт. Сӑнӗ-пуҫӗ те чипер. Пӗвӗ-сийӗ те ҫамрӑк юман туйири. Пӳртне-ҫуртне епле таса тытатъ. Арҫын пулин те пур кӗтес те унӑн ҫап-ҫутӑ. Айванскер мар, вӗренет. Часах инженера тухӗ. Тата мӗн?»

Пуҫ мимин чаршавне сирсе йӗри-тавра вӗҫсе ҫӳрен шухӑшсем юхса кӗчӗҫ татах. Кам хӑвалать? Хуҫи пур-мӗн, вӑл — айпӑрӑш йӗкӗт Эхтюк. Ҫавӑрттарать. Куштанлӑхӗ хайӗнчен малта пырать. Пуринчен ытла Эхтюк хайне юрататать. Пурпӗрех вӑл юлан утҫӑ. Рысак ниме уямасӑр малалла ыткӑнать. Ҫапах та йӗвенне лӑнч! ярасси пулкалать. Лайӑх йӗкӗт, анчах ӑмӑрт кайӑк мар.

Карачӑм Юманов — турат вӗҫӗнчи шӑл витмен сӗткенлӗ пан улми. Унӑн алли вӑйлӑ, пурне те вӑтӑрать, ывӑтать ҫӗр ҫине. Йӑва ҫавӑрнӑ вӑл. Унта пурӑнма мӑшӑр кирлӗ. Мӗнли? Таҫта вӗҫме ӗмӗтленекенни-ши? Ненай. Тупӑнӗ-ха тулли пит-куҫлӑ мӑнтӑркка чиперук, пӳрт тулли ача-пӑча парнелекенни — кӑлӑк чӑххи. Юратма пултаракан хӗрарӑмӑн ҫӗр ҫине юлнӑ ура йӗррине чуптума хатӗр ҫын вӑл. Хӑй пурнӑҫне ӑна парнелекен хӗр телей курать. «Ҫав чиперкке эсӗ пулма пултаратӑн!»

— Хи-хи-хи! — кулса ячӗ Умрай. Вӑл тӳрех ӑнланчӗ шухӑшсен ретне кам вӑркӑнса кӗнине. Кам пултӑр ӗнтӗ, лешӗ, ӑшра пурӑнакан Такам. — Ҫук-ха, качча кайма ир-терех. Эпӗ ҫамрӑк. Манӑн унччен пысӑк тӗллеве пурнӑҫа кӗртмелле.

Хайӗн тӑвӑл тӗрлеттерекен шухӑшсемпе тек пӗччен айкашса ларас килмерӗ Умрайӑн. Вӑл медпунктран тухрӗ. Хваттерӗ еннелле утрӗ. Калинкксене уҫса картишне кӗчӗ. Илтрӗ: алкум вӗҫӗнче Сухви ачине тустарать. Умрай вӗсене чӑрмантарма шутламарӗ, чӳрече айӗнчи тӑпрас ҫине ларчӗ.

— Сана, Юркка, шӑп ултӑ сехетре килте пулма хушрӑм. Халӗ мӗн вӑхӑт? Ӑҫта ҫапкаланса ҫӳрерӗн?

— Шӑп каланӑ пек санӑн умна килсе тӑма эпӗ сехет мар. Туянса пама мӗн чухлӗ тархаслатӑп. Эсӗ, пур, ялан: «Укҫа пулсанах сан аллуна сехет ҫыхса ярӑп», — тетӗн.

— Ӑҫтан ӗрӗхсе килтӗн-ха? Сӑну-пуҫу юлман, калӑн, сан урлӑ трактор каҫса кайнӑ.

— Киле ҫитме васкаса чупрӑм.

— Паян хӑяр тӑварласшӑнччӗ пӗр катка. Мӗншӗн татса пухмарӑн?

— Йӑрансем тӑрӑх утса тухрӑм, — сатурланать Юркка. — Хӑярӗсем лӑках, анчах тивме шеллерӗм, ӳссе ҫитей-

мен пек туйăнчĕ. Хăйсене пăхса ытармалла мар: ешĕл, вĕтĕ-вĕтĕ шатраллă. Пĕрне те эпĕ çыртман, хама тытса чартăм. Çыртсан-и? Çăвар тулать тутлă пылак сĕткенпе.

— Эсĕ мар-и вара урама хĕв тулли хăяр чиксе тухакане? Унта та кунта çыртăксем выртаççĕ. Вăрçăлла вылянă ĕнтĕ. Тупнă çимĕçе сая ямалли вăйă.

— Илтмен, курман, пĕлместĕп.

— Асту, пĕлместĕп пулĕ. Суян! Эсĕ чăннине каласан шапан та çăм шăтать.

— Чăнах-и? У-у-у! Кулăш! — ахăлтатса кулса ячĕ Юркка, — унашкал шапа нихăçан та курман.

Амăшĕпе ывăлĕ хурулашнине ăшшăн кулкаласа итлесе ларчĕ Умрай. Ассăн сывларĕ, йăл та кулчĕ. Юрккашăн пулсан ик айкки те тăвайкки. Мĕн-ма шухăшлатăр вăл хĕлле хăяр çиес пирки. Паян вăл тутă. Хĕвел пăхать, ăшă. Ача та хаваслă. Ав вăл, çара уранскер, качака путекки евĕр тринкки-тринкки сиккелет.

— Анне, çăмхалла выляма урама тухам-и? — йăнкăртатать Юркка.

— Ах, турăçăм, ăнтан яратăн мана. Чуп-çке, — ирĕк парать ывăлне Сухви.

Анчах çавăнтах ĕçне те хушать: ачин кĕтӳ кĕртнине сыхламалла, ĕнине киле хуса килмелле. Унсăрăн вăл, каскăнскер, çынсен пахчине кĕрет. Килти витере такана тулли ешĕл курăк. Хăй юратни — йыт пырши. Элле, вăрласа çини тутлăрах. Хăйне кура мар, ăсĕ пур.

Сухви ывăлĕ хыççăн калинккене хупас та сăлăп ярас ĕмĕтпе уттарчĕ, анчах Умрая, тăпрас çинче лараканскере, курах кайрĕ. Ăна пӳрте кĕменнишĕн ятланçи турĕ.

Акă Сухви калинккене сăлăп ярсах питĕрчĕ. Пӳрте пĕччен кĕрес килмест. Вара пилĕкĕнчи саппунне салтса тăпрас çине, Умрайпа юнашар, сарчĕ, майлашса ларчĕ.

— Мĕн çинчен шухăш вĕçтерен? Хăш ту тăрринче эсĕ? — терĕ Сухви пит çăмартисем хĕрелнĕ Умрай куçĕнчен пăхса.

— Пĕр тĕллев канăç памасть мана, акамçăм. Качча каяссăм килет. Анчах упăшка пулмалли йĕкĕт мĕнлескерли кирлĕ?

— Чи кирли: хитре ан пултăр вăл.

— Ай-уй! Чипер мар йĕкĕте мĕнле качча тухас килтĕр?

— Хитре упăшка санăн мар, вăл еркĕн савнийĕ. Ахаль каламаççĕ ĕнтĕ: чипер упăшка вăл — ют упăшка. Тупса яр пĕр-пĕр асси, нихăçан кĕвĕçмĕн тепĕр хĕрарăм çумне.

— Эсĕ ху, Сухви, мăшăрупа аван пурăннă-и? Мĕнлескерччĕ вăл санăн?

— Мана Турă çав тери кăмăллă çын парнеленĕ. Темиçе çул пурăнса та йӳнсĕр пулнине курман. Сăн-пуç енчен илсен манашкалскер, ни ытлашши илемсĕр мар, ни ытлашши... Мĕнле калас, пурте пурччĕ: курма — куçĕ, чиптума — тути, ыталама — алли, мана хуса çитме — ури.

— Сухви, упăшкун кăмăлĕ пирки тăхçалама мантăр, — йăл-л кулса илчĕ Умрай.

— «Пĕтме пĕлменскер! Сысна эсĕ!» — тесе ятласан, паллах, «Килсем, чунăм, ларсам арăк çине. Çăварна уç, çуллă пăтă хыптарам», — теме чĕлхине вылятмастчех.

Сухви халапне хăй пирки çеç вĕçлесен ĕненмеллех пулмĕ терĕ-ши, сăмаха тӳрех Варуççа енне ывăтрĕ.

Кĕскен Умрай çапларах ăнланчĕ унăн халапне: Варуççа мухтанмаллах чаплă, хурламаллах ытлашши начар пурăнать теме çук. Упăшка тени лайăх-и, начар-и, çапах та арăм унăн хӳттинче пурăнасшăн. Çапла кирлĕ те. Варуççа хĕр чухне пилĕкĕнчен тапса çыхнă ыраш кĕлтиччĕ. Платна хĕре хапсăнакансем, ăмсанакансем хăтана çӳремен мар. Вăл ав хăнчăр куçлă йĕкĕте суйласа илнĕ те пурăнать ирĕклĕ ăна унталла та кунталла пăркаласа. Çемье пуçлăхĕ упăшки мар, хăй. Укçине те тупма вĕренчĕ, ара, лавкка уçма пултарчĕ. Арçыннин сасси çук. Унăн сĕнĕвне шута илмест арăмĕ.

## 8

Юлашки вăхăтра Машук тĕнчере ниме те мар, пуштă ещĕкне кăна асăрхать тейĕн. Ирхине вырăн çинчен сиксе тăнă-тăман ун патне чупать, ĕçрен таврăнсан — каллех. Хыпар кĕтет мар-и. Çыру çук та çук. Пурте манчĕç тейĕн. Мĕнле-ши унта Эхтюк, унăн савнă хĕрĕ — Умрай? Пурăнаççех-ши? Варуççи тата хăй мĕн амакне аллине çыхнă? Ун çырмаллахчĕ ĕнтĕ. Машук хăй темиçе хутчен те алла хутпа ручка илчĕ. Варуççана пĕсĕрлентерсе çырма. Шикленчĕ. Вăл пĕлме çунакан хыпар ырриех мар. Çыру ют çын аллине лекĕ те икĕ хĕрарăмăн тивĕçсĕр ĕçĕ çинчен

пӗлӗҫ. Вара тӗрме алӑкӗ саншӑн яриех уҫӑлӗ, хуть чупсах кӗр. Ӗҫ пӑрахсах кайса килӗччӗ Машук тӑван ялне, анчах майсем хупӑ — ӗҫ тӑлланӑ. Таҫтан-муртан килнӗ (тен, кунта ҫывӑхрах ҫуралса ӳснӗ, кам пӗлет ӑна) ҫӗнӗ вырӑс текен этем хулан пӗр урамӗнче пушӑ вырӑн тупнӑ та туяннӑ. Ҫав хуҫа Машук ӗҫлекен треста пурӑнмалли темиҫе хутлӑ ҫурт туса лартма тара тытнӑ. Кунне-ҫӗрне уямасӑр, чаш-чаш ҫумӑр вӑхӑтӗнче те ӗҫлеттереҫҫӗ. Хуҫа васкатать имӗш. Мӗншӗнни паллӑ: хатӗр хваттерсене хӑвӑртрах сутмалла. Усламран тӑранман этем ӗнтӗ. Строительсем те ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлемеҫҫӗ. Вӗсен хӑйсен тӗллевӗ — ӗҫшӗн укҫа хӑвӑртрах илесси. Уйрӑмах кирпӗч хуракан каменщиксем пуҫ ҫӗклемеҫҫӗ, вӗсен ҫемйисене тӑрантармалла. Стройкӑна тухмасӑр пӗр кун ҫеҫ сиктер (пӗр сехет те ҫителӗклӗ) — кӗтсех тӑр: тӳрех кӑларса яраҫҫӗ, тепӗр кунне вара ҫӳре урамра, тепринчен ӗҫ тилмӗрсе.

Машукӑн ӑшӗнче вут ҫунать, анчах шӑла ҫыртса тӳсмелле. Кам хута кӗрӗ ӗҫре? Кам ӑнланӗ ҫав хатер чуна пӑралакан сӑлтава? Чухлӗҫ-и вара ватсупнӑ пуҫлӑхсем хӗр упраҫӑн савни пуррине? Куҫа-куҫӑн пӑхса калаҫмасан, чуппа туса илмесен пӗтӗм тӗнче тепӗр май ҫаврӑнма пултарать. Ҫакна пӗлмӗше хываҫҫӗ. Пуҫлӑхсен тӗллевӗ ытла усал: кирек камӑн та ӗҫе ҫур минут юлмасӑр ҫитмелле, пуҫа ҫӗклемесӗр ӗҫлемелле. Апла килӗшмесен вӑ-ӑн-н! Алӑк уҫӑ.

Машук шӑлне ҫыртать те тӳсет. Хӑйне вӑл ӗҫе пуҫӗпех парӑннине кӑтартать: вӑхӑтра ҫитет, ҫынсемпе пӗрле ӗҫ пӑрахать. Ӑшӗнче шӗл кӑвар тӗлкӗшет. Варуҫҫа хӑйӗн тӗллевне пурнӑҫларӗ-ши? Ухмаха тухрӗ-ши унӑн савниййӗн еркӗнӗ? Тӗрӗссипе, Машук ҫав хӗре, Умрая ӗнтӗ, вилӗм сунмасть. Чи кирли — сӗлекине юхтарса ҫӳретӗр урам тӑрӑх. Вара пурте пӗлеҫҫӗ, кураҫҫӗ вӑл хӗр — сывалайми чирлӗ. Кама мӗнле-тӗр те, ку вилӗм суннинчен нумай хивререх пек. Чӑваш арҫынни чирлӗ хӗрарӑма юратма мар, хӗрхенес те ҫук. Уншӑн пулсан арӑм тени лаша пек йывӑр лав турттӑр.

Машук хӑйне ҫын тесе шутлать. Йӑнӑшать ҫав. Унӑн алли чавса таранах вараланчӑк. Ара, вӑл Варуҫҫапа килӗшсе, унпа вӑрмана кайса ҫав ҫынна ухамаха ертекен курӑк тымарне иккӗшӗ тӑпӑлтарчӗҫ. Киле таврӑнсан каллех иккӗшӗ пӗрле килӗшсе вӗретрӗҫ.

Ку тёлёшпе ваттисем питё тёрёс сăмах калани упранать: çын валли шăтăк ан чав, унта ху кёрсе ÿкен.

Кун хыççăн кун иртет. Пёринче Варуççапа мён пулса иртнине Машук ним те тёшмёртеймест çав.

Тÿсмелле мар шăрăх. Тÿпере хёвел вут чёртнё тейён. Унсăрăн çунтарса ярасла пёçертмё ёнтё. Сывлама кансёр: çăвар типет...

Хёвел чи çÿлти картлашкине хăпарнă вăхăтра Варуçça лавккине хупрё. Çак кун вăл пёр тутăр сутинччё. Мăшкăлланăнах, пёр чун пымарё. Алăк çумёнче çăпата пек çăра — хуралçă тăрать. Хуçи хăй урамран урама вашлаттарчё. Хайхискер иртрё Сухви тёлёнчен. Сас-чÿ кёмерё хăлхана. Эппин, никам та çук килёнче. Ёçё вёçленмерё-ха, татах пур-ха унăн çитес вырăн — медпункт. Çитрё, кёрсе тăчё. Курчё: Умрай фельдшер амăшё аллинчи ачана тем çухăртать. Э-э-э, укол тăвать иккен. Сухви мăнаçлăн кускаласа çÿрет ун-кун. «Ха, — шухăшларё Варуçça. — Урăх мён ёç пур ара унăн. Тепри те çавах. Пÿлёмре шурă халат тăхăнса кёллин-каллин пускаласа уткалани — вёсен ёçё шутланать. Укçа тÿлеççё. Чăн-чăн ёç вăл: тырă вырни, витери ёне тислёкне хырса тасатни. Çаксене тума вăй кирлё».

— Чирлёрен-и-мён, Варуçça аппа? — ыйтрё Умрай фельдшер укол хыççăн аллине çуса шурă ал шăллипе типётнё май.

— Вăл чирлесен тёнче ишёлё, — йёплесе илчё Сухви.

— Мён, сирён пата так ахаль кёрсе тухма юрамасть-и вара?

— Паллах. Кунта чирлесен килеççё. Эсё ав ферма вăкăрё пекех сывă, халь-халь ёрёхме хатёр. Марш-ш!

— Сывă пул эппин, Варуçça аппа, — сăмах хушрё татах Умрай фельдшер. — Ыратаканни аптратма тытăнсан пирён пата килме ан ман.

— Сыввисем сирён пата çул уçасшăн ёмётленеççё, — тутине чăпăртаттарса илчё Варуçça. — Камне калам. Вăл Эхтюк арăмё — Машук.

— Ай-уй, хăçан иртттертёр туйне? — ахăлтатса кулса ячё Сухви. — Илтмен.

— Çара кайиччен. Эхтюк ăна пусмăрланă.

— У-у! Вăл ёç хăçан пулнă? — лёх-лёх кулчё Сухви. — Эсё, Варуçça, лăпкăн пăхса тăнă, ма чармарăн каскăна?

— Хам курман. Анчах ёҫӗ пулса иртнине пӗлетӗп. Ахаль каламаҫҫӗ ӗнтӗ: вӑрман хӑлхаллӑ, уй куҫлӑ.

— Варуҫҫа, эсӗ элек саракан. Машук яла килсен кун пирки ӑна хам кайса евитлетӗп.

— Хӑрамастӑп. Хура ҫӑкӑр ҫиекен никамран та хур курман, — хайхи хыпалансах тухса чупрӗ амбулаторирен.

Урамра Варуҫҫа Турикасра пурӑнакан Праские тӗл пулчӗ. Сывлӑх сунса алӑ тытасси пулмарӗ, тытӑнчӗ тӳрех тӑкӑлтатма:

— Пушака тухтӑр патӗнче пултӑм. Иккӗмӗш кун чӗре ыратнӑран пулӑшӗ-и терӗм. Ӑҫта унта, лараҫҫӗ Сухвипе иккӗшӗ ҫынсене кӑшласа.

— Кай, ӗненместӗп. Пушака фельдшер хӑй ӗҫне лайӑх пӗлет тесе калаҫать ял-йыш. Хам та пӗркун ӑш вӑрканипе хӑшкӑлтӑм. Ӗҫмелли тем парса ячӗ. Халӗ чиперех.

— Ах, чӗрем тухса ӳкет, мӗнле хартлатать, — йынӑшать Варуҫҫа. — Тек ура ярса пусмастӑп. Вӗсем ял ҫыннисем ҫинчен элек сараҫҫӗ. Ара, хулара пурӑнакан Машука хӑртрӗҫ кӑна. Вӑл юхха имӗш. Эхтюк ҫара кайичченех Машук ун айӗнче пулнӑ пулать. Ах, мӗнле тӳсмелле ҫакнашкал элеке. Ку — хӗр ятне яни. Таса ҫинченех мӑшкӑлчӑк шывне чиксе кӑлараҫҫӗ.

Варуҫҫан шуйханусллӑ кӑмӑл. Ҫитменнине, кунӗ шӑрӑх. Сывлама хӗн. Тути типет, ӑшӗ хыпнӑ. Асне килнӗ шухӑшсем вара кӑмӑлне хавхалантарчӗҫ. Унӑн кухньӑра, сак айӗнче, кӑкшӑмра сӑра юлнӑччӗ-ха пӗр-ик стакан. Ӑна ӗҫӗ те ак — ӑшӗ пусӑрӑнӗ. Кӑп-кап апат хыпкаласан каллех ҫул тытӗ лавккана. Тен, каҫ кӳлӗм халӑх пырӗ. Укҫа, укҫа пухмалла.

— Хӑвӑртрах пуясчӗ. Вара Сухви-Умрайсемпе сӑмах ваклӑп-и?

Килне ҫитрӗ Варуҫҫа. Тӳрех — кухньӑна. Туртса кӑларчӗ хайхи кӑкшӑма. Лӑкарӗ. Кӑкшӑмри сас пачӗ: шӗмпӗл-шӗмпӗлт! Стакан ҫине юхтарчӗ. Тутанчӗ. «Ха, сӑмакун тутиллӗ пулнӑ. Тутлӑ та иккен сӑраллӑ сӑмакун». Пӗр ҫӑвар сыпрӗ те ҫӑтрӗ. Тутине чӑпӑртаттарчӗ. Вара икӗ стакан умлӑ-хыҫлӑ янклаттарчӗ. Кӑкшӑмри шӗвекпе наркӑмӑшлӑ ҫӗлен ҫӑтӑнни асра та ҫук.

Кӑкшӑмра хайхи шӗвек самаях юлчӗ-ха. Кайран, лавкка хупса таврӑнсан ӗнтӗ, татах ӗҫсе ӑша кантарма пулать.

Кухньăра тытăнса тăма кăмăллă мар. Апат çинĕ хыççăн çуман чашăк-тирĕк купаланать лăк. Ых, çав шăнасем ырă кураççĕ вара чыссăр кашăк-тирĕк çинче. Темшĕнçке унăн кăмăлĕ уçăлчĕ. «Тасатам-ха», — терĕ. Çурĕ вара тăрă шывпа пĕтĕмпех. Хуйхи-суйхине те тупрĕ: ара, астумарĕ те кăкшăмри ăрăмлă сăрине чаш-ш! чашлаттарчĕ лаххана. Çавăнтах сисрĕ Варуçça хăйĕн йăнăшне. Тинкерсе пăхрĕ лахханне кăкшăмран юхтарнă сăри çу куçĕ пек уйрăммăн ишсе çӳренĕн, ăна каялла пуçтарса илме май пуррăн. «Ых, тăм писмен!» — ятлаçрĕ лахханти çăра шыва пăхса.

Иртрĕ кун хăйĕн йĕркипе. Кама мĕн парнелерĕ-тĕр. Пуçланчĕ çĕнни. Хĕвел тăсса ячĕ хĕрлĕ ялавне çĕр çинчи этеме савăнтарма.

Варуççа пӳртрен витре йатса тухрĕ. Турă çырлах! Картишĕнче — хурах! Ĕне сутарма мар, çывăха ямасть, малти урисемпе çĕр чавать, тăпрана сирпĕтсе кĕтĕве кайма вăраннă пăру-сурăха хăвалать. Пĕр сыснине мăйракипе сĕксе хырăмне шăтарнă. Сехри хăпнă Варуççа упăшкине чĕнчĕ. Ăнланчĕç: ĕне урнă. Кил хуçи хĕрарăмĕ ăçтан ӳлемесĕр тӳстĕр? Этемлех йĕретчĕ-ха. Сасартăк улшăнчĕ: тытăнчĕ ахăлтатса кулма, ӳлесе йĕме. Ку çеç-и, пĕтрĕ пуç, пуçларĕ йытăлла вĕрме, кашкăрла улама. Унччен те пулмарĕ, лап тӳнчĕ, çĕр çинче йăваланать ахлата-ахлата. Кӳршĕсем те пухăнчĕç. Тĕлĕнеççĕ. Шикленекенсем те пур. Чир-чĕрĕ, усалскер, вĕсен килне пырса ан кĕтĕр. Турă сиртĕр ĕнтĕ. Сăхсăхакансем тупăнчĕç.

Ĕнер Варуççа ăшĕ хыпнине мĕн ĕçсе иртсернине, кĕтӳрен килнĕ ĕнине те лаххантй çăра шывпа шăварнине пачах маннă. Ку çеç-и? Машукпа иккĕшĕ вăрмантан çынна, çĕр çинчи пĕтĕм чĕр чуна ухмаха кăларса вĕлерекен курăк тымарне кăларса килнине, вĕретнĕ шĕвеке Сухви килне кайса вăрттăн чейнике ярса хăварнине те пуçран кăларнă. Çав чейникри шĕвеке Сухви ун килне пырса сăраллă кăкшăма яма пултарни çинчен чухлама та пултарайман.

Пухăннă кӳршĕ çыннисенчен паттăртараххисем ĕнене пусса пăрахрĕç. Варуççана упăшки медпункта илсе кайрĕ. Ĕç пуçланман мĕн-ха. Иртерех мар-и? Фельдшера кайса чĕнтерчĕç. Чупса çитрĕ вара.

— Мĕн пулнă? — тĕпчет Пушака фельдшер.

— Усал амак тулласа пăрахнă. Йĕрет, юрлать, ташлать, — евитлет упăшки. — Ҫĕркаҫ чиперех выртса ҫывăрчĕ. Ирхине тĕнче каталнăн куратăп: ĕне хăй тĕллĕн урнă, унтах Варуҫҫа тытăнчĕ камит кăтартма. Ăсĕ пачах ылмашрĕ. Мĕн курас?

Пушака фельдшер васкасах укол турĕ Варуҫҫана.

— Ним тăхтаса тăмасăр район больницине илсе кайăр, — хут тыттарчĕ Умрай чирлин упăшкине.

— Сыватайĕҫ-ши ĕнтĕ ăна? — кăсăкланчĕ хайхи.

— Шанчăка нихăҫан та ан ҫухатăр, — пуплет Пушака. — Халĕ чаплă эмелсем пур. Паллах, йӳнĕ мар.

— Эмелне туянăп-ха, анчах больница больницах, унта лексен тепле, — йĕрмешет Варуҫҫа упăшки.

— Мĕншĕн унашкалах кулянан, Кавĕрле? — тет тин ҫеҫ амбулаторине пырса кĕнĕ Сухви, васкасах халат тăхăнаканскер. — Кан, хусах хĕрарăмсем патне улаха чупкала.

— Тупата, ан мăшкăлла-ха, Сухви, — вăтаннипе айккинелле пăхса кулланҫи турĕ лешĕ.

Машина ҫитрĕ. Варуҫҫана хăпăл-хапăл кĕртсе лартрĕҫ. Ăна упăшки ăсатрĕ.

* * *

Тăрса юлчĕ Пушака фельдшер. Ун ҫумне Сухви пырса тăчĕ.

— Тем курăн ку пурнăҫра, — мăкăртатрĕ вăл.

— Итле-ха, ырă ҫыннăм, ҫак тĕр-тер ĕҫ санăн мар-и? — кăсăкланчĕ Умрай.

— Пулĕ ара. Мĕншĕн вут чĕртес ун? Вĕри кăварĕ хăй арки ҫине ӳкрĕ.

— Кăварне сапаканĕ эсĕ. Ҫав шĕвеке тула тухса саппаллаччĕ.

— Ай-ай, чее. Вăл мана мăшкăл туса лĕх-лĕх кулса ҫӳрет те...

— Эсĕ те кул. Сана ҫын кирек мĕнле усал тунине те ыррăн сирмелле, савăнăҫ тупса кулмалла.

— Нинай.

— Итле, Сухви...

Умрай халĕ каласа паракан калава нихăҫан та ман-

масть. Кӗҫӗн класра вӗренетчӗ ун чух, учительница темле кӗнеке сыпӑкӗпе паллаштаратчӗ.

«...пӗр ача ҫуралнӑ кун ячӗпе куккӑшӗнчен парне — велосипед кӗтет. Ҫу кунӗсем ҫитеҫҫӗ-ҫке-ха. Ҫуралнӑ кун тӗлне чӑнахах та посылка килет. Уҫаҫҫӗ ещӗке. Турӑ ҫырлах! Унта велосипед мар, — костыль. Ача тарӑхнипе чарӑнайми ӳлесе йӗрет.

— Ах, ытла та айван иккен эсӗ, мӑнукӑм, — тет аслашшӗ. — Сана костыль кирлӗ-и? Кирлӗ мар. Мӗншӗн? Санӑн урусем хуҫӑлман, сып-сывах. Тӗрӗс-и? Эппин, савӑн!

Ача сак ҫинчен тринк! сиксе анать.

— Ыратать-и?

— Ыратмасть.

— Эппин, савӑн, сана нимле костыль те кирлӗ мар! — аслашшӗ купӑс илет те кӗвӗ калама тытӑнать. Ача ура хуҫсах, шарт-шарт! алӑ ҫупсах ташлать.

— Лайӑх калав, — килӗшет Сухви.

— Ӗҫе сан пек татсан куккӑшне, ҫапла костыль ярса панӑшӑн, кӳреннипе ылханмаллаччӗ, куккӑшӗн урине кайса хуҫмаллаччӗ. Тата тем те пӗр ырӑ мар ӗҫ.

— Тупата, мӗн-ма ҫапла хӑтлантӑм? Усалне хӑй тӳстӗр терӗм-ши?

— Ҫав ача аслашшӗн сӗнӗвӗ кирек епле хӑшкӑлчӑкра та чун тасалӑхне упрама пулӑшать.

## 9

Каллех тӗттӗм шӑналӑк сирӗлчӗ. Кун пуҫланать. Тӗлӗнтермӗш. Вӑл ҫутӑ ярӑмӗсене сапаласа мӗн каласшӑнши ҫӗр ҫинчи кӑткӑ евӗр йышлӑ пурӑнакан этеме? Малтанах ҫынна тӗллевне парнелет те ӗҫе кӳлӗнтерет.Васкатать мар-и. Ара, кун сӳнет. Ӑна ӳрӗк-сӳрӗк ирттерсен ӗмӗрлӗхех ларса юлан шуҫ чуман ҫинче. Эппин, хӑвӑртрах ярса тытасчӗ пурнӑҫ тилхепине, вӗҫертес марччӗ ӑна аларан.

Умрай Пушака медучилище пӗтерсен ҫак яла килчӗ. Ӗҫне, чӑнах та, ытла йывӑр, ытла ҫӑмӑл теме те ҫук. Тӗп тӗллевӗ — ҫыннӑн ыратнине сиресси. Ҫын тени вӑл — хӑй пӗр патшалӑх. Куратӑн ӑна пуҫ тӳпинчен пуҫласа ура тупанӗ таран. Курӑнманни вара шалта, ӑшӗнче: чӗререн пуҫласа пуҫ мимипе вӗҫленет. Ҫын тени вӑл — нумай-нумай пайлӑ кӑткӑс машина. Ӑна чир-чӗртен сыва-

тас тесен кашни пайне витĕр пĕлмелле. Училищĕре вĕренни куçа пачах уçаймасть. Тухтăр, профессор пĕлĕвĕ кирлĕ. Пулать-и çав пĕлĕве алла илме? Паллах. Мĕнле майпа-и? Вĕренсе. Ку та сахал-мĕн-ха. Кам çирĕплетсе парĕ: профессор йăлт, пĕр пĕрчĕ юлмиччен пĕлет тесе? Никам та. Пĕлÿ тĕввисем тÿпери çăлтăр пекех, никам суса тухайми йышлă.

Пушака фельдшерăн медицина пĕлĕвĕ питĕ сахалха. Çынсем хушшинче хăвăрт сарăлакан чирсенчен хăтăлма, палăрнă чирсене çĕнтерме, кăтартса панă эмелпе укол тума пултарать. Ăна ирĕк панă ĕçсем лăках. Юраманни-пĕлменни мăй таран. Вăл пурне те тĕпĕпе пĕлесшĕн. Апла пулсан вĕренмелле. Тытăннă. Университета кĕресшĕн. Медицина факультетне хатĕрленÿ курсне кайрĕ. Хальлĕхе заочно майпа кĕрмешет, пĕрремĕш курсне те, ирĕк парсан, çапла майпах вĕренесшĕн. Халĕ вăл ытла çара. Тăлăх турат-çке-ха. Никам пулăшăвне курман. Пилĕк-ултă çул тÿсекен тумтир туянмалла. Хăш-пĕр чух, уйрăмах уявсенче, кулач та тутанас килет. Запас кирлех укçа-тенкĕ. Çапах та тĕллеве пурнăçлама Умрайăн пур чи кирли — çамрăклăх, ăнтăлу.

Уйăх çинчи кĕвентеллĕ пике курать Умрая, тĕмсĕлсе пăхать ăна кашнинчех кĕнеке тытса сĕтел хушшинче ларнине. Йăл кулса та ырă сунса пăрăнать вара айккинелле. «Сывă пул!» — тенĕн кĕрсе пытанать çывăхри пĕлĕт лупасĕ айне.

Ку кун, черетлĕ вырсарни, хĕвелпе пуçланчĕ. Савăнтарать хура халăха. Ара, кĕркунне çитрĕ — çĕр улми кăлармалла. Сухви те уя, аякри ани çине, каять. Ывăлĕ, Юркка, ир-ирех шкула тухса вĕçтерчĕ. Шкул та хăй ÿстернĕ çĕр улмине кăларать.

Умрай та килте ларса юлмасть. Сухви унран хваттерте пурăннăшăн укçа илмест. Апатне те уйрăм мар, пĕрле çиеççĕ.

Сухви çĕр улми кăларма Умрая илсе каясшăн мар.

— Сасартăк кам та пулин чирлесе ÿкет е мĕнле те пулин инкек сиксе тухать, — мăкăртатать вăл.

— Инкеке кĕтсе лармастăп, — кулать Умрай. — Чирĕ те пĕр куна кĕттĕр.

Ĕнтĕ апат хунă кушелне хупнă. Пĕлсех тăрать Умрай: унта Сухви чи тутлă çимĕçсем хунă. Ăна хĕре хул-

пуççи урлă çактарчĕ. Хăйĕн те çурăм хыçĕнче пушă михĕсем чикнĕ кутамкка. Аллисенче иккĕшин те — хусăк. Урама тухрĕç. Сасартăк вĕсен умне Карачăм Юманов пырса чарăнать. Пĕр-пĕрне сывлăх сунчĕç. Эппин, пĕрле çĕр улми кăларма пырать. Кăна кĕтменччĕ Умрай. Юнашар тăрса ĕçлеме тивет. Кăмăлĕ кăшт пăсăлчĕ. Мĕн тăвăн? Хуçи вăл мар — Сухви. Унăн кăмăлĕ: кама чĕнес тет, ăна йыхăрать. Юрĕ-çке, кичемех пулмĕ. Тепĕр тесен, юнашар ăна юратакан йĕкĕт ĕçлет.

Акă тата, Карачăм Юманов тем пăшăлтатрĕ Сухвипе, сывпуллашса пăрахса кайрĕ.

— Мĕне пĕлтерет ку? — кăсăкланчĕ Умрай. — Пирĕнпе пымасть-и?

— Çук. Шкул пахчинче ачасемпе ĕçлет, — пĕлтерчĕ Сухви. — Каç кӳлĕм хăйĕн машинипе пырса илет.

— Куншăн ташламалла, — тăпăртатса илчĕ Умрай.

— Темĕн çав. Путех пире машинăпа ярăнма лекмест, вăл тулли михĕсене тиеме килет.

Çĕрĕ ял тавра сарăлса выртать. Çынсен уйри анисем ни аякра мар, ни çывăхра. Сухви хăй ани умĕнче тăрать сăхсăхса, Турăран пиллĕх ыйтса: ана, ана, вăйна пар, малтисене хуса çитме хăват сун.

Кăчăрт! илтĕнчĕ сасă. Хусăкпа тăпра чуптурĕç. Кайрĕ вара ĕç вĕресе! Вĕлт те вĕлт ывтăнать хур çăмарти пек шултра паранкă. Выртаççĕ кăпăшка хура çĕре чăпарлатса. Пăхатăн та айккинчен, калăн: Кайăк хур çулĕ. Çыннăн кирек мĕнле ырă ĕçĕнче те пур-мĕн — ытарайми илем.

Хĕрсе ĕçлекен çынсене хĕвел кĕркунне енне сулăнсан çурăмĕсене хĕртсе хăй пирки аса илтерсех тăмасть. Ĕçлеччĕр ара. Сехет вара хĕрхенет ĕçчене: «Чарăн-ха, — тет вăл çынна, — тахçанах вăхăт кăнтăр апатне ларма».

Сухви çĕр улми авăрĕсене пухса меллĕ вырăн турĕ, çи витти сарчĕ. Тархасшăн — сĕтел хатĕр. Ларчĕç. Çав вăхăтрах кӳршĕллĕ ана çинче ĕçлекен Алтиç кинемей каçрĕ. Кучченеçпе. Унăн ывăлĕ кăвайт чĕртнĕ-мĕн. Вĕри кĕл ăшĕнче паранкă пĕçернĕ. Урăх ним те кирлĕ мар-тăр. Чĕлхӳне çăтса ярăн.

Апат пуçланчĕ. Уйра пĕçернĕ, килтен илсе тухнă çимĕçе мĕн çапла тутлăлантарать-ши? Путех, хĕрӳ ĕç. Калаçу вĕретнĕ сĕт ĕçсен пуçланчĕ.

— Тухтăр тусăмăр, хăçан туй туса паратăр?

Те вырнаçусăр, те ытла хăюллă ыйту тесе виççĕшĕ те ихĕлтетсе кулчĕç. Кăшт лăплансан Умрайăн сăмах тытма лекрех.

— Туйне тăвăттăм та, анчах качча илекен çук, — терĕ хайхискер.

— Эпĕ пĕлнĕ тăрăх, вĕсем иккĕрен те иртеççĕ.

Сухви калаçăва хутшăнмасăр тӳсеймерĕ:

— Пĕтĕм сăлтавĕ çакăнта: качча илес текенсем темиçе. Пĕрре çеç пулсан тыт та тух. Кунта вара юмла — хăшĕнпе телейлĕ пулăн.

— Алтиç аппа, сан шутупа, кама качча тухмалла-ши?

— Хăшне ытларах юратан, çавна тух.

— Иккĕшне те пĕр пек юратсан? — йăл-йăл вылярĕ унăн питĕнче хĕвел пайăрки.

Сухви хĕр пĕрчине Карачăм Юманова качча парасшăн. Вăл пурнăç çынни имĕш. Çамрăклах пуйнă. Килĕ-çурчĕ епле хӳхĕм. Вĕр çĕнĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕ те пур. Нумаях та пулмасть машина туянчĕ.

Алтиç шухăшĕ урăхларах. Çын пуянлăхне пăхса качча тухни ырă патне илсе пымасть. Çав килте туслăх нихăçан та аталанаймĕ.

— Пĕрлеш Эхтюкпа.

Сухви килĕшмест. Эхтюк çара çерçи имĕш. Пӳрчĕ кивĕ. Пӳрнепе тĕк — кайса ӳкет. Ашшĕ-амăшĕ те пурнăçне çукпах ирттернĕ. Вĕсен картишне ĕне пусса йĕр туман. Ашшĕамăшне темле амак кун паман, çаплах чирлеттернĕ.

Пуçланнă калаçăвăн вĕçĕ тупăнмарĕ: ĕçваскатать.

Сухвипе Умрай вăйпитти çынсем çав. Тепĕр кана тар юхтарчĕç те юлашки йăран вĕçне çитсе тухрĕç. Çĕр улми пуçтарнă чух вĕсем патне Эхтюк пырса тухрĕ.

— Вăй патăр! — терĕ вăл хĕрпе хĕрарăма.

— Тавах!

— Сăпаççип! Тав, Турра, ĕçлеме йыш хушăнчĕ, — хĕпĕртерĕ Сухви.

— Хирĕç мар. Анчах алла ал çăвать теççĕ. Эпĕ нимене чĕнме килтĕм. Ыран пахчари çĕр улмине кăларасшăн тата пӳрт-çурта тасатса шпалер çыпăçтарасшăн.

— Килĕшетпĕр. Нимене пымасăр юлсан — çылăх, — терĕ Умрай.

— Эпĕ те çавнах калатăп.

Ĕçчен алăсем... Вĕсене ырласа кăна тăмалла. Ара, тем вăхăтра çĕр улми михĕсене кĕрсе вырнаçрĕ. Хĕвелĕ вăй пачĕ ахăр. Халĕ вăл анăçа шуса çитрĕ те сывпуллашасшăн вылять вăрман тăррипе. Сухви ăна кăшт тытăнса тăма хистет. Ара, Юманов хăйĕн машинипе çитеймерĕ-çке. Уйрăмах Эхтюк çĕтĕлсе тăрать. Сухви витĕр пĕлет: вăл хĕр пĕрчине çавăтса пăрăнасшăн. Юрĕ ĕнтĕ, унăн кăмăлĕ тултăр. Умрай та туртăнса тăмарĕ. Вара каччă хĕр упраçа çавăтрĕ те аслă çулпа мар, тӳртен яла çитерекен сукмак çине илсе тухрĕ.

Аслă çулпа Карачăм Юманов машинипе тĕрлеттерсе килет. Мĕн-ма унпа хирĕç пулмалла тет. Шан-ха ăна, тарăхнипе машинипе тӳрех вĕсем çине кĕрĕ те кайĕ. Выртса юлăн вара, пуленке евĕр, çул çинче.

Эхтюк савăнăçлă. Ăна халĕ хĕре çавăтса пыма никам та чăрмантармасть. Аслă уя вăл тав тăвать. Çитменнине, хура чаршав таврана хупласа майĕпен карăнать те карăнать. Каччăшăн ку пит меллĕ, алă çемми. Вăл хĕре утнăçемĕн чăмăртаса илет. «Юрататăп», — тет. Хĕртен те çавнах илтесшĕн. Анчах пикен тути çăраççипех питĕрĕннĕ. Тарăхать йĕкĕт. Ăшĕнче такам вĕрентет: «Мĕн ăна пит тилмĕрсе пыран? Ав çĕр улми аврисен купи. Сĕтĕр те кĕр. Вара... акă пулчĕ те хĕртен арăм. Мĕн ăна ванса каяс чашăк пек ачашшăн тыткалан?» Чăрсăрланчĕ. Чипер утса пыракан хĕре çĕклерĕ те çум купи патнелле утрĕ.

— Эсĕ мĕн хăтланан, Эхтюк? Мĕн-ма пăрăнтăн сукмакран? Асту, кăшкăратăп: ху-у-ра-ах!

Эхтюк шартах сикрĕ.

— Мĕн ухмахланан? Кĕрсе ларасшăнччĕ кăшт. Ывăннă ахăр, — хĕре каялла сукмак çине çĕкленипех тухрĕ. Ним чĕнмесĕр утрĕç. Вара Эхтюк сăмах вĕçертрĕ: — Умрай, атя халĕ тӳрех ман пата каяр.

— Мĕншĕн?

Ăнлантарса пачĕ. Каччă авланасшăн. Ăна арăм пулма чĕнет. Вăл ĕçме-çиме тахçанах хатĕрленĕ. Темиçе кĕленче эрех те туяннă. Ирхине нимене пыракансемпе туй пуçланĕ. Килĕшмест хĕр, шав каялла тапать.

Эхтюк пуçне ырă мар шухăш пырса кĕчĕ. Тен, Умрай хăй валли Юманова суйласа илнĕ, ăна качча тухасшăн?

Апла теес, мĕншĕн вăл лешĕ ана çине пырасса кĕтмерĕ? Машинăпа, кабинăра унпа юнашар ларса пыратчĕ яла. Хĕр тенине ăнланма йывăр. Ăшне уçса пăхма, чăнах та, халăх каларăшле, кĕрĕк çанни мар çав.

— Тĕрĕссипе кала: эсĕ мана ху çумăнтан ни тĕртместĕн, ни çывăха ямастăн. Качча тухатăн-и мана е çук?

— Мĕн-ма пит васкан? — ихĕлтетсе кулчĕ Умрай. — Кам хăвалать çав териех? Эпир çамрăк. Вăхăт çитĕ.

Эхтюкăн кăмăлĕ çемçелчĕ. Вăл пикене çав тери чуптăвасшăн. Уссине шăлкаласа якаткаларĕ те хĕре тытса сасартăк хăй çумне пăчăртарĕ. Ăçта унта? Патне ан пыр. Умрай — каснă лартнă туртана хăнăхман пукрас тиха. Тапрĕ, сикрĕ, тăпăлтатрĕ... Каччăн вăйлă аллисенчен хăтăлчĕ.

— Ых-х, йĕплĕ пиçен! — Эхтюкăн сăмахĕ шăл витĕр сăрхăнса тухрĕ.

— Качча тухсан упăшка çеç чуптума пултарать мана, — терĕ Умрай пуçĕнчи тутăрне юсаса.

Умрай киле çитнĕ çĕре Сухви паранкине нӳхрепе антарма та ĕлкĕрнĕ.

— Юманов шăлне çыртса ĕçлерĕ. Вăл сана кӳреннĕ мар-и?

— Ан тĕлĕнтер, Сухви. Унăн манпа мĕн ĕç пур, çураçнă хĕр-и?

Умрай чухлать: Карачăм Юманов çав териех юратмасть ăна. Анчах уншăн Умрай ытла меллĕ. Хăй — учитель, арăм — фельдшер. Иккĕшин те ял ĕçĕ. Унтан ытла мĕн кирлĕ?

Çавăншăнах вăл çĕнĕ машинине вараласран хĕрхенмесĕр, Умрая юрас шухăшпа, Сухвин çĕр улмине турттарса килнĕ, хĕре кĕтсех ĕнтĕ ăна нӳхрепе антарнă.

Сухви сĕтел çине майларĕ. Çемйи ун пысăк мар: ывăлĕ тата Умрай. Ăна вăл йăмăкĕ вырăнне хурса юратать. Шăкăл-шăкăл калаçса апатланчĕç. Умра тирĕкпе чăмăрла пĕçернĕ паранкă та пур. Кашниех саланса пиçнĕ. Тупата, паранкă ытла та кĕрпеклĕ. Çинĕçем çиес килет. Чĕлхене çăтманни кăна.

Вăхăт нумая кайрĕ. Умрай, халиччен алă вăйĕпе питех ĕçлеменскер, шĕлтĕрех ывăнчĕ. Ыйхă пусать. Выртрĕ çеç, ыйха путрĕ те.

Илӗм-тилӗмпех тухса чупрӗҫ нимене.

Пӗччен суран — типсе пырать, халӑх сурать — кӳлӗ пулать тенӗ. Эхтюк килӗнче ҫынсем кӑткӑ евӗр йышлӑ. Ял халӑхӗ — маттур, пухӑннӑ ҫителӗклех. Хӑшӗсем пахчара кӗшӗлтетеҫҫӗ — ҫӗр улми кӑлараҫҫӗ, теприсем пӳрт стенисене шпалер ҫыпӑҫтараҫҫӗ. Тата тирпейлӗ алӑсем чӳрече хашакӗсене ҫуллӑ сӑрпа шуратрӗҫ. Кӑмака та хура питпех юлмарӗ.

Ӗҫ вӗҫленсе пырать, анчах нихӑшӗ те пӑрахса каймасть.

Пушака фельдшера чӗнеҫҫӗ. Унӑн васкасах амбулаторие ҫитмелле — унта чирли пулӑшу кӗтет. Чупса ҫитме тиврӗ.

Ҫамрӑк инке пӗрремӗш класа ҫӳрекен ывӑлне илсе пынӑ. Ачан пырӗ шыҫнӑ.

— Ангина, — терӗ Пушака фельдшер ҫӑвар ӑш-чикне тӗрӗслесе. — Халӗ ҫанталӑк сивӗтмен. Мӗншӗн унӑн пырӗ шыҫнӑ?

— Сивӗ шыв ӗҫнӗ вӑл, шӑпӑрлан, — тытӑнчӗ ӑнлантарма ача амӑшӗ. — Пирӗн Хӑмсар уйӗнче тарӑн ҫырма пур — Ташмӑт ҫырми тетпӗр ӑна. Тӗпӗнче ҫӑл палкаса выртать. Шывӗ — чӑн-чӑн пӑр. Ҫав тери сивӗ. Ҫӑтнӑ чух пыра кусарпа хырнӑ пек туятӑн. Мӗн чухлӗ ҫын чирлемест-ши хӗртсе хӗвел пӑхнӑ вӑхӑтра? Виҫӗм кун уйра ҫӗр улми кӑлартӑмӑр. Алӑ ҫума ашшӗне шыв ӑсма ятӑм. Ку та юлмарӗ. Ӗҫнӗ ӗнтӗ ҫав ҫӑл шывне. Тупата, ачине ятлама хӗн, ҫӑл шывӗ — шӑп тӑрна куҫӗ, тӑп-тӑрӑ. Ирӗксӗрех ывӑҫласа сыпан. Ан ӗҫӗр тесе асӑрхаттартӑм. Итлесси пур-и?

Ачи чирне хӑй тупнӑ — фельдшер сыват. Температурине чакарма эмел панисӗр пуҫне мӗн-мӗн тумаллине ӑнлантарчӗ.

Умрай пӗчченех юлчӗ. Нимене вӗҫлеме каймалла-ши? Ни апла, ни капла ӗҫ татаймарӗ. Алӑка шаккарӗҫ.

— Кӗрӗр! — терӗ Умрай. Пӳлӗме Илемпи кӗчӗ тӑчӗ.

Савӑннипе ыталанчӗҫ, такам кӑтӑкланӑн ихӗлтетрӗҫ вара пӗр кана.

— Сывлӑху мӗнле?

— Чиперех. Ан пӑшӑрхан. Санпа сывпуллашма килтӗм.

— Каятӑнах-и?

— Ӑхӑ. Документсем хатӗр. Ыран пӗрремӗш автобуспа ялтан тухса каятӑп. Кун пирки сансӑр пуҫне никам та пӗлмест. Ҫитес эрнере Америкӑна ҫитетӗп. Эпӗ савни ытамӗнче. Урра! Шенер савӑнать ӗнтӗ. Анне ним те тавҫӑраймасть. Манран ҫыру илсен ӑна йӑлт каласа пар.

— Юрӗ, ӑнлантарӑп.

— Чим-ха, Умрай, пыр эсӗ те Америкӑна. Шенер самант пулӑшать сана. Хам та тӑрӑшӑп. Пурӑнӑпӑр вара ҫӑтмахра. Ҫак тӗттӗм ялта ӗмӗр ирттерме эсӗ, мӗн, карчӑк-и? Эпӗ — электрик, эсӗ — медик. Эпир пур ҫӗрте те кирлӗ ҫынсем.

— Шухӑшласа пӑхма юрать, — терӗ Умрай.

— Маттур. Ну, эпӗ кайтарам-ха. Тен, мӗн те пулин маннӑ. Япаласене тепӗр хут тӗрӗслем.

— Сывӑ пул, Илемпи! Ӑнӑҫу сунатӑп. Каяс ҫулу такӑр пултӑр, икӗ айккипе мӑкӑнь чечекӗ чӗлтӗртеттӗр.

— Америкӑра тӗл пуличчен, Умрай.

Илемпи тухса вӗҫтерчӗ.

Пӗччен тӑрса юлнӑ Умрай шухӑша путрӗ. Ӑшри такам сас памасӑр тӳсеймерӗ: «Мӗнех, кунта пурнӑҫ ӑнмасан Америкӑна кайма та юрать». Умрай ҫав Такама пӳлмесӗр тӳсеймерӗ: «Чӑваш ҫӗршывӗ ҫав тери илемлӗ. Наяна пусмӑрлама памасан пирӗн пурнӑҫ — пыл та ҫу».

## 10

Уйӑх иртнӗ ҫӗрелле Варуҫҫана больницӑран кӑларчӗҫ. Ӑна илме упӑшки пымарӗ. Тухтӑрсен мӗн ӗҫ. Ҫынна сыватнӑ, теприн валли пушат вырӑна. Киле ҫитмелӗх ӑстӑн пур. Кӑмӑлӗ пӑсӑлчӗ ӗнтӗ, анчах мӗн тӑвӑн? Тухса кайрӗ вара Варуҫҫа пӗр-пӗччен. Автобуса кӗрсе ларчӗ. Пушӑ вырӑн ҫук. Ӑста куҫать ку халӑх? Вӑл хуть киле каять, больницӑра ӑна чиртен сыватрӗҫ. Кӑмӑлӗ вара шутсӑр хуҫӑк. Ара, упӑшки илме пымарӗ, ҫавӑнпа та ҫул тӑршшӗпех питлесе пычӗ ӑна. Киле ҫитсен чӑн-чӑн пӗҫерккӗ парать ӗнтӗ.

Акӑ вӑл ял ҫумӗнчи чарӑнура автобусран тухрӗ, ункун пӑхкаларӗ. Ӑнланчӗ: ӑна никам та кӗтмест. Урамра вара пӗри те тепри саламласа сӑмах чӗнчӗҫ.

— Ай-ай, Варуҫҫа, ҫав тери начарланнӑ-ҫке эсӗ?

— Ырашӗ юхса тухнӑ михӗ пек тӑрса юлнӑ.

— Эх, аккамсем, — тет Варуççа йӗрсе ярасла. — Больница курорт мар, пыл вырӑнне йӳçӗ таблетка хыптараççӗ.

Туяланнӑ Варуççа килне çитрӗ. Хапхи питӗрӗнчӗк мар. Ӑна патаккипе хирсе уçрӗ. Тӳрех упӑшки куç тӗлне пулчӗ. Вӑл алкум картлашки çинче атӑ тӑхӑнса ларать. Сывлӑх сунасси-тӑвасси пулмарӗ, кӳтсе çитнӗ çиллине тӳрех хута ячӗ Варуççа.

— Мӗншӗн мана илме пымарӑн? — хӑмсарчӗ ӑна патакӗпе.

— Ан вӗрилен. Паян эсӗ больницӑран тухасси ман асра-тӗлте те çук.

— Ытла та чурӑс чӗреллӗ эсӗ, упӑшкам. Пурӑнан ыйха ӑнкӑртса. Ӑçта ӗне? Эпӗ ӑна картишӗнче курмастӑп. Мана ӗне юр-варӗсӗр типӗтсе вӗлерессшӗн-и?

— Чухласа калаç. Тӑран путсӗр сӑмахсене акса-тӑкса. Кӑшт тӑрлавлӑ пул. Ӗне туянасси путек туянасси мар.

Упӑшки ӗне тупнӑ, туянма калаçса таталнӑ. Анчах арӑмне кӑтартмасӑр киле çавӑтса пыма килӗшмен.

— Кайса кур. Килӗштерсен ыранах çавӑтса кил, — тет мӑшӑрӗ.

— Ямӑттине хӑнӑхнӑ эсӗ. Хырӑм тутӑ, çи-пуç питӗ, таса. Эсӗ пур — ӗçле те ӗçле, укçине туп. Лавкка уçрӑм. Услам пур. Эсӗ наян упӑшка. Санӑн çемйӳне тӑрантмалла.

— Ха-ха-ха, — кулчӗ упӑшки. — Ку чухне хӗрарӑмпа арçын пӗр тан. Сана тӑрантса пурӑнма эпӗ тарçӑ мар.

Вӑл килтен тухса кайрӗ.

Варуççа хӑраса ӳкрӗ. Чӑнах пӑрахса каймарӗ-и? Пӗччен мӗнле пурӑнмалла, уйрӑмах халӗ, чир амантса хӑварнӑ хыççӑн. Тухса кӑшкӑрчӗ, каялла кӗме тилмӗрчӗ. Анчах лешӗ алне çеç сулчӗ. Урама тӑрӑх таçта çухалчӗ.

Ӑш-чикӗ тулнипе Варуççа тытӑнчӗ уласа йӗме.

— Анне, ним сӑлтавсӑр ан ӳле. Инкек йыхӑран, — терӗ ывӑлӗ вырӑн çинчен сиксе тӑрса. — Эсӗ ху çапла калаттӑн.

Ывӑлӗ амӑшне ыталарӗ, ачашларӗ, вара апат çинӗ хыççӑн шкула тухса чупрӗ.

Тӗкӗр умне пырса тӑчӗ Варуççа. Хӑйне тӳрех паллаймарӗ. Хыçалта такам тӑрать пулӗ тесе çаврӑнса пӑхрӗ. Кӑлӑхах. Тӗкӗрте ӑна хирӗç пӑхаканни — хӑех. Вара тутлӑ апат çисе юсанма шухӑш тӗвӗлесе хучӗ.

Шăп çак вăхăтра илтех кайрĕ:

— Ман килес! Хуçисем пур-и? Салам!

— Эх, ача! Машук! Мĕнле килме пĕлтĕн? — Варуçça аллине сарса хăна еннелле туртăнчĕ.

— Эсĕ пĕчченех-няк?!

— Упăшкана тĕпĕртеттертĕм те, тухса шурĕ.

— Улах апла. Тав ăна.

— Эсĕ, Машук, капла, чăматанпах, килекен çын-и е тухса каякан?

— Килекенни, — лаш ларчĕ хĕр пукан çине. — Шутсăр ывăнтăм. Ĕçрен аран-аран çăлăнса тухма май тупăнчĕ. Чуна илетчĕç. Ну, ĕнтĕ шĕкĕлчесе пар йăлтах. Ман савнин еркĕнĕ мĕнле унта? Шанатăп, вăл Эхтюка качча тухмарĕ тăр-ха. Çапла вăл пурнăç тени: юттине, хăвна пӳрменнине, ан хапсăн, — Машук тути кĕтессисене тухнă шурă кăпăка чĕлхипе çуласа илчĕ. — Ухмаха тухрĕ-тĕр?

Варуçça йĕрсе ячĕ. Тытăнчĕ вăл хăйĕн нуши çинчен тăхçалама. Пушака фельдшер мар, хăй чирлесе ӳкнĕ. Больницăра пĕр уйăх выртрĕ ăшталанса. Киле паян çитнĕ, çур сехет каялла. Машук умĕнчех хăйсен ирсĕр ĕçĕ çинчен манса Умрая тав туса сăхсăхрĕ.

— Пушака сывах эппин, — мăкăртатрĕ Машук. — Чим-ха, Варуçça, эсĕ йăнăшрăн ахăр, кирлĕ курăк тымарне тăпăлтарайман?

— Курăкĕ çавах-ха, кукамай кăтартниех. Хăй çав курăка курсан темшĕн хăраса тăр-тăр чĕтретчĕ, хăвăртрах пăрăнса иртме тăрăшатчĕ. Унăн амăшĕ çав курăк тымарне вĕретсе ĕçтернĕ çынсем пурте леш тĕнчене ăсаннă имĕш.

Тахçан такам вилни тата Варуçça чирлесе пĕр уйăх больницăра выртни Машука ним чухлĕ те кăсăклантармасть, тăна та илесшĕн мар.

— Чим-ха, — çиллессĕн каларĕ Машук, — Эхтюка çав юхха качча кайнă теесшĕн-и эсĕ?

— Тен, кайнă. Эпĕ юлашки вăхăтра ял хыпарĕсене пачах пĕлместĕп.

— Мĕн тума çыхлантăм санпа? — шăлне шатăртаттарчĕ хĕр.

— Эх, ача, пĕтрĕм пуç! — кăшкăрса ячĕ кантăк умĕнче ларакан Варуçça. — Пăх-ха, пирĕн пата кам килет!

— Кам? — пăшăрханнăн чӳречерен пăхрĕ хăна.

— Умрай Пушака фельдшер. Вăл ав картишне кĕчĕ.

Варуççа пӳртре чупкаласах сак çинче выртакан япалисене пуçтарма тытăнчĕ, сĕтел çинчи çуман чашăк-тирĕке йăтса кухньăна кайрĕ.

Алăка шаккани илтĕнчĕ. Пӳрте Умрай кĕчĕ.

— Эх, ача! Паян хăна хыççăн хăна килет, — текелерĕ Варуççа. — Иртĕр тĕпелелле. Анчах каçарăр, сăйăм çук, паян çеç больницăран таврăнтăм.

— Эпĕ хăналанма килмен, — сăмах хушрĕ Умрай. — Кăтарт-ха мана больницăран парса янă хута.

Варуççа мĕн ыйтнине фельдшера тыттарчĕ. Лешĕ паллашрĕ, хăйĕн тетрачĕ çине тем паллă турĕ. Варуççан чирĕ йăлтах иртмен иккен, унăн ялти медпункта çӳремелле, вăтăр хутчен укол тутарма тивет. Кил хуçи хăраса ӳкрĕ. Вăтăр хутчен йĕппе чик-ха! Ай-ай, ыраттарать! Юсанас тесен тӳсмелле.

Пушака фельдшер сывпуллашса тухса кайрĕ.

— Ытла ешĕл-çке ку хĕр, — тĕлĕнчĕ Машук, ним чĕнмесĕр ларнăскер. — Ӳссе çитĕнеймен, çын савнине тытса илесшĕн кармашать. Ăс кĕртме тивет. — Вăл ура çине тăчĕ те алăкран тухса вирхĕнчĕ.

— Машук! Асту, ан айванлан. Тем курса ларăпăр.

Ăшĕ вăркама тытăннăскере кам чарайтăр ăна? Умрай ĕнтĕ калинкке шашулккине ярса тытнăччĕ. Çак вăхăтра хăйне чĕннине илтрĕ.

— Эй! Тăхта-ха!

— Эпĕ кирлĕ пултăм-и? — чăр-р! пăхрĕ ун çине Умрай. — Мĕн тесшĕнччĕ?

— Халех илтĕн, — терĕ Машук фельдшер умне пырса тăнă май. — Мĕншĕн эсĕ ман упăшкапа савăшан?

— Мĕн-мĕн? — тĕлĕнчĕ Умрай. — Ăнланмарăм.

— Ан суй!

— Чим-ха, кам вара санăн упăшку?

— Эхтюк! Акă кам.

Умрай йăл кулчĕ. Вара ку хĕрарăмран тăрăхлама шутларĕ, ятне ыйтрĕ. Вăл чăннипех те ăна палламасть. Машук иккен.

— Халĕ пĕлтĕн-и?

— Машук, эсĕ тем аташатăн. Эхтюкпа эпир тахçанах

пурӑнатпӑр ун килӗнче. Тархасшӑн, хӑнана чӗнетӗп. Пыр, пӗтӗм кӑмӑлтан йышӑнатпӑр.

Умрай калинккене уҫса урама тухрӗ. Машук тем шуйхашрӗ, анчах ун хыҫҫӑн чупмарӗ, путех вӑтанчӗ пулас. Вӑл пӳрте талкӑштарса кӗчӗ те тытӑнчӗ Варуҫҫана пӑсӑрлантарма.

— Эсӗ суеҫӗ иккен. Ку вӗлтӗркке Эхтюка качча тухнӑ. Эсӗ ҫакна пытаран.

— Илтмен ку хыпара, — тӳрре тухать Варуҫҫа. — Эпӗ больницӑра выртнӑ хушӑра туй тунӑ пулинех.

Машук тарӑхса кайрӗ, тӳсме ҫук тулашать. Варуҫҫана тытса силлес патнех ҫитрӗ, каллӗ-маллӗ утать, ун умне пырса урипе тӑрслаттарса тапать. Хыпарсене юри пытарать имӗш. Халӗ вӑл пӗр тӑхтаса тӑмасӑр Варуҫҫана кивҫен илнӗ укҫана тавӑрса пама ыйтать.

— Тек яла ура ярса пусмастӑп. Салтнӑ пул енчӗкне пӗр тӑхтаса тӑмасӑр. Кӑларса хур укҫа пачкисене.

— Эх, ача! Машук, ун пекех ан вӗрилен-ха. Укҫуна ҫак самантра вӗлерсен те тавӑрса параймастӑп. Ӗне туянмалла. Сӗт-ҫусӑр кӑнтарасшӑн-и мана?

— Мана мӗн ӗҫ? Хуть те паянах ӳксе вил. Мухтанатӑн кӑна, пулӑшаймарӑн. Эсӗ шантарман пулсан тепӗр ӑрӑмӑҫ тупаттӑм.

— Пастай-ха, Машук, ҫав териех ан тулаш, — тутине саппун аркипе шӑлкаласа илчӗ. — Вӗсен пурнӑҫне тӗпӗ йӗрӗпех пӑсма пултаратпӑр. Ахалех тӗтӗм тӗтӗрен.

— Тӗрӗсех-и? — Машукӑн куҫӗсем самант хунар ҫутрӗҫ, каҫхи ҫӑлтӑр пек ялтӑраҫҫӗ кӑна. Варуҫҫана ыталаса тытрӗ те ун куҫӗнчен тилмӗрсе пӑхрӗ. — Мӗнле майпа ҫав вӗлтӗрккене тӑллама пултаран? Пӗр тӑхтамасӑр ту-ха мӗн шутланине, мана мӑшкӑла ан хӑвар.

Варуҫҫан пуҫне больницӑра йӑлтах тасатса ҫитерейменн, кӗтес-хуҫӑксенче кӑвакарса пӑнтӑхнӑ шухӑшсем ҫаплах тӑрса юлнӑ. Вӑл киле таврӑннӑ чух Илемпи упӑшки пулнӑ пекскерпе — Курьепе юнашар ларса килчӗ. Лешӗ хӑйӗн хуйхи-суйхи ҫинчен мӑкӑлтатрӗ ҫаплах. Арӑмӗ, Илемпи ӗнтӗ, ун патӗнчен уйрӑлсах тухса кайнӑ. Тӑвата уйӑх ытла ҫӗкленӗ хырӑмне юри ӳкернине ӗненет. Халӗ Илемпи ун патӗнче пурӑнмасть. Ҫак хура ӗҫе тума кам пулӑшнине Курье ниепле те тавҫӑраймасть, атту суда парӗччӗ.

— Кам, сан шутупа? — хыпаланса ыйтрĕ Машук.

— Тавçăраймастăн-и? Кам пултăр, Пушака паллах. Унăн темле эмел те пур. Ача ӳкерме мĕнле пултарать ăшшă, — ахах тупнăн çĕкленсе калаçать Варуççа.

— Ăнлантăм, — йăл-ял йăлтăртатакан савăнăç палли карчĕ Машукăн пит-куçне. — Хăвăртрах прокурора пĕлтермелле. Çăхавне халех çырар.

Варуççа сĕтел ещĕкĕнчен хут листипе ручка кăларса та пачĕ. Машук пуçĕнче хăйне пĕлĕте çити çĕклекен шухăшсем явăнаççĕ. Эхтюк чупса пыратех ун патне. Мĕнле пурăнтăр ачасене вĕлерекен хĕрарăмпа? Умрая хăрушла ĕçшĕн хупса лартаççех. Çемçешкесем тĕрмере часах ăсанаççĕ леш тĕнчене.

Чылайччен тăрмашрĕ Машук. Çăхав çырма та пĕрре те çăмăл мар иккен. Çырчĕ, хуратрĕ çаплах. Шел, шурă хут чунсăр, тӳсет темле элеке те. Юрать-ха, Варуççа çумрах. Вăл çăхава хиврелетме çĕнĕ сăмахсем тупать.

Хатĕр çăхава Машук хăйпе пĕрле Шупашкара илсе каять, почта уйрăмĕ умĕнчи ещĕке ярса хăварать вăшт çеç.

Кăмăлĕ çĕкленнĕ Машук чăматанне уçса хуларан илсе килнĕ кучченеçне тинех сĕтел çине кăларса хучĕ. Темиçе канфет тата кăлпасси. Çӳхе татăксем касрĕ. Пысăк пайне каллех чикрĕ чăматана.

Ĕç майлашса пынăшăн савăннипе Варуççа парăмра юлĕ-и хăна умĕнче! Вăл та тупрĕ пысăк ĕç тунă ятпа мĕн кирлине. Кăларса лартрĕ пĕр кĕленче эрех.

Пулас ăнăçлă ĕçшĕн пуçланчĕ ĕçкĕ-çикĕ. Икĕ хĕрарăм аллинче черккесем тулчĕç те пушанчĕç. Анчах чухламаççĕ пачах, вĕсен савăнăçлă тĕллевĕ — сывлăшра çилпе вĕçсе сарăлса пĕтнĕ тĕтĕм.

## 11

Сесси вĕçленчĕ. Умрай Пушака экзаменсене ăнăçлă вĕçлерĕ. Тар юхтарнă самантсем иртрĕç. Чи кирли — унăн пĕлĕвне «пиллĕкпе» хакланă. Çитес сессинче те çапла савăнтарсан, иккĕленме кирлĕ мар, вăл вара университет студенчĕсен ретĕнче пулать.

Çитес экзаменсене хатĕрленме ĕçсем илнĕ. Тек кунта тытăнса тăма кирлĕ мар. Киле каймалла. Киле... Умрайăн

нимле кил те çук. Хваттер паман ăна. Мĕн ялта ĕçлеме пуçланăранпах медпункт технички Сухви патĕнче пурăнать. Халĕ унăн килĕ — Сухви килĕ. Тĕп çемйи — Сухви тата унăн ывăлĕ. Лайăх туять вăл хăйне çак икĕ çын хушшинче. Сухви ăшă кăмăллă хĕрарăм. Килте нихăçан та шуйăхмасть, ятлаçмасть, тутине тăсса çӳремест, чи кирли — вăл элекçĕ мар. Килти сăмаха яла тухса аласа çӳрес йăла çук. Вăл чăн-чăн çын. Халĕ Умрай унсăрăн пурăнасса та шанмасть хăйне. Ывăлне те хурлама май çук. Йĕркеллĕ çын пулса ӳсессе шанмалла.

Япаласене чикнĕ чăматанне питĕрсе тăнă чухне пӳлĕме Сухви кĕрсе тăчĕ. Кĕтмен çĕртен.

— Мĕн çĕмĕрттерсе çӳрен? — тĕпчет Умрай.

— Тунсăхласа çитрĕм те, — тет Сухви ăна ыталаса илнĕ май. — Кайса илем-ха çавна терĕм. Ĕçу-пуçу мĕнле?

— Лайăх. Экзаменсене йăлтах лайăх тытрăм. Малашне те ĕç çапла пырсан университета кĕретĕп.

— Мĕн чăрмантарать?

— Енчĕкре пĕр пус укçа та çук. Стипендипе çеç мĕнле пурăнăп?

— Ял администрацине пулăштарттаратпăр. Канмалли кунсенче пырса ĕçлĕн. Çулла яра кун амбулаторирен тухмăн. Ырă яту пур, ĕçлеме пултаратăн. Халăх хапăлласах килĕшет. Пурна киле хамăрăн тухтăр пулать. Пĕтĕм таврари ялсем ăмсанĕç.

— Тепле çав. Çын тенине ĕçленĕ чух çеç хисеплеççĕ.

— Ан кулян, Умрай, — терĕ татах Сухви. — Ун пеккун пек кутăнланма тытăнсан хам пулăшатăп. Çăкăртăварсăр ларман. Ĕне усратăп, выльăх-чĕрлĕх ялан картиш тулли. Каникул вăхăтĕнче пулăшăн мана. Утă çулса типĕтĕпĕр.

— Çава тытма пĕлместĕп, — сăмах хушрĕ Умрай йĕрсе ярасла. Шухăшĕпе тем тума та килĕшет-ха вăл.

Ахалех кулянать хĕр. Утă çулнă çĕрте çава çеç кирлĕ мар, çулнă курăка тавăрса типĕтмелле, сенĕкпе те кĕреплепе пуçтармалла.

Ку Умрайпа Сухви ĕмĕчĕсем. Чăннипе ӳлĕм мĕн кĕтет вĕсене? Нихăшĕ те пĕлмест.

Сухви Шупашкарта тахçанах пулман. Пĕр килнĕ пек чух хула курса çӳресшĕн вăл. Çула майăн магазинсене те

кӗрсе тухасшӑн. Ял хӗрарӑмӗн хулара мӗн те пулин туянас килет-тӗр.

Тухса кайиччен апатланас терӗҫ. Сухви пушӑ алӑпа ҫӳрӗ-и? Вӑл какайпа пӗҫернӗ хуплу илсе килнӗ. Ҫирӗҫ вара. Чейпе канфет — Умрайӑн.

— Чим-ха, Умрай, каҫарсам, чутах манман. Сана Эхтюк салам калама хушрӗ, — пӗлтерчӗ Сухви.

— Тавтапуҫ.

— Тепри чечеклӗ салам ҫитерме ан ман терӗ.

— Карачӑм Юманов-и?

— Йӑнӑшан. Ку хӗвеллӗ, чӗлтӗрти чечеклӗ салам питӗ хитре ҫамрӑк йӗкӗтрен.

Умрай тавҫӑраймана хыврӗ. Чӗлтӗрти чечеклӗ салам, паллах, Аксартан. Сухви сисрӗ, анчах ним те шарламарӗ.

* * *

Шупашкара сессие килес умӗн Эхтюкпа тӗл пулнӑ самантсем асне килчӗҫ. Пӗррехинче, ӗҫ вӗҫленнӗ тӗлелле, медпункта пычӗ. Ҫаплах тилмӗрчӗ хӑй патне пусӗпех пыма. Умрай яланхиллех сӑлтав тупрӗ: «Малтан туй тӑватпӑр, ҫырӑнатпӑр». Ку йӑлтах сесси хыҫҫӑн пуласса шантарчӗ вӑл. Ним те сиксе тухмасан качча каяс ӗмӗт ҫирӗпех тӗвӗленнӗччӗ-ха ун. Юмановран ытларах килӗшет ӑна Эхтюк. Ҫапах та Карачӑм Юманов ӑна ытларах килӗштерет пек. Халӗ тата пуҫра ҫӗнӗ шухӑш ҫуралчӗ, сессире унӑн пӗлӗвне чи аван хак панӑ хыҫҫӑн малалла вӗренес, тухтӑра тухас кӑмӑл ҫирӗпленчӗ. Ҫавӑнтах пуласлӑх юпленчӗ те. Шалта, ӑшра, пурӑнаканни ассӑн сывлаттарчӗ. Хӗр ӗмӗрӗ кӗске. Часах кӗрченӗ хӗр шутне кӗртеҫҫӗ, вара никам та ҫаврӑнса пӑхмасть. Вӑл тӗнчере пӗрпӗччен, тӑван-пӗтен пачах ҫук. Качча тухса ҫемьеллӗ пулмаллах, ачапча ҫуратмалла. Сахалтан та тӑваттӑ е пиллӗк. Ӳсчӗр, хайсем те туратланччӑр. Тӑван пуррине туйни мӗнле паха, ҫӳре хӑнана пӗр-пӗрин патне. Кунтан ытла савӑнӑҫ урӑх пур-ши?

Татах тепӗр самант асра пурӑнать Умрайӑн. Ялан чӗннӗрен пӗррехинче Сухвие ертсе Эхтюк патне кайрӗҫ. Ниме ҫыннисем кивӗ пӳрт ӑш-чиккине чӑнласах хӑтлӑх кӳнӗ вара. Эхтюк калама ҫук евӗклӗ йышӑнчӗ. Пӗччен пурӑнакан хусах те вара ӑна. Утмӑл турат чечеклӗ шурӑ

ейме сарнӑ ҫӗнӗ сӗтел самант сӑйпа тулчӗ. Ҫимӗҫӗ хусахӑн: кӑлпасси, сыр, пулӑ... Ҫӑкӑр пур, сӑри — ҫук. Эрех кӑларчӗ. Черккине ҫӗклесен Эхтюк сӑмах тытрӗ: «Йӳҫӗ ӗҫсе тутлӑ калаҫар...» Сухвин те тупӑнчӗ мӗн каламалли: «Перекет пултӑр, пурнӑҫу малалла кайтӑр, пурте ҫителӗклӗ, пур япала та пуҫламан пек тӑп-тулли упрантӑр». Ҫакӑн хыҫҫӑн иккӗшӗ черккисене ӳпӗнтерчӗҫ. Умрая тилмӗрчӗҫ, анчах вӑл парӑнмарех — ӗҫмерӗ.

Шухӑш, шухӑш — вылянчӑк ҫил ҫунат. Вӑл пурнӑҫӑн тахҫан-тахҫан иртсе кайнӑ тапхӑрне куҫ хупса иличчен илсе ҫитерет. Вӑхӑт иртет, вӑхӑт сая каять. Умрай асаилӗвӗн ҫиппине татрӗ.

* * *

Киле иртерех ҫитес ӗмӗт чи малтан Сухвие ыйхӑран вӑратрӗ. Пӗри хускалчӗ пулсан тепри лӑпкӑн хуп турттараймасть. Ара, хӗр ыйхи — шӑпчӑкӑнни евӗр теҫҫӗ. Умрай сиксе те тӑчӗ. Хӑпӑл-хапӑл ҫӑвӑнса тумланчӗҫ. Ҫул ҫине вӗри чей ӗҫмесӗр ӑҫтан тухӑн?

Ӗнтӗ Умрайпа Сухви автовокзалта. Ҫакӑнтан ларса тухрӗҫ вӗсем килелле.

Ӗнер ҫанталӑк тем камитленчӗ: хӗвел те ҫупӑрларӗ ҫурӑмран, ҫумӑр та ҫурӗ, кӗрпе те сапӑнчӗ, юр пӗрчисем те вӗҫрӗҫ. Ир пуҫласа каҫчен ҫынсем ҫут ҫанталӑкӑн пур тапхӑрӗнче те пулса курчӗҫ. Каҫхине вара Хӗл Мучи тем пит туллашнӑ, ҫулсене пӑрпа витсе тухнӑ. Шоферсене савӑнтармасть ҫак. Мӗн тӑвӑн? Ку унӑн ӗҫӗ — ҫӑкӑрӗ. Турттармалла ҫынсене.

Вокзалта халӑх сӗрлет. Акӑ автобус пырса чарӑнчӗ. Ку — Умрайпа Сухвие киле илсе ҫитерекенни. Кӗрсе вырнаҫрӗҫ. Сывӑ пул, Шупашкар! Ҫулҫӑсемсӗр тӑрса юлнӑ йывӑҫсем, ялсем иртсе юлаҫҫӗ.

Умрая сӑпка ҫӗнтереймерӗ. Вӑл иртнӗ кунсенчен пӗринче.

...Сессие тухса каяс самант. Эхтюк пырса кӗчӗ. Кӗнекесемпе тултарнӑ чӑматана автобус чарӑнӑвне ҫитиччен йӑтса пычӗ. «Мана ан ман, — пуплерӗ. — Эсӗ таврӑнасса чунтан кӗтетӗп. Сана ҫакӑнтах кӗтсе илетӗп. Вара, кӑмӑлу пулсан, тӳрех ман пата кайӑпӑр. Килӗшетӗн-и?» «Юрӗ», — тенӗччӗ хӗр...

Сасартăк карт! турĕ. Пуçа темĕскер шан-н! çапăнчĕ. Шăри-шари çухрашрĕç. Умрай тăнне çухатрĕ...

Авари. Автобуса КамАЗ пырса çапнă.

Тĕнче пĕтрĕ. Таврара кăшкăрашу, айлату. Машинăсем кăшкăртаççĕ.

Сухви тăна кĕчĕ. Пĕр арçын ăна, выртаканскере, шăтарасла пăхать. «Сывлатăн-и?» — кăшкăрчĕ. Сиксе тăчĕ. Ун-кун пăхкаларĕ. Куç темшĕн тĕтреллĕ кăтартать. Çынсем çĕр çинче выртнине курчĕ. Ăнланчĕ пурне те. Ав епле чупкалаççĕ, йĕреççĕ, кăшкăрашаççĕ, çухăраççĕ.

Сухви хăйне тарăн ыйхăран вăраннăнах туйрĕ. Пуçне тӳрех шухăш пырса кĕчĕ: ăçта Умрай? Кăшкăрса чĕнчĕ. Сас паракан пулмарĕ. Ăçта вăл? Татах, татах чĕнчĕ: «Пушака-а-а!» Унччен те пулмасть, аякрах та мар васкавлă пулăшу машинине асăрхарĕ. Унта наçилккапа çĕклесе пынă çынсене вырнаçтараççĕ. Сухви те чупса çитрĕ. Вăл та машинăна кĕресшĕн хĕвĕшет. Ăна чăрмантарнăшăн хӳтереççĕ.

— Калăр-ха, тархасшăн, Умрай Пушака пур-и кунта?

— Пур, пур! — тет наçилкка çĕклекенсенчен пĕри хĕрарăмран хăпас тенĕн. Хăй Пушакана пачах пĕлмест.

— Мĕнле вăл, аванах-и?

— Тĕрĕс-тĕкеллисене кунта кĕртмеççĕ.

— Аманнă тесшĕн-и?

— Унне, ачамкка, шăмми-шаккине йăлт имĕрнĕ.

— Ай-яй! — йынăшрĕ Сухви хăйĕн çурăм шăмми шартах хуçăлнăн. Вăл машинăна кĕресшĕн чыхăнчĕ. Анчах ăна алли пыран айккинелле сирчĕç те сирчĕç. Кабинăра ларакан шофер патне пычĕ, ăна тилмĕрчĕ лартса кайма, мур илесшĕ, кĕртмерĕ.

Сухвин, хуйхă-суйха ăнланаканскерĕн, тути хăпарса тухнă, хăй шав Умрая асăнать: «Ах, шел-çке. Хĕр ачийĕ ынатлăскерччĕ. Çитменнине, тăлăх турат».

Аварие лекнĕ автобус вырăнне теприне пырса тăратрĕç, малалла каякансене чĕнеççĕ. Вĕсен йышĕ сахалах та мар иккен. Кашниннех билечĕсене тĕрĕслеççĕ. Сухви иккĕленет: каймалла-и е юлмалла? Килте ун ывăл пур-çкеха. Вăл пĕччен вăрахчен пурăнаймасть, çамрăк. Тата Пушака фельдшер патне пушă алăпа кайнин мĕн усси? Ăна апат-çимĕç кирлĕ. Хальхи вăхăтра больница таврашĕнче

ҫӑкӑрне те тӑраниччен памаҫҫӗ. Аманнӑскере тутлӑрах апатҫимӗҫ кирлӗ. Ҫак шухӑшсем ӑна автобуса кӗртсе лартрӗҫ.

Автобус тапранчӗ. Вӑл йӗркеллех ыткӑнчӗ те ыткӑнчӗ малалла, ара, пур машина та лекмест аварие. Сухви ҫитес ҫӗре ӑнӑҫлах ҫитрӗ, ял ҫумӗнчи чарӑнура анса юлчӗ.

Куҫа-пуҫа чӑлт-чалт ывӑтса пырас кӑмӑл ҫук. Ӳпӗннӗскер утрӗ малалла. Унччен те пулмасть, ӑна кап! пырса ыталарӗҫ. Йӗнипе тӑртаннӑ куҫ хупанки йывӑррӑн уҫӑлнипе вӑл витӗр курса паллаймарӗ те ҫынна.

— Сухви, эсӗ мӗн-ма пӗччен? Умрайпа пӗрле килетӗп терӗн-ҫке?

— Э-э-э, эсӗ-ҫке ку, Эхтюк, — каллех лӗр-р йӗрсе ячӗ Сухви. — Ҫул ҫинче инкек пулчӗ, аварие лекрӗмӗр. Умрая больницӑна илсе кайрӗҫ машинӑпа.

— Мӗн, утаймасть те-и?

— Утма терӗн, унӑн пӗтӗм шӑмми-шакки аманнӑ.

— Эх, телейсӗрскер, — алне сулса илчӗ те Эхтюк пуҫран ҫапнӑн таҫта кайса ҫухалчӗ.

Ял урамне кӗчӗ Сухви. Ура айӗнчи пӑрлӑ-юрлӑ ҫул ыррӑн утма памасть, ура йӑр-яр шуса илет. Ӳкересшӗн мур илесшӗ. Ҫитменнине тата, чӑматанӗпе сумки йывӑр.

Хирӗҫ пулакан ҫынсене пурне те Умрай аварие лекни, ун патне ыран кайма шутланине пӗлтерчӗ. Утатчӗ-ха малалла. Илтех кайрӗ:

— Салам! Сухви аппа! — терӗ пӗри, унӑн чӑматанне ярса тытрӗ. Ку Аксар пулчӗ. Вӑл та салху хыпар илтрӗ.

— Эпӗ халех каятӑп Шупашкара, — терӗ Аксар. — Вӑл хӑш больницӑра выртнине шыраса тупатӑп.

— Ыранччен тӑхта.

— Апла юрамасть. Паянах вӗҫсе ҫитӗп. Кая юлсан каю шӑтать теҫҫӗ. Ҫитӗп те ӑна ачашлӑп, унӑн ыратӑвне, суранне хама илӗп.

Хыпар тени ҫил ҫуначӗ ҫинче вӗҫсе ҫӳрет. Ҫамрӑк хӗр, ял фельдшерӗ Пушака, аварие лекнӗ сас-хура самант килтен киле кӗрсе тухрӗ. Илтекенсем ахлатрӗҫ вара. Хӗрхенекенсен йышне шутласа кӑлараймӑн.

Ҫак кун Сухвин пӳрт алӑкӗ хупӑнма пӗлмерӗ тесен питӗ тӗрӗс. Ҫынсем пычӗҫ те пычӗҫ, пӗри те пушӑ алӑпа мар — Умрая хӑналамалли кучченеҫпе. Ыран Умрай валли йӑтса каймалли сумкӑна пӗчӗк савӑтпа пыл, услам ҫу,

чăкăт, çăмарта, кулач, çăкăр, кукăль тулчĕ те тулчĕ. Калама хушнă саламĕ, часрах сывалма ырă сунни — тĕнчене вырнаçаймастех.

Çĕр иртрĕ. Тул çутипе йывăр сумка йатнă Сухви чи малтан çула тухнă автобуса кĕрсе ларчĕ. Вăл Умрай патне больницăна каять. Хăй шав мăкăртатать. Пушака фельдшера инкекрен тĕрĕс-тĕкел çăлăнса тухма Турăран пулăшу ыйтать.

* * *

Эхтюкăн ăшĕ çунать. Пĕтĕм ĕмĕчĕ таталчĕ. Ара, авланасси пулмасть. Ним тума пĕлмен енне Карачăм Юманов патне пырса кĕчĕ.

— Мĕн пит шурса кайнă эсĕ? Чирлемен пулĕ те?

— Хуйхă-суйхă тыллать.

— Мĕн пулнă?

— Илтмен-и вара эсĕ? Пушака фельдшер аварие лекнĕ. Пĕтĕм шăмми-шаккине çĕмĕрнĕ тет.

— Ай-ай.

— Халĕ вăл мана уксах-чăлахскер кирлĕ мар. Сана паратăп ăна.

— Ха, ман мĕн тăвас аласăр-урасăр арăмпа? Тупăнĕ-ха тĕрĕс-тĕкел хĕрех.

— Манăн запасра Машук пур-ха.

— Кая юлмарăн-ши?

— Мĕн каласшăн эсĕ?

— Тен, вăл качча кайнă. Хĕр упраçа шанма çук.

— Кама кирлĕ вăл, çылăхлăскер? — Эхтюк çапла каласа çара кайиччен Машук хăйне парăннине пĕлтерчĕ ĕнтĕ.

— Эх, Эхтюк, илтмен-и вара эсĕ: шăтăклă шăрçа çĕрте выртмасть тенĕ ваттисем.

Эхтюк пуçĕнче Машук пирки шухăш çиппи çăмхаланчĕ те çăмхаланчĕ. Текех пăлханнă тинĕс хĕрринче ырă çанталăк кĕтнинчен усси çуккине ăнланчĕ. Вара тухса вĕçтерчĕ хулана. Вăл пĕлет Машук пурăнакан общежитие мĕнле çитмеллине.

— Машук килтех-и? — ыйтрĕ вăл хĕрсенчен.

— Хваттере куçса кайрĕ, — терĕ пĕри. Анчах ыттисем темшĕн ихĕлтетсе кулчĕç.

Эхтюк ăна-кăна ăша илмерĕ. Хĕр упраҫ тени кукăр патак курсан та каҫса кайсах кулать теҫҫĕ. Тупрĕ вара хăйне кирлĕ хваттере. Телее, алăка Машук хăй уҫрĕ.

— Чунăм, эсĕ-и? Кил чуптăвам, — аллисене сарчĕ Эхтюк.

— Мĕн ятпа? — куҫне чарсах пăрахрĕ Машук.

— Атя пуҫтарăн, киле каятпăр. Мантăн-и эпир ҫара каяс умĕн мĕн калаҫса татăлнине? Туй тумалла.

— Эпĕ туй кĕрлеттернĕ ĕнтĕ.

— Пĕччен кам туй тутăр?

— Мĕншĕн пĕччен? Эпĕ качча кайнă.

Ҫак самантра пӳлĕм алăкĕ уҫăлчĕ те Машук ҫумне пĕр шакла пуҫлă арҫын пырса тăчĕ. Вăл ăна пысăк шаль тутăрпа витрĕ. Вара ыйтрĕ:

— Ку юлташ кама шырать?

— Ҫухатнă телейне, — терĕ Машук. Вара иккĕшĕ те пӳлĕме кĕрсе ҫухалчĕҫ.

Эхтюк хупăннă алăк умĕнче тăрса юлчĕ. Паллă, унăн арăмĕ пулмалли хĕр урăххине качча кайнă. Урама тухрĕ. Ăҫта каймалла? Урасем больница еннелле утрĕҫ. Ăшра тахши Умрая кĕрсе курма хĕтĕртет. Ҫитрĕ. Хапха умĕнче чарăнчĕ. «Кĕрес мар, — терĕ вăл хăйне хăй: — Аманиччен эпĕ ăна арăм тума тилмĕртĕм. Халĕ вăл, уксах-чăлахскер, хăй пырса ларĕ, тĕксен те кăларса яраймăн». Ҫак шухăш ăна тĕллеврен пăрчĕ. «Эй! — терĕ вăл алне сулса, — пĕр кут та пĕр пуҫ теҫҫĕ халăхра, кирек ăҫта кайсан та пĕтместĕп».

Автовокзала ҫитрĕ. Кĕрсе ларчĕ Эхтюк автобуса. Вăл часах тапранчĕ. Ҫук, тăван яла илсе ҫитерекен юппе кĕмерĕ, пачах урăх ҫулпа чупрĕ.

## 12

Тин ҫеҫ хĕвел тухса сарăлчĕ. Ĕҫчен халăх паҫăрах ура ҫинче. Ав ял ҫумне Шупашкар хулинчен тухнă автобус килсе чарăнчĕ. Анса юлакансем тухрĕҫ.

Ҫак йышран пĕр мăшăр ялалла мар, тӳрех ҫăва еннелле утрĕ.

— Телейлĕскерсем, — терĕ пĕри сасăпах вĕсем ҫине куҫ ывăтса. — Иккĕшне те пăхса ытармалла мар. Тупата, пĕри теприншĕн ҫуралса ӳснĕ.

— Кам пирки сăмах ваклан çак эсĕ? — кăсăкланчĕ юнашарти çын.

— Ав ара, — пуçне сĕлтрĕ, — Умрайпа Аксар пирки. Паян вĕсем çырăнаççĕ.

— Чăнах-и? — чăр пăхрĕ йăл-йăл кулкаласа пĕр çамрăк хĕр пĕрчи. — Ман ура тупанĕ мĕн иртенпех кĕçĕтет тетĕп? Ташласса эппин.

Пурте ялалла кĕшĕлтетрĕç. Масар еннелле утакансем мĕнпурĕ те иккĕн çеç.

— Канăçсăр кĕтет пулĕ-ха пире анне, — тет Аксар. — Сана, Умрай, питĕ юрататчĕ вăл.

— Эпĕ ăна туйнă, — тет Умрай.

— Ывăлăм, эсĕ Умрая качча илсен тĕнчере чи телейлисенчен пĕри пулăн. Кăмăлĕ ылтăн унăн тетчĕ ялан.

Масар çине кĕчĕç. Ав вилтăпри, вĕтĕ йывăçсемлĕ карта ăшĕнче. Пĕчĕк хапхи те пур. Уçса кĕчĕç. Килсен-тусан ларма сĕтел те, сак та ăсталанă Аксар.

Сĕтел çине чечек çыххи, апат-çимĕç кăларса хучĕç.

— Анне, эпир килтĕмĕр, — терĕ Аксар. — Сана ырă хыпар пĕлтерме васкатăп. Паян эпĕ авланатăп. Эсĕ юратнă хĕре — Умрая качча илетĕп. Иксĕмĕр те вĕренетпĕр.

— Анне, сана çапла чĕнме ирĕк пар, — терĕ Умрай, — хамăн аннем те, пире ăнăçлă вĕренме, телейлĕ çемье çавăрма пил парăр.

Аксар чăп! чуптуса илчĕ Умрая.

Чи малтанхи хут Аксар чуптуни асне килчĕ те, Умрай çурăмĕ тăрăх шăши йăпăртатса чупса хăпарнăнах туйрĕ.

...Авари хыççăн ăна больницăна илсе кайрĕç. Хуçăлнă шăмăсем пур çав. Асап пуçланнă пирвайхи кунах ун патне больницăна Аксар пырса кĕчĕ. Тутаранах хыттăн чуптурĕ те കаларĕ: «Умрай, эпĕ сана чунтан юрататăп». Кучченеçĕ мĕнле тутлă йышши! Хăмла çырли — тин татнă тейĕн. Холодильникре çапла упранать иккен. Пĕр кун сиктермесĕр çÿрерĕ вăл. Унăн юратăвĕ чуна ăшăтрĕ, вăй пачĕ, савăнăç кÿчĕ. Сухви ун патне пыра-пыра кайни те, ял-йыш кучченеçĕ те сурана хăвăртрах ирттерме хăват пачĕ. Эхтюк пырасса кĕтмен мар, анчах кăлăхах пулчĕ. Карачăм Юманов та пырса курăнмарĕ.

Аксар ăна болницăран тÿрех килне илсе пырасшăнччĕ.

Умрай килӗшмерӗ. «Аларан патака пӑрахмасӑр килӗшместӗп», — терӗ вӑл. Унтан Аксарӑн инкек сиксе тухрӗ: амӑшӗ вилчӗ. Кӗтни нихӑҫан та часах пулмасть ҫав...

Ҫава хапхинчен тухрӗҫ. Яла кӗрсен, урам тӑрӑх утнӑ чух, курах кайрӗ Умрай: пӗр пӳртӗн чӳречисене хӑмапа урлӑ-пирлӗ ҫапнӑ. Чӗри ун яш чиксе илчӗ. Ку Эхтюк пӳрчӗ-иҫ. Хуҫи, эппин, килте ҫук.

Умрай малашне пурӑнас киле мар, Сухви патне кӗрсе юлчӗ. Каярахпа ӑна пулас упӑшки, Аксар ӗнтӗ, килсе илмелле.

Качча каяссин, авланассин хӑйӗн йӑли-йӗрки пур.

Палӑртнӑ вӑхӑтра Аксар тӑрантас кӳлнӗ мӑшӑр лашапа ҫитрӗ. Кайрӗҫ вара ҫырӑнма. Сухвипе ывӑлӗ ҫеҫ мар, кӳршӗри яш-кӗрӗм те пӗрле пычӗ.

Саккунлӑ ӗҫсем кирлӗ ҫӗрте вӗҫленчӗҫ. Ҫуралчӗ ҫӗнӗ ҫемье.

Ҫӗнӗ ҫынна лартнӑ тӑрантаслӑ пар лаша хапха умне ҫитсе чарӑнчӗ. Аксар ҫӗклерӗ те Умрая кавир сарнӑ крыльца картлашкисем тӑрӑх хӑпарчӗ...

Тӳпере уйӑх пӗлӗт татӑкӗсем айӗн йӑр-р шуса тухрӗ. Путех, кӗвентеллӗ пике ҫӗнӗ мӑшӑра телей сунать.

Купӑс пуҫларӗ кӗввине. Кам тӳстӗр тӗк тӑма?! Ян та ян кайрӗ юрӑ таврана:

Тавай, тантӑш, туй тӑвас,
Тавай, тантӑш, туй тӑвас...



## ПЕПКЕ ÇУРАЛСАН...

### 1

Йăмраллă ялăн хыçалти урамĕнче пăхса ытармалла мар ултă кĕтеслĕ çĕнĕ çурт куç хупса иличчен ÿссе ларчĕ. Хуçисем çап-çамрăк çав, вайпитти çынсем. Тĕрĕсех, çемьене йĕркеллĕ пурăнма селĕм пÿрт кирлех. Илтимĕр Карлин çакна вун çиччĕрех ăнланнă. Тытăннă ĕмĕтленме. Унăн шучĕпе, тĕллеве пурнăçлама икĕ япала кирлĕ: укçа тата тирпейлĕ чипер арăм. Иккĕшне те шырамалла, тупсан алăран вĕçертмĕ.

Илтимĕр шухăшне Турă илтнĕ-тĕр, çав пулăшрĕ ахăр. Йĕркеллĕ иртрĕ унăн çар хĕсмечĕ. Срок тухсан киле каймарĕ вăл, çар карапĕ çинчех юлчĕ, укçаллă службăна. Амăшĕ вара ывăлне мар, çыру çеç кĕтсе илчĕ. Ах, тарăхрĕ вăл. Мăкăртатрĕ. Çын килте те питĕ кирлĕччĕ, ара, сахал-и арçын тытса тумалли ĕç. Хирĕлнĕ кăмăлне кÿршĕаршăпа пуплесе пусаркаларĕ вара майĕпен. Каярахпа, кăмăлĕ çаврăнсан, Илтимĕр амăшĕ, Минепи кинемей, ывăлĕ пирки мăнаçланма тытăнчĕ.

Пур ял-йышра лĕкĕрчĕксем. Илтимĕре çĕн ят тупса пачĕç — Мичман. Кам чĕлхинчен вĕçерĕннĕ-тĕр ку? Паллă мар. Путех флотра пулнă морякăн ĕçĕ. Пур вĕсем, темиçе те. Çак таврари сывлăш сиплĕ-тĕр. Ахальтен мар маттур яш-кĕрĕм çитĕнет. Ун йышшисем, паллах, флота юрăхлă. Унтан таврăнсан çÿреççĕ вара çиçтерсе морякăн илĕртÿллĕ тумĕпе пикесен чунĕсене хускатса. Вĕçкĕнленеĕçин. Вĕсем тивĕçлĕ. Тиркеме никам та хăяймĕ.

Илтимĕр, паллах, Мичман мар-ха. Çак чина çĕнсе илме

çар карапĕ çинчен улт-çич çул тухаймăн. Амăшĕ ăçтан пĕлтĕр çар пурнăçне.

Уйăхсен хăйсен виçи. Вĕсен — умрине хăваласа вăтăр-вăтăр пĕр кун тытăнса тăрасси. Çулталăк тулсан çĕнĕрен черет çитет. Çĕр çинчи этеме те парăнтарнă вĕсем хăйсен виçипе пурăнма. Çулталăкра вун икĕ уйăх. Кашни çын ĕмĕрĕ тахăш çулта, тахăш уйăхра, тахăш кун пуçланать, çав йĕркепех вĕçленет. Пурăнса иртни асра упранать.

Чакар-ха каялла. Ун чухне Илтимĕр флотраччĕ-ха. Ял çынни манман ăна. Хăш-пĕри унăн амăшне тĕл пулсан калаçнă май ывăлĕ пирки кăсăкланмасăр иртмен.

— Минепи Ивановна, Мичман мĕнле сывлать унта?

— Ишет çаплах, — мăнаçлăн хуравлатчĕ вăл. — Тăван çĕршыва тимлĕн сыхлать.

— Минепи инке, Мичман хăçан киле таврăнать? — вăлтатчĕ пĕр-пĕр чиперкке вăтаннипе куçне айккинелле тартса.

— Часах. Палăртнă кун çывхарать, — тетчĕ амăшĕ йăл-йăл кулкаласа. — Ăна таврăннă-таврăнман авлантаратăп.

Акă Илтимĕр флотран киле тĕрĕс-тĕкел таврăнчĕ. Тӳрех калас — укçаллă. Хăйĕн тăван ялĕнчех ĕмĕтри хĕр тупăнчĕ. Вăл Тиляр ятлă. Чăнахах та ăслă, ĕçчен, чипер. Качча илчĕ ăна. Иккĕн тан туртма тытăннă пурнăç урапи кирлĕ пек йĕрпе малалла кăлтăртатрĕ. Тараватлă амăшĕ патĕнче пурăнаççĕ.

Тĕллеври иккĕмĕш пысăк ĕç вăл — çурт лартасси. Укçа пур. Илтимĕр завода кайса кирпĕч туянчĕ.

Çуркунне, çĕр типсен, пĕр хĕвеллĕ кун ял-йыша нимене чĕнчĕ Илтимĕр. Пĕр вăйпитти арçын пымасăр юлмарĕ-тĕр. Хĕрарăмсем те хутшăнчĕç çак йышлă ĕçе. Çурчĕ те хăпарчĕ самантрах. Ахаль каламан ваттисем: халăх сурать — кӳлĕ пулать.

Çурт ăш-чиккине мая килтересси кăшт вăраха тăсăлчĕ. Тӳлевлĕ ăстаçсем те самай вăй хучĕç. Ĕçĕ ытларах Илтимĕре лекрĕ. Апла пулсан та ывăннине туйсах каймарĕ. Арăмĕ Тиляр çунатлантарса тăчĕ мар-и хăйĕн ырă кăмăлĕпе, юратăвĕпе. Хăй те ниме уямасăр (йывăр çынçке-ха) ĕçлет — стенасене штукатуркăлать. Тăхтав вăхăтĕнче вăл упăшки çумне пырать, ачашланать.

— Тиляр, мĕнле пирĕшти çаватса килнĕ-ке сана ман пата? — ăшă сăмахсем тăкать вара Илтимĕр. Ванса каяс черккене сыхланса тыткаланăн арăмне çепĕççĕн хăй арки çине лартать. — Телейлĕ эпĕ санпа. Юрататăп. Ĕмĕрте те ан çухал эсĕ ман çумăмран.

— Эпĕ сан ятна çуралнă, — тет Тиляр, — ман куçăмсем санран хӳхĕм каччă курман. Эсĕ манăн ăмăрт кайăкăм.

— Савăнтаран эсĕ мана, — тав тăвать Илтимĕр арăмне. — Эсĕ, Тиляр, çав тери хитре. Эсĕ — мăкăнь чечекĕ. Кăшт шикленетĕп те, ара, чипере пурте хапсăнаççĕ. Ют çын куçĕ — хурчăка-çăхан.

— Йăнăшан, Илтимĕр, — йăл-йăл кулкалать Тиляр. — Пирĕн хушша никам та пуçне пырса чикеймест. Пирĕн юрату вĕри, ютта кĕллентерет.

— Санпа килĕшетĕп, юратăвăм. Пире айванланма юрамасть. — Илтимĕр пуçне арăмĕн хырăмĕ çумне тытать. Шӳтлĕн ыйтам пек тăвать: — Тук-тук! Кам пурăнать-ке кунта?

Тиляр илтнĕ, упăшка тени ывăл кĕтет. Çавăнпа та хырăмри ача явапланăн çинçе сасăпа каларĕ:

— Йĕкĕт! Паттăр йĕкĕт эпĕ!

Иккĕш те ахăлтатрĕç вара пĕр кана. Упăшкин куçĕсем шывланчĕç.

— Илтимĕр, вăл шăп та шай — эсĕ. Сан пекех çĕмĕрт куçлă. Çӳçĕ те санăнни пекех йĕпхĕн хура та шыв хумĕ евĕр — кăтра. Сан пекех çирĕп пӳ-силлĕ — кĕрнеклĕ ӳсĕ.

— Спаççипă, чунăм, юратăвăм, — Илтимĕр каллех пуçне арăмĕн хырăмĕ çумне тытать. — Тапăлтатать. Илтрĕм: «... атте, сана шутсăр юрататăп. Хатĕрле хăвăртрах мечĕк, футболла вылятпăр!» — тет. Ах, шăпăрлан. Çурал кăна, санăн пурте пур. Çăмăл машина та кĕтет.

Мăшăрсем ĕçе тытăнчĕç каллех. Васкаççĕ мар-и. Вĕсем пепкене çĕнĕ çуртра йышăнасшăн. Анчах та ĕçĕн вĕçĕ пăхса курăнмасть. Куç хăрать те, алă тăвать теççĕ те-ха. Кунсем иртнĕ май штукатурка типрĕ, ăнăçлах шпалер çыпăçтарчĕç. Сĕтел-пукан вырнаçтарсан хăтлăх кĕчĕ те пӳрт ăш-чиккине. Чӳрече карри тăвасси хĕрарăм ĕçĕ. Шăп чĕнтĕр карнă чух пилĕк касса кайрĕ Тилярăн.

Иккĕшĕ те хăраса ӳкрĕç. Ним тума пĕлмеççĕ. Илтимĕр тапăртатса тăрать. Вĕçĕмсĕр: «Пĕтрĕмĕр!» — тет.

— Хăвăртрах больницăна илсе кай, — хушать мăшăрне Тиляр. — Машина кирлĕ.

Аранах тăна кĕчĕ Илтимĕр. Вăл урама чупса тухрĕ, кӳршĕ ачине Мĕтри шăллĕ патне чуптарчĕ.

— Сарайĕнче ларакан çăмăл машина кунта хăваласа килтĕр вăл. Кала: васкатăр!

Каллех пӳрте вĕçтерсе кĕчĕ Илтимĕр.

— Питĕ ыратать-и-ке? — кăсăкланать вăл.

— Вилетĕп пулĕ. Сывă пул! Тимĕр! — хутран-ситрен Тиляр упăшкине çапла Тимĕр тесе чĕнет.

— Апла ан шухăшла. Тӳс. Кашни ача çуратакан вилсен тĕнче пĕтет, — лăплантарма тăрăшать Илтимĕр арăмне.

Ыратни пурăнас шанчăка чакарать.

Ыратни ырă ĕмĕтсене сирет.

Ыратни вилĕм çывхарнине аса илтерсе тăрать.

Ыратни хăратать хаклă çынсенчен уйрăласран.

Ыратнă чух вăхăт иртмест, ĕмĕр тăсăлнăн туйăнать. Апла пулин те кирек-мĕнĕн те вĕçĕ пур.

Машина килчĕ.

Тепĕр темиçе сехетрен тĕнчене килчĕ Тиляр ĕмĕтленни, упăшки хăраххи — арçын ача.

Илтимĕр ывăл кĕтнĕ. Унăн кăмăлĕ тулчĕ.

Ачана памалли ят шыраса путрĕ шухăша. Йăхри пурăнса иртнĕ асаттесемпе кукаçисене аса илчĕ. Тупăнчĕ килĕштерни. Авалхи чăваш ячĕ — Энтюк — Андрей.

Тиляр больницăра пĕрремĕш хутра выртать. Вăл пеп-кине кантăк витĕр темиçе хут та кăтартрĕ упăшкине. Ача ытла та пĕчĕккĕ, ашшĕне курасшăн куçне пачах уçмасть. Юрĕ-çке ĕнтĕ, килте паллашĕç.

Шутлă кун часах иртет. Илтимĕр арăмĕпе ывăлне киле илсе таврăнчĕ. Хĕвел пайăркипе çуталнă пӳртре чăпăл турĕç ачана лĕп шыв янă таканара.

— Чунăм, ун çӳçĕ манăнни пек мĕншĕн кăтра мар-ке? — тет Илтимĕр ачана шурă кипке çине вырттарнă май.

— Ан кулян. Ачан çуралнă çӳçĕ тăкăнать, — пуплет арăмĕ. — Арçын ачасем ытларах амăшне туртаççĕ. Мана пăхнă-тĕр.

Килĕшет Илтимĕр. Тепринче хĕр пĕрчи çуралĕ, вăл ашшĕ пек кăтра çӳçлĕ пулĕ. Ку пикесене уйрăмах кирлĕ. Нумайăшĕ кăтра çӳçе илем шутне кĕртеççĕ.

Кил хуҫи хӗрарӑмӗ майӗпен сывалса ҫитрӗ. Халӗ ӗнтӗ ачана ят хумалла, ҫӗнӗ пӳрт ӗҫки ирттермелле. Ниме халӑхне тав тӑвасси аякка кайрӗ, кӗтсе ывӑнчӗҫ-тӗр.

Асӑннӑ кун ҫитрӗ. Ырӑ кӳршӗсем пычӗҫ пулӑшма. Вӗсем апат-ҫимӗҫлӗ, сӑра-эрехлӗ сӗтелсем лартрӗҫ картиш варрине, ҫумӗсенче — вӑрӑм тенкелсем. Кӗтнӗ хӑнасем чӗннӗ вӑхӑта пуҫтарӑнчӗҫ. Пуҫланчӗ вара аслӑ ӗҫкӗ. Пӗтӗм ял пухӑнчӗ пулас. Юрӑ, ташӑ, купӑс сасси ял тӑрӑх ян! кайрӗ. Ҫапла вӑл, икӗ савӑнӑҫ пӗрлешсен шеп те пулать уяв.

Ҫамрӑк ҫемьен пурнӑҫӗ пыл та ҫу. Телей тулса тӑкӑнать.

Ай турах! Чим, мӗн пулчӗ? Кам куҫ ӳкерчӗ, кам вӑрларӗ вӗри юратупа телее? Хурах! Хуса ҫитӗр ӑна! Каялла тавӑрасчӗ-ҫке. Пур-ши унашкал вӑй? Ӳксе ваннӑ чашӑк пуҫтарӑнса хӑй сӑнне тавӑраймасть ҫав.

* * *

Эсрел кӗрсе ӑша пушар чӗртсе хӑварнӑ кун, хӗвел йӑлйӑл кулса пӗтӗм тӗнчене шерпет пӗрӗхсе тӑнӑ. Пурте хаваслӑх ытамӗнче.

Тиляр ачипе ирпе ирех хӑнана кайрӗ. Аппӑшӗ вӗсене чунтан савӑнса кӗтсе илчӗ. Сайпа тултарнӑ сӗтел кун каҫа та пушанмарӗ. Аппӑшӗ пӗлет, йӑмӑкӗ ача шутӗнчен тухман, вӑл пыл ҫисе тӑранаймасть.

— Ҫи-ҫи, пыл эрӗм тути калама пуҫличчен, — тет аппӑшӗ Элевер. — Киле парса яма пӗр чӗрес тултарса лартрӑм. Ма шеллес, пасарта сутӑн туянмастпӑр-иҫ.

Тӗрӗснех калать аппӑшӗ. Вӗсем темиҫе ҫын эртелленсе вӑрманта темиҫе ҫул хушши ӗнтӗ нумай вӗлleллӗ утар тытаҫҫӗ. Пылне сутма хулара ятарласа ларек уҫнӑ. Тупӑшӗ пысӑк.

Энтюк ҫаплах тутлӑ ыйхӑра. Унӑн нимле хуйхӑ-суйхӑ та ҫук.

— Ытла кунӗ ача ку сан, Тиляр, — мухтать пепкене йыснӑшӗ те.

— Айӗ типӗ ахӑр, — аллине кипке ӑшне чикрӗ амӑшӗ. — И-и, лӳшкентернӗ. Кӗтсех тӑр, халех вӑранать.

— Шыв ӑшӑтма лартатӑп, чӑпӑл тӑватпӑр, — кухньӑна кӗрсе кайрӗ Элевер.

Илтимӗр киле пӗччен юлнӑ. Куншӑн вӑл хавас та.

Туса пĕтермен ĕç пур, алли кĕçĕтетчĕ-ха. Кухньăри чӳрече хашаккисене сăрламалла. Пĕчĕк çынна çамрăк амăшĕ юри килтен илсе кайрĕ, атту сăрă шăрши пуçне ыраттарĕ.

Шăхăра-шăхăра юрланă май Илтимĕр çĕкленӳллĕ кăмăлпа ĕçлет. Уншăн сăрă шăрши чăрмав мар, ăна шурă хашакаллă чӳрече илемленни хĕпĕртеттерет. Иккĕмĕш чӳречин аялти куçĕсен хашаккисене юлашки хут кистьпе белилăна пуçса каллĕ-маллĕ сăтăркаланă самантра алăк уçăлса хупăнни илтĕнчĕ.

— Кам-ке унта? — кăшкăрчĕ те Илтимĕр кистьпе сăрă банкине чиксе кухньăран тухрĕ. Курчĕ вара: алăк патĕнче ял хĕрĕ Ульти тăра парать.

— И-и-и, урпа хылчăкĕ, эсĕ килтех-çке, чутах каялла тухса каяттăм.

— Мĕн тесшĕнччĕ-ке?

— Тиляр килте-и?

— Эпĕ пĕчченех-ха.

— Илтимĕр, — ун-кун чеен пăхкаласа илнĕ май Ульти сумкинчен çыру кăларчĕ те ăна сулкаласа каларĕ:

— Ку Тиляр ячĕпе килнĕ. Хăй çук терĕн. Почтальон мана çула май кĕртсе пама ыйтрĕ те. Мĕн тăвас?

— Хăвар. Çухатмастăп ĕнтĕ, — Илтимĕр çывхарчĕ Ульти умне.

— Шанатăп. Арăмна аллинченех тыттар вара. Çухатсан мана ят лекĕ.

— Ан пăшăрхан, Ульти. Пĕлен ĕнтĕ эпĕ шанчăклине.

— Эсĕ шанчăклă-и? Кун пирки урамри йытта тухса ĕнентер. Нумай юхтартăн куççулĕме, кӳл пулчĕ, — терĕ те тухса кайрĕ Ульти. Хăй хыçĕнчен алăка шарт! хупса хăварчĕ.

— Ульти, каланă-çке сана: эсĕ ăнланман мана! — кăшкăрса юлчĕ Илтимĕр. — Çӳреççĕ аташса. Ăçтан сана Тилярпа танлаштаратăп-ке. Эпĕ ăна çеç юрататăп. Унсăрăн пĕр кун пурăнасси пулаймĕ.

Чим-ха, кам çырать вара унăн арăмĕ патне? Конвертне Илтимĕр тирпейлĕ уçрĕ. Хут листине туртса кăларчĕ те чĕрсе пăрахасран шикленсе ерипен сарчĕ. Темшĕн тӳрех вĕçне пăхрĕ. Курчĕ: «Праски Çеменĕ». Тĕлĕннипе чĕри самантлăха тапма чарăнчĕ пулас.

— Мĕн кирлĕ-ке ку ял купăсне? Мĕнле хăять? — усал сăмахсем пере-пере ячĕ те куçĕ çыру пуçламăшне куçрĕ,

вара йёркесем тӑрӑх шурӗ. Вуласа пӗлни Илтимӗре уртарса ячӗ. Мӗнпур сассипе ӳхӗрсе ячӗ: — Хурах! Ултав! Ултав! Вӑрларӗҫ пурне те! — Ӑшӗнче тӑвӑл ҫӗкленнипе урама чупса тухма пикенчӗ. Вӑл Ҫемене тупса пӑвса пӑрахасшӑн. Алкум картлашки тӑрӑх аннӑ чух ури чӑлханнипе чутах тӑрӑнса ӳкмерӗ. Ҫак самантра ҫилли чакрӗ. Пуҫне урӑхла шухӑшсем пырса кӗчӗҫ: — Тен, Ҫемен тӗрӗсне ҫырнӑ? Ытахальтен йышӑнма ҫав териех айван мар-ха вӑл. Эх, Тиляр, Тиляр... Пӗтертӗн эсӗ мана. Ахаль каламаҫҫӗ иккен: хитре арӑм пасар тӑрӑх курнӑҫланса ҫӳреме ҫеҫ лайӑх. Ку намӑса тӳсейместӗп, тухса таратӑп килтен.

Илтимӗр лӳчӗркесе ывӑтнӑ Ҫемен ҫырӑвне пукан айӗнчен тупрӗ. Сӗтел ҫине хурса якатрӗ. Ун ҫине хӑй ҫырнӑ хут таткине хучӗ. Вара тухса вӑркӑнчӗ хӗрлӗ тутӑр курнӑ вӑкӑр пек.

Пушанса юлчӗ пӗр-пӗрне ҫав тери юратнӑ мӑшӑрӑн хӑтлӑ пӳрчӗ. Кӗтрӗ, кӗтрӗ вӑл хуҫисене. Икӗ ҫын хушшинчи пӗтӗм лайӑххи, ырри пӗтрех-ши-мӗн вара ывӑҫран хӑйӑр юхса тухнӑнах?

Вӑхӑт ҫитет. Хӗвел анма васкамасть. Вӑл путех ҫӗр чӑмӑрне хуллентерех ҫаврӑнма тилмӗрет пулас, ҫаплах йӑмра тураттисем хушшинчен Илтимӗр ҫурчӗ ҫине пӑхать. Шеллет мар-и. Пурте ун умӗнче пулса иртрӗ-ҫкеха. Вӑл курчӗ Ульти ҫыру кӗртсе панине, курчӗ пӳрт хуҫи Илтимӗр тухса кайнине. Хӑҫан таврӑнать вара Тиляр хӑйӗн пепкине йӑтса?

Анать хӗвел, парашют кантрисем карӑннӑ. Аранах курчӗ. Ав вӑл — Тиляр. Пӗр аллинче кипкепе чӗркенӗ пепке, тепӗр аллипе пыл тултарнӑ чӗрес йӑтнӑ.

Пӳрт алӑкӗ яриех уҫӑ.

— Атте, юратнӑ атте, — тет Тиляр ачи калаҫнӑ пек. — Эпир ҫитрӗмӗр. Сасӑ памастӑн-и? Эппин, эсӗ пытаннӑ. Халех тупатпӑр сана.

Тӗпелелле иртнӗ чух асӑрхарӗ: сӗтел ҫинче хут листи выртать. Унӑн ятне «Тиляр!» тесе пысӑк сас паллисемпе ҫырнӑ. Ырӑ мара сиссе чӗри тӑлт-тӑлт тӑпӑлтатрӗ. Аллине илчӗ хайхискере. Курчӗ:

«Тиляр!

?????

Илтимӗр».

Çырура мĕнпурĕ те пилĕк ыйту палли. Пилĕк хура юпа! Ултав! Айăплани! Чĕрене шĕвĕр йĕп пек пырса тăрăнчĕç. Ыраттарчĕç шутсăрах. Пăчăр-пăчăр юн тумлать. Кăкăрта тăвăр. Сывлăш çитмест. Кĕпе çухине уçса ярасчĕ, анчах чăрмав — алăра ача.

— Тен, эпĕ тĕлĕк куратăп? Тен, чирлерĕм? — упăшкине чĕнчĕ вăл: — Илтимĕр! Ăçта эсĕ? Капла ан шўтле-ха. Тытсам пепкене! Вăл ав йĕрмĕшет.

Сас паракан пулмарĕ.

Тиляр упăшкин ыйту паллисемлĕ çеç çырăвне уямасăртумасăр пиншак кĕсйине тĕркелесе чикрĕ. Хут листи айĕнче ун ячĕпе килнĕ çыру выртать-мĕн.

Пĕчĕк ача часах алăра ывăнать, ăна сăпкана вырттармалла. Чăлана кĕчĕ Тиляр. Кунта ачин вырăнĕ, сĕтел-пуканĕ. Çи виттисем чăлт шурă. Кантăкĕ те чечеклĕ чĕнтĕрпе карăннă. Тупата, пукане пўрчĕ тейĕн. Энтюк самант тупрĕ канлĕх, ыйха путрĕ те пĕчĕк чăваш.

— Тĕлĕкре мана, аннўне, аçуна кур, юратнă пепкем. Тутлă ыйхă сунатăп, — Тиляр чăп-чăп чуптурĕ те ачи пўлĕмĕнчен тухрĕ.

Сĕтел çинче выртать ылханлă çыру, Тиляр ячĕпе килнĕскер, Илтимĕре хăй килĕнчен хăваласа кăларнăскер. Çыру çыраканĕ ял каччи — Праски Çеменĕ.

Тиляр, нихăçанхи пек мар, куçне чарчĕ, вара мĕн çырнине пĕр харăс курчĕ:

«Тиляр! Юратнă савниçĕм, ырă хыпар мана питĕ хĕпĕртеттерчĕ. Эсĕ ача çуратнă — ывăл. Вăл манăн ача! Унăн ашшĕ — эпĕ. Урра! Савăнатăп! Часах пепкемпе паллашăпăр. Çав кун çывăхрах. Ыталаса чуптăватăп.

Санăн ачу ашшĕ — Праски Çеменĕ».

— Ых-х, йĕксĕк! Хăйне килĕштерменшĕн мĕнле майпа тавăрма шутланă. Сана, Праски Çеменĕ, хыр çулçи тăкăнсан качча тухăп! — ятлаçать Тиляр. — Ăçта-ши эсĕ? Сана таракана таптанă пек ура айне хурса имĕрĕттĕм.

Ула шухăшсем пăтранаççĕ хĕрарăм пуçĕнче. Сĕтел çинче хăрушла çыру выртать. Чăн-чăн вулкан вăл. Унран йĕри-тавра хĕлхем пĕрхĕнет. Кĕлпе хутăш кăварлăскер. Васкасах шыв сапса сўнтермелле ăна, унсăрăн таса чунлă çынсене майран пăвать, элекпе хупласа куç уçми тăвать. Упăшка пайтасăрскер иккен. Вăл усал çын

çăварĕнчен палкаса тухакан пакăç шăрша сирмен, ăна пыл тесе йышăннă. Арăмĕпе ачине ывăтса хăварнă каткă йăви çине.

Тулашать çамрăк арăм. Пуçа пин тĕрлĕ шухăш кĕрсе çаврать. Пурăнмалли чăн-чăн мăшăрах-ши Илтимĕр? Кирлĕ мар иккен ăна ни арăм, ни ача.

— Сăлтав тупрăн, пăрахса кайрăн. Юратман пулĕ эсĕ арăмна. Кайрăн пулсан кай. Хыçран чупмасть çемйӳ. Ан та кĕт. Каялла килес тесен сан валли алăк паян çеç уçă. Ыталаса, чуптуса йышăнĕç. Мана кӳренме çылăх. Эпĕ Турă амăшĕ пек таса. Айван этем айĕнче пулман. Хаймана хăв сĕрсе пуçтартăн. Çакна хаклама та пĕлместĕн-и? Эппин, эсĕ айван-тăр. Тен, хăçан та пулин ăнланăн, каçару ыйтăн каялла çемьене таврăнма, анчах алă çупса, овации туса кĕтсе илмĕп. Çакна асту. Пĕр паян çеç пирĕн пата çитме çул такăр. Кая юлсан каю шăтать теççĕ. Ман сăмах çирĕп. Килсем халех...

— Кам вăл овацине тивĕççĕр çын?

Тиляр ялт! пăхса илчĕ хыçалалла.

Ульти иккен. Халĕ вăл чăнахах та тăвата куçлă пек туйăнчĕ. Тăваттăшĕ те шăтарасла пăхаççĕ. Ыттисем курманнине витĕр кураççĕ, çын вăрттăнлăхне пĕлеççĕ. Ку хĕр упраçăн икĕ куçĕ айĕнче те вир пĕрчи пысăкăш хура пăнчă пур. Усал чĕлхеллĕ çынсем, уйрăмах ятланă чух, ăна «тăватă куç» тесе хăртаççĕ.

— Мĕн кирлĕ сана? — çиллессĕн ыйтрĕ Тиляр.

— Алăкăр яриех уçă та хăвăрăн, — текелерĕ Ульти. Такама, теме шыранăн куçне йăл-ял вылятса илчĕ. — Хуçи килте çук тем?

— Кам вăл саншăн хуçи?

— Мĕнле кам? Илтимĕр ĕнтĕ.

— Сăлтавне кала, ма кирлĕ вăл сана?

Ульти явап памарĕ. Сĕтел çинче çыру выртнине асăрхарĕ те ярса илчĕ.

— Кам çырнă сан пата? Вулам-и?

— Ан хăйнă пул! — Ульти аллинчи çырăва кап! тытса илчĕ Тиляр. Вара сĕтел сунтăхне уçрĕ те çырăва унта хучĕ, самант питĕрчĕ, уççине çири пиншак кĕсйине чикрĕ.

— Санăн кăмăлу пăсăк, эсĕ манпа хуруласасшăн-няк, урпа хылчăкĕ, — вăрт-варт çаврăнчĕ Ульти каялла. Хăй

çаплах мăкăртатма чарăнмарĕ. — Ĕлĕкхи тус тантăшна шанманни, манни ырă мар.

Тиляр ним те чĕнмерĕ. Ульти урама тухнине кантăкран пăхса тăчĕ. Тĕлĕнтермĕш, вăл ахăлтатса кулнине илтрĕ. Мĕне пĕлтерет ку?

## 2

«Ĕлĕкхи тус тантăш» терĕ Ульти Тиляра. Вăл тĕрĕссине каларĕ темелле. Анчах пĕчĕк чухне вĕсем пĕр-пĕрне илтмен-курман, палламан. Ара, Тиляр пачах урăх ялта ӳснĕ. Унăн аппăшĕ Элевер çак ялăн йĕкĕтне качча килнĕ. Амăшĕ вилсен ăна аппăшĕ (пĕртен-пĕр йăмăкне ĕнтĕ) хăй патне пурăнма куçарса килнĕ. Тиляр ют ялта хăйне телейсĕр туйнă. Ăнланмалла ĕнтĕ: пĕтĕм тус тантăш тăван ялта. Кичемлĕх нумая тăсăлмарĕ, часах тупăнчĕ вăхăта ирттермелли ĕç.

«Сурат» колхоз бухгалтер тупайманнипе хăшкăлнă. Шута тытăнса пăхнисем нихăшĕ те йĕркеллĕ чухлаймарĕ. Çавăнпа та колхоз хăй шучĕпе пĕр çынна ятарласа вĕренме ярасшăн.

— Ман лайăх çын пур, — терĕ Элевер упăшки колхоз председательне.

— Кам пирки пуплен? — тытăнчĕ хайхискер тĕпчеме.

— Ман арăмăн йăмăкĕ — Тиляр. Ялтан кăларса ярас марччĕ ăна. Çамрăксем ял хуçалăхра та питĕ кирлĕ.

Хĕр пĕрчине правление чĕнтерчĕç. Пуплесен-пуплесен ĕненчĕç хĕр упраç шанчăклине.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, район центрĕнче бухгалтерсем хатĕрлекен курс уçăлчĕ. Парта хушшине ларчĕ вара Тиляр пачах палламан çынсемпе. Кашни кун киле çӳрет, хваттере вырнаçни — пăлахая пени тесе шутлать. Чăнах та ĕнтĕ, çул ытлашши вăрăм мар — вунă çухрăма яхăн. Ку çамрăк çынна пĕрре сывласа илмелĕх кăна. Ир кӳлĕм вăрман кати çумĕпе утасси хăй мĕне тăрать! Тăнлан кайăксен ирхи концертне. Ытла илемлĕ юрлаççĕ. Путех, вĕсем кун пуçласа тӳпенелле хăпаракан çутă хĕвеле, тутлă шăршă саракан тĕрлĕ чечексене, ешĕл çулçăллă чечен йывăççене тав туса мухтаççĕ. Çамрăк хĕр çут çанталăкăн пыллă шерпетне кашни ир тутанать. Çавăнпах-тăр ырă кăмăл, вăй-хал çителĕклĕ кун каçа.

Пĕррехинче, Тиляр киле утнă чух, ăна Ульти хуса çитрĕ.

Вĕсем пĕр-пĕринпе иртнĕ эрнере паллашнă. Пĕр урамрах пурăнаççĕ-мĕн. Чи малтан урамри колонкăна шыв ăсма пырсан сăмах хушрĕç. Витрене шарлаттарса юхать шыв, пикесен — хĕр юмахĕ. Пĕр-пĕрин ячĕсене те ыйтса пĕлчĕç.

— Эпĕ санăн тус юлташу пулма хирĕç мар.

— Юрĕ, — килĕшрĕ Тиляр. — Эпĕ никама та палламастăп.

— Пирĕн, çамрăксен, кашни вырсарнинче ял виркесĕнче аслă вăйă пулать. Унта пĕрле çӳрĕпĕр. Ахаль кунсенче ав сирĕн пахча карти çумĕнче выртакан пĕренесем çине тухса ларăпăр. Каччăсем вăштах шыраса тупаççĕ, — ăнлантарчĕ Ульти...

— Ух-х! Утатăн та вара эсĕ! Хуса çитрĕм аран-аран.

— Эпĕ — Улăп. Пĕрре ярса пусатăп, çичĕ çухрăм малалла, — йăл-йăл кулкалать Тиляр.

— Шел. Сирĕн бухгалтерсен курсĕ тин пуçланчĕ, пирĕн — вĕçленчĕ.

— Эсĕ мĕнле курса çӳренĕ?

— Газовщиксем хатĕрлекен çĕре. Çĕнĕ специальность. Халиччен чăвашра çакнашкал специалистсем пулман, — мăнаçланать Ульти. — Газ кашни яла тенĕ пек çитрĕ.

— Савăнмалла. Газ халăх пурнăçне çăмăллатать ĕнтĕ. Вут-шанкă тупма çулран-çул йывăрланса пырать.

— Газ вăл хăрушла япала, — тет Ульти. — Унпа тĕрĕс усă курма пĕлмелле. Эпир, газовиксем, çынсене вĕрентетпĕр. Тата газ приборĕсене те пăхса-юсаса тăратпăр. Ĕç укçи мана аванах параççĕ. Пурăнма пĕлекенсем халĕ çĕрме пуян. Урпа хылчăкĕ.

Ульти хăюллă хĕр упраç. Нумай калаçать. Чеелĕхĕ те пур. Вăтанас йăла çителĕксĕртерех. Усаллăхĕ те малта. Ахальтен мар ĕнтĕ халăх хушшинче сăмах-юмах пурăнать ун çинчен: «тăват куç». «Тăват куçлă йытă питĕ усал». Пăхма вăл ытла хытанка. Кăкăрĕ палăрмасть те. Ялан шăлавар джинс тăхăнать. Кофта вырăнне — шурă майка. Халĕ те çак тум унăн çийĕнче. Çӳçне ӳстермест вăл, кĕске кастарать. Тепĕр чух палламаннисем ăна: «Эй, арçын ача!..» — тесе чĕнеççĕ. Чăн-чăн куçĕ симĕссĕн-

саррăн курăнать, таçта сăрт айне вырнаçнă пек туйăнать. Çавăншăнах хĕсĕк куç теççĕ.

— Тиляр, санăн савни пур-и? — ним кĕтмен çĕртен ыйтрĕ Ульти.

Юнашар утаканни вăтанчĕ ку хĕрĕн именӳсĕрлĕхĕнчен. Çакна та сисрĕ: хăй пĕр-пĕр йĕкĕтпе юрату кăлтăрмачне кустарать. Пытарса усракан вăрттăнлăха кама та пулин, шанчăклăрах çынна ĕнтĕ, уçса парасшăн. Алкум вĕçне туй килсен хыпалантарать.

Ытахальтен çеç сăмах вĕçертрĕ вара Тиляр:

— Йĕкĕт пăхмалăх çитĕнеймен-ха эпĕ.

— Ан тыттар. Сан пек чипер хĕрĕн савни çуккине кам ĕненет. Урпа хылчăкĕ.

Тиляр чăнах та хăйне май чипер хĕр ача. Тумланма ăста. Вăл хăйне мĕн килĕшнине пĕлет. Çыннăн ку — ырă енĕ. Костюм темиçе те: шурри, хури, кăвакки, чăпарри. Вĕсем хальхи модăпа татуллă — кĕске. Чĕркуççине витмеççĕ. Халĕ те-ха ун çийĕнче шупка кĕрен çитсăран çĕленĕ юбкăпа кофта. Урисем — черкке. Туфлийĕ çӳллĕ кĕлеллĕ. Тĕсĕ — сарă. Çӳçĕ вăрăм. Вăл тĕсĕпе пыл карасне аса илтерет. Вĕреннĕ хушăра çӳçĕ çивĕтре, ахаль чух — ирĕкре: çурăм тăрăх янă та тутăр çӳçи тейĕн. Пысăк куçлă тееймĕн Тиляра. Хăрпăкĕсене тушьпа хуратать те хăйне май илĕртӳллĕ куç, кăнтăр енче пурăнакансем унашкал куçа миндаль мăйăрĕпе танлаштараççĕ.

— Эсĕ, Ульти, ман савни çуккине ĕненместĕн-и? — йăлйăл кулкаларĕ Тиляр. — Ахалех. Ман кăмăла килĕшекен каччă çуралман. Унсăрăн ку таранччен пĕр хут та пулин тĕл пулаттăмăрах. Питĕ шел. Санăн савни пур. Тĕрĕс-и?

— Ăçтан пĕлен? — ихĕлтетсе илчĕ Ульти. — Эсĕ асамçă пулĕ, хальхилле каласан — экстрасенс.

— Чухлатăп ăна-кăна. Пуçла! Хаваспах итлетĕп.

— Пур ман савни. Пур. Анчах вăл паян ман çумра мар. Çарта вăл. Тинĕсре ишет.

— Эппин, сан вăл моряк!

— Моряк, — ассăн сывласа илчĕ Ульти. — Мичман.

— Мĕн ятлă-ха?

— Илтимĕр.

— Çыру çӳрететĕр пулĕ? Хăçан таврăнать?

— Çаплах çыратчĕ-ха. Часах хăй персе çитет.

Ульти суйрĕ. Морякран вăл пĕр çыру та илсе курман. Анчах каччă ăна юратнине чунтан ĕненсе пурăнать. Мĕншĕн-и? Ĕç-пуç акă мĕнле пулса иртнĕ.

* * *

...Кĕркуннеччĕ ун чух. Çара илсен Илтимĕр ытти салтака каякан çамрăксемпе пĕрле тутăр сулласа ял тăрăх юрласа çӳрерĕ. Клуб умĕнче чарăнчĕç. Кино курма кĕресшĕн тăракан хĕрсен пулкки илĕртрĕ имĕш вĕсене.

— Шел, — терĕ Илтимĕр сасăпах юлташне каланăн: — Чипер хĕрсем юлаççĕ. Эпир каялла таврăнсан пĕрне те тупаймăпăр. Вĕсем пурте упăшкисен хӳтлĕхĕнче пулĕç.

— Эсир пурте качча кайса пĕтсен эпир кăмăлсăра юлатпăр.

— Хĕрсем, хĕрхенĕр пире! — пĕри те тепри сăмах хушаççĕ пулас салтаксем.

— Илтимĕр! Эпĕ сана кĕтетĕп! — яш тухса тăчĕ Ульти çара каякан йĕкĕтсем умне. Ун чухне вăл тăххăрмĕш класра вĕреннĕ.

Илтимĕре пурте саламларĕç. Хăй вара хĕр пĕрчине тав тумарĕ темшĕн. Унăн сасси, путех, ытти чиперккесен сасси айне пулчĕ, ара, сасартăках пурте хăюланчĕç, тытăнчĕç хăйсен шухăшне пĕлтерме:

— Çара ырă-сывă кайса килмелле пултăр!

— Ан кулянăр! Эсир киле таврăннă çĕре ешĕллисем ӳсĕç.

— Пире тиркĕр, кĕрченĕскерсене.

Пурте ахăлтатрĕç. Ара, ку сăмахсенче чăнни пур-çке-ха...

Ульти çак темиçе çул каялла пулса иртнине ĕненсе те шанса кун кунлать. Ах çав çулсем, тупата, ытла шелсĕр, чăкраш, ниме те уямаççĕ. Мĕн-ма чăрмаласа хăварас чипер çамкана? Хĕр упраçăн ялан вун çиччĕре çеç тытăнса тăмалла. Сăн-пичĕ яп-яка, мăнкун çăмарти пек пултăр хĕп-хĕрлĕ. Шел, çут çанталăка ӳпкелешсе çĕнтереймĕн.

Пурпĕрех кĕтет Ульти хăйĕн телейне. Анчах ку апатçимĕçлĕ сĕтел хушшинче кашăксăр ларнипе пĕрех...

* * *

— Тиляр, эсĕ чăннине каламастăн ахăр. Çак тарана çитсе сан çине никам та ăшă куçпа пăхман-и вара? — вăлтать Ульти. — Мĕнле пуç вăл санăн кутемĕн те никам пирки те шутламасть.

— Юрату, акамçăм, пуçра мар, чĕрере çуралать теççĕ.

— Савни тупас пирки малтан пуçра шухăш аталанать, — парăнмасть Ульти.

* * *

Пулнă-ха Тилярăн чĕре кĕтесĕнче темĕскер. Те юрату темелле ăна, те пĕчĕк шĕкĕ. Чылай хушă çав хурт чуна кăшларĕ. Пурна киле типрĕ, хăрчĕ, кĕлленчĕ пулас юрату сĕткенĕпе киленеймесĕр.

Янук ятлăччĕ вăл. Вăтам шкулта пĕр класра вĕреннĕ. Халĕ те час-часах аса илет Тиляр ăна. Нихăçан та унпа иккĕн çеç çӳресе курман. Ялан виççĕмĕш пурччĕ: е пĕр-пĕр хĕр пĕрчи, е арçын ача. Култаратчĕ Янук. Пуçĕнче унăн тем те çуралатчĕ. Астăвать-ха Тиляр пĕр ăслайне: «Туссем, пурăна киле эпĕ çĕр çине тăрă шывлă тарăн кӳлĕ пулса выртатăп çӳлелле пăхса, тӳпе çеçен хирĕнче куçакансене хĕрӳллĕ салам каласа».

— Кам пурăнать вара унта? — тĕпченĕччĕ Тиляр ăна.

— Хĕвел! Вăл ман пата хăнана анмасăр тӳсеймĕ. Тытăнĕ манпа вăйă выляма. Чӳхенĕ, ишĕ хумсем çиййĕн.

— Татах пур-и тӳперен анса санпа вылякан?

— Тупăнаççĕ. Янкăр тӳпе тăрăх ишекен пĕлĕт татăкĕсем. Мана култарасшăн камитленеççĕ: акă тырă ани. Шерепеллĕ сĕлĕ, вăрăм пучахлă урпа. Каçалăк умĕнче — çĕмел. Эпĕ — тĕкĕрлĕ кӳлĕ. Вĕсем, çӳлтисем, хăйсен сăнĕсене курасшăн айкашаççĕ. Сенкер чаршав хыçĕнчен шуса тухать мыскараçă сысна çури, вăкăр, качака. Вĕсене хăваласа каякан кĕтӳçĕ те пур, аллинче вăрăм чăпăркка.

Янукăн çапла хăтланăвĕнчен кулса ахăлтатас килместчĕ. Ытларах шухăша яратчĕ ăнланма хĕнрехшĕн. Вĕренекен ачасем мăшкăлласа ăна валли ят тупса кăларчĕç — Кӳлĕ.

Вăтам шкул пĕтерсен Тиляр ерсе кайрĕ Янук йĕкĕтпе Хусана. Юрату çиппиех хăвармарĕ ĕнтĕ. Вĕсемпе тата Зоя ятлă хĕр ача та пычĕ. Зойăпа Янук университета вĕренме кĕчĕç, геолог пулма, Тиляр — мединститута. Зойăпа Янук ялан иккĕш çӳретчĕç. Сайра хутра çеç виççĕшĕ кинона кайкаланă. Хĕрпе каччă çывăхланнă, пĕр-пĕрне юратаççĕ пек туятчĕ Тиляр. Кулянатчĕ те. Ытлашши хыпса çунма

май та сахал. Лекцисем, хӑв тӗллӗн тумалли ӗҫсем хыпкӑчласах лартатчӗҫ. Ҫитменнине, Тиляра инкек сырӑнчӗ. Вӑл юн курсан сиксе чӗтреме тытӑнчӗ. Лекцине профессорсем ҫын пайне: чӗрине, ӳпкине е тата урӑххине илсе пырсан хӑстарнипе хӑшкӑлатчӗ. Вӗренме пултараймасть Тиляр кунта. Пурнӑҫра ун пекки те пулать. Сывӑ пул, тухтӑр ӗҫӗ! Урӑх специальноҫа вӗренме тивет. Анчах ӑҫта? Тӗплӗн, пайӑн-пайӑн хурса тухма май килмерӗ. Телеграмма тыттарчӗҫ ӑна. Ҫак самантрах киле тухса каймалла. Пӗчченех пурӑнакан амӑшӗ йывӑр чирленӗ, выртать вырӑн ҫинче тӑраймиех. Таврӑнчӗ Тиляр киле.

Уйӑхсем иртрӗҫ те иртрӗҫ. Тиляр пӗччен тӑрса юлчӗ, амӑшӗ ӗмӗрлӗхех пӑрахса хӑварчӗ ӑна. Темӗн чухлӗ кулянсан та, кунӗ-кунӗпе вилтӑпри ҫинче куҫҫуль тӑкса ларсан та усси пулмӗ, юратнӑ амӑшӗ чӗрӗлсе тӑрса кӗҫӗн хӗр ачи патне таврӑнаймӗ. Малашне пӗччене тӑрса юлнӑскере мӗн кӗтет? «Ытлашши ан кулян, хӗр пӗрчи, — илтет вӑл кӳршӗ хӗрарӑмӗсенчен. — Санӑн тӑван аппу пур. Вӑл пӑрахӗ-и вара? Тӑван тӑварпа пиҫнӗ теҫҫӗ».

Аппӑшӗ Тиляра, тӗрӗсех, хурлӑха хӑвармарӗ. Хӑй урӑх яла качча тухса пурӑнакан килне куҫарса кайрӗ ӑна. Сывӑ пул, тӑван ял. Паллах, хурлантарать. Пурте кунта юлаҫҫӗ: туссем, тантӑшсем, тӑшмансем — енчен те унашкаллисем пулсан. Чим, темӗскер чун кантӑкне шаккать. Мӗн вара? Ах-у-у, чи кирлӗ ҫын юлать. Ка-а-м? Мӗнле кам? Савни! Кулӑш. Савни мар та-ха...

Вӑйлӑ ҫил ахӑрать. Тинӗсре тӑвӑл. Хумсем урнӑ. Вӗсем ҫырана пыра-пыра ҫапаҫҫӗ. Сӑнчӑрланӑ кимӗ вӗҫерӗнчӗ. Ишрӗ, юхрӗ ниҫталла мар унталла. Тиляр пуҫӗнче те — хумсем. Вӗсем те кӑкарӑнса тӑракан шухӑшсене вӗҫертеҫҫӗ те ҫавӑрттараҫҫӗ ним манерсӗр.

Тӑлӑха юлнӑскере ӑраскал шеллерӗ-тӗр, ҫавӑнпа ӑсатрӗ ӑна юта. Енчен те Янук каникул вӑхӑтне иртterme яла таврӑнать? Вӑл студент — пулас геолог. Хайхискер урампа пыруҫӑн сасартӑк Тиляра тӗл пулать, анчах пуплесшӗн мар, пуҫне пӑрса иртет. Акӑ сана — ӑш ҫунтармӑш. Ирӗксӗрех халӗ ҫапла шухӑшлаттарать: телей ӑна аякка ӑсатнӑ. Хурлӑх — аллине тӑсса ярса илеймест.

«Иҫмасса, выртинччӗ, хӑй каларӑш, икӗ сӑрт хушшинчи ҫеремлӗ лапамра ҫавра кӳлӗ пулса. Пырса ларӑттӑм

ешӗл куракла ҫыран хӗррине. Ҫара урасене чӳхӗттӗм лӗп шывунта. Мана усал куҫсенчен пытарӗччӗҫ ҫӳллӗ хӑмӑшсем. Ун чухне, тен, туйӑпӑр чунӑмӑрсенче чӗрӗлеймесӗрех сӳнесшӗн аран-аран йӑлтлатакан юрату хӗлхемӗсене, — явӑнаҫҫӗ ҫакнашкал шухӑшсем Тиляр пуҫӗнче. — Янук, ман чӗрери вӑйсӑр юратӑва чӗртсе ялкӑштарасси йӑлтах санран килет. Эпӗ ҫаплах санпа аташатӑп-ха. Сӑлтавӗ, тен, эпӗ урӑххине тӗл пулманнинче...»

Ульти шав калаҫать, Илтимӗре мухтать. «Вӑл ҫав тери хӳхӗм каччӑ. Флотран татах якалса килет. Сирӗн ялта пурччӗ-и япшар каччӑсем?»

Тиляр ним те чӗнмест. Ара, вӑл хӑйӗн тӗнчинче ҫӳретҫке-ха.

— Эсӗ утнӑ ҫӗртех ҫывратӑн-и-мӗн? — тарӑхнипе Ульти тытса силлерӗ Тиляра.

— Ай, каҫар. Мӗн терӗн эсӗ? — айӑплӑн ыйтрӗ хӗр ҫумра пыракан Ультирен. — Эсӗ хӑв ҫинчен каласа пархa ытларах. Сӑмахран, Илтимӗр амӑшӗ эсӗ унӑн ывӑлне юратнине пӗлет-и?

— Амӑшӗ ҫеҫ мар, пӗтӗм ял пӗлет.

— Чӑнах-и?

— Пирӗн Илтимӗр амӑшӗ Минепи Ивановнӑпа иксӗмӗр хушӑра туслӑх тахҫанах ҫуралнӑ, — Ульти аллисене авӑсса илчӗ.

Тӗрӗсех, Ульти юрама тӑрӑшать каччин амӑшне. Мӗнпе-и? Ӗҫпе. Пулӑшма ӳркенмест вӑл. Кил-тӗрӗшӗнче йывӑр ӗҫсем сахал мар. Кӗпе-йӗм ҫумах акӑ вӑй, вӑхӑт сахал мар кирлӗ. Уйрӑмах чӳхеме колонкӑран шыв йӑтса хӑшкӑлан. Ҫак самантра Ульти йӑш! кӗрсе тӑрать пулас пӑянам патне.

— Вӑй патӑр! — саламлать вара вӑл.

— Спаҫҫипӑ! — тав тӑвать хӗр упраҫа Минепи Ивановна. — Ывӑнтарчӗ-ха. Канса ларатӑп. Шывне Мӗтри ывӑлӑма йӑттарасшӑн. Армана ятӑм та ҫаврӑнса ҫитеймерӗха. Таҫта ҫӳрет ӗрӗхсе.

— Ҫамрӑксен чупса пултӑр. Урпа хылчӑкӗ.

— Итлесшӗнех мар. Пиччӗш таврӑнсан йӗркене кӗртӗ-ха.

— Хӑҫан киле ҫитет Илтимӗр?

— Паян-ыранах килсе кӗрессе кӗтетпӗр.

— Ай, савӑнӑҫ, — ихӗлтетет Ульти. — Минепи Ивановна, хурӑр ухнӑ япаларсене карҫинккана. Самант ҫырмана кайса чӳхесе килетӗп.

— Сана кашнинчех чӑрмантарас килмест. Ҫынсем тем калӗҫ.

— Эпӗ сирӗншӗн ют мар-иҫ. Тен, кинӳ пулӑп.

— Ӑна пӗлме ҫук. Флотран таврӑнсан мӗн калӗ, — ҫапла пуплекелесе Минепи Ивановна карҫинккине тултарчӗ. Часах ӑна йӑтса тухса каять Ульти.

Ял ҫумӗпе тӑсӑлнӑ ҫырмара хӗрарӑмсене килентерекен калама ҫук ырӑ вырӑн пур: ҫӑлкуҫӗнчен палкаса тухакан тӑрӑ шыв валашка ҫийӗн шарлаттарса юхать. Чӳхе кӑна ухнӑ япалусене кӑмӑлу туличчен.

Илтимӗр моряка Ульти юратнине, ӑна кӗтнине пӗтӗм ял пӗлет. Кун пирки вӑл хӑй кашни кӗтесрех шуйхашать. Мыскарасем те сахал мар кӑтартать. Акӑ ял лавккине салтак амӑшӗсем, арӑмӗсем валли сайра хутра тавар е ҫимелли мӗн те пулин кӳрсе килеҫҫӗ. Кун пек чух чи малтан чупса пырать вӑл лавккана. Сутасшӑн мар ӑна ним те. Пурпӗрех Ульти пушӑ алӑпа лавккаран тухса каякан йышши мар. Тавлашать, ятлать, хӑратать, ӗнентерет! Паян хӗр упраҫ, ыран — салтак арӑмӗ. Пурте пӗлеҫҫӗ: вӑл Илтимӗре кӗтет, ҫавӑнпа никама та качча тухмасть.

Тепӗр тесен, Ультие качча илесшӗн пӗр йӗкӗт те хӑтана пыман. Ытлашши харсӑрланнӑшӑн хӑш-пӗри тиркет ӑна. Уйрӑмах лавккара ӗҫлекенсем ӗненмеҫҫӗ Илтимӗр унпа мӑшӑрланасса.

— Килне пырса ларать! — тет пӗри.

— Ых, тӑват куҫ! — ятлать тепри ӑна кӳлешӗве хутшӑнса.

— Вӑтанулӑха пачах ҫухатнӑ.

— Хӑйӗн талайӗ ҫаплалла.

* * *

Ҫул кӗскелчӗ. Укӑлча хапхи те курӑнать ав. Анчах Ультин халап-юмах хутаҫҫи нимӗн чухлӗ иксӗлмен.

— Ӗнер Минепи Ивановна патне кӗрсе тухрӑм. Вӑл ҫыру илнӗ, — пӑлтӑр-пӑлтӑр ҫаврӑнкаларӗ, урисемпе тӑпӑртатрӗ Ульти. Ӑна савӑнӑҫ ташлаттарать. — Илтимӗр таврӑнать, ыран-паян ҫитмелле. Урпа хылчӑкӗ.

— Туй кӗрлеттеретӗр ӗнтӗ. Ҫапла-и? — ытахальтен кӑсӑкланам пекки турӗ Тиляр. Ара, уншӑн пулсан хуть пуҫхӗрлӗ тӑр. Вӑл Илтимӗре нихӑҫан та курман. Пӗлесчӗ ҫак хӗр упраҫӑн, ку — унӑн пуласлӑхӗ. Шел, ҫитес кунсен алӑкӗ ҫук ҫав, атту уҫӗччӗ те курӗччӗ тепӗр темиҫе кунран хӑйне мӗн кӗтнине.

— Йӑлтах Илтимӗртен килет. Тен, вӑл туйсемпе аппаланас темӗ, хӑвӑртрах пӗрлешесшӗн пулӗ. Тинӗссем тӑрӑх ишсе пайтах тунсӑхланӑ-тӑр хӗрсемшӗн, — ихӗлтетсе илчӗ Ульти.

— Сана Илтимӗр шутсӑр юратать-и?

— Вӑл салтака кайнӑ чух ялта ун валли хӗр юлмасран хӑранине пӗлтерчӗ. «Эпӗ кӗтетӗп сана», — терӗм. «Ан кӗт», — тесе каламарӗ.

— Апла пулсан сана тиркемест ахӑр. Шел, юрататӑп темен.

— Мӗн вӑл юрату тени? — Ультин сассинче пӑшӑрхану сисӗнчӗ. — Пустуй сӑмах.

— Пӗлместӗп ҫав хам та, — ассӑн сывласа илчӗ Тиляр. — Юрату хӗр упраҫа вилмелле савӑнтарать те, хыпса та ҫунтарать теҫҫӗ. Пӗр кӗнекере вуланине халӗ те астӑватӑп: «Юрату тени вӑл — сӗм вӑрманта компассӑр ҫӳрени».

— Ху-ху! Айван ҫын ҫырнине ӑша чӗптӗм те илместӗп! — пат татса каларӗ Ульти. — Эпӗ Илтимӗре шанатӑп. Эпир пӗр-пӗрне юрататпӑр.

— Сасартӑк вӑл шухӑшне улӑштарать. Ялта пӗр-пӗр ҫамрӑк хӗре юратӗ те сана хытхура вырӑнне хурса пӑрахӗ, лешне качча илӗ. Вара мӗн тӑвӑн?

— Суда паратӑп! Мана шантарнӑ. Анчах суйнӑ — акӑ сӑлтавӗ.

— Суд ирӗксӗр юраттараймасть.

— Эпӗ хам суд тӑвӑп. Пакартине кӑларса илсен пурӑнаймӗҫ.

— Ай-уй-й! — тӗлӗнчӗ Тиляр унӑн хаярлӑхӗнчен. Асӑрхарӗ: Ултин сӑн-пичӗ самант пӗрӗнчӗ, тӑрса юлчӗ суха касси йӗррисемлӗ маска. Куҫӗсем айӗнчи хура пӑнчӑсем ҫӗр айӗнчи тинӗсрен ишсе тухрӗҫ тейӗн, ваштах йӳҫ кӑшман вӑрри пысӑкӑш сарӑлчӗҫ. Вӑл каллех тӑвата куҫлӑ.

Тиляр сăмахĕ, чăн-чăн сăнă пек, Ульти чĕрине пĕр шелсĕр пырса тăрăнчĕ. «Кама качча илме пултарĕ Илтимĕр? — Ял хĕрĕсене аса илсе суйласа тухрĕ вăл ваштах. Тупăнмарĕ. — Кам çав вĕлтĕркке? Кам? Сасартăк Ульти хăйпе юнашар утакан юлташне тинкерчĕ. — Тур çырлах, мĕнле хитре хĕр иккен вăл, — кĕвĕçӳ вĕресе хăпарчĕ унăн. — Тен, ман тăшман ку? Ых-х, йĕксĕк! Тем тусан та парăнмастăп! Илтимĕр — манăн!» Ультин самант пĕтĕм нĕрĕ улшăнчĕ. Унра паттăрлăх вĕрет. Çапĕ те хуçĕ, çĕнтерӳ унра пулĕ. Пуçĕнче ваштах тĕллев меслечĕсем тĕрленчĕç. Чухларĕ çавăнтах, ку ĕçе пурнăçлама çăмăл мар. Васкамалла. Пĕр тăхтамасăр каçалăкне вырма халех пуçламалла.

Пĕрремĕш утăм. Ярса пусрĕ:

— Тиляр, кĕçĕр вăййа тухăпăр-и?

— Татса калаймастăп. Аппа таврăнсанах ĕç хушакан.

— Пулăшма хам каçăп.

## 3

Яра кун уйра тăрмашнă «Сурат» ял хуçалăх çыннисем. Хĕвел хăйĕн анăç çулĕ çине тухнине хапăлласа йышăнчĕç. Ир пуçласа каçчен пĕшкĕнсе ĕçлесси ывăнтарать мар-и. Вĕсем тулă анине çум куракĕнчен тасатрĕç. Вăрăм тымарлă пиçен ашкăратчĕ çĕр сĕткенне тырра памасăр сăрхăнтарса. Çăткăн куракксенчен хăтăлнă тулă куç умĕнчех юсанни кунта ĕçлекенсене савăнтарать, ара, кăр-р тытăнчĕç ӳсме.

Ĕçлекенсем киле кайма çул çине тухрĕç. Уçă сасли пуçларĕ те юрă:

Кӳршĕре кил урлă  
Çамрăк каччă пур.  
Пуринчен хăюсăр,  
Пуринчен маттур...

Тиляр çывхаракан юрăçсене тилмĕрсе пăхрĕ. Вĕсем унăн юратнă юррине шăрантараççĕ. Тӳсеймерĕ вара хăй те хутшăнмасăр:

Эх, çĕрĕпех яр уçă  
Манăн чӳрече.  
Çĕр хута çӳрет вăл  
Çуртăм умĕнче.

Часах Тиляр юрăçсемпе пĕрлешрĕ. Ульти те уйăрăлса юлмасть. Пурте пĕрле укăлча хапхинчен ял кĕтĕвĕпе хутшăнса кĕчĕç.

Ĕнесем хăйсен хуçисене палларĕç-тĕр, макăраççĕ тусанлă сывлăша янăратса. Ку вĕсен саламлани, çиллисем сĕтпе карăннине пĕлтерни ахăр.

Районтан таврăнакан хĕрсем те хăйсен ĕнисене тупса вĕсене килелле хăваларĕç. Чи малтан Тиляр хапхине уçса кĕрсе юлчĕ. Ультисен килĕ икĕ пӳрт урлă. Пĕччен юлсанах ăна каллех чунне ыраттаракан шухăшсем сырăнчĕç. «Йăлăхтармăшсем! Кĕтӳре тем тĕрлĕ выльăх! Мĕн-ма сирĕн юлас мар вĕсен хушшинче аташса?! Ах, Илтимĕр, мана пăрахса тепĕр хĕрпе туслашăнах-ши? Пĕрре те ĕненес килмест, анчах мана темшĕн Тиляр пăшăрхантарать. Хам айăплă. Никам та чĕлхерен туртман мухтанма ун умĕнче. Илтимĕр манăн савни, вăл мана качча илет тесе мăнаçлантăн. Мичман киле таврăнсан Тиляр сĕмсĕрленсе ун патне киле кайĕ. Тĕл пулĕç те хайхискерсем — уйăлаймĕç».

Ульти сăхсăхса илчĕ. Вара тытăнчĕ Турра тилмĕрме: «Илтимĕре мансăр пуçне никампа та тĕл ан пултарах». Хуйхă-суйхă Ультие çĕнĕ шухăш тупса пачĕ. «Тиляра каччă тупса парас! Савниллĕ хĕр çумне моряк çулăхма хăяймĕ. Ылтăн тупсăм! Ал паратăп хама, маттур! Анчах кама килĕштерме пултарать Тиляр? Тупата, хамăр касра ун валли йĕркеллĕ, хитре йĕкĕт çук. Урпа хылчăкĕ».

Çапла хăйпе хăй мăкăртатса пынă самантра хыçалта хыттăн мăш-мăш сывланине илтрĕ Ульти. Çаврăнса пăхрĕ — хура ĕне, çамкинче шурă çăлтăр. «Мĕншĕн мана хăратма ĕмĕтленетĕн? Ха-а-с-с! Иртсе кай! — хăлаçлансах хăваларĕ ĕнене. Леш выльăх пулсан та ăнланчĕ ахăр, уттине хăвăртлатрĕ те хĕр умне тухрĕ, вара сарлакан пусса малалла кайрĕ. — Кам ĕни пулчĕ ку? Э-э-э, палларăм. Праски Çеменĕсен. — Унччен те пулмасть, куçа ӳпре пырса тăраннăн Ульти пуçне çĕнĕ шухăш пырса çапрĕ: — Çе-е-ме-ен! Акă кам кирлĕ. Чи юрăхлă çын. Тупăнчĕ Тиляр валли. Тавтапуç сана, му-у-ук!»

Умри ĕнене хуса çитсе ăна майĕнчен ыталарĕ, ăшă сăмахсем тăкрĕ. Çавăнтах Çеменсен ĕнине Ульти хăмсарчĕ, ара, хапха умĕнче хăйсен ĕни кĕтет. Уçса кĕртмелле, унсăрăн пăрăнать каскăнланма, ют пахчасене кĕрсе купăс-

та пуҫӗсене вӑтӑрма. Ӗнине картишне кӗртсе хӑварма тиврӗ. Сӑвасси тарама. Унӑн тӗллевӗ халӗ — Праски Ҫеменӗпе тӗплӗн калаҫасси.

Ҫеменӗн ашшӗ ҫук, пулман та. Вӑл вӗлтрен кайӑкӗ. Ҫавӑнпа та амӑшӗн ячӗпе Праски Ҫеменӗ тесе сӑпатлаҫҫӗ. Айпарӑш йӗкӗт теме ҫук ӑна, ҫапах та пӑхмалӑх пур. Лутрарах. Мӑнтӑр питлӗ. Тути тачка. Сарӑ, ҫӑра ҫӳҫне вирелле турать. Куҫӗ — хӑмӑр. Ӑс-тӑн енчен малти ретре мар. Ҫӑмӑлттайрах. Сӗмсӗрлӗхӗ те ҫителӗклӗ теме юрать. Укҫаллӑ. Уйрӑмах юлашки вӑхӑтра енчӗкӗ тулнӑҫем тулса пычӗ, пӗтӗмпех хӑйӗн специальноҫне пула. Вӑл Шупашкарти строитель техникумӗнчен вӗренсе тухнӑ. Строитель. Праски Ҫеменӗ шабашник пулса тӑчӗ. Ҫӳрет хула-ял тӑрӑх. Кам мӗн тума тара тытать, вӑл — кӗрӗшет. Пӳрт, мунча, кӗлет, сарай, дача пуралать, ӑсталать. Ун пирки ял-йыш ахальтен сӑмах кӑларман: «Праски Ҫеменӗ — миллионер. Кӗсйине укҫа шыв юххилле шӑнкӑртатса кӗрет». Тӗрӗсси пурах халӑх сӑмахӗнче. Ҫӑмӑл машина туянчӗ. Хӳхӗм тумланса ҫӳрет.

Ультиваскать, утмасть тейӗн, кайӑк пек вӗҫет. Вӑл ҫитсе чарӑнчӗ. Пӳрт, кивелнипе кӑшт тайӑлнӑскер, ларать ав ҫырма хӗрринче. Унӑн кӗтессинче — ватӑ йӑмра. Вӑйлӑ ҫил тулашнӑ самантра унӑн ҫӑра ҫулҫаллӑ тураттисем каш-ш кашлаҫҫӗ чуна хӑратса. Ҫак пӳртре пурӑнать Ҫемен хӑйӗн хӗрӗх пилӗк ҫула ҫитнӗ амӑшӗпе. Амӑшӗ ҫавӑрман ку йӑвана, вӑл ашшӗ-амӑшӗнчен юлнӑскер.

— Ҫӑмӑл машина туяниччен пӳрт юсамалла марччӗши? — теҫҫӗ кӳршӗсем Праскипе калаҫӑва хутшӑнсан. — Ишӗлсе анса хӑвӑра тӑм тумӗ-и?

— Эй, ҫырлах, кирлӗ мара мӗн-ма питлес? Ара, ӗлӗкех ваттисем каланӑ: пӳрт тени нихӑҫан та хуҫисене пусарса вӗлермест, — тӳрре тухать Праски. — Ҫамрӑклӑх пӗрре килет, савӑнтӑр ывӑлӑм. Ярӑнтӑр машинипе. Ӑна вӑл хӑй ӗҫлесе тунӑ укҫипе туяннӑ. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн авланӗ. Пусӑрӑнсан чул ҫурт та лартӗ. Пурнӑҫ малалла. Хам та ватах мар. Пулӑшатӑп. Укҫам пур.

Шӑкӑр-шакӑр шакӑртаттарчӗ Ульти питӗрӗнчӗк хапха шашулккине. Касмӑкри йытӑ тытӑнчӗ сиксе вӗрме, картишне кӗрсен ниме уямасӑр тытса ҫурать.

— Йытӑ кӑкарса усрать. Миллионер! Машинине вӑрласран сыхлаттарать. Урпа хылчӑкӗ, — ятлаҫать Ульти.

Чӳрече уҫӑлчӗ те, пуҫне кӑларчӗ Пӗри. Ҫемен хӑех иккен. Ульти курчӗ те ӑна чӳрече умнелле утрӗ.

— Эй, тӑват куҫ! Хапхана мӗн шутпа ҫӗмӗрес терӗн?

— Ых-х, тукмак чӗлхе, — кӳреннипе мӑкӑртатрӗ Ульти чӳрече умне утса пынӑ май. — Эпӗ пӗлтерес хыпаршӑн ял тавра виҫӗ хут чупса ҫаврӑнсан та ҫылӑх мар. Йӗксӗк, тух урама. Васканӑ пул. Чӑтма ҫук, ӳпресем вӗтелентереҫҫӗ ав.

Тухрӗ урама хайхискер.

— Мӗншӗн кирлӗ пултӑм? — кӑсӑкланчӗ Праски Ҫеменӗ. Ҫавӑнтах хӑй шухӑшне пӗлтерчӗ: — Вите-сарай тума килӗшместӗп.

— Мӗн сӑлтава пула? — ытахальтен ыйтрӗ Ульти.

— Эсир, хыт кукарсем, йӳнӗ хакпа ӗҫлеттересшӗн.

— Ан сӳпӗлтет кирлӗ мара. Ӳпресене хӑвалама йӑмра туратти хуҫса кил-ха. Эпӗ лайӑх хыпар илсе килтӗм сан валли.

— Йӑмрана шар кӑтартмастӑп. Сана, шӑлапир пекскере, хӑрӑка, ӳпресем тиркеҫҫӗ, — Ульти ҫумне пырса тӑчӗ Праски Ҫеменӗ. — Хӑвӑртрах тытӑн сӑмах урапине кустарма.

— Юрӗ-ҫке, — килӗшрӗ Ульти. Вӑл сӑмах хутаҫҫине салтрӗ. — Ҫемен, сана пӗр чиперкке вилесле юратса пӑрахрӗ.

— Ан суй!

— Эйпух! — Ульти хӑй ҫине хӗрес хурса илчӗ. — Питӗ юрататӑп тет.

— Чиперкки кам? — хыпӑнса ӳкрӗ йӗкӗт.

— Тиляр! Утар Мишши арӑмӗн йӑмӑкӗ.

— Тиляр! Ай-уй! Вӑл хӗр ача шутсӑр вичкӗнскер — каснӑ лартнӑ чӗрне айне кӗнӗ шӑрпӑк. Нумаях та пулмасть тӗл пулма тиврӗ унпа. Лавккаран тухрӗ. Аллинче — пакет. Пӗремӗк туяннӑ пулас. Эпӗ кап! пырса тӑтӑм умне. «Ырӑ кун пултӑр, чиперкке!» — алӑ тӑсрӑм саламлама. Вӑл, пур, ман ҫине уйран куҫне ывӑтрӗ те кларӗ: «Сирӗл, алхарин!» Евӗккӗн калаҫмарӗ.

— Хӑҫан пулнӑ ку мыскара? — парӑнмасть Ульти. — Кутемӗн ҫав тӗлпулӑвӑн йӑлакки те юлман. Тен, ҫавӑн чухне вӑл сана килӗштерсе пӑрахнӑ та пулӗ. Кулянса пурӑнать мӗскӗн. Сана кӗтет, эсӗ пур, айванскер, ҫӳрен пӑрӑнса. Паянах пыр.

— Ăçта тупăн ăна?

— Йыснăшĕ хăйĕн пахчи çумне вăрмантан тиесе килнĕ пĕренесем йăвантарнă. Унта ларăпăр Тилярпа иксĕмĕр сана кĕтсе. Хитре тумлан, хăвна асар-писер ан тыт.

— Мана вĕрентмешкĕн сан, ачамккă, тепĕр хут çуралмалла. Пĕлетĕн-и эсĕ, мана Вăтакас учительницисем куç хывнă.

— Вĕçкĕн! Вĕсем Тилярăн чĕрне хури тĕшне тăмаççĕ, — ятланçи пулчĕ Ульти. Анчах та вăл çапла каласа Тилляра мар, хăйне хӳтĕлерĕ. Пăлханнă кăмăлĕ йăвашланчĕ кăшт. Кун пек чух халăхра çапла калаççĕ: ĕçне тунă, ял куласси çеç юлчĕ.

Ульти килелле чавтарчĕ. Вăл никама та асăрхамасть. Калăн, хапха айĕнчи сак çинче Илтимĕр кĕтсе ларать ăна. «Эсĕ манăн. Никама та пама килĕшместĕп, — мăкăртатать. — Пĕрне тĕксе ятăм-няк. — Ухутапах Илтимĕр çумне çыпăçма килĕшĕччĕ вăл».

* * *

Праски Çеменĕ лĕп шывлă кӳлĕрен ишсе тухнăнах тулять хăйне. Чунра ырă-ырă. Пуçа ула-чăла шухăшсем пырапыра кĕреççĕ. Акă машинине кĕрсе ларчĕ. Юнашар — Тиляр. Каяççĕ питĕ кирлĕ, ĕмĕрлĕхе пĕр-пĕрин çумне çыхакан çĕре — хут тутарма. Тути хăй тĕллĕнех ирĕлет.

Пӳрте кĕнĕ май Çемен юрласа ячĕ:

Хитре кăна, хитре
Хамăр ял хĕрĕ.
Мĕншĕн хитре пулнă-ши?

Шифоньер алăкне уçрĕ. Ав çакăнса тăрать иртнĕ эрнере туяннă костюм, çыран хĕрринче выртакан хăйăр тĕслĕскер. Çак костюма тăхăнасшăн вăл. Малтан мăйне амулет çакрĕ — хурткуççи, кукамăшĕн çӳçпи тĕпĕнче тустарнă чух тупнă шăрçа. Тĕшмĕш йĕркине тĕпе хурать мар-и. Капла телей, ăнăçлăх юнашар çӳрет, инкек çыпăçаймасть.

Амăшĕ кĕчĕ пӳрте. Вăл çиллес, ятлаçас кăмăллă.

— Çемен, мĕншĕн ку таранччен пахчана тислĕк çĕклемерĕн?

— Ан йăсла-ха. Мана ав пĕр хĕр юратса пăрахнă. Чĕнет. Вăл манпа паллашасшăн. Чухлатăн-и, ывăлна мĕнле хапсăнаççĕ, — мухтанать Çемен.

— Кам унӑн ашшӗ-амӑшӗ. Тӳрех калатӑп вӑл хӗр мӗн тӗшне тӑнине. Тивӗҫлӗ-и вӑл уншӑн ура тӗпне якатни?

Ирӗксӗрех Ҫеменӗн тӗпӗ-йӗрӗпе тӑхҫалама лекрӗ. Ывӑлӗн тӗллевӗпе кӑмӑллӑ юлчӗ амӑшӗ.

— Анне, хӑш кӗпине тӑхӑнас?

— Чи чаплине. Хӗрсем капӑр тумланакансене килӗштереҫҫӗ, — терӗ амӑшӗ. — Кӑлар-ха мӗнпур тумна. Акӑ ҫак сарӑ кӗпе шӑпах ҫуллахи каҫра килӗшӳллӗ. Тӑхӑн, — тӑсса пачӗ вӑл ывӑлне.

— Юрӗ, — тет Ҫемен, — хура галстук ҫыхӑп.

Иккӗшӗ те ҫакӑнпа ҫырлахрӗҫ. Ҫӗнӗ костюма тӗкӗнмерӗҫ, уйрӑм паллӑ куна кӗтсе вырӑнтах ҫакӑнса юлать вӑл. Унашкал самантсем ӳлӗм пулӗҫ.

Япаласене амӑшӗ майлать. Ҫеменӗн кирлӗ ӗҫ пур. Пӗчӗк тӗкӗр илсе сӗтел хушшине ларчӗ. Ҫӳҫне пайӑркан-пайӑркан уйӑрса хут татӑкӗсемпе чӗркет. Кӑтра ҫӳҫлӗ пуласшӑн мар-и?

Тӗкӗрте йӗкӗт хӑй сӑнне тӗмсӗлсе пӑхать. Пӗчӗк кӑлтӑкласкер. Ара, ҫут ҫанталӑкӑн вӑрттӑн ӳнерҫи унӑн пит-куҫӗ ҫине хӑйӗн сӑраллӑ мелкине силлесе сирпӗтнӗ. Сӑрӑ пӗчӗк пӑнчӑсемпе пит ҫӑмарти тӑрӑх тӗрленнӗ. Темӗн чухлӗ тӑрӑ шывпа ҫусан та тасалакан йышши мар. «Ан пӑшӑрхан, ывӑлӑм, — тетчӗ ӑна амӑшӗ, — кук тӗрри сана чиперлетет кӑна. Хура тутлӑ ҫын телейлӗ». Ӗненсе ӳснӗ Ҫемен амӑшӗн сӑмахне. Пит ҫӑмартисем — нӑк. Тепле юн пӗрӗхмест. Ку йӑлтах амӑшӗ тутлӑ ҫитернӗрен. Ара, вӑл унӑн пӗртен-пӗр ачи-ҫке.

* * *

Ульти килӗнче лара-тӑра пӗлмест. Вӑл паян евчӗ-ҫке, хӗрпе каччӑна туслантармалла вӑйӑра. Хӗвел ӑна йӗкӗлтенӗнех анаҫалла ерипен шӑвать, вӑл путех турта хушшине тимӗр шапана кӳлнӗ. Ним туса вӑхӑта иртереймест. Хитре кӗпе тӑхӑнса тӗкӗр умӗнче хӑй тӑрӑх пӑхас йӑла ҫук, джинс тӳсет, вӑл кирек хӑҫан та модӑра. Килти ӗҫпе айхашас кӑмӑл ҫук. Тек тӳсеймерӗ, тухрӗ урама. Утрӗ. Никама та куҫ тӗлне пулмарӗ. Паллах, вӑййа тухма иртерех. Карта хушшинчен курчӗ: Тиляр купӑста шӑварать. Пулӑшма тивет, унсӑрӑн вӑл ҫур ҫӗрччен те пушанаймасть,

апла тёллевӗ вутра ҫунса кӗлленӗ. Ирӗксӗрех кӗчӗ пахчана Ульти, вара пушӑ витре ярса тытрӗ. Купӑста йӑранӗсем темиҫе, вӗсен тӑршшӗ, тупата, ҫур ҫухрӑм. Пайтах шыв йӑтма тивет. Юрать-ха, ӑна пахча вӗҫӗнчи ҫырмаран мар, кӑнтӑрлах ӑшӑнма тултарнӑ каткаран йӑтмалла. Тепӗр чух пулсан Ульти тем тусан та мӗскӗнленес ҫук. Чухлать ҫакна Тиляр та.

— Ан чӑрман, Ульти, — унӑн аллинчи витрене тытса илме пикенчӗ Тиляр. — Кан луччӗ.

— Пӗччен тул ҫутӑличчен те муталанӑн.

Ультие ҫӗнтереймӗн сӑмахпа. Ӗрӗхсех чупкалама тытӑнчӗ. Купӑста тӗпӗсен лакӑмӗсем тулаҫҫӗ шывпа. Хайӗн куҫӗ карта хушӑкӗсенчен курӑнакан урама сӑнасах тӑрать. Сасартӑк курах кайрӗ Праски Ҫеменне. Пуҫне ҫӗлӗк тӑхӑннӑ тейӗн. Кӑтра. Ҫӳҫ пайӑркисене хут татӑкӗсемпе чӗркенӗ хыҫҫӑн ҫапла хӑпартать мар-и. Утти шӑп качака такин, пушмак кӗлли тротуара шаклаттарать.

Праски Ҫеменӗ курчӗ пахчара чупкалакан хӗр упраҫа. Кӗтме тивет. Ҫӳрерӗ каллӗ-маллӗ. Вара хапхан тепӗр енчи карта ҫумне йӑвантарнӑ пӗрене ҫине ларчӗ.

Акӑ хапха уҫӑлчӗ аранах. Хӑшӗ тухать? Ульти! Вӑл пӗчченех. Праски Ҫеменӗн ӑшне чуна ыраттаракан шухӑш хӗсӗнсе кӗчӗ: сасартӑк Тиляр килӗшмесен? Сахал-и чӑрмав? Тен, аппӑшӗ чарать вӑйӑа тухма?

— Ульти, — сиксе тӑчӗ пӑшӑрханнӑ каччӑ, — шаннӑ кайӑк йӑвара ҫук-и-мӗн?

— Ытлашши васканӑ пек туйӑнмасть-и? — ихӗлтетсе илчӗ Ульти. — Ӗлкӗрӗн-ха хӗрпе выляма.

Лӑштах пулчӗ Праски Ҫеменӗн чӗри. Унччен те пулмасть, вӑл урине пӗрене ҫине пусрӗ. Кӗсйинчен татӑк кӑларса пушмакне сӑтӑркаларӗ. Каҫ пулса ҫитнӗ пулин те пушмакӗ йӑл-ял ҫуталса илчӗ.

Самаях иртрӗ вӑхӑт. Кӗлет тӑрринчен кармашса тулли уйӑх пӑхрӗ. Вӑл тӳпенелле хӑпарать эteme усал-тӗсел тӗшмӗшпе хур тӑвасран ҫӑлма. Уйӑх ҫутинче ҫыннӑн хӑюлӑхӗ ӳсет, ҫирӗппӗн утать вӑл ҫӗр ҫийӗн.

Хӗре кӗтекен каччӑ пӑшӑрхануллӑ. Вӑл Ультие кӳренет. Чӑтаймарӗ текех ҫӑвар уҫмасӑр:

— Эй, Тӑват куҫ, манран мӑшкӑллама шут тытман-и эсӗ? Ӑҫта сан акаму? Сутрӑн тӑк асту, каҫару ан кӗт.

— Чăт кăштах. Сумлă хĕр тӳрех ытамна ыткăнмĕ. Чăнах, тарăхтаран путсĕр сăмаххусемпе. Урпа хылчăкĕ.

— Асту: эпĕ — хисеплĕ хусах.

— Кун пирки ăнлантар пулас савнă хĕр упраçна.

— Ан вĕрент мана.

— Шăплан. Ав калинкке уçăлчĕ. Тухрĕ. Пул кавалер! Айванкка, мĕн туса ларан?

Праски Çемен ыйхи чалт! уçăлчĕ. Ыткăнчĕ хĕр патне. Çитрĕ çич-сакăр ярса пуссах. Аллинчен çавăтасшăнччĕ, анчах самант пăрахăçларĕ. Ярса тытрĕ вара тӳрех пилĕкĕнчен. Çийĕнчех хĕр çупкă çитерчĕ пит-куçран вут кăларса.

— Чим-ха, санăн аллу ытла çӳлте-çке, — каччăн çилли хăпарчĕ. — Кĕскетме тивет. Пусса ан сур — хăвăнах ĕçмелле пулĕ.

Çак ваттисен сăмахне ахалех аса илмерĕ Праски Çеменĕ. Пĕрлешсен, туй иртсен, ӳкĕнмелле пулса тухас пирки тĕкрĕ.

Тилярăн пуçĕнче ӳлĕмхи карталанмасть. Вăл тарăхрĕ. Чĕлхипе касса та татрĕ: «Нихăçан та мана тĕкĕнме ан хăй!»

— Тĕрĕс! Ятлаçса паллашакансем пурнăçра ыр кураççĕ! — терĕ Ульти. Вăл сисĕмлĕ. Самант тавçăрчĕ: хĕрпе йĕкĕт хушшинче вут хĕлхемĕ чĕл-чĕл чĕллетет. Туслашичченех тăшмана тухĕç. Капла пайта кураймăн. Ачашшăн чĕнчĕ вара ăна: — Акамçăм, кил кунта!

Тиляра хĕр юлташăн чĕнĕвĕ те килĕшмест, ытла пылак. Ку вĕçкĕн çыннăн ятне те пĕлмест вăл. Сĕмсĕрскер. Çиллессĕн сăмах вĕçертсех вара:

— Кам эсĕ? — терĕ.

— Эпĕ-и? Ха-ха-ха! — ахăлтатрĕ те каларĕ: — Эпĕ, чиперккем, Праски Çеменĕ.

— Мĕншĕн çулăхан эсĕ ман çумма, Праски Çеменĕ?

— Ăçтан шухăшласа кăлартăн кăна? Мĕн-ма çулăхап? Пĕл: эпĕ чăн-чăн кавалер, — мухтанать хайхискер.

Тиляр пырса ларчĕ пĕрене çине Ультипе юнашар.

Праски Çеменĕ те маххă памасть. Вăл сĕмсĕрленме шухăш тытрĕ. «Ку пике мăнкăмăллăхĕпе парăнтарасшăн. Пуçа усмастпăр. Хăрлатакан арăслан çурине алла вĕрентме лекет».

Тĕлĕнсе пĕтерейместь Тиляр çак этемрен. «Кам патне килнĕскер ку? Нивушлĕ Ульти илĕртет ăна? Ара, унăн сав-

ни — моряк пур-иç? Ăна паян-ыран çартан таврăнасса кĕтет. Эппин, ман пата-и? Кунашкал савнирен — Тур çăл. Килĕшмест, чун йышăнмасть», — шухăшсем çаплаллисем Тиляр пуçне кĕчĕç.

— Шел, паян аслă вăйă çук, — ассăн сывласа илчĕ Ульти.

— Мĕншĕн? — кăсăкланчĕ Тиляр.

— Эпирччен пурăннă яш-кĕрĕм эрнере пĕр хут, вырсарнинче, аслă вăййа пуханнă.

— Чимĕр, тахăш урамра ташша çапаççĕ, — терĕ Праски Çеменĕ.

Тĕрĕсех, купăс калани, алă çупни илтĕнет.

— Анаткасра. Унта хĕр нумай. Вĕсен кашни каç — аслă вăйă, — кулянса пуплет Ульти. — Кунта кичемленсе лариччен атьăр вĕсем патне.

Юнашар ларакансем хирĕçлемерĕç.

Праски Çеменĕ хĕрсене вĕçертмерĕ, хулран çавăтнă та пырать вĕсене талкăштарса. Кĕрсе кайрĕç çырмана тăранакан Ультисемпе кӳршисен пахчисен хушшинчи тăкăрлăка.

— Эсир, йăмăкăмсем, темшĕн кичем, — тет Праски Çеменĕ. — Сире пĕр кулăш каласа парам-и?

— Тăрăшсах итлетпĕр. Ихĕлтетме яланах хавас.

— Савăнтартăр. Итлĕр эппин.

...Ун чухне эпир пиллĕкмĕш класра вĕренеттĕмĕр. Чăваш чĕлхипе литератури учительници, çап-çамрăкскер, пĕрремĕш çул вĕрентет, урок пуçларĕ. Япала ячĕсем ăçтан пулса кайни çинчен ăнлантаратчĕ пулас. Чи хыçалти парта хушшинче ларакан Мишша Юманов аллине çĕклерĕ.

— Мĕн каласшăн эсĕ, Юманов?

— Ыйту пур.

— Тархасшăн, итлетĕп.

— Тăвата сас паллинчен тăракан япала. Эсир ăна кашни кунах тытатăр. Мĕн вăл?

Учительница сасартăках хĕрелсе, тарăхса кайрĕ.

— Вон класран! Халех тухса кайнă пултăр! — кăшкăрса ячĕ учительница. — Ыран шкула аннӳпе е аçупа килетĕн.

Мишша çав тери аванмарланчĕ. Япалисене пухнă чух вăл йăл-йăл кулкаларĕ темшĕн. Тухса кайма алăка уçрĕ те класалла пăхса тăнă май калаçрĕ:

— Вера Ивановна, ахалех кӳрентĕр. Тăвата сас пал-

лиллĕ япала вăл — пурă. Анчах та эсир мĕнле япала пирки шухăшлани мана питĕ килĕшрĕ. — Алăка хупрĕ те шкултан тухса кайрĕ Мишша.

Мĕн шухăшларĕç-ши Тилярпа Ульти, анчах ахăлтатса кулчĕç.

Тăкăрлăкран тухрĕç вĕсем. Ĕнтĕ çырма урлă каçмалла. Тĕпĕнче юхан шыв шăнкăртатса выртать. Лаптак чулсем выртаççĕ. Ку — каçă. Кĕтмен инкек! Ульти мелсĕр пуснă имĕш, урине ыраттарнă. Айлатать.

— Эсир иксĕрех кайăр ĕнтĕ вăйиа, — тет Ульти. — Ура шутсăр сурать. Пĕрре ярса пусасси — вилĕм. Вырăнтан хускалаймастăп. Ай-ай.

— Сана киле çĕклесе каятпăр, Ульти, — пĕлтерчĕ Тиляр. — Çеменпе аллăмăрсене хĕреслетсе тытатпăр та — саншăн пулчĕ те наçилкка. Улпут майри пек пырăн ларса. Юрĕ-и?

— Эпĕ килĕшетĕп, — пĕлтерет хăй шухăшне Праски Çеменĕ.

— Тавтапуç. Анчах эпĕ кукамайсем патне кĕрсе юлатăп. Ав вĕсен килĕ, — аллипе тĕллесе кăтартрĕ Ульти çывăхри кил-çурт хапхине, — аллă хăлаçран ытла мар.

Сылтăм урине пачах пусайманскере Тилярпа Праски Çеменĕ икĕ енчен çавăтса хапха умне çитерчĕç. Вара Ульти хăрах урипе сиккелесе калинккене уçрĕ. Тăпсисем — музыкант. Чуччу ярăннă май яраççĕ юрласа: чĕри-и-ик!

— Каçар ĕнтĕ мана, Тиляр, вĕçне çити пĕрле пулаймарăмăр, — кулянанçи пулать Ульти.

— Инкек-синкек хăш тĕлте çапса ӳкерессине чухлаймастăн, — чăнласах хĕрхенет ăна Тиляр.

— Ан пăшăрхан, Ульти, — йăпатать ăна Праски Çеменĕ. — Ыйхă аптратсан паппа ту ырă тĕлĕксем курса. Тус тантăшушăн ан кулян, ăна вылятса та култарса килне çитиех ăсатма сăмах паратăп.

— Шанатăп, санăн хăюлăху мана савăнтарать. Тăмана ан пул! Хĕр тени ăмăрт кайăка паттăр пулнăшăн çывăха ярать. Ан ман!

Ульти хапхине хупнă май ахăлтатса кулчĕ.

Вĕсен халап-юмахĕ, кулли Тиляра килĕшмерĕ çеç мар, тарăхтарчĕ те. Чунĕ сисет: чеескерсем тискер ĕç тума айланаççĕ ахăр.

— Пĕччен каятăп эпĕ. Кил тĕлне манман, — терĕ Тиляр ҫырманалла чупнă май.

Хĕр сăмахĕсем Праски Ҫеменĕн чĕрине тикенек пек пырса тăрăнчĕҫ: «Шăл катайман мăйăрах-ши вара эсĕ? — шухăшлаттарчĕ ăна. — Эпĕ мар, хăй мана юратнипе чĕнтернĕ, анчах ялан вирелле тăрать. Тиркеместĕп-ха хăйне. Килĕштеретĕп. Тĕрĕссипе каласан, юрататăп ăна. Ахаль каламаҫҫĕ иккен: юрату расписание пăхăнса килмест. Ытах парăнмасассăн ман вăйăм пур. Аватпăр», — чупрĕ хĕр хыҫҫăн.

— Тиляр, тăхта-ха, купăс калакан ҫĕре каяр-и?

— Пĕччен вĕҫтер! — ҫапла тавăрчĕ те хĕр пĕрчи пусҫран ҫапнăн ҫырма тĕпнелле вăркăнчĕ. Ним уямасăр, тĕлли-паллисĕр пускаласа, шыв кӳлленчĕкĕсене ҫатлаттарса шурлăхлă вырăнтан каҫрĕ. Тăвалла хăпарса тăкăрлăка тухрĕ чиперех.

Праски Ҫеменĕ те татăлса юлман. Хуса ҫитрĕ те Тиляр сисиччен аллипе мăйĕнчен ҫĕлен пек явса тытрĕ. Унтан хĕр питне хăй енне ҫавăрчĕ, чăп-чăп чуптуса илчĕ. Тиляр йĕкĕте пĕтĕм вăйран хăй ҫумĕнчен тĕксе ячĕ.

— Ытла япшар чуптăватăн-ҫке эсĕ, — терĕ Тиляр шăл витĕр.

— Эпĕ хĕрсене чуптăвас енĕпе тахҫанах чемпион ятне ҫĕнсе илнĕ, — ахăлтатрĕ Праски Ҫеменĕ.

— Тьфу! — сурчĕ Тиляр. — Мĕнле хăйрăн сĕлекӳпе ман тутана варалама?! Ку тарана ҫитсе никам хăяйман тĕкĕнме.

— Малашне унăн хуҫи эпĕ пулатăп.

— Хура шăна темерĕн, — алне сулчĕ те малалла утрĕ Тиляр.

Праски Ҫеменĕ каллех ун умне чупса тухрĕ, аллинчен ярса тытрĕ, пуҫларĕ пакăлтатма:

— Мĕншĕн хирĕҫетпĕр, мĕншĕн тиркен мана? Эпĕ калпай мар, ялти чи хисеплĕ каччăсенчен пĕри. Пирĕн тутасем кĕтмен ҫĕртен пĕр-пĕрин патне магнит пек туртăнчĕҫ, анчах васканипе тата шикленнипе пехетсĕр сĕртĕнчĕҫ. Тути-масине лайăххăн сисмесĕрех юлтăмăр. Халĕ килĕштерер те пĕр-пĕрин тутисене ĕмсе пĕтĕм ырă туйăмсемпе киленсе ыталанар, пĕр-пĕрне тута парар.

— Сан тутуна перĕниччен вутпуҫҫипе чуптăватăп.

— Аху-у! Эсĕ ҫапла мăшкăллатăн-и? — сиксе ӳкет

Праски Çеменĕ. Вăл Тиляра урараn ÿкересшĕн тапаçланма тытăнчĕ.

Тупата, ытла сĕмсĕркке ку каччă. Ара, Турă ăшă та çепĕç чĕлхе паман пулсан вăйпа ăçтан çĕнтерĕн? Хĕрсем те хур чĕппиsem мар. Уйрăмах Тиляр, пысăк хулара çамрăксем хушшинче пурăнса курнăскер, хăйне хÿтĕлеме хăнăхнă. Ку ашкăнчăк этем ниепле те лăпланаймасть. Чарăн тенине йышăнмасть: тапăнас, парăнтарас ĕмĕчĕпе шав урараn ÿкересшĕн тăрмашать. Ирĕксĕрех Тиляр хăйне вĕрентнĕ меслетпе усă курчĕ. Хутланса ларчĕ мĕскĕн.

— Эх, выльăх çимен пиçен, — кулкаласа илчĕ Тиляр. — Чеелĕхÿ санăн хăвăнтан мăнă. Хÿтĕлес вырăнне хĕрсене пичĕсене кĕççе çĕлеттерешĕн чĕркуçлентерме. Вара санăн çулу усăлать путсĕр ĕçна хута яма.

— Каçар, — тет авăннă Праски Çеменĕ йăваш сасăпа. — Кăна эпĕ мар, манăн мĕскĕн юратăвăм сана çупăрласшăн. Эпĕ айăплă мар. Мана юратнипе хăв чĕнтернĕ. Эсĕ килĕшетĕн мана.

— Кам суйса панă? Эпĕ сана юратмастăп.

— Ульти киле пырсах тăхăçларĕ. Эсĕ мана юратан, кĕтен имĕш.

— Эсĕ ĕненнĕ. Ахаль каламаççĕ иккен ваттисем: ухмахсене акмаççĕ, вĕсем хăйсемех шăтаççĕ, — Тиляр алне сулчĕ те тÿлеккĕн утрĕ малалла.

Хальхинче ĕрĕхмерĕ хĕр хыççăн. Мăкăртатса юлчĕ Праски Çеменĕ:

— Манăн пулатăнах. Вăхăт çитсен йывăç хăйĕн çулçине тăкать. Манăн девиз çапла: «Ан нăйкăш, Çемен, кĕт хавaслă куллупа хăвăн йÿнеçÿллĕ самантна».

Тиляр хашкаса килне çитрĕ. Праски Çеменĕ хыçран кĕресрен хăранипе хапхана шăкăр-шакăр питĕрчĕ. Юрать, пÿрте кĕмелле мар, атту аппăшĕпе йыснăшĕ вăранма пултараççĕ. Унăн вырăнĕ — кĕлет умĕнчи чаршав айĕнче. Салтăнса чăмрĕ вара утиял айне. Тăкăрлăкра çапла тĕпĕртĕпĕр пулса иртнĕ хыççăн ыйха путăн-и хăвăрт? Хăлхана темле сасă та кĕрет ав. Анаткасра купăс юлашки çаврăмне вĕçлерĕ пулас, тек сас памарĕ. Каштари автансем шарлаттарчĕç: ки-ки-ри-ку-ук! Мухтанаççĕ мар-и? Ара, вĕсем çеç сисĕмлĕ, вĕсем çеç пĕлеççĕ çур çĕр çитнине. Анаслать хĕр. Ыйхă ăна элеклет, хăй сăпки çине вырттарать те

ерипен-ерипен ярӑнтарать. Шухӑшсем ирӗке вӗҫеҫҫӗ, выляҫҫӗ пытанмалла. Ҫук, тек хӗр пуҫне кӗрсе чунне пӑлхатасшӑн мар вӗсем. Ытла та канлӗ-ҫке. Никам та чӑрмантармасть. Хӗр пӗрчи лӑпкӑн ҫывӑрать.

## 4

Утать, утать Тиляр, ҫул вуҫех ӳсӗнмест. Ӑҫта вара ҫынсем? Иккӗн пуплесе утма аван та-ҫке. Ахалех кӑмӑлсӑрланать хӗр. Унпа пӗрле тӗрлӗ-тӗрлӗ шухӑшсем. Акӑ Ульти аса килчӗ. Чеескер вӑл, суеҫ те. Курӑнӑҫма та кирлӗ мар ҫавнашкал ҫынпа. Анчах кӳршӗ хӗрӗ-ҫке вӑл, мӑртлатса пурӑнни килӗшӳсӗр. Ӑнланма хӗн, темшӗн ӑна Праски Ҫеменӗпе туслаштарасшӑн. Ҫӗркаҫ та кулӑш пулса иртрӗ.

* * *

...Ҫӗр пике тӗттӗм сараппан тӑхӑннӑ тӗлелле ӗҫ пуҫтарӑнса ҫитрӗ те Тиляр урама тухрӗ. Улти пахча карти ҫумне йӑвантарнӑ пӗрене купи ҫинче ӑна кӗтсе ларать. Мӑшӑр кулюкка пулчӗҫ.

— Паян эпӗ Мичмансем патне кӗрсе тухрӑм, — йӑлйӑл кулкалать Ульти.

— Мичманӗ таврӑнни-мӗн?

— Ҫук-ха. Кӑмакаран кукӑль пиҫсе тухнӑн кӗтетпӗр. Паян-ыран ҫитет.

— Телейлӗскер эсӗ, — тет Тиляр.

Ним асӑнман ҫӗртен ума Праски Ҫеменӗ пычӗ тӑчӗ.

— Ай-уй! Эсӗ паян киле таврӑнмастӑп терӗн-иҫ, — тӗлӗнет Ульти.

— Тӳсеймерӗм. Чун кунта ҫавӑтса килчӗ, — тӳрре тухать Праски Ҫеменӗ. Вӑл чӗнессе, сӗнессе кӗтмерӗ, Тиляр ҫумне йӑшт! ларчӗ. Вара алӑ сумкинчен шоколад кӑларчӗ те Тиляр арки ҫине лап хучӗ. Алӑран тыттарма иккӗленчӗ илмесӗр тӗксе ярасран.

— Кирлӗ мар, — терӗ Тиляр тӗлӗнсе.

— Ма-на-а, — кӑшкӑрчӗ Ульти, — пайсӑр ан хӑвар!

— Ан васка-ха, — мӑкӑртаткаласа Праски Ҫеменӗ сумкинчен тепӗр шоколод кӑларчӗ. — Ме, тыт! Паян эпӗ пуян, ӗҫшӗн укҫа илтӗм.

— Нумай пачӗҫ-и? — тӗпчет Ульти ҫӑвар тулли чӑмланӑ май.

— Пĕр портфель тулли, — мухтанать Праски Çеменĕ. — Аран çĕклесе çитертĕм. Йăлтах аннене патăм. Хама тек кирлĕ мар, машин туяннă. Кăмăлăр пур-и? Хамăн машинăпа катаччи чуптаратăп.

— Ай-уй! — сиксе тăчĕ те Ульти ташша яра пачĕ.

— Пултаран, Ульти, — мухтать ăна Праски Çеменĕ. — Манăн туйра та çапла хаваслăн ташласса шанатăп.

— Авланатăн-и? Арăму пуласси тупăнчĕ-и?

— Пĕр чиперккене питĕ юрататăп. Ыран-паян хăтана яратăп.

— Кам-ши хĕр упраçĕ? Пĕлесчĕ ăна, — текелерĕ ытахальтен Тиляр ихĕлтеткелесе.

— Хĕрĕ эсĕ тесен мĕн калăн?

— Хĕпĕртеттĕм, — йĕкĕлтесе йăхлатса кулчĕ Тиляр. — Анчах эсĕ ман пеккисене пăхас каччă мар. Тепĕр тесен, сан валли аннӳ тахçанах пĕр-пĕр чиперук суйласа хунă.

Праски Çеменĕ, çакна кĕтменскер, чĕлхине çухатрĕ. Ара, амăшĕ ывăлĕ çинчен калаçма юратать. Тен, пĕр-пĕр хыпар илтнĕ ун пирки Тиляр.

Юрать Ульти пулăшрĕ:

— Амăшĕ, Праски инке, ырă кăмăллă хĕрарăм. Ывăлне çав тери юратать, ăна хирĕç каякан йышши мар.

— Чăн сăмахăн суйи çук, — чăрт сурса илчĕ Праски Çеменĕ. Ӳсĕркелесе пыр тĕпне тасатрĕ те тытăнчĕ сăмах юхтарма. — Хăтана çӳресе чăрманма кирлех те мар. Пустуй мĕн-ма вăхăт ирттерес? Тиляр, атя манпа. Анне пил парать. Ĕçĕ те пĕтнĕ. Эпир упăшкипе арăмĕ. Килĕшетĕн-и?

Хĕр яваплама ĕлкĕреймерĕ. Çак вăхăтра шăкăр-шакăр, чăнкăр-чанкăр туса чӳрече уçăлчĕ.

— Йăмăкăм, вăхăт çитрĕ, кĕрсем! — чĕнчĕ Тиляра аппăшĕ.

— Халех! — йăкăлт сиксе тăчĕ те хĕр вĕçтерчĕ никампа сывпуллашмасăрах. Часах хапха кăриклетсе уçăлса хупăннă сасă илтĕнчĕ.

Пĕренесем çинче ларса юлнисем, ним те ăнланмансксерсем, кĕтрĕç-кĕтрĕç каялла хĕр тухасса. Кăлăхах. Тиляр тек хăйне тухса кăтартмарĕ. Вăйă саланчĕ. Праски Çеменĕ тăкăрлăкра пĕчченех утнă май хытă кăшкăрса юрларĕ:

Анне мана хӗр суйла терӗ,
Саррине те вӑрӑммине.
Ҫӳҫӗ вӗҫӗ кӑтрине,
Вӑр ҫаврака питлине...

* * *

Тиляра никам та хуса ҫитмерӗ, пӗчченех утать. Пуҫ вара пачах пушанмасть-мӗн. Шухӑшсем каллех Ульти пирки капланчӗҫ. Курсран вӗренсе тухрӗ, вӑл — газовик. Ҫӳрет-тӗр-ха газ аппарачӗсене тӗрӗслесе, юсать те.

Тепӗр темиҫе кунтан Тиляр та вӗренсе тухать, вӑл ӗнтӗ — бухгалтер. Ӗҫпе паллашмалла тӑтӑшах колхоз правленине кӗрсе тухкалать. Бухгалтерӑн тем те пӗлмелле. Уй-хирте ҫӗнӗ тыр-пул пиҫет ав. Миҫе тонна колхоз кӗлетне кӗрӗ? Мӗнле усӑ курмалла унпа? Ӑна графасем тӑрӑх тӗп-тӗрӗс палӑртса тухмалла. Кашни ӗҫӗн хӑйӗн хакӗ пур. Ӗҫлекенсене тӗрӗс тӳлесси унран килет.

Шухӑш тыткӑнӗнчен Тиляра куҫа мӗн курӑнни уйӑрчӗ. Умра, аякрах та мар, ката ҫумӗпе хывнӑ сукмак хӗрринчи тунката ҫинче пӗри ларать. Пуҫӗнче унӑн лентӑллӑ сӑмсасӑр карттус. Эппин, вӑл — моряк. Ури вӗҫӗнче — чӑматан.

Хӗр пӗрчи тӑпах чарӑнчӗ. Мӗнле иртмелле ку ҫын умӗнчен? Каялла тапмалла-и?

— Ан хӑра! — кӑшкӑрчӗ тунката ҫинче ларакан этем. — Эпӗ усал ҫын мар, тивместӗп сана.

— Хӑраса мар-ха, — текелерӗ Тиляр, ҫывхарнӑ май сывлӑх сунчӗ ӑна.

Моряк та ҫынна сума сӑваканскер пулас. Хӗр пикене ӑшшӑн саламларӗ. Хӑйӗн хура куҫӗ ахах чулӗ пек йӑлтӑртатать. Куҫ харши — хура хӑю. Икӗ енчен тӑсӑлса сӑмса кӑкӗнче ҫинҫелсе сыхӑннӑ. Питӗнче хура ҫинҫе хӑю татах пур. Вӑл ҫӳлти ҫӳхе тута хӗррине ҫыпӑҫнӑ.

Моряк ура ҫине тӑчӗ. Яш пӳллӗскер. Ҫурӑм хыҫӗнче кӗпин йӑрӑм-йӑрӑмлӑ сарлака ҫухи ҫилпе вӗлкӗшсе илчӗ. Карттусне хывса чӑматанӗ ҫине хучӗ те тура кӑларса ҫӳҫне якатрӗ. Ҫӳҫӗ хура та кӑтра, шыв хумӗ евӗр хумлӑ-хумлӑ.

Тиляр ун умӗн иртме пикенчӗ.

— Чим-ха, — чарчӗ ӑна моряк.

Хӗр пӗрчи шикленчӗ. Тен, вӑл усал шухӑшлӑ этем?

— Эпӗ васкатӑп-ха, — терӗ Тиляр.

— Мӗншӗн пӗччен ҫӳретӗн-ке ката ҫумӗпе?

— Манпа пӗрле ялтан никам та вӗренмест, ҫавӑнпа район центрне хӑраххӑнах кайса килме тивет. Эпӗ бухгалтер курсӗнче вӗренетӗп те, — утма тытӑнчӗ хӗр.

— Ан васка-ха ҫав териех. Хӑвпа пӗрле утма хирӗҫлемӗн-и?

— Тархасшӑн, — терӗ Тиляр. Хӑй хӑранипе чӗтренех ерчӗ.

— Эсӗ хӑш ял хӗрӗ-ке?

Тиляр каларӗ.

— Ӗненместӗп. Суян пулӗ? Пирӗн ялта санашкал хӗр ҫук. Яту мӗнле санӑн?

Ӑнлантарма, ятне калама тиврӗ хӗрӗн.

— Эсӗ — Илтимӗр. Йӑнӑшмарӑм-и?

— Ӑҫтан пӗлен-ке ман ята? Эпӗ чӑнах та — Илтимӗр.

— Эпир, хӗрсем, пӗр-пӗрин савнисене асра тытатпӑр.

— Халӗ йӑнӑшрӑн. Манӑн савни ҫук.

— Суян! Вӑл чиперкке сана чунтан кӗтет.

— Ха-ха-ха! — каҫса кайсах ахӑлтатрӗ моряк. Хӑйӗн шӑлӗсем пӗр тикӗс те шап-шурӑ. Кулнӑ май хура куҫӗсем хӗсӗнчӗҫ. Лӑплансан каларӗ: — Тиляр, вӑйӑра паллаштарӑн-и мана хамӑн савнипе? Ятне те халех пӗлсен аванччӗ.

— Мӑшкӑллан пулӗ, йӗкӗт, — йӑл-йӑл кулкаларӗ Тиляр. — Кам патне ҫаплах ҫыру ҫырса тӑтӑн?

— Пӗр хӗр патне те ҫыру ҫырман.

— Мӗн-ма пытаран? Ульти кашни ҫӗнӗ кун санран ҫыру илнӗ. Маттур каччӑ. Хӑй пикине манман. Вӑл сана кӗтет.

— Ав епле иккен, — тӗлӗнчӗ моряк.

— Каҫарӑр, тен, ытлашши пакӑлтатрӑм. Эпӗ каям-ха эппин.

— Мана пӑрахса хӑвармастӑн пулӗ? Пӗрле утма килӗшнӗччӗ. Ҫапла-и?

— Тархасшӑн.

Илтимӗр чӑматанне йӑтса хӗрпе юнашар утрӗ. Хӑй тӑтӑшах куҫ хӳрипе ун ҫине пӑхрӗ ытарайми. «Япшар пике. Сӑн-пичӗ — ҫырла. Татса илес килет. Пӗвӗ-сийӗ — хӑва хулли. Тумӗ те ятуллӑ. Паянхи модӑпа ҫӗленӗ — кӗске. Пурҫӑн ҫук ун ҫийӗнче. Ҫӳҫӗ сарӑ та вӑрӑм, ҫурӑм тӑрӑх ярт уснӑ. Чӗлхи те ҫепӗҫ, сӑмах урапине кустарма

ăста. Ара, самант Ультипе йĕкĕлтесе илчĕ. Пустуях шыв юхтарать. Çыру çӳретмен. Савни мар-çке-ха вăл, апла пулсан мĕншĕн пушă параппан çапмалла-ке? Ытла кăсăклă, мĕншĕн Ульти çумне хушрĕ? Нихăçан та вăл хĕр унăн тӳрри пулман. Тĕрĕссипе илсен ку тарана çитсе те пĕр хĕр умĕнче чуна уçса паман. Авланас пирки юмахлама та именнĕ. Анчах çав самант çитетех, ĕмĕр хусах пурăнаймăн. Ютра хĕрсем майиран уртăнман мар. Нихăшне те киле илсе килме чун туртман. Тен, тăван ялăмрах тупăнĕ юрăхли. Тăван енче чул та ĕнчĕ теççĕ-ха. Чим, мĕнрен кая-ха юнашар утакан чиперук? Куçа илĕртет. Кăмăлĕ те аванах пулас. Калаçтарас май килнĕ чух. Тĕпчес. Пур-ши унăн варли? Чупатех-тĕр ăçтиçук лиска йытă. Эппин, хăратас та хăвалас, хĕр кăмăлне хам майлă çавăрас».

Çакнашкал ĕмĕт-шухăш пуç тавра çаврăнчĕ Илтимĕрĕн. Вăл чăматанне çĕре лартрĕ те хĕр аллине ярса тытрĕ, вара ыйтрĕ куçран пăхса:

— Тиляр, кала-ха, пур-и-ке сан савнă каччă?

— Хĕр чух хĕрĕх тус теççĕ те-ха...

— Ат-та-та! Мичман?! Таврă-на-а-тăн-и?

Кăна сулахай енчи сукмакран тухакан арçын кăшкăрса ячĕ. Хĕрĕнкĕскер, енчен енне тайкаланать хăй. Сывлăх сунма манмарĕ, алă тытрĕ. Анчах Илтимĕр аллине хăйĕн ывăçĕнчен кăларнă чухне лешĕ куçне чарса пăхрĕ те тытăнчĕ пакăлтатма:

— Эх, ачамккă, сан пӳрнӳсем кĕсье вăррисенни пек питĕ вăрăм-çке. Таçта çав ĕçпе çыхăнман-и эсĕ?

— Якур, мĕн кирлĕ мара лапăртататăн эсĕ? — кăтăрса кайрĕ Илтимĕр. — Эпĕ тĕрмерен мар, салтак хĕсметĕнчен — флотран таврăнатăп.

Ĕмĕт татăлчĕ морякăн. Пикепе путлĕн юмахлаймарĕ çак ăçтиçук этеме пула. Чăрмантарчĕ, кăмăла пăсрĕ хăямат çынни. Мĕн тăвăн? Ых-х, çав чăкрăш самант, кирек хăш кĕтесре те çапла ура хурать. Ытла кулянма кирлех-ши? Ку тĕнче вĕçленнине пĕлтермест. Малта — каçхи вăйă.

Илтимĕр шутсăр тарăхать ку путсĕре, ара, чиперккепе пуплеме май памасть тем те пĕр авăрса пынипе. Çитменнине, яла çитрĕç.

Укăлча хапхинчен кĕрсен Тиляр никама систермесĕр йăпăрт хăйсен урамĕ еннелле пăрăнчĕ.

* * *

Сунă сĕте ала витĕр юхтарса нӳхрепе антарса лартнă хыççăн Тиляр кантăк умне пырса тăчĕ. Урам пуш-пушах. Халăх яра кун уйра ĕçленĕ хыççăн кил-çурта тирпейлет, касхи апат пĕçерсе сĕтел хушшине пуçтарăнать, вара канма выртать. Пуçра чăтăмлăх калинкки уçăлчĕ яриех. Тытăнчĕç вара куç умĕнче пулса иртнисем каркаланма. Çавăраççĕ вĕсем Тиляр кăмăл турамне каллĕ-маллĕ лăкама. Чи малтан вăл Ультие ăмсанчĕ. Юраттăрха сана çавнашкал хӳхĕм йĕкĕт. Ним те калаймăн — телейлĕ хĕр. Тиляра ку тарана çитсе те унашкал япшар каччă куç хывман. Самант асне типĕ тикенек пĕрчи хирĕнсе кĕчĕ те шĕвĕр вĕçĕпе тирчĕ: «Ха-а, Праски Çеменĕ саврĕ-çке!» Хĕр ку ни хура, ни шурă шухăш темелле марскере сирчĕ те курчĕ: «Ĕмĕт турачĕ çине мерчен куçлă сарă кайăк пырса ларчĕ. Шăрантарать вăл хаваслă юрă — каччă савни çеç çителĕксĕр, хĕрĕн хăйĕн юратмалла».

— Хăш çулпа утмалла-ши юратнă çынпа тĕл пулас тесен? — ыйтать Тиляр. Камран пĕлесшĕн вăл, хăй те чухламасть. — Çӳрет-тĕр таçта, манран аякра-аякра, тен, тинĕс леш енче. Хăш тинĕс? Паллă мар. Тем тесен те, вăл хăй те мана, савнă пикине, шырать? Тĕл пулайăпăр-ши?

Илтнĕ вăл аслă пикесенчен: пĕр-пĕрне савмалли хĕрпе каччă тĕл пулмасăрах ĕмĕрĕсене ирттереççĕ тет. Енчен эпĕ çавсен йышĕнче пулсан? Мĕншĕн вĕсен йышĕнче пулам? Эпĕ çамрăк-ха. Кĕтем. Шăпам акă çавăтĕ те килĕ ăна.

— Йăмăкăм! Тиляр! — чĕнет ăна аппăшĕ çенĕкре.

Пӳрт алăкĕ уçăлса хупăнчĕ. Аппăшĕ Элевер кĕчĕ.

— Эсĕ кунта-çке, — чĕвĕлтетет Элевер тĕпел кукринелле иртнĕ май. — Хатĕр-и утара кайма?

— Паллах. Кĕтетĕп эсĕ чĕнессе.

Аппăшĕ часах чăлантан пушă бидон илсе тухса йăмăкне тыттарчĕ. Пыл юхтарать ĕнтĕ кунта аппăшĕн упăшки. Хăй, Элевер, çăкăр, кулач, кукăль татах тем те пĕр чикнĕ пысăк кушеле çурăм хыçне çакрĕ.

Картишĕнче пĕчĕк урапа ларать. Ун çине тиерĕç япалисене. Тухса кайрĕç вара килтен. Васкаса утрĕç.

— Элевер, паян çул çинче пĕр моряка тĕл пултăм. Эх-х, чиперскер! Чăн-чăн кавалер. Маначчĕ çавнашкалли, — терĕ Тиляр.

— Аппаях! Кам, ара, вăл? — тĕлĕнчĕ аппăшĕ. — Паллашмарăн-и?

— Сирĕн ял каччи. Ячĕ унăн — Илтимĕр. Çартан таврăнать, флотран.

— Э-э-э, пĕлетĕп. Вăл Минепи Ивановна ывăлĕ, — терĕ Элевер. — Мĕн калаçать?

— Чăрмантаракан тупăнчĕ. Ним кĕтмен çĕртен Павар енчи сукмакран Тякка Якурĕ пырса тухрĕ те морякран шăл йĕрме тытăнчĕ.

— Якурăн çынран тăрăхласа пултăр.

— Вирлех лекетчĕ-ха ăна. Юрать, хăйне мĕн кĕтнине вăхăтра тавçăрчĕ.

— Ахалех ăса кĕртмен ăна, емелккене. Ытлашши çăварне карать.

Кăшт чĕнмесĕр утрĕç. Умра — тарăн вар. Анса хăпарчĕç.

— Аппа, — терĕ те чарăнса тăчĕ Тиляр. Ăна тĕпчев ыйтăвĕсем иментерсе, çăварне хуптарса тутине тăп тыттарчĕç. Тунсăхăн вăйĕ пысăк. Вăл çумрах. Ирĕк пар кăна, çавăнтах тăлланан. Сĕлкĕше юрă кăна юрласа ячĕ.

Тиляр аппăшĕ илтмелле кăна юрласа ячĕ.

Çунат хушассăм килет,
Шăпчăк пулассăм килет.

Аппăшĕ те хутшăнчĕ:

Садран сада çӳре-çӳре
Юрă юрлассăм килет...

Пысăк, сатур вăй пур çак юрăра. Пăсăк кăмăлăн хылчăкне йăлт шăлса ывăтать. Чăтаймарĕ Тиляр сăмах тапратмасăр каллех моряк пирки.

— Мĕнле йĕкĕт вăл — Илтимĕр?

— Япăххине илтмен. Амăшĕ — Минепи Ивановна — ялти чи йĕркеллĕ хĕрарăмсенчен пĕри. Шăллĕ Мĕтри пирки те çынсем ырă калаçççĕ.

— Илтимĕр чăнахах та Ультие юрататъ-и?

— Çамрăксене ăçтан пĕлсе çитерĕн? Вĕсене пĕр-пĕрне юратни килĕшет те. Ялта каланă пек, кушак ачху тусан та хавха кăлараççĕ. Э-э-э, астурăм. Ульти: «Эпĕ салтакăн пулас арăмĕ», — тесе каласа çӳрет тетчĕç-няк. Кам пирки çуйхашнă? Тупата, кăсăкланман.

Пуçăннă калаçăва тек тăсасшăн пулмарĕ Тиляр. Паçăр-

хи, çул çинче Илтимĕрпе пуплени, пĕвене татнă шыв юххилле пуçа çĕмĕрсе кĕчĕ. Ăнланма хĕн ку çамрăксене. Вăл Ультие ни ырламасть, ни хурламасть. Çыру çӳретнине йышăнмарĕ.

Утара çитнĕ çĕрелле тĕттĕмленчĕ. Кунта тĕлĕнтермĕш пĕчĕк хула. «Урамĕсенче» речĕ-речĕпе хитре шурă çуртсем — вĕллесем. Сывлăшĕ — хăй сим пыл.

Вĕсене хаваслăн кĕтсе илекенĕ — Мишша — Элевер упăшки тата унăн юлташĕ. Чи хаклă сăн — тулли карас. Çирĕç вара умран юличчен. Тăрансан пыл та йӳçĕ теççĕ. Тĕрĕсех.

Аппăшĕпе йăмăкĕ кунтах çĕр каçрĕç. Вĕсен ĕçĕ — утар пӳртне, кĕлетне çуса тасатасси тата аслатнă картишне чечек акасси. Хурт-хăмăр аякка вĕçсе вăйне усăсăр ан çухаттăр, çывăхрах чечек тупса сĕткен пухтăр.

Тепĕр кунне илĕм-тилĕмпех пуçланнă ĕç яра куна тăсăлчĕ. Тилярпа Элевер яла хĕвел ансан тин çитрĕç.

* * *

Урам енчи кантăк чĕтренсе тăнкăртатать. Такам тăкăртаттарать чĕрнипе. Çывăрма пуçтаранннă Тиляр чупса пырса чӳречене уçрĕ.

— Кам унта? — пуçне тулалла кăларсах унталла-кунталла пăхрĕ вăл. Курчĕ: чие йывăççи айĕнче Ульти ларать «ивуклатса». Хăтăрчĕ вара ăна: — Мĕн хăратса çӳрен?

— Тух часрах урама! — çывхарчĕ чӳрече патне Ульти. — Кĕçĕр аслă вăйă пухăнать.

— И-и-и! Эпĕ кун пирки пачах маннă. Халех!

Тиляр чӳречене хупрĕ.

Ял вăййинче ял хĕрĕ пек тумланмалла.

Тăрать вăййа тухма тумланнă хĕр тĕкĕр умĕнче тăпăртатса. Çийĕнче чечеклĕ çитсăран нумай та пулмасть хăй çĕленĕ икĕ аркаллă кĕпе. Вăл чух çеç, ни вăрăм мар, ни — кĕске. Пилĕке сарă çыхрĕ. Ку — кукамăшĕн парни. Темиçе теçетке çул çӳпçе тĕпĕнче выртнăскер, анчах пăхса ытармалла марскер. Ăна тĕрлĕ тĕслĕ пурçăн çиппе чăваш тĕррипе тĕрленĕ тата вĕтĕ-вĕтĕ çутă шăрçасемпе эрешленĕ, çӳçинче — хурткуççисем. Пуçра — вĕр çĕнĕ тухья. Каситине тĕкĕнмерĕ, йывăр пуласран шикленчĕ, ара виçĕ рет шултра тенкĕ-çке ун çумĕнче. Мăй

çыххипе çырлахрĕ. Качча кайнă чух шурă пĕркенчĕк айĕнче çак тума тăхăнса икĕ (тăван тата аппăшĕпе йыснăшĕ пурăнакан) ял урамĕсем тăрăх тăрантас е машина çинче тăрса хўхлесшĕн вăл. Ĕмĕтĕн вĕçĕ-хĕрри çук теççĕ.

Хапхаран тухма çеç ĕлкĕрчĕ Тиляр, ăна Ульти ыталаса та илчĕ.

— Атя кайса ларар, — пуплет Ульти. — Пире илме часах купăсçăсем килĕç. — Шăппăн юрласа ячĕ:

Эс те чечек, эп те чекек,
Ма ик чечек уйрăм-ши?
Эс те пĕччен, эп те пĕччен,
Ма ик чĕре уйрăм-ши?

«Хаваслă ку хĕр. Эппин, вăл Мичманĕпе курнăçнă», — шухăшларĕ Тиляр. Анчах хăй вăл виçĕм кун унăн каччипе çул çинче тĕл пулни, унпа калаçни, яла пĕрле çитни пирки шарламарĕ. Малтан морякĕ пирки Ульти мĕн калаçнине илтесшĕн вăл.

Иккĕшĕ те яланхи пĕрене çине вырнаçрĕç. Тиляр шăши пек шăп. Вăл Ульти савнă каччи çинчен сăмах пуçласса кĕтет. Лешĕ пур, мăшкăлланăнах, шăлне çыртать. Мĕне пĕлтерет? Юрĕ-çке. Пурпĕрех вăрах тўсеймĕ, салтăнĕ чĕлхи.

Хăямат темерĕн. Ĕлкĕреймерĕ Ульти сăмах тапратма. Ара, ума Праски Çеменĕ хура мĕлке евĕр яш! тухса тăчĕ. Ытла чее этем вăл, çул леш енчи пура хыçĕнче пытанса хĕрсем урама тухасса паçăртанпах вăрттăн сыхларĕ. Тутине ейсе пăрахнă. Пылак ĕмĕтсемпе тулнă хăй тĕнчинче рехетленет мар-и? Кунĕпе пĕр ĕмĕтпе айланчĕ. Авланма шут тытрĕ-çке-ха вăл. Ăнах, çак иртнĕ кунсенче çыхăннă хĕр пĕрчинех, качча илесшĕн. Тиляра нихăшĕ те çитеймест. Ытла хитре-çке-ха вăл. Чунне кĕртрĕ те укаран йăва çавăрчĕ ун валли. «Куштантарах, танлăрах ĕнтĕ хĕрĕ. Тепĕр тесен, хĕр упраçа çапла пулни кирлĕ те ахăр. Тĕкĕннĕ-тĕкĕнмен парăнаканнине хĕр тесе те хаклас килмест. Каччăсен аллинче сарăхнă хĕре кам пит хапсăнтăр?»

Тилярăн тата пуринчен ытла пахи, хакли пур. Чухăнлăх унран аякра тăрать. Вăл часах колхоз бухгалтерĕн пуканĕ çине лармалли çын. Колхоз бухгалтерĕ яланах укçаллă, тыр-пуллă. Ку чи кирлисенчен пĕри — хĕрĕн чаплăран та чаплă парниййĕ.

Пӗччен, амӑшӗсӗр, Ҫеменӗн тӗллевӗ пурнӑҫланаймӗ. Ҫавӑнпа та ӑна йалт тӑхҫаласа пачӗ.

— Э-э-э, пӗлетӗп сана, каскӑна, — алне сулчӗ лешӗ. — Куҫу хитрине, туту пылаккине хапсӑнать. Ҫава тухнӑранпа миҫемӗш хут панӑ сакас ӗнтӗ ку санӑн?

— Тавлашма пӑрах. Ҫуса тасат тенӗ сана кӗлет урайне. Вырӑн майла. Шурӑ простынь сарма ан ман.

— Ӑна сарӑп-ха. Хама та кӑсӑклӑ: пулас арӑму таса е...

— Пӗл ҫав. Вӑл тӑрӑ шыв пек тап-таса.

— Эппин, мӗн ма йӗркеллӗ качча тухмасть? Малтан хӑтана каяр. Калаҫса килӗшмелле: туй кунне палӑртас. Вара унччен эрех юхтарӑпӑр, сӑра тӑвӑпӑр.

— Кая юлнӑ ҫын эсӗ, анне, — мӑкӑртатать Ҫемен. — Халӗ ҫамрӑксем ӗлӗкхи пек шараҫланмаҫҫӗ. Мӗн-ма туйсем туса тӑкакланмалла?

— Хӗрӗн ятне-шывне пӗлтер иҫмасса.

— Утар Михали арӑмӗн йӑмӑкӗ — Тиляр. Кӗҫӗр вӑйӑран ҫавӑтса киле илсе кӗретӗп те ӑна, ме сана — кин!

Халӗ хӗрсем умне пырса тухнӑ Праски Ҫеменӗ ытахальтен ал парса тухрӗ вӗсене. Пуҫӗнче хӑватлӑ шухӑшсем шыв сиккилле сикеҫҫӗ:васкасах палӑртнӑ ӗҫе тытӑнмалла. Ниепле те ырана хӑварма юрамасть, ара, кая юлсан каю шӑтать тесе ахальтен каламан чӑваш. Чунӗ лӑпкӑ мар унӑн. Ялта ҫӑхан куҫлисем самант тупӑнаҫҫӗ.

— Пирӗн хушша ларсам, Ҫемен, — сӗнчӗ Ульти.

— Тепӗртак ӳсем-ха, — тутине пӑркаларӗ каччӑ, — лутра тесе ан тиркеччӗр хӗрсем.

— Пирӗн хушӑра унашкаллисем ҫук, — пат! татса хучӗ Ульти.

Вӗсен калаҫӑвне пачах хутшӑнмарӗ Тиляр. Вӑл хӑйӗн тӗнчинче.

— Паян ларса шӑм-шак хытрӗ. Кун каҫа та машинӑран тухман, — тытӑнчӗ вӗҫкӗнленме Праски Ҫеменӗ.

— Катаччи чупрӑн-и? — шахвӑртать Ульти.

— Каккуй унта катаччи ярӑнма, ӗҫ хӑвалать. Унтанкунтан укҫа пухмалли нумайччӗ.

— У-у-у, эппин, эсӗ пуйрӑн, — ихӗлтетсе илчӗ Ульти.

— Чимӗр-ха, пуян пулма ҫыннӑн енчӗкӗнче миҫе тенкӗ упранмалла? — терӗ Праски Ҫеменӗ. Вӑл васкасах хӗртен ыйтрӗ: — Тиляр, эсӗ мӗн тейӗн?

— Пĕлместĕп.

— Ман шутпа, сахалтан та çур миллион, — хастарланчĕ Ульти.

— Ха-ха-ха, — ахăлтатса илчĕ Праски Çеменĕ. — Эх, эсĕ те çав, Ульти. Кĕсйинче çур миллион тытакан çын халĕ — чухăн çын.

— Эсĕ, эппин, Çемен, «Манăн темиçе миллион укçа, эпĕ — кулак» тесшĕн-и?

— Тус юлташăм, Ульти, хальхи вăхăтра кулаксем çук, — Праски Çеменĕ тăрса ывăнчĕ ахăр, вăл Тиляр çумне пырса ларчĕ. — Ĕлĕк те пулман, вĕсене, ĕçченсене, йăнăшпа тĕп тунă. Туртса илнĕ тупăшĕсене паян тавăрса параççĕ. Ман мучин чаплă çуртне район центрне куçарса кайнă пулнă. Кăçал уншăн темиçе миллион тавăрса пачĕç.

— Сана-и? — кăсăкланчĕ Ульти çийĕнчех.

— Паллах. Йăхра эпĕ çеç тăрса юлнă. Пĕтĕм кити-митти мана лекрĕ. Туятăр, ăçталла çаврăнать пурнăç?

— Каласам, çамрăк çыннăм, ăçталла çаврăнать-ке пурăнăç? Пĕлтерсем, тархасшăн, — терĕ çав вăхăтра çул урлă каçса вĕсен умĕнче чарăнса тăнă çын. Пурте чăр-р пăхрĕç ун çине. Çийĕнче унăн моряк тумĕ.

— Чĕпĕтĕр мана-а! Эпĕ тĕлĕк куратăп! Вăратăр ыйхăран! — кăшкăрса ячĕ Ульти.

— Ай-уй! Илтимĕр, эсĕ тем ку? — тĕлĕннипе куçне чарсах пăрахрĕ Праски Çеменĕ. — Хăçан таврăнтăн?

— Тин кăна, — хăй суйнинчен йăл-йăл кулкаласа илчĕ моряк.

— Аякри урамра мĕн туса çӳрен?

— Ку енче чипер хĕр пур терĕç. Паллашма килтĕм. Юрамаç-и-ке?

— Йăнăшнă эсĕ, Мичман. Вĕçтер урăх çĕрелле.

— Унсăрăн мана сăпса йышĕ тапăнĕ-и? — кулкаларĕ моряк каллех.

— Çемен, тĕк лар! Ку манăн савни! Савни çеç те мар, пулас упăшкам! — сиксе тăчĕ те Ульти аллисене сарса Илтимĕр патне ыткăнчĕ, вара чĕвенленсе ăна ыталарĕ, чуптурĕ.

Тиляр чĕрине вĕри кăвар савукĕпех ваш-ш сапăнчĕ. Мĕншĕн? Вăрман кати çумĕнчи сукмак çинче тĕл пулсан нимех те юмахламан-çке унпа. Ара, мĕншĕн? Хăй те чух-

лаймасть ҫакна ҫамрӑк хӗр. Путех, ӑмсану хускалчӗ. Ӑна мар-ҫке, теприне саваҫҫӗ.

— Каҫарӑр. Эпӗ ӑна-кӑна чухламан, — тет тараватлӑн Праски Ҫеменӗ. — Варлисем тӑк, тархасшӑн, нимле сӑмах та, чару та ҫук.

— Пастай-ха, Ульти, лӑпкӑрах пул, — йӑвашшӑн пуплет моряк. — Ытлашши ан хӑлаҫлан. Ҫынсем тем шухӑшлӗҫ таҫта. — Хӑй тухьяллӑ хӗре шӑтарасла пӑхрӗ палласшӑн. Вӑл Тиляра курасшӑн килчӗ-ҫке-ха кунта. Уйра тӗл пулнӑ пике пачах урӑхларахчӗ. Унччен те пулмасть моряк Ульти ытамӗнчен хӑтӑлчӗ те мӗн пулать те, мӗн килет тенӗн ыттисем кӗтмен ҫӗртен Праски Ҫеменӗпе Тиляр хушшине кӗчӗ те ларчӗ. Ульти хыпӑнса ӳкрӗ.

— Илтимӗр, килсем хӑв таврӑнасса ҫу пуҫламӑшӗнче шӑпчӑк юрласса кӗтнӗ пек тунсӑхланӑ пикӳ патне, — тилмӗрчӗ Ульти.

Праски Ҫеменӗн самант кӑмӑлӗ улшӑнчӗ. Урчӗ тейӗн.

— Мичман! Ку мӗне пӗлтерет? — сиксе тӑчӗ. Чышкисем чӑмӑртанчӗҫ. — Кӑна мӗнле ӑнланма хушан?

— Мӗн-ма тулашан-ке? Сан ҫумӑнта мӑкӑнь чечекӗ чӗлтӗртетсе ларнине куртӑм. Эпӗ тинӗссем тӑрӑх ишсе ҫӳренӗ тапхӑрта шӑтса ӳснӗ-няк. Паллашам терӗм ку чиперукпа. Юрамасть-и-ке?

— Илтимӗр, ку хӗрӗн ячӗ — Тиляр. Вӑл хӗр пирӗн ялта ӳсмен. Нумаях та пулмасть ӑна, тӑлӑха тӑрса юлнӑскере, аппӑшӗ, Утар Мишши арӑмӗ, хӑй патне пурӑнма куҫарса килнӗ, — ӑнлантарчӗ Ульти. — Пӗлтерем ҫакна та: ку мӑкӑнь чечекӗн хуҫи пур. Ӑна пӗр йӗкӗт куҫ хывнӑ ӗнтӗ. Ун пек-кун пек шухӑшна ан амалантар.

— Чӑн! Тилярӑн савни пур, — чӗнмесӗр тӳсеймерӗ Праски Ҫеменӗ.

— Кам вӑл? — сассине хӑпартрӗ Илтимӗр, Тиляра палласа илнӗскер. — Эпӗ кӗрешӗве чӗнетӗп ӑна.

— Эпӗ унӑн савнийӗ, — кӑкӑрне каҫӑртрӗ Праски Ҫеменӗ. — Мичман, эсӗ кая юлнӑ.

— Сывлӑх сунатӑп, Тиляр! — моряк хӗр аллине хыттӑн чӑмӑртарӗ. Ку ӗнтӗ иккӗшӗ тӗл пулнӑ саманта манманнине пӗлтерчӗ. Хӗр саламне йышӑннӑ хыҫҫӑн ыйтрӗ: — Эпӗ чӑнах та кая юлтӑм-и-ке?

— Суяҫҫӗ! — тарӑхнипе кӑшкӑрсах ячӗ Тиляр. — Эпӗ

никамăн савнийĕ те мар! Эпĕ ирĕклĕ хĕр ача! Никама та юратма ĕлкĕреймерĕм-ха.

Унччен те пулмасть, вĕсем патне виçĕ йĕкĕт çитсе тăчĕ, купăспах. Кусем аслă вăййа илсе каякансем.

Купăс нăйлатни, çамрăксен шăв-шавĕ Илтимĕрĕн хĕр умĕнче юхтармалли сăмахне йăлт хупларĕç. Пурччĕ-çкеха унăн юмахламалли. Флотран киле таврăннă чух ял çывăхĕнче тĕл пулнă пике темшĕн асран тухмасть. Кăмăлтуййăм хĕлхемĕсене вăштăр çил евĕр тĕкĕнет те тĕкĕнет. Ниепле те тытса чараймасть çуната вĕçтернине. Ăçта çитсе ăçта пăрахĕ-ши? Кĕртсе хăваринччĕ çăтмах пахчине. Тен, кĕрĕслетсе ўкме тивĕ çĕр шăтăкне, тапаçланса тухмалла мар тарăнскертен.

* * *

— Ывăлăм, кўлепў килте, хăв таçта çўрен. Савнă хĕр упраçу тăрса юлчĕ-и-мĕн аякра, — кăсăкланчĕ амăшĕ. — Мĕн-ма хăвпа илсе килмерĕн? Пирĕнтен хăрарăн-и?

— Анне, аякри аякрах юлтăр. Мана кунти пике тыткăнларĕ, — тавăрчĕ Илтимĕр.

— Ăçта курма ĕлкĕртĕн ун пекех хăватлăскерне?

— Киле таврăннă чух, ял çывăхĕнчи сукмак çинче. Тиляр ятлă вăл.

— Э-э-э, эппин. Ун пирки хўхĕм хĕр тенине илтнĕ, — терĕ амăшĕ. — Тытар та кин тăвар.

— Тем пекехчĕ, — йăл кулса илчĕ ывăлĕ. — Кам урапи çинче ларать-ши вăл? Пĕлместĕп-çке.

— Пулсам улăп, ăмăрт кайăк.

— Тавтапуç, анне. Тăрăшăп ăна хам çунат çине куçарма.

* * *

Ĕмĕт çуралчĕ Илтимĕрĕн. Пурте вăййа кайма пуçтарăнчĕç. Урамсем тăрăх утнă май ушкăн çĕнĕрен те çĕнĕ çамрăксемпе йышланчĕ.

Ял варринчи виркĕс — аслă вăйă вырăнĕ. Яш-кĕрĕм кунта пухăнчĕ. Хĕр упраç пĕр тикĕс кăшăла тăрса тухрĕ. Часах кăшăл тытăнчĕ хĕвел май ерипен-ерипен карусель евĕр çаврăнма. Çак вăхăтра юрă пуçларĕ тахши. Ăна самант ярса илчĕç пурте.

Сар хĕвел анса ларсассăн
Пирĕн аслă урамра
Йĕс шăнкăрав пек янкăс сасă
Лăпкăн-лăпкăн янăрать...

Ĕнтĕ юрă хыççăн юрă шăранчĕ. Ахăртнех, виçине çитрĕ тем. Купăсçă акă вăйă карти варринчи тунката çине пырса ларчĕ. Пĕр çаврăм ташă кĕвви тăпăртатса илчĕ те чăрăнчĕ. Вăйăç кĕтет ташă пуçлакана. Кам-ши тухĕ ун умне? Пур-мĕн тивĕçли. Вăл — паттăр. Вăл — хăна. Вăл хăватлă карап çинче тинĕссем тăрăх ишсе Тăван çĕршыва сыхланă. Ав ячĕ те тухрĕ:

— Мичман! Мичман!

Туртăнса тăмарĕ Илтимĕр. Тухрĕ, пуçне тайрĕ яшкĕрĕме тав туса.

Япшар каччă нихăçан та пĕччен ташламан. Моряк чăлах-и-мĕн. Каялла чакрĕ вăл. Вара çавăтса кăларчĕ вăйă картинчен тухьяллă пикене. Пĕтĕм çамрăк умĕнче пырать пăхса ытармалла мар хитре мăшăр. Куç ан ӳктĕрех. Кĕвĕç чунлисем пур тĕнчере.

Нумайăшĕ чухламасть тухьяллине.

— Кам вăл телейлĕскер? — пăшăлтатаççĕ.

Тӳсеймерĕ тарăхнă Ульти. Ара, Илтимĕр ăна чĕнмерĕçке-ха хăйпе ташлама. Кăмăлсăррăн пĕлтерчĕ:

— Хĕр ачин ячĕ — Тиляр! Вăл Утар Мишши арăмĕн йăмăкĕ. Пирĕн ял хĕрĕ мар. Вăтанасчĕ, иçмалин. Урпа хылчăкĕ.

Çук, унăн хутне никам та кĕмерĕ, морякпа ташлама тухакан пикене нихăшĕ те ятламарĕ. Ультин тути тăсăлчĕ. Кӳренмесĕр ăçтан тӳсĕн, чăнах. Тем мăкăртатрĕ, анчах сăмахĕсем нихăшин хăлхине те кĕмерĕç. Чĕрине çĕçĕ вĕçĕ яш! пырса перĕнчĕ. Чунĕ тӳсмелле мар ыратать.

Кăвак хуппи уçăласса кĕтнĕн вăйă шăп! шăпланчĕ. Лĕп çил евĕр вăйă карти тăрăх чупрĕ пăшăлтату. Шăл хушшинче — ташша тухнă мăшăр.

Купăсçăн пӳрнисем вылянчĕç, кайрĕ ташă кĕвви янраса, кашнин чунне çĕклентерсе. Шарт-шарт! алă çупăнать.

Ташă пуçланчĕ. Тухьяллă хĕр чăн-чăн акăш. Калăн, ярăнать вăл тинĕс хумĕ çийĕн. Пир ăси мар-ши морякĕ?! Е тĕкĕлтура? Епле хитрен кумать, вĕçет роза чечекĕ таврă. Ура хуçса йăлт-ялт сиккелени, лăпчăна-лăпчăна чуп-

калани, аллисене ылмаштарса ёнсине лектере-лектере илни ытла килёшӳллё.

Илемлё мăшăрăн янкăс ташши пурне те илёртрё, кашнин кăмăлне ыррăн хускатрё. Анчах икё çын урăхла шутлать — япăх имёш. Вёсенчен пёри — Праски Çеменё, тепри — Ульти. Кашни çын урапи çине лараймăн.

Ёнтё ташă пуçлакансем вăйăçа тав туса пуç тайрёç. Моряк Тиляра вăйă картине ăсатрё. Юнашар тăмаллаччё ун. Шел. Ăна ял çамрăкёсем, уйрăмах çара кайма хатёрленекенсем, çавăрса илчёç. Ыйтса пёлмеллисем пур мар-и.

Тиляр кӳршё хёрё çумне пырса тăмарё. Вăл никама систермесёр тарчё. Чупать такăнса ӳкесле, урисем ăçта пуснине туймасть. Чунёнче — асамат кёперё. Миçе тёс ялтăртатать! Кашни тёсё хăй пёр асамлă çул! Пулас пурнăçăн çулё. Вăрттăнлăх. Хăш çулёпе утмалла-ши, хăшё телей парнелё-ши? Йăнăшма та пулать-çке. Юхан шыва та шăнкăртатса малалла ыткăнмалли çулне чул куписем картлаççё. Сисет-ха Тиляр, вăл морякпа ташлани хăшпёрин пырне шăмă лартрё.

Урамран урама каçса Тиляр килне çитрё хашкаса. Хыçалалла çаврăнса пăхрё. Курăнмарё хăйне хăвалакан. Кăмăлё вир пёрчи пысăкăш хурланчё. «Ахалех вара. Путех, эпё никама та кирлё мар», — хёр пёрчи пуçне çакнашкал шухăшсем кёрсе тухрёç. Хăй хыçёнчен калинккене хупса кёле ячё. Кашта çинче ларакан автан хёре тутлă ыйхă сунса путех хыттăн авăтрё.

* * *

Таçта аякра кёр кёрлерё. Пурте сисрёç, ку — аслати. Вёресе тăракан вăйă, алăран елпеке чашăк тухса ӳкнён, самант саланчё. Ял варринчи виркес вырăн шăпăрпа шăлса тасатнăн çаралса юлчё, тёлёнтермёш мар-и, пёр никам юлмарё тăрса.

— Пушар тухман-çке кунашкалах хыпăнса ӳкме, — мăкăртатрё Ульти ун-кун пăхкаласа.

Тин çеç тăратчё çывăхрах Илтимёр çамрăксемпе калаçса. Праски Çеменё те карталаннă хёр упраç умён утатчё.

Пёчченех таврăнчё килне Ульти. Тиляр çав-çавах курăнмарё. Кăмăлё пăсăлчё унăн. Аптранă енне хапха патёнчи сак çине ларчё. Ыйхă çук. Пуçра тёрлёрен шухăш таш-

лать. Пĕри ав Илтимĕр патне кайса килме хушать. Тен, кирлĕ хыпар унта? Систермесĕрех çутă тĕнче хăй ĕçне тăвать иккен: шуçăм кăвакарать. Çывăхри янкăх тытăнчĕ курăнма. Ав такам утать. Палласа илчĕ ăна Ульти. Çывхарсах сăмах вĕçтерчĕ:

— Çемен, мĕн-ма елехей çӳрен? Утă капанĕ тăрринчен ӳкмерĕн пулĕ те?

— Ăçтан пĕлтĕн?

— Ара, çӳçӳ çинче улăм пĕрчисем нумай.

— Пустуй ан пакăлтат-ха, — Праски Çеменĕ чăннине каламарĕ. Вăл Тиляра сыхланă. Вĕсен пахчинчи кивĕ утă купи çинче выртрĕ пĕр кана. Тул яриех çутăличчен пахчаран тарса тухрĕ.

Пĕччен юлсан Ульти алне сулчĕ те анас пуснине тӳсеймесĕр килне кĕчĕ.

* * *

Алкумĕнче, пахча енчи чăланта, Илтимĕр çывăрать. Чӳречине хупман вăл. Пӳлĕмре тĕрлĕ чечексен тутлă шăрши. Уçă сывлăш вăл канлĕ ыйхă.

Тӳпере, анăçран, трюмне шыв тултарнă кăн-кăвак «баржа» шăвать. Хушăран урлă-пирлĕ, йăл-ял! çуталса илет хĕçси. Тупата, сассинчен хăрамалла: кĕр-кĕр! Карăнчĕ çеç вăл ял çийĕн, уçса ячĕ ала лартнă кавăсне. Пуçланчĕ çумăр — чăш-чăш-чăш! Кĕвви чуна çывăх. Хушăран кантăк тăнкăртатать, çумăр параппан çапать мар-и.

Çил ачисен хăйсен вăййи, вĕсен ашкăнса пултăр, тупата, ытла шухă. Ав тытăнчĕç çумăр шереписене татса унталла та кунталла сирпĕтме. Пĕр пĕрчи чăлт! ӳкрĕ çывăракан Илтимĕр пит çăмарти çине. Ун хыççăн — тепри. Моряк куçне ярииех уçрĕ. Тул çутăлнă-мĕн. Чӳрече умĕнче çумăр килĕре сӳс тĕвет. Каччă тепĕр аякĕ çине çавăрăнса выртрĕ. Анчах тутлă ыйхă вĕçрĕ, ăна пĕр вĕçсен тытма май çук çав. Куç хупанкисене курăнман алăсем тĕревлерĕç. Çын вăранчĕ пулин те тăрса тумланмарĕ-ха. Çурхи шыв хумĕсем пăр катрамĕсене пĕве умне хăваласа пынăн шухăшсем капланчĕç пуçра.

Ытарлă самантсем куç умĕн иртеççĕ.

...Пахча карти çумне йăвантарнă пĕрене çинче Ульти, Праски Çеменĕ тата шыранă хĕр пĕрчи лараççĕ. Тухьял-

ли — Тиляр. Самантлăха пулин те юнашар вырнаçса саламланă май алне чăмăртарĕ. Пўрнисем — хур мамăкĕ. Часах купăсçăсем килчĕç. Вĕсемпе пĕрле Илтимĕр те хĕрсемпе çавтăнса утрĕ. Вăл вăйăра хăй юратса пăрахнă хĕрпе ташă пуçласа пачĕ. Вара Тиляр пач çухалчĕ. Кĕтмен çĕртен аслати авăтрĕ, çумăрпа йĕпенесрен хăраса пурте тарчĕç. Илтимĕр малтанах ним тума аптрарĕ. Чарăнса тăчĕ шухăшне пуçтарма. Ăçта çухалчĕ Тиляр? Тĕлĕнтермĕш! Тем тесен те ăна пĕр-пĕр йĕкĕт çавăтса кайнă. Йĕкĕчĕ кам эппин? Ăна Праски Çеменĕ куç хывнă терĕ Ульти. Вăл мĕн вăйă саланиччен хĕр упраç умĕнче саркаланчĕ. Кам пулма пултарать Тилярăн савнийĕ? Вăлах çавăтса кайнă-тĕр. Шыраса тупмаллах.

Кăсăк ĕмĕт ăна хăйĕн урапи çине лартрĕ. Кăлтăртатрĕ вара тўрремĕн. Вăштах çитсе тухрĕ кирлĕ урама. Пуçĕнче шухăш явăнать: «Каччи халех киле кĕртес çук-ха. Тăраççĕ-тĕр йăмра айĕнче ыталанса. Пырса тăрам вĕсен умне. Паллам, мĕнлескер этем вăл: имшерккескер е пăхаттир? Пĕлет вара камран хĕр тытса илмеллине», — çаплах ўкерчĕксем сиккелерĕç пуçĕнче.

Никама та асăрхамарĕ-ха Илтимĕр. Пытанса тĕпленнĕши пĕр-пĕр хўтлĕхе? Апла тесен хĕр упраç ихĕлтетсе илмесĕр тўсейместех, сас-чў илтĕнмеллех.

Тилярсен чўречи умĕн иртнĕ чух Илтимĕре кап! пырса перĕнчĕ пĕри.

— Ух! — кулса ячĕ моряк. — Шуç чуманпа утлантарса ячĕç-и пире?

— Итле-ха, Мичман, мĕн тума кирлĕ сана ыттисем килĕштернĕ хĕр? — терĕ çиллес сассипе Праски Çеменĕ. — Çилĕ пур тесе çил вĕçтерсе ан çўре-ха. Çитменнине тата, сана юратакан хĕр пур. Начар çын мар вăл.

— Кам пирки сăмах ваклан-ке эсĕ?

— Пĕлмĕше ан хыв. Сана Ульти юратать.

— Тавтапуç ăна.

— Эпĕ Тиляра килĕштеретĕп.

— Эсĕ, Çемен, вăл чиперккене килĕштеретĕн кăна, эпĕ вара ăна чунтан юратрăм. Ăнлантăн-и-ке?

— Ых-х! Вилнĕ йытă! Ан çиллентер мана, вăкăра, хĕрлĕ тутăр кăтартса вăрçтарнăн. Эсĕ Мичман пулнине пăхса тăмăп. Кĕçĕр те вăйăра манран ирĕк ыйтмасăр Тиляра

ташлама илсе тухрӑн. Ку юлашки хут пултӑр. Атту, пӗлетӗн-и?

— Мӗн тӑван-ке? — ахӑлтатса кулса ячӗ Илтимӗр.

— Янах шӑмми хуҫӑлӗ.

Праски Ҫеменӗ хӑй те сисмерӗ ахӑр, Илтимӗре кӑкӑрӗнчен ярса тытрӗ.

— Эх, шӗпӗн! — нимӗн чухлӗ те тарӑхмарӗ Илтимӗр.

* * *

Чӗ-ри-ик! чӗриклетрӗ чӑлан алӑкӗ. Куҫне уҫрӗ Илтимӗр. Самант сӳнчӗҫ шухӑш тӗркин ӳкерчӗкӗсем.

— Анне! — саламларӗ Илтимӗр. — Сывлӑх сунатӑп!

— Пуриншӗн те Турра шӗкӗр. Сывлӑхлӑ ҫӳретӗп-ха, — ывӑлӗ ҫывӑракан кравать хӗррине пырса ларчӗ амӑшӗ. — Ҫӗркаҫ мӗнле ҫӳрерӗн?

— Аванах. Мӗншӗн ыйтан-ке?

— Вӑйӑран кама ӑсатса ятӑн? — тӗпчет ватти ывӑлӗ шарламаннине кура. Ҫапла хушса хучӗ: — Ултие-и?

— Кама?

— Чиперех илтрӗн.

— Анне, ан кулӑшлан-ха.

— Вӑл сана юратать-ҫке. Сан пиркиех мана нумай пулӑшрӗ вӑл. Акӑ яла газ ҫитрӗ. Пурте васкатаҫҫӗ. Черет час ҫитменнипе хӑшкӑлчӗҫ ҫынсем. Ман килте вара газ чи малтан ҫунма тытӑнчӗ темелле. Газпа тӗрӗс усӑ курас пулать. Кам вӗрентсе тӑчӗ пулӗ тен? Ульти. Хӗрӗ вӑл усалскер мар. Эсӗ ӑна кӗтме хушнӑ имӗш.

— Кам туртса кӑларнӑ-ке ҫав мыскарана? — кӳреннӗн вӗҫӗрӗнчӗ Илтимӗрӗн сӑмахӗ.

— Хӑв салтака кайнӑ чух, ара, килӗшӳ пулнӑ. Эсӗ хушнӑ, Ульти — сӑмах панӑ. Кӗтнӗ. Качча кайман. Халӗ ӗнтӗ кутӑн чакни аван мар. Каларӑм-ҫке — хӗрӗ вӑл япӑх мар терӗм. Чиперлӗхӗ те пур.

— Эпӗ хурламастӑп. Анчах...

— Мӗн, «анчах»?

— Урӑххине юратрӑм.

— Кама терӗн-ха?

— Утар Мишши арӑмӗн йӑмӑкне.

— Ара, вӑл ытла ҫамрӑк пулас?

— Хытса типнӗ шурут курӑкӗпе мӗн тӑвас-ке?

— Çамрăкки юратĕ-и-ха хăвна?

— Пăчăр чун тухиччен ĕмĕтленет теççĕ ваттисем.

— Чиперкки мĕн ятлă терĕн-ха? — шав тĕпчет ватти.

— Тиляр! Тĕнчере пĕртен-пĕр ят.

— Ятне пĕлни çеç сахал. Эсĕ пахчара мăкăнь чечекĕ чĕлтĕртетнине карта хушăкĕ витĕр курнă та каçăхсах кайнă. Иçмасса, курса калаçасчĕ сан хĕрпе.

— Эпĕ Тилярпа икĕ хутчен тĕл пулнă. Пĕрре юнашар утнă, иккĕмĕш хутĕнче пĕтĕм ял çамрăкĕсем умĕнче, аслă вăйăра, ташланă.

— Çитрĕ те-и?

— Паян вара Тилярпа тĕл пулма каятăп. Шанăç пур. Пире ынатлăх ыталĕ.

— Телей сунатăп. Анчах ăна пула теприне, хăвна юратаканнине, çухатмалла ан пултăр.

## 5

Газ плити çинче кăнтăр апачĕ пиçет. Шурă кастрюле Минепи Ивановна сысна ашĕ, пултран, çĕр улми тураса янă. Тул çăнăхĕпе çăмарта хутăштарса çăрнă чустана кункрара унарĕ, кайран çĕçĕпе вакласа ăна кастрюле чăмтарчĕ. Вĕреме кĕчĕ çеç яшка, çиеле хăпарчĕ те çăмах. Ĕнтĕ газне сӳнтерме те юрать.

Минепи Ивановна ывăлĕсем Илтимĕрпе Мĕтри ĕне вити пуралаççĕ. Амăшĕ вĕсене апата чĕнет.

Çемье сĕтел хушшине ларчĕ. Кашнин умĕнче тирĕкпе çăмах яшки тата уйран тултарнă стакан.

— Ай-яй тутлă, — мухтать Илтимĕр, çăмахне уйран сыпса чăмласа çăтаканскер, — тахçанах тутанманччĕ-ха кун пек çăмахлă симĕс яшка.

— Тинĕсĕн тăварлă шыв яшки питĕ техĕмлĕ тесе çыраттăнччĕ-çке, — йĕплесе илчĕ шăллĕ Мĕтри. Ăна пиччĕшĕ çамкаран кашăкпа хытах лектеретчĕ. Анчах çав вăхăтра алăк уçăлчĕ те пӳрте Ульти кĕрсе тăчĕ. Аллинче хăйĕн пысăк чăматан.

— Ман киле-ес. Ырă-сывă пурăнаççĕ-и?

— И-и-и! Ульти! Салам! — терĕ Минепи Ивановна сĕтел хушшинчен тухса. — Апат тĕлне лекрĕн, пăянаму юратаканни пулать.

— Кун пирки пĕрре те иккĕленместĕп. Нихăçан та сивĕ куçпа пăхман, ялан хавас кăмăлпа кĕтсе илекенччĕ.

Кил хуçи хĕрарăмĕ ку сăмах-юмаха ăнланмăша хыврĕ. Ывăлĕсем калаçăва хутшăнмаççĕ, яшка айлантараççĕ.

— Ульти, эсĕ ăçта та пулин кайма çула тухнă-и-мĕн чăматанпах? — кăсăкланчĕ Минепи Ивановна. — Унччен ларсам апата. — Сĕтел çине хăйма юрнă çăмах яшки лартрĕ турилккепе. — Апатран аслă пулма хушман.

— Тухса тăтăр манпа юнашар Илтимĕр. Эсĕ, амăшĕ, пире пил пар, телейлĕ пурăнма ырă сун. Эпĕ кĕтрĕм-кĕтрĕм Илтимĕре, вăл пымарĕ. Акă ĕнтĕ хам килтĕм унăн арăмĕ пулма. Сирĕн ăшă кăмăлăра шанатăп.

Сĕтел хушшинче ларакан Илтимĕр чыхăнчĕ, пырне çăмах капланчĕ мар-и. Мĕтри тхик! кулчĕ. Уншăн пулсан икĕ айкки те — тăвайкки.

Кил хуçисем сывлăшсăр антăхнăн самант шăпланчĕç.

— Хăраса ўкмерĕр пулĕ те? — шăтарасла пăхрĕ Ульти виççĕшĕ çине те.

— Чим-ха, Ульти, манăн вунă ывăл мар, мĕнпурĕ те иккĕ çеç. Аслине епле-ха çапла упи-супи авлантарам? Этемле, йĕркеллĕ пултăрччĕ вăл, ĕç тени. Илтимĕр салтакран килнĕ хыççăн пăртак кантăр-ха. Вара хăтана пырăпăр хĕр çураçма. Унтах хут тутарас куна палăртăпăр. Туй — хаваслă самант. Унсăрăн качча кайни те, авланни те мар. Çук-çук, капла тĕпĕр-тĕпĕр килĕшместĕпех.

— Эх, мĕнле шел, — тет Мĕтри шăл йĕрсе, — пуса каччи пулса ташласшăнччĕ.

— Тĕк лар-ха, кĕçĕнни, — терĕ амăшĕ. — Санăн та хăвăн вăхăту çитĕ.

— Анне, мана авлантар çара кайиччен. Илсе пар акă Ультинех. Эпĕ тиркемĕп вăл кĕрченине.

— Ульти, ан итле ăна, камите. Халĕ эсĕ киле кай. — Минепи ăна çавăтса алăк патнелле уттарчĕ. Çавăнтах каялла çаврăнса кăчăк туртрĕ ывăлне: — Илтимĕр, ăсатса ярсам пикене.

Вăштăр-вăштăр сиксе тухрĕ ывăлĕ сĕтел хушшинчен.

— Эпĕ хатĕр! — терĕ хайхискер Ульти çумне пырса тăнăçем. Вара вăл хĕр туприне çĕклерĕ. Пўртрен тухрĕç. Калинкксене уçсан Илтимĕр малтан Ультие кăларчĕ те ун умне чăматанне лартрĕ.

— Сывӑ пул, Ульти! Чипер ҫит! — калинккине шал енчен шӑлтӑр-шалтӑр хупрӗ Илтимӗр. Пӳрте чупсах кӗчӗ. — Тур ҫырлахтӑр, тем те кӗтӗн ку чухнехи хӗр упраҫран. Йӗкӗте пусмӑрласах каччa тухасшӑн.

— Шантармалла пулман.

— Анне, эсӗ чӑнласах ҫак хӗре илсе парасшӑн-и-ке?

— Эпӗ тиркеместӗп.

Мӗтри ахӑлтатса кулса ячӗ:

— Ха-ха-ха! Ух-х-и! Ку кӑтай кӗпе ҫумне кӗрен кӗштек ҫӗлесе ҫыпӑҫтарнипе пӗрех пулӗччӗ.

— Кулакана ӑҫта мӗн ҫыпӑҫнӑ теҫҫӗ-ха? Асту! — пӳрнипе юнарӗ амӑшӗ кӗҫӗн ывӑлне.

— Анне, халӗ эпӗ юратнӑ хӗр шырама каятӑп.

Илтимӗр тумланнӑ хыҫҫӑн килтен тухса кайрӗ.

* * *

Аллине пуртӑ тытса ӗҫлерӗ-и, амӑшӗпе е шӑллӗпе калаҫрӗ-и, анчах пӗр шухӑш пуҫран тухма пӗлмерӗ Илтимӗрӗн. Тӗлӗкре те канӑҫ ҫук, ҫавӑнпах супать. Хӑшкӑлсах ҫитрӗ ҫын. Мӗн амакӗ? «Юрату-и-ке? Юрату ку! — хайне хай ӗнентерет йӗкӗт. — Юрату — чир теҫҫӗ. Тӗрӗсех пулас. Пӗрре курсах саврӑм. Каччӑ шӑрши кӗрсенех тытӑннӑ эпӗ ӑна шырама. Тӗл пултӑм халӗ ним кӗтмен ҫӗртен. Флотран киле таврӑннӑ чух,ката ҫумӗпе тӑсӑлакан сукмак хӗрринчи тунката ҫинче канса ларнӑ самантра пырса ыталарӗ ҫав юрату. Халиччен курман пике пӑхса ытармалла мар чиперскер. Мӗнпе, кампа танлаштармалла ӑна? Никампа та, нимпе те. Вӑл чӑн-чӑн пирӗшти. Вӑйӑра ташланӑ хыҫҫӑн ҫухалчӗ. Тупӑнсам! Юрататӑп сана».

Илтимӗр каллех уя тухрӗ. Утакан сукмакӗ ҫавах. «Ӑраскал тени яланах такӑнтаракан марччӗ-ха. Хӑш чух ӑнӑҫу та парнелет», — мӑкӑртатать вӑл. Акӑ хайхи тунката. Ларчӗ те чӗртсе ячӗ пирус. Шурӑ тӗтӗм ҫиппи, ҫӑвартан вӑркӑнса тухаканскер, тӳпенелле хӑпарать авкаланса. Аллинчи сехечӗ ҫине пӑхрӗ. Кӗске йӗппи «5» тӗлӗнче, вӑрӑмми — палӑрмаллах шӑвать малалла. Куҫ шав район центрӗнчен тӑсӑлакан авкаланчӑк ҫула сыхлать.

Иртнӗ кун колхоз председателӗ кӗрсе тухрӗ. Ӗҫе чӗнет ӑна. Авланма вӑхӑт ҫитнӗ. Ҫемье валли пӳрт-ҫурт ҫавӑрма укҫа-тенкӗ ҫителӗклӗ. Ара, вӑл ҫар хӗсмечӗ вӗҫленсен

флота татах юлчӗ-ҫке-ха укҫаллӑ службӑна. Мӑшӑр пулмалли хӗре курчӗ. Пике хӑйне сивлеменнине туйрӗ, анчах чи кирли — вӑл хӗре чунне уҫса пама ӗлкӗрейменни. Ун валли майлӑ самант тупӑнман.

Сасартӑк курчӗ Илтимӗр: аякра, ҫул ҫинче, пӗри мӗкӗлтетет. Пукане евӗрлех.

— Тупата, ку — Тиляр! — хӑйне хӑй ӗнентерчӗ каччӑ.

Хирӗҫ пулчӗҫ йӗкӗтпе хӗр.

— Тиля-ар! — хӑлаҫланчӗ Илтимӗр хӗр умӗнче тӑп чарӑнса.

— Ай-уй! — тӗлӗнчӗ хӗр. — Ӑҫта вӗҫтерен?

— Сана хӑтарма васкатӑп.

— Ӑнланмарӑм. Эпӗ тыткӑнра мар-ҫке. Камран, мӗнрен хӑтарасшӑн? — йӗри-тавра пӑхса илнӗ пек турӗ Тиляр ихӗлтетсе.

— Ан шан! Ура вӗҫӗнчи ҫӗр лаш-ш! ҫурӑлса кайӗ те сиксе тухӗ усал-тӗсел, хаяр тӑшман.

— Апла тӑк ытла хӑрушӑ-ҫке, — шӳтлесе йӗрем пек турӗ хӗр, вара пуҫне каччӑ кӑкӑрӗ ҫумне тытрӗ.

Моряк ыталарӗ хӗр пӗрчие, лӑпкарӗ, пуҫӗнчен темиҫе хут чӑп-чӑп чуптуса илчӗ. Ҫупкӑ ҫитермерӗ ӑна чиперкке, хӑй ҫумӗнчен те тӗксе ямарӗ.

— Паян мӗнле ырӑ кун!

— Килӗшетӗп санпа. Паян икӗ «пиллӗк» паллӑ илнӗ, — мухтанчӗ Тиляр. — Чим-ха, нумайччен тӑрӑпӑр-и капла?

— Эсӗ хирӗҫ мар пулсан мӗн ватӑличчен.

— Ан мӑшкӑлла-ха, — ихӗлтетрӗ хӗр. — Эсӗ таҫталла ҫул тытнӑччӗ.

— Сансӑр ӑҫта кайӑп-ке? Ман ҫул — санпа.

— Эпӗ киле каятӑп.

— Эпӗ те санпа.

— Тархасшӑн. Мана иккӗн хавасларах пулӗ.

Илтимӗр чиперккене ҫавӑтрӗ те, утрӗҫ ял еннелле.

Йӗкӗтӗн чӗлхи салтӑнчӗ. Калаҫрӗ, калаҫрӗ вӑл. Аслӑ вӑйӑра ташланӑ хыҫҫӑн ӑна ҫухатни, шырани ҫинчен асӑнчӗ. Утар Мишшин хапхайӗнче Праски Ҫеменӗпе тӗл пулни, унпа тытӑҫни пирки те сиктерсе хӑвармарӗ.

— Мӗнле сӑлтава пула?

— Ара, иксӗмӗр те сана шырарӑмӑр-ҫке. Вӑл санӑн савни имӗш.

— Эпĕ ăна килĕштерместĕп, унне ман тĕсне курас килмест, — терĕ Тиляр.

— Чăнах-и-ке? Ай, мана хĕпĕртеттертĕн.

— Мĕншĕн? — тĕлĕненçи турĕ хĕр.

— Эпĕ чунтан юрататăп сана, Тиляр.

— Ан суй! — йăл-йăл кулчĕ хĕр. — Кала-ха, моряк, юрату мĕн тĕслĕ вăл?

— Нумай тĕслĕ: хĕрлĕ, кĕрен, чакăр, кăвак, сенкер, симĕс, сарă, шурă... Пур тата куçа курăнман тĕс. Эсĕ хăшне кăмăллан? Суйла. Çав тĕсе е пĕтĕм тĕсе парнелеме хатĕр, енчен те эсĕ мана качча тухсан.

Хĕрпе юнашар утакан йĕкĕт кап! ун умне тухса тăчĕ.

— Ну, кала! — хистет каччă хĕр пĕрчие.

— Сасартăк ăçтан тĕллесе кăтартма пултарăп?

— «Юрататăп сана, Илтимĕр. Качча ил мана», — те те — ĕçĕ те пĕтет. Пĕтĕм тĕс санăн пулать.

— Ай-ай, чее эсĕ. Вара хĕр ĕмĕрĕ вĕçленет-çке, — пуç не суллать Тиляр.

— Чунăм, кулянма кирлĕ мар, — тет Илтимĕр. — Ылтăн çĕрĕ хыванса ўксе çухалсан та пўрне юлатех.

Малалла утрĕç. Кирлĕ мар чух вăрăм çул мĕншĕн кĕскеши ытла та. Яла çитрĕç те ав. Халь-халь тăкăрлăкпа утса тухаççĕ. Кĕтесрен пăрăн çеç — уйрăлу.

— Тиляр, чи кирлине пĕлтермерĕн эсĕ, — чарса тăратрĕ ăна Илтимĕр. — Килĕшетĕн-и-ке?

— Килĕшетĕп. Юрататăп сана.

Илтимĕр савăннипе Тиляра ярса тытрĕ те пилĕкĕнчен çавăрчĕ хăй тавра пăлтăр-пăлтăр.

— Паян аннепе хăтана пыратпăр. Йышăнăр-и?

— Мĕншĕн çав териех хыпаланас? Васкакан арăмĕнчен савăнман теççĕ, — чăр-р пăхрĕ Тиляр йĕкĕт куçĕнчен.

— Сан тавра çунаттисене сарса хурчка-çăхансем вĕçеççĕ. Вичкĕн чĕрнисемпе чăрмакласа каясран пăшăрханатăп.

Тиляр ахăлтатса кулса ячĕ те каларĕ:

— Эпĕ чĕпĕ мар — эпĕ кăйкăр. Мана ирĕксĕр парăнтаракан çуралман. Хăтана пырăр высарни кун. Кĕтетпĕр.

— Ах, унччен виçĕ кун та, виçĕ çĕр. Мĕнле иртерес вăхăта сансăр?!

— Пирĕн юнашар утмалли çулăн вĕçĕ çук.

Илтимĕр ăнланчĕ йăлтах.

* * *

Утар Мишшин килĕнче ытарлă калаçу сĕтел хушшинче, апатланнă чух, пуçланчĕ.

— Мишша, сисместĕн-и эсĕ, пирĕн пӳрт умĕнчи клумбăри гладиолус чечеке татасшăн аллине тăсакансем тупăнчĕç, — тет йăл-йăл кулкаласа Элевер.

— Ах, арăмăм, пĕлместĕн-и-мĕн, илеме кам хапсăнмĕ? Пирĕн тĕллев — ăна упрасси.

Тиляр ăнланчĕ: аппăшĕпе йыснăшĕ ун пирки сăмахюмах тапратрĕç. Вăл ăнланмăша хыврĕ.

Сăмах çинех пӳрте Ями кинемей, ял купăсĕ, кĕрсе тăчĕ.

— Сисетне? — пăшăлтатрĕ Элевер.

— Туятăп, — шăппăн кулкаларĕ упăшки.

— Ылтăнтан та паха сывлăх, тăнăçлăх сунатăп! Хăна йышăнма хапăл-и? — сăхсăхма тытăнчĕ Ями. — Пурте килте-няк? Кусса тăран урапи.

— И-и-и, Ями вăртах, килсемĕр. Атя тӳрех çиме! — чĕнчĕ ăна Элевер.

— Хаваспах. Апатран аслă пулма хушман ваттисем, — пуплет карчами.

— Темех çук пулсан та, çăкăр пур. Сик, сик, — сĕнчĕ ăна кĕрекери кил хуçи — Мишша та.

Ями вашаватлăн сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ. Унăн умне самант çу куçĕ хывнă вир пăтти тултарнă чашăк шутарчĕç, вĕтӳ хучĕç. Кăп-кап хыпкалать карчăк, çав вăхăтрах евĕклĕ пуплеме тытăнчĕ. Вăл тына пăрушĕ шырать имĕш. Унăн халапне пурте часах тавçăрчĕç. Ку хĕрарăм — евчĕ. Камшăн парапланне тӳнклеттерет-ха вăл? Виççĕшĕ те хăлхисене кӳлчĕç. Чее кушак айван шăшие куçĕнчен вĕçертмен евĕр, сăмахне аякран сăптăрать.

— ...Çапла. Сирĕн çитĕннĕ хĕр пур, хăшĕсен — йĕкĕт. Пирĕн, ваттисен, чечек çыххи тумалла çураçтарса. Каччи шутсăр ăслă, сăпай, ĕçчен, тĕнчере çук — чипер. Ку самантра чи кирли — укçа! Унăн çав япала миххипех. Пĕр сăмахпа каласан — çĕрме пуян. Çăмăл машини сарайĕнче çуталса ларать. Амăшĕпе çеç пурăнать. Килĕ-çурчĕ — чаплă, чăх вĕçсе каçаймасть. Çурт-йĕр çавăрасси — асап. Ямăтти пурри — пысăк телей.

Ахаль каламан çав: евчĕ качака такине те авлантарать тесе.

— Питĕ килĕшÿллĕ çамрăк çын, — шахвăртать Элевер. — Ăна хĕр памасăр мĕнле тытăнса тăрăн? Питне уçса кăтартма вăхăт. Тархасшăн.

— Ух! Кусса тăран урапи, хамăр çын эсĕ, Элевер тăхлачă. Сирĕн пулас кĕрĕвĕр — Праски Çеменĕ.

— И-и, ара, шутсăр чаплă каччă. Анчах пире пăхас йĕкĕт мар пулĕ вăл?

— Мана шанăр, — савăнса ÿкрĕ Ями. — Йăлт майлаштаратăп. Кусса тăран урапи.

— Кун хыççăн пĕрер черкке ÿпĕнтерсен те юрать пулĕ.

— Тĕрĕс! — хавасланчĕ Ями. — Эпĕ хирĕç мар иккĕшне ÿпĕнтерме те.

— Тиляр, эсĕ нÿхрепрен сăра ăсса тух, эсĕ, йыснăшĕ, лаçça чуп. Эпĕ чăлана тухам. Хуплу-кукăль тавраш̆ĕ унта.

Виççĕшĕ те пÿртрен тухса кайрĕç.

Пĕччен юлнă Ями хăйпе хăй юмахлать: «Пултаруллă евчĕ эпĕ. Ĕç кăлартăм. Эсĕ, Праски Çеменĕ, хытса тăраймăн. Пурçăн кĕпе туянса пама тиветех».

Элевер кĕчĕ.

— Тăхлачă, туйне хăçан лартасшăн? Эх, кусса тăран урапи, — тутине саппун аркипе шăлкаласа илчĕ евчĕ.

— Ах, Ями тăхлачă, туй тени çав тери илĕртет, — терĕ Элевер сăмах ваклама тытăннă май пуçне усса. — Кайран-малтан ÿпкелешмелле ан пултăр. Халех пĕлтерем: пирĕн хĕр вăл — чăн-чăн арçури. Тиляр эпĕ çуратнă хĕр мар, вăл — йăмăк. Анне ăна ĕçлеме пачах вĕрентмен, шутсăр юлхав. Чĕлхи-и! Чĕлхи шăп та шай вичкĕн хĕç! Ним мар касать, татать, хăртать. Тата унăн алли çÿлте. Сиссе те юлаймастăн, пуçран пат! пырса çапать тукмакпа. Вара питрен-куçран хĕлхем сирпĕнет.

— Аппай, çаплах-и? — хыпăнса ÿкрĕ евчĕ. — Эй, кусса тăран урапи. Праски Çеменĕ ку хĕре ăна-кăна чухламасăр тĕсенĕ. Анра йĕкĕтсем çапла йăнăшаççĕ. Чиперкке пĕрре йăл кулса кăтарттăр çеç, вĕсем унăн умне ÿкме хатĕр. Сире чунтан ĕненетĕп. Йăмăкăр пирки тĕрĕссине пĕлтерсе ырă тăватăр.

— Эх, Ями аппа, — халь-халь йĕрсе ярасла тавăрчĕ Элевер, — пилеше ăçтан хурăн çырли тесе сутăн. Кайран хамăрăнах эрĕм чăмлама тивет.

— Ия, ия, санпа килĕшетĕп, — ура çине тăчĕ карчăк тухса каясшăн.

— Тилмĕретĕп, Ями тăхлач. Пирĕн хĕр пирки усал хыпар аласа çӳреместĕн пулĕ тесе шанатăп ĕнтĕ сана.

— Шарламăп. Тен, кăштах кити-митти параймăн-и? — Ырра кĕтсе Ями тутине чĕлхипе çуласа илчĕ. — Кусса тăран урапи. Çапах та сирĕн тинкеленсе тунă укçа мар, утар хуçисем пуян.

— Тем пекех парăттăмччĕ. Анчах та Мишша кашни пуса шутра тытать. Укçа салатнине самант сисет, вара иксĕмĕре те кăларса ывăтать. Ах, çиллес çын. Сывă пул! Ятласа ан кай.

Пӳрте Тиляр кĕчĕ. Ун çине евчĕ мĕл-л пăхрĕ шурă куçĕпе. Ями, паллах, тăртланчĕ. Вăл тек сăмах сĕвсе тăмарĕ. Илтнĕ хыпара хăвăртрах хуçи патне çитермелле-çке. Тухса кайрĕ сывпуллашма мансах.

— Тупата, эпĕ Праски Çеменне хĕрхенетĕп, — йăх-йăх кулкаларĕ Элевер йăмăкĕпе иккĕшех юлсан.

— Йăнăшан, аппаçăм. Çанталăк сивĕтсен хĕвелпе пиçнĕ ӳт самант шупкаланать.

* * *

Праски Çеменĕ тăкăрлăк кĕтесĕнче хурăн вулли çумне тайăннă та тăрать вут çинчи пек. Шутсăр пăшăрханать. Ара, Утар Мишши килне Тиляра качча илес ĕмĕтпе евчĕ кĕртсе ячĕ-çке. Мĕнле ĕç кăларĕ вăл. Мухтаççĕ-ха ăна ялта, пултаруллă имĕш, чĕлхи кăнттам мар, вичкĕн çĕçĕ: сахал мар йĕкĕте хĕр тупса парса авлантарнă вăл. Ăш вăрканă самантра пуçра чăпар шухăшсем çаврăнаççĕ. Пуç тăрринче, йывăç тураттисем хушшинче, ав тем каласа чĕвĕлтетет çерçи чĕппи. Тен, саламлать? Кăна ĕненме хавас Праски Çеменĕ. Мур шăтăкне ӳксе тĕп пулччăр пурнăçланман тĕллевсем! Çутă ĕмĕтсем кăчăк туртаççĕ. Тилярпа пĕрлешсен вăл хулана пурăнма куçасшăн. «Халĕ чаплă хваттер сутакансем йышлă. Ялта мĕншĕн хура çĕрпе асапланмалла? Хулара пурăнма шутсăр канлĕ. Ĕçрен таврăн та — кан. Çу кунĕсенче — ырлăх. Килен Атăлта шыва кĕрсе. Ĕç тупаймасăр нушаланакансен йышне лекессинчен хăрамалла мар. Пирĕн специальноçсем таçта та кирлĕ. Тиляр — бухгалтер, эпĕ — строитель». Çапла туйăмсем вылянаççĕ Праски Çеменĕн.

Куç каймарĕ унăн уçăлас хапха çинчен. Кĕтнĕ чух вăхăт мĕн-ма тимĕр шапа пек аран-аран шăвать-ши? Чим, Ями

тухрӗ. Ҫавӑ! Туйипе шаклаттарса утать. Ӑна хирӗҫ ярт-латтарчӗ Праски Ҫеменӗ. Пырса тытрӗ ӑна. Карчӑк кӑмӑлсӑррине асӑрхарӗ те чутах сывлӑшӗ питӗрӗнетчӗ.

— Ӗҫ тухмарӗ-и? — ыйтрӗ вӑл.

— Тав ту мана, — терӗ евчӗ.

— Мана качча тухма хирӗҫ мар-и?

— Айван, кусса тӑран урапи, ҫураҫманшӑнваскасах кӗпе тӑхӑнтарт мана. Асту, ан ман, пурҫӑннине туянма пултӑн.

— Хӗр илме хӑҫан пыма хушрӗҫ? Мӗнле калаҫса татӑлтӑр? — тӗпчет тӳсӗмсӗрленнӗ каччӑ.

— Тӗпчесе ан хӑшкӑлтар-ха мана, — Ями тутине, сӑмсине алӑ тупанӗпе шӑлкаласа илчӗ, — вӑл хӗр сан валли мар.

— Мӗнле хӑятӑн эсӗ, тухатмӑш, ҫапла калама?! — хӑтӑрчӗ карчӑка Праски Ҫеменӗ. — Никама те памастӑп ӑна! Вӑл манӑн арӑм пуласси!

Ями евчӗ ахӑлтатса кулса ячӗ.

— Авлан ара, енчен те аннӳпе иксӗрӗн патак ҫисе пурӑнас килсен. Катӑк хӗр тет вӑл. Аппӑшӗ, Элевер, йӑмӑкӗн путсӗрлӗхӗ ҫинчен йӗре-йӗре тӑхҫаласа пачӗ. Путсӗрскер аппӑшне хӗнесе пурӑнать, йыснӑшне те хирӗҫ тӑрать. Тата тӳсмелле мар кахал. Мӗн тума кирлӗ сана юлхав арӑм? Чиперлӗх вӑл, ачам, пасара кайма ҫеҫ юрӑхлӑ. Суртӑм та тухрӑм, кусса тӑран урапи.

— Эх, айван карчами. Сана аппӑшӗ суйнӑ, чике таран лартса ӑсатнӑ. Тилягтан паха та чипер хӗр таврара урӑх ҫук! — шутсӑр кӑмӑлсӑрланчӗ Праски Ҫеменӗ. — Евчӗпе хам пыманшӑн кӳреннӗ вӑл. Аннепе иккӗн тан каятпӑр хӑтана. Тулӗккӗш тӑхӑрса юлас марччӗ.

— Хурӑн хуппинчен кӗпер хыватӑн, кусса тӑран урапи, — карчӑкӑн сасси ҫиллессӗн тухрӗ, — Ҫемен, укҫуна халех кӑларса панӑ пул! Кӗпе туянма каятӑп.

Тарӑхнипе тулхӑрнӑ Праски Ҫеменӗ карчӑка хӑйӗн ҫирӗп аллипе рак хаччи пек ярса тытрӗ. Чышкипе юнарӗ. Вара ӑна хӑй ҫумӗнчен вирлӗн тӗксе ячӗ. Ями месерле кайса ӳкрӗ. Те ыратнипе, те кӳреннипе вӑл хурахлатса кӑшкӑрчӗ, унтан тытӑнчӗ ӳлесе йӗме. Хӗрхенекенсем ҫук-и-мӗн? Пуҫне пӑрса иртрӗҫ-ши вара?

Тем самантран Ями аран-аран тӑрса ларчӗ. Курчӗ: туйи

çumĕnчех. Ярса тытрĕ ăна, çапасшăнччĕ хăйне кӳрентерекене. Анчах авланма хыпăнакан этем курăнмарĕ çывăхра.

Праски Çеменĕ çавăнтах манчĕ ватă Ямие. Тек евчĕ кирлĕ мар ăна. Çул çине тухрĕ те каялла çаврăнса пăхмасăр ĕрĕхтерчĕ килнелле. Унăн хыçĕнче тусан мăкăрланса тăсăлать, тупата, калăн, вăрăм хӳре.

Алкум картлашкипе хăпарнăçемĕн амăшне кăшкăрчĕ. Хирĕç сасă илтĕнмерĕ. Килте мар-ши? Пăшăрханнăскер пӳрте чупсах кĕчĕ. Шăп çак вăхăтра уçă тĕпсакай анинче амăшĕн пуçне курах кайрĕ. Унăн шурă тутăрĕ çумне эрешмен картисем урлă-пирлĕ çыпăçнă.

— Ме-ха, тыт витрене, — хушрĕ амăшĕ ывăлне.

— Мĕн хăтланан эсĕ тĕпсакайĕнче? — тĕлĕнчĕ Çемен амăшĕ аллинчи çӳп-çаплă, тислĕклĕ йывăр витрене тытса. Ăна урайне лартрĕ.

— Тĕпсакайне тасатрăм. Çĕрнĕ паранкă усал шăршă сарса выртать. Часах çĕннине хума вăхăт çитет.

— Пăрах-ха эсĕ кирлĕ-кирлĕ мар ĕçпе аппаланма. Часрах хăтана каяс пулать.

— Мĕн пит апла васкаварлă? Космоса вĕçтерсе яраççĕ-и мĕн?

— Хе, хăçан вĕреннĕ эсĕ янкăс сăмахсемпе перкелешме? Космос тет. Унта вĕçме хапсăнакансем пур.

— Хĕрĕ ытла селĕм-и? — тĕпчет амăшĕ тĕпсакайĕнчен тухнă май.

— Чăн-чăн чĕкеç.

— Ашшĕ-амăшĕ кам?

Ывăлĕ вара Тиляр пирки ăнлантарса пачĕ. Амăшĕ хирĕç мар.

— Чи кирли, чĕкеçĕ хăвна юраттăр.

— Хăвăртрах авланмалла. Кайранхине куç курĕ.

Çеменпе амăшĕ сĕтел хушшине вырнаççах ĕç-пуçа мĕнле канваласа тĕрлемелли пирки сӳтсе явнă хыççăн пĕр тĕле пырса тухрĕç. Вырсарни — канлĕх кунĕ, çемье килте. Хăтана пырса кĕме шăпах меллĕ.

* * *

Утар Мишшин килĕнче хаваслă самант хуçаланать. Чăн-чăн уяв кунта. Пӳрт-çурт çап-çутă. Сĕтел тулли тутлă çимĕç. Чĕресре — кăрчама.

Тиляр — шурă юс, çӳрет йăпăртатса. Юрату, ĕмĕтленни ума çитсен хĕр упраçа çапла çунатлантарать.

Кĕтнĕ вырсарни кун çитрĕ. Эппин, Илтимĕр амăшĕпе хăтана килет.

Иртнĕ кунсенчен пĕринче вăтаннипе куçран пăхма хăяймасăр сăмах хускатрĕ Тиляр çемье умĕнче. Тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарчĕ: вĕсем Илтимĕрпе мăшăрланма килĕшнĕ. Хăçан хĕр çураçма килес куна та палăртнă.

Аппăшĕ Элевер та, йыснăшĕ Мишша та хирĕçле пуплемерĕç.

— Хăтана килни аван-ха, хĕр чапне ӳстерет, — терĕ аппăшĕ.

— Илтимĕре хĕр пама килĕшетĕп, — йăл-йăл кулкаларĕ йыснăшĕ. — Вăл пиçсе çитнĕ лайăх йĕкĕт. Салтакра пулнă.

— Пăянаму пулмалли хĕрарăм ытла кăмăлласкер. Киншĕн ку — телей, — мухтать Элевер пулас кĕрĕвĕн амăшне.

— Илтимĕр амăшĕ Минепи Ивановна ĕçченлĕхĕпе, сăпайлăхĕпе палăрса тăрать, — тет Мишша. — Вăл упăшкасăр юлнăранпа çулсем самай иртрĕç, анчах ывăлĕсене пĕччен йĕркеллĕ пăхса ӳстерчĕ. Часах кĕçĕннине çара ăсатать. Ун çумĕнче пурăнса ху та ăс пухан.

Сăмах татрĕç: Тиляра çураçма килекенсене ырă кăмăлпа йышăнса хăналас.

Хĕвеллĕ уяр кун. Кăмакаран кукăль-пӳремеч пиçсе тухрĕ.

— Ай-уй, мĕнле хитре, — тет Тиляр, — пурте хĕрлĕ çырла. Çу сĕрем-ха кукăль пичĕсене.

— Ку сире телейлĕ пурăнăç кĕтнине пĕлтерет, — йăл-йăл кулкалать Элевер.

Сехет вун ик хут çапрĕ. Шăп çак вăхăтра хапха умне çăмăл машина, сенкер тĕслĕскер, çитсе чарăнчĕ. Кăшкăртрĕ. Кил хуçисем чӳрече умне чупса пычĕç. Ăнланчĕç тӳрех: Илтимĕр çитрĕ.

Элевер упăшки унăн машинине пуçласа курать, сăмахне пĕлтĕрех илтнĕччĕ. Илтимĕр машина туянма укçа ярса панă тетчĕç. Вăл киле таврăннă чух машини ăна сарайĕнче кĕтнĕ. Тăрăшаканĕ амăшĕн шăллĕ пулнă.

Машинăран виççĕн тан тухрĕç: Илтимĕр — морякла тумланнă, амăшĕ сурпан сырнă. Уринче хăмăр тĕслĕ пуш-

мак. Илтимӗр шăллӗ Мӗтри çийӗнче хура сукна костюм. Хайхискерсем хăюсăртараххăн калинкке уçса картишне кӗчӗç. Унччен те пулмарӗ, теме пӗлтерсе сасартăк чăхчӗпсем хушшинче çӳрекен хӗрлӗ киккириклӗ автан хурахлатнă пек авăтса ячӗ: ки-ки-рук-ку-у-у-к!

— Пирӗн килес-с, — терӗ Минепи Ивановна пуç тайса.

— Килӗр, килӗр! Атьăр, атьăр пӳрте, — текелесе Элевер хăнасене алă парса чӗнчӗ.

Вӗсене йышăнма Тиляр йыснăшӗ Мишша та алкум вӗçне тухрӗ. Ăна килнисем алă тытса сывлăх сунчӗç, хăйсене ăшă кăмăлпа йышăннине туйрӗç. Пӳрте кӗрсен Минепи Ивановна сӗтел çине хуплу кăларса хучӗ. Илтимӗр — эрех кӗленчи, Мӗтри сăра тултарнă кăкшăм лартрӗ.

Элевер те ахаль пăхса тăрӗ-и, вăл та сӗтел çине сăй туртрӗ.

— Тиляр, сана кӗтетпӗр, — чӗнчӗ ăна аппăшӗ.

Чăлан алăкӗ уçăлчӗ. Унтан хӗвел пек çуталса хӗр тухрӗ. Вăл пурне те сывлăх сунчӗ.

Илтимӗр хăйӗн савнă пикине курсан нар пек хӗрелчӗ. Унăн часрах Тиляра пырса ыталас килчӗ. Чуптăвӗччӗ тăраниччен. Анчах юрамасть, йăла-йӗркене пăхăнмалла.

Ӗнтӗ пурте апат-çимӗçлӗ сӗтел хушшине вырнаçрӗç.

Кăрчама тултарнă стакан кашнин умӗнче. Пӗри те алла тытман-ха ăна. Кашнинех ăнланма хӗн темӗскер тыткăнлать. Мӗтри вара уйрăмах пăшăрхануллă. Чунӗ ытла çамрăк-çке-ха унăн. Вăл пиччӗшӗ валли хӗр çураçма килнӗ. Пулас инке чăннипех те — чечек. Пур-мӗн тӗнчере çав тери хитре хӗр. Халех илсе каяс килет ăна. Темшӗн халь-халь кӗмсӗртетсе аслати авăтассăн, витререн тăкнăн çумăр çăвассăн, тăвайккисенчен шыв капланса анассăн, çирӗп пӗве татăлассăн туйăнать.

— Тытар мар-и стаканне? Йӗпетер мар-и çăвара? Юхтăр ăшă калаçу хушăмăрта, — сӗнчӗ хăнасене кил хуçи Утар Мишши.

Илтимӗр амăшӗ ура çине тăчӗ. Унăн сылтăм аллинче — кăрчама тултарнă стакан.

— Каçарăр, юмарт чӗлхем çук манăн. Калаçăва çавракалатса илемлетеймӗп, — пуçларӗ вăл сăмахне. — Хамăр килнӗ сăлтава хӳтӗлеме ирӗк парсамăр.

Минепи Ивановнăна итлекенсем унăн сăмахĕпе килĕшнине пĕлтерсе пуçĕсене сĕлте-сĕлте илчĕç.

— Стаканри тур юнне тута патне илсе пырасси сирĕнпе пирĕн тĕллев, килĕшӳ çырлахнинчен килет. Эпĕ ывăлăмсемпе хĕр пăхма килнĕ. Манăн асли авланасшăн. Вăл сирĕн йăмăкăра Тиляра куç хывнă. Тĕрĕс-и, Илтимĕр?

— Сăмах паратăп сирĕн умăрта: эпĕ Тиляршăн лайăх упăшка пулма тăрăшăп.

— Хĕр мĕн тейĕ? — Минепи Ивановнăн куçĕ Тиляр çине куçрĕ.

— Питĕ шел. Çак сĕтел хушшинче аттепе анне пулмаллаччĕ, вĕсен пире пил памаллаччĕ. Анчах вĕсене çак куна çитиччен пурăнма пӳрмен.

— Каçарччĕр ĕнтĕ, — сăмах хушрĕ йыснăшĕ. — Вĕсен вырăнĕнче — эпир.

— Илтимĕр арăмĕ пулма килĕшетĕп, — вăтаннипе пуçне пĕкрĕ Тиляр. — Эпĕ юрататăп ăна.

Качча каяс, авланас йăла халь тин тухман, ĕмĕртен пыракан йĕрке.

Элевер, сĕтел хушшинче лараканскер, хаш та хаш сывлать. Кулянать мар-и? Ара, йăмăкĕ çамрăк-çке-ха, тепрер çул тăхтасан та юрамалла. Мĕн тăвăн, хĕрĕн хăйĕн ирĕкĕ. Аппăшĕпе йыснăшĕн хăват çитеймест ăна чарма. Илтимĕре шанаççĕ пурнăç йĕркеллĕ пуласса. Вăл çапах та тин вун çиччĕ тултарман, пиçĕхсе çитнĕ хусах. Килĕштерсе пурăнма, ача-пăчаллă пулма пил пачĕç вара. Мăшăрлă пурăнăçра телей амаланма сунчĕç.

Ĕнтĕ тултарнă стакансене тинех шаккаса пушатрĕç. Илтимĕрĕн те черет çитрĕ хăйĕн кучченеçĕпе кил хуçисене сăйлама. Черккесене эрех тултарчĕ. Анчах тута патне илсе пымарĕç-ха. Унччен чи кирлине палăртмалла. Ку ыйту чылай вăхăт сӳтсе яванчĕ. Тепĕр уйăх кĕтмелле. Унччен Тилярăн бухгалтер курсĕнчен вĕренсе тухса ĕçе вырнаçмалла.

Çурла уйăхĕн малтанхи кунĕнче туй пуçланать.

* * *

Утар Мишши килĕнче чылайччен пычĕ сăй. Вăхăт иртрĕ. Хăнасем каяççĕ, вĕсене ăсатаççĕ кил хуçисем. Кăшт хĕрĕнкĕ пурте. Калаçу хаваслă пырать. Акă урама тухрĕç.

Илтимӗрпе Тиляр айккинерех пӑрӑнчӗҫ. Ҫураҫнӑ хӗрӗн пурах-тӑр пулас упӑшкипе чунтан тухакан сӑмах каламалли. Илтимӗр тата ӑҫтан тӳстӗр чуптумасӑр уйрӑлма? Ыталанчӗҫ. Тутасем пӗрлешрӗҫ.

— Чарӑн-ӑ-ӑр! — аслати пек кӗрлесе кайрӗ сасӑ. — Ти-ля-ар! Тута ан пар ӑна, йӗксӗке. Пӑх-халӗ, ҫын савнине хапсӑнать. Мур илесшӗ!

Кам хурахлатать? Сас илтӗннӗ еннелле пурте пуҫӗсене карах пӑрчӗҫ. Курчӗҫ вара: ҫулпа Праски Ҫеменӗ тӗрлеттерсе ҫывхарать. Унӑн аллинче пысӑк коробка — торт тата витӗр курӑнакан кукӑр-макӑр савӑтра хӗрлӗ шӗвек, путех пылак шыв е улма-ҫырла сӗткенӗ. Вӑл паян илӗмтилӗмпех хулана тухса вӗҫтерчӗ пысӑк сӑлтавпа: хӗр ҫураҫнӑ ҫӗре хуплу йӑтса кайни ытла айванла, кивӗлле; хӗр килӗнчи сӗтел ҫине торт хурсан ӑна культурӑллӑ ҫын вырӑнне йышӑнӗҫ. Туянчӗ вара мӗн ӗмӗтленнине.

— Эх, ывӑлӑм, кая юлтӑмӑр-няк! — кӑшкӑрать Ҫемен амӑшӗ, ывӑлӗ хыҫҫӑн йӑпӑртатса пыраканскер. — Ҫӳрен хула тӑрӑх сӗтӗрӗнсе.

Праски Ҫеменӗ ҫиҫӗмле хӑвӑртлӑхпа ӗрӗхсе ҫитрӗ Илтимӗрпе хӗр умне.

— Тиляр! Ан чупту теп ӑна, — тилмӗрет Праски Ҫеменӗ. — Сана эпӗ качча илетӗп.

— Ха-ха-ха! — кулса ячӗ моряк. — Чуп, килте кӗт пулас арӑмна, ӑна халех машинӑпа лартса пыратӑп.

— Эсӗ, ӑҫтиҫук, ман савнине вӑрласшӑн! — Праски Ҫеменӗ тортпа шӗвек тултарнӑ савӑта амӑшне тыттарчӗ те Тиляра аллинчен ярса тытрӗ. Сӗтӗрет кӑна. Куншӑн лекрӗ вара хӑйне. Илтимӗр самант ҫӗклесе ҫапрӗ ҫӗре. Аран тӑчӗ лешӗ. Ҫывӑхра амӑшӗсӗр пуҫне никам та ҫук. Вара Праски Ҫеменӗ чышкипе юнаса пӗтӗм тӗнче илтӗнмелле кӑшкӑрчӗ: — Сӗренсӗр этемсем! Ку мӑшкӑла тӳсместӗп, тавӑру пулатех! Асту, Илтимӗр, ҫурӑму тирне сӳсе параппан тӑватӑп!

— Ывӑлӑм, ватӑ асаттесемпе ылхан, — ӑс парать Ҫемен амӑшӗ. — «Ман савнине илекен сарра кайтӑр сакӑр ҫул», — те, «Тӑрайми вырттӑр тӑхӑр ҫул!» — те. Чӗркуҫленсе ҫӗре пуҫҫап.

Алне сулчӗ те Ҫемен ута пачӗ ҫулпа. Ун хыҫӗнче амӑшӗ тӗпӗлтеттерет торт ӳкесрен сыхланса.

## 6

Пурнӑç ырӑ та лӑпкӑ чух çемьере кам ытларах савӑнать-ши? Путех, ашшӗ-амӑшӗ.

Минепи Ивановна аслӑ ывӑлне авлантарнӑранпа вӑхӑт самай иртрӗ. Унӑн килне Тиляр кин хӗвел илсе пычӗ тейӗн. «Анне! Анне! Анне!» — виççӗн тан çапла чӗнеççӗ-ха ӑна. Пӗтӗм кил-çурт кӗмӗл тенкӗ пек чӑнкӑртатса тӑратчӗ. Пурте хаваслӑ, пӑхса ытармалла мар хитре, чупса ӗçлесе çӳретчӗç.

Илтимӗрпе Тиляр хӑйсем валли йӑва çавӑрчӗç. Урам илемӗ — вӗсен чул çурчӗ. Ял-йыш пулӑшрӗ тӑрӑшса. Тупата, нимене пыман çын юлмарӗ-тӗр. Мӗншӗн? Çамрӑк мӑшӑра хисеплесе паллах. Çурт тӑрланса çитсен çӗнӗ пукан-сӗтел туянса вырнаçтарчӗç. Урай та витӗнчӗ тӗрлӗ тӗслӗ чечексем ӳкерчӗклӗ паласпа. Кавирсем тӑсӑлчӗç стенасем çумӗпе. Шкапра хӑйсен вырӑнне йышӑнчӗ чашӑктирӗк.

Пысӑк пӳлӗмре чӳречене шурӑ чӗнтӗрпе карнӑ чух пилӗк тытрӗ. Хӑраса ӳкрӗ Тиляр, йӗрсе ячӗ. Айван, ма шикленмелле? Пур хӗрарӑм та çакнашкал ыратнине тӳсет. Турӑ хушнӑ-тӑр çапла. Юратса йӑпатакан, ачашлакан упӑшка çумӗнче нимрен те хӑрама кирлӗ мар-тӑр. Вӑл акӑ машинипе вӑштах ӑсатрӗ больницӑна. Эрне иртсен киле таврӑнчӗ те Тиляр пепкепе.

Çемьере телей тени хӗрринчен тӑкӑнса тӑрать. Пурте ӑмсанчӗç Илтимӗрпе Тиляра. Пурӑнмаллаччӗ савӑнса çеç. Çапла пурӑнчӗç те-ха. «Эпӗ сана юрататӑп! Эпӗ те сана юрататӑп!» Çак сӑмахсене Минепи Ивановна кун каçа ывӑлӗпе кинӗнчен çӗр хут та илтнӗ пулӗ. Чӑп-чӑп чуптуса тӑратчӗç пӗр-пӗрне. Телевизорпа ют çӗршыв сериалӗсене пӑхса хӑйсем те çавсене хӑнӑхаççӗ-тӗр.

«Эпир ытла та айванла пурӑнса иртternӗ», — хашлатсах кулянать вара Илтимӗр амӑшӗ. Ӑна упӑшки пӗр хут та «Эпӗ сана юрататӑп», — тесе каламан. Пӗрлешиччен çар хӗсметӗнче пулнӑ чух сайра хутра çыру çыркаланӑ. Çав чуна савӑнтаракан, вӑтантаракан сӑмаха нихӑçан та асӑнман. «Мӗнле пурӑнан? Эпӗ лайӑх пурӑнатӑп. Сана та çавнах сунатӑп». Çырури пӗтӗм уççи-хуппи çак çеç. Салтакран таврӑнсан улахран, вӑйӑран ӑсатса янӑ самантсенче, Турӑ сыхлатӑр, çавтӑнса утас йӑла пулман.

Качча кайсан та Минепи Ивановна «Юрататăп!» сăмах илтмесĕрех икĕ ывăл çуратнă. Упăшки ăна нихăçан та сивĕ куçпа пăхман. Ку ĕнтĕ, путех, «Сана юрататăп» тени пулнă-тăр.

Минепи Ивановнăн упăшки ир çĕре кĕнĕ. Вăл чутах çурхи шыва путман. Çакăн хыççăн хĕне кайнипе сывалайман. Хĕрарăмăн икĕ ывăлне пĕччен ӳстерме тивнĕ. Амăшĕн вĕсене пула ку таранччен усал ят илтмен, питкуçа хĕретмен. Мĕн пулчĕ аслине?

Хайсем çурт лартса уйăрălса тухнăранпа вăхăт нумаях та иртмен-ха. Илтимĕр амăшĕ патне килчĕ те пурăнать те пурăнать. Виçĕ çĕр выртрĕ. Килне кайма шухăшламасть те. Хăй хуйхăллăн, ассăн-ассăн сывлать. Пурте пĕрле пурăннă чух Илтимĕрпе арăмĕ нихăçан та ятлаçман, ытла туслăччĕ.

«Лăпкă кӳлле те шуйттан иленет теççĕ», — аса илчĕ амăшĕ ваттисен сăмахне. Усал ерсен çынсене сăлтавсăрах уртарать, ухмаха ертет имĕш. Ахальтенех сĕлкĕш мартăр Илтимĕр.

Тӳсеймерĕ Минепи Ивановна ывăлне тĕпчемесĕр:

— Эсĕ ытла та кăмăлсăр. Пĕрре те ĕлĕкхи пек хаваслă мар. Кинпе хирĕçмерĕр пулĕ те?

— Чиперех-çке. Мĕн-ма унашкал шутлан-ке? Тиляр аппăшĕ патне пĕчĕккине кăтартмалла хăнана кайрĕ. Çĕнĕ çуртра пĕччен пурăнас килмерĕ те сирĕн пата килтĕм.

— Апла-и? Мана япăх шухăшсем пăшăрхантараççĕ. Аванах пулсан каçар, — килĕшрĕ амăшĕ. — Сирĕн пепкĕр хăвăр пекех чипер, пăхса ытармалла мар. Кăмăлĕ амăшĕнни пек ăшă пултăрччĕ. Тиляр кин вăл — чăн-чăн хĕвел, йăл кулать те сан çине ăшă сирпĕнет, хăвăнтан та вара çутă хĕлхем пĕрхĕнет тавраналла. Килĕштеретĕп ăна. Пĕрле чылай пурăнтăмăр, унран сивĕ сăмах илтмен, анне, анне! тесе çеç çӳретчĕ. Ачине курас килекен пулчĕ. Хăçан таврăнать?

— Часах таврăнаççĕ, — лăплантарать Илтимĕр амăшне.

* * *

Илтимĕр тĕрĕсне каламарĕ. Хăйĕн ăшĕнче шĕл кăвар амаланать, хыпса çунать. Ара, вăл Тиляр ачапа аппăшĕ патĕнчен таврăнас умĕн килĕнчен тухса тарчĕ-çке-ха. Ульти

тыттарса хăварчĕ ăна Праски Çеменĕ Тиляр патне янă çырăва. Вуларĕ те мĕнле хăрушла хыпар пĕлчĕ. Вĕсен тин çуралнă Энтюк унăн ывăлĕ мар иккен, ача ашшĕ — Праски Çеменĕ. Ырă мар шухăшсем юр кĕрчĕ евĕр купаланаççĕ Илтимĕр пуçĕнче. Унăн куçĕ умне каллех çав йĕплĕ çыру шуса тухрĕ: «...Тиляр, эсĕ ача çуратнă — ывăл. Унăн ашшĕ эпĕ. Савăнатăп. Урра!»

— Ых, явăл! — шăлне качăртаттарса илчĕ Илтимĕр. Акă ăна, вăрман хыçĕнчен шуса хăпарнă тăхлан пĕлĕт евĕр, иккĕлентерекен самантсем килсе хупларĕç. Вара хăйпе хăй калаçрĕ: — Пĕрлешиччен пĕр эрне пек маларах Тиляр ларакан колхоз бухгалтерĕ пӳлĕмĕнчен Праски Çеменĕ нар пек хĕрелнĕ пит-куçпа тухнине курнăччĕ. Мĕн пулса иртнĕ вĕсем хушшинче? Чим, Энтюк пĕр эрне маларах çуралчĕ мар-и? Çапла, пĕр эрне маларах çуралчĕ. Тупата, ку шăла качăртаттаракан пулăм. Тӳрех хыпăнса ӳкем мар-ха. Хĕрарăмсене кам пĕлсе çитерĕ? Тен, çурт лартнă чух Тиляра йывăр çĕклени юраман? Çакна пула ача иртерех тапранма та пултарнă. Пăрахса кайсан, пĕлсех тăр, Праски Çеменĕ ман арăма хăй патне илсе каять. Çук! Ирĕк памастăп! Эпĕ Тиляра хам юрататăп. Вăл ман арăм. Халĕ киле каятăп та айванла хут татки çырса хăварнăшăн каçару ыйтатăп».

Хаваслă туйăм çавăрса илчĕ Илтимĕре. Пит-куçĕ хĕвел пек ялкăшать. Пахча енчи чӳрече патне пырса тăчĕ. Амăшĕ ав çĕр улми йăранĕсем хушшинче тем мĕшĕлтетет. Ăна флотран таврăннăранпа пĕрремĕш хут курнăн тинкерсе пăхрĕ. «Эпĕ киле каятăп», — теесшĕнччĕ.

Сасартăк чун шуйханчĕ. Мĕн амакĕ? Уçă кантăкран усал-тĕсел вĕçсе кĕчĕ-ши? Чăннипех тытамак тытăнчĕ кисретме. Ăшра темле сасă йĕкĕлтесе калаçма пуçларĕ. «Хаха-ха, — ахăлтатса кулать хайхискер, — арăму патне каятăн-и? Айванланни ку. Ани уçă тĕпсакайне ӳкнипе пĕрех. Унта, нӳрлĕ тăпра çинче, хура çĕлен авкаланса выртать. Сăннине кăларать сăхма. Ача ашшĕ хăвах-и? Ĕненетне?»

Илтимĕр чăлантан пушă чăматанне илсе кĕчĕ те унта хăйне кирлĕ япалисене хучĕ. Вара ăна йăтса амăшĕ килĕнчен тухса кайрĕ.

Çухалчĕ çын. Уйăх иртсен шăллĕ Мĕтри ячĕпе çыру

килчĕ. Илтимĕр ҫырать. Вăл иккен Владивосток хулине ҫитнĕ. Пĕр карап ҫинче ĕҫлет — матрос. Хăйĕн адресне никама та, амăшне те, калама хушмасть. Анчах килти, хăйĕн ҫемйи пирки вăрттăн пĕлтерсе тăма ыйтать.

* * *

Чăнлăха тĕпчесе сумне пĕлесшĕн вăй хумарĕ Илтимĕр. Ҫăмăл ҫулпа чупрĕ. Ульти вĕсен пурнăҫне пăсрĕ хăйне качча илменшĕн. Ара, Тиляра та кӳреннĕ унăн савнине тытса илнĕшĕн.

Туй хыҫҫăн Ульти тĕл пулчĕ Тиляра. Хытах ятлаҫрĕ.

— Пĕвере пысăк карас тытрăм терĕн-и? Намăссăр эсĕ, Тиляр. Мĕнле хăйрăн ҫын савнине качча тухма?

— Илтимĕр сана мар, мана юратнă.

— Савăнма иртерех. Сармантейĕн сарă чăххи ылтăн ҫăмарта туман-ха.

Кĕрченĕскер усал шухăш тытнă. Ҫамрăк мăшăра тавăрасшăн хĕмленет. Мĕнле майпа? Вăл хаяр меслет шухăшласа тупнă.

Тилярпа Илтимĕре курайманни тата тепĕр ҫын пурҫке-ха. Вăл — Праски Ҫеменĕ. Унăн юратнă хĕр упраҫне Илтимĕр тытса илчĕ тесе шутлать. Юлашки вăхăтра Праски Ҫеменĕ ялти ҫамрăксемпе Мускав хулине ерсе кайнă. Юлташĕсемпе стройкăра ĕҫлет. Пĕр уйăх ĕҫлеҫҫĕ те вара киле таврăнса пĕр-икĕ эрне пурăнаҫҫĕ.

Тиляр ача ҫуратнă вăхăтра Праски Ҫеменĕ шăпах килтеччĕ. Пĕр канлĕ кун вĕсем патне Ульти пырса кĕчĕ. Вăл сывлăх-мĕн сунмарĕ, тӳрех хăй мĕнле сăлтавпа килнине пĕлтерчĕ:

— Илтимĕрпе Тиляра тавăрас самант ҫитрĕ.

— Мĕнле майпа? — тĕлĕнчĕ кил хуҫи.

— Иккĕшин хушшине элек ҫăмхине кустарса кĕртетпĕр, — Ульти хăй шухăшне тĕрлĕ тĕслĕ сăрăсемпе сăрласа пачĕ. — Тиляр ачин ашшĕ — эсĕ.

— Хи-хик! — ахăрчĕ Ҫемен. — Эпĕ ăна тĕкĕнмен-иҫ. Вăл мана ухмах вырăнне хурĕ.

— Хурин, пире мĕн ĕҫ. Ку ҫырупа эпир Илтимĕре уртаратпăр. Вăл санăн Тиляр патне янă ҫырăва вулать те — иккĕшин хушшинче пуҫланать вăрҫă, харкашу. Тен, вăл арăмне пăрахса килĕнчен тухса каять.

— Ха-ха-ха, — йӗкӗлтет Праски Ҫеменӗ хӑй умӗнче тӑракан Ультие. — Илтимӗр пӑтраштарса ҫарӑка сухапа улӑштарасса шанатӑн-и?

— Вӑхӑта сая ан яр. Тытӑн ҫырма, — хушрӗ Ульти.

Праски Ҫеменӗ шурӑ хут листи, ручка илсе сӗтел хушшине ларчӗ. Ульти мӗн ҫырмалли сӑмахсене каласа тӑрать. Сехет те иртмерӗ, ҫыру тӗрленчӗ те. Акӑ ӗнтӗ ҫамрӑк мӑшӑр хушшинче вут-хӗм кӑларакан элек конверт ӑшне кӗрсе выртрӗ. Ҫирӗп тытать ӑна аллинче Ульти. Тухса чупрӗ вӑл. Часах ҫитрӗ кирлӗ ҫӗре. Турра шӗкӗр, алӑка Илтимӗр уҫрӗ.

* * *

Ульти лара-тӑра пӗлмест. Вӑл ҫав тери ҫунать Илтимӗрпе тӗл пуласшӑн. Пырса кӗчӗ акӑ Минепи Ивановна патне.

— Анне, газ аванах ҫунать-и? — терӗ хайхискер.

— Тавтапуҫ, сӳнсе тарӑхтармарӗ, — явапларӗ кил хуҫи хӗрарӑмӗ. Унтан кӑшт тӗлӗнсе тӑчӗ те каларӗ: — Чим-ха, Ульти, мӗн йӗркепе санӑн аннӳ пултӑм эпӗ?

— Сана эпӗ «анне», эсӗ мана «кин» тесе чӗнмелли хӗр упраҫ эпӗ. Пӗлен-ҫке, Илтимӗр ывӑлу салтака кайнӑ чух эпӗ ӑна «сана кӗтетӗп» тесе сӑмах патӑм. Качча каймарӑм. Вӑл таврӑнчӗ. Эсӗ ӑна Тиляра качча илсе патӑн. Турӑ Микуш пичче мар, час курмасть. Халь мӗн пулса тухрӗ? Ип курмарӗ унпа Илтимӗр. Арӑмӗ ют арҫынпа ача ҫуратрӗ. Юрӗ, эпӗ каҫарӑп. Ӑраскала пӗлме ҫук. Пурӑнӑҫ темле те ҫаврӑнса килӗ, тем те парнелӗ. Илтимӗр арӑмӗ патӗнчен тухса кайнӑ, вӑл каялла ҫемйи патне таврӑнмастех. Пӗр сивӗннӗ йӑвана кайӑк та ҫӗнӗрен иленмест. Шанчӑкӑм вут-кӑварла ялкӑшать, вӑл мана кӑчӑк туртать, — савӑнӑҫлӑн хихиклетет Ульти. — Эпӗ ывӑлупа пурӑнма юлатӑп. Акӑ сана — кин. Тен, халӗ пирӗн унпа иксӗмӗрӗн ҫӗнӗ кун пуҫламалла? Пире юнашар тӑратса пил пар. Ӑҫта-ха вӑл халь?

— Чӗлхӳ ҫине ҫӑпан тухасшӗ! Тьфу! — Минепи Ивановна кӑмака умӗнчен турчка илсе тухрӗ те унпа Ультие хӑмсарчӗ. Ятла-ятла ӑна алӑк патнелле тӗкрӗ: — Эсӗ-и-ха вӑл пирӗн ҫинчен элек саракан ӗ?! Э-э-э, мӑнукӑм Энтюк ашшӗ Илтимӗр мар эппин? Манӑн вунӑ ывӑл пулсан

та сана, сёренсёр этеме, пёрне те качча илсе парас çук. Халех тухса кайнă пул, унсăрăн пуçна çапса çуратăп!

Ульти вёлт çеç тухса шурĕ. Карчамине хăй майлă çавăрайманшăн кулянать.

Пŭрте Мĕтри кĕчĕ.

— Анне, кампа ятлаçатăн эсĕ? — терĕ ывăлĕ. Вăл амăшĕпе кŭлешекен çынна курасла пуçне ун-кун пăркаласа илчĕ.

— Халь çеç Ультие пăсăрлантарса кăларса ятăм, — мăкăртатрĕ амăшĕ. — Илтимĕре качча тухма килнĕ. Ăçта пиччŭ? Пĕлместĕн-и?

— Тин çеç чугун çул станцинчен ăна ăсатса килтĕм. Энтюк ашшĕ вăл мар имĕш. Намăса тŭсеймесĕр пăрахса каятăп терĕ.

— Кирлĕ мара ан лăпăртат-ха.

— Тĕрĕсне калатăп, анне. Каллех иксĕмĕр тăрса юлтăмăр.

— Ăçта кайрĕ вăл?

— Таçта. Пуйăспа ларса кайрĕ. Ывăлĕн ашшĕ чăнах та урăххи имĕш. Тиляра çыру янă лешĕ.

— Эх, ытла айван-çке Илтимĕр. Элеке ĕненсе тĕнче тăрăх çапкаланса çŭрет-и ĕнтĕ? Хăйсем пурăннине кĕвĕçекен тăшмансем тем те туртса кăларĕç. Ачи каснă лартнă хăй. Йăлт ашшĕнне туртнă. Унăн та хамăр йăха пĕлтерекен тур палли пур. Пĕркун вĕсем патне кайсан ачан çав тур паллине хам куçпа хам куртăм.

— Манăн пур-и унашкал япала? — тĕпчет амăшне Мĕтри.

— Пулмасăр. Илтимĕрĕн те, аçун та пурччĕ. Таварса хăпарт-ха сылтăм урари шăлавар пĕççине. Çŭле, çŭлерех çĕкле.

Амăшĕ хушнине Мĕтри тăвать. Чăнах та курчĕ вăл: чĕркуççинчен çŭлерех пĕçĕ çинче ясмăк пĕрчи пысăкăш хăмăр пăнчă пур.

— Çакă тур палли-и? — пŭрнипе тĕллерĕ вăл.

— И-ия, — çирĕплетет амăшĕ.

— Халиччен нихăçан та асăрхаман эпĕ ăна.

— Пĕчĕк Энтюкăн та тур палли шăп çав вырăнта. Эппин, вăл ют ача мар, хамăрăн. Манпа, амăшĕпе, калаçмалла пулнă Илтимĕрĕн. Тен, аякках каймĕ-ха. Хăй йăнăшне ăнланĕ те Канаш станцинчех анса юлĕ. Киле таврăнатех.

## 7

Пӗр уйӑх пурӑнчӗ Тиляр ачипе ҫеҫ. Ҫак хушӑра унӑн пуҫне ҫурхи шыв пек шухӑшсем юхса кӗрсе чуна пӑлхатрӗҫ. Илтимӗр пач ҫухалчӗ. Мӗтри шӑллӗсӗр пуҫне урӑх никам та пӗлмест вӑл ӑҫтине, лешӗ пытарса пурӑнать унӑн адресне те. Ҫапла хушнӑ ӑна пиччӗшӗ.

Хаваслӑ пурнӑҫа пӑснӑ икӗ ҫыру вара (вӗсене тӗплӗн пытарса хунӑ пулин те) Тилярӑн асӗнчен самантлӑха та тухмасть, куҫӗ умӗнчен сирӗлмест. Праски Ҫеменӗн элеклӗ ҫырӑвӗпе Илтимӗр хӑй шухӑшне пилӗк ыйту паллиллӗ хут татки Тӗмпек шырланкинчи Киремет йывӑҫҫин тураттиҫине тирсе хӑварнӑ ылхан пек туйӑнать.

Вӑхӑт тени, тупата, асамҫӑ. Вӑл ытла та чее. Кун иртет, каҫ пулать; хыҫа юлать — талӑк. Ӗнерхи кун тек нихӑҫан та сан пата таврӑнмасть, ара, вӑл пурӑнас ҫула кӗскетсе сӑн-пуҫ хитрелӗхне катертет. Ҫу кунне сар ҫупа танлаштараҫҫӗ. Тӗрӗсех. Вӑхӑт-вӑхӑтпа ҫумӑр ҫӑвать, ун хыҫҫӑн хӗвел ҫӗр питне лӑпкать. Йывӑҫ-курӑк ӳсет емешӗл, сывлӑш — сим пыл. Ҫут ҫанталӑкпа пӗрле этем те улшӑнать. Ӑна иртни, пуласлӑх хумхантарать.

Тиляр пуҫ мими хутлӑхӗнче ҫырӑннӑ роман страницисене уҫать.

...Ҫапла. Тӗнчене хӗр пулса ҫуралнӑ вӑл. Ҫӗр ҫинче мамӑк пек ҫӑмӑллӑн вӗҫсе ҫӳренӗ. Хыпса ҫунмалли самантсем пулман мар пурнӑҫра. Путех, ҫавсем-тӗр ҫамрӑк чуна пиҫӗхтернӗ. Ҫитӗннӗ, кӗнӗ хӗр шутне. Качча кайнӑ юратнӑ ҫынна, ача та ҫуратнӑ. Хаваслӑччӗ, ара, ҫумра юратнӑ, вӑйлӑ ҫын пур — упӑшка. Вӑл нихӑҫан та памӗ урараран ӳкме. Шел. Сасартӑк умра ҫӗр шар-р ҫурӑлчӗ. Тиляр ӳкрӗ ҫӗр шӑтӑкне. Алӑ памарӗ ҫумри вӑйлӑ ҫын. Вӑл хупӑрланӑ шӑналӑка сирсе ҫемьене хӳтлӗхе тӑратмарӗ. Унӑн кӑкӑрӗнче — чӑх чӗри. Ҫитменнине, ҫухалчӗ. Мӑшкӑл! Ӳпкев пысӑк. Кӳренӳ тени вӑл чӑн-чӑн хӗскӗч. Унран ҫӑлӑнма питӗ хӗн. Вӑл тинӗсри тӑвӑл хумӗ ҫине пӑрахать те каллӗ-маллӗ лӑкать, вара чуллӑ ҫырана кӑларса ҫапать, выртан типпе тӑрса юлнӑ пулӑ евӗр ҫатӑлтатса. «Турӑҫӑм, каҫарсамччӗ, — пӑшӑлтатать Тиляр, — эпӗ таса чунлӑ хӗрарӑм. Усал сунакана куҫран калам-и: пуҫна пултӑр! Энтюка парӑсӑнччӗ чипер ӳссе ҫитӗнме ырлӑх-сывлӑх».

Пепке çуралсан пуçланнă Тилярăн çĕнĕ пурнăçĕ хăйĕн чаршавне уçрĕ. Кассăн-кассăн çил вĕрчĕ, умри тĕтрене сирчĕ. Ĕнтĕ малти чиперех курăнать. Ырă пурнăçшăн кĕрешĕве тухма Тиляр хатĕр. Юрий Гагарин космонавт пек, хăйне каларĕ вăл: «Кайрăмăр!» Уçăлчĕ йĕс хăлăпла хапха.

Тилярăн чи малтанхи каçалăкĕ вăл — ĕç. Панă-ха хĕрарăма канлĕ вăхăт пепкене уралантарма. Мĕн тăвăн? Паян çав ырлăхпа киленме пÿрмен ăна, тепĕр хутлăхра усă курĕ.

Ĕмĕтĕн пĕрремĕш пусăмĕ ăна ялти пĕччене тăрса юлнă ватă хĕрарăм Укахви инке патне илсе çитерчĕ. Нумайччен пуплерĕç. Вăл ырă кăмăллă асанне иккен. Пĕр чĕлхе тупăнчĕ вĕсен. Вара Укахви кинемей Тиляр патне пурăнма куçрĕ. Часах ăна ача хăнăхрĕ. Иккĕшне çеç хăварма та юрать. Çапла турĕ те.

Колхоз председателĕ питĕ савăнчĕ Тиляр ĕçе тухнăшăн, ара, бухгалтерсăр ĕç япăх пырать. Вăхăт-вăхăтпа килне ачине ĕмĕртме кайса килме чармаççĕ ăна.

Тăрăшса, чунне парса ĕçлет Тиляр. Ăна çĕнĕ ĕмĕтсем тыткăнланă. Вăл хăй валли ывăлĕпе пурăнма çĕнĕ çурт лартасшăн. Илтимĕр пурна киле таçтан пĕр-пĕр майра ертсе таврăнĕ. Ку тĕп сăлтав. Тата вăл пурне те Илтимĕрсĕр те тулли пурнăçпа пурăнма пултарнине кăтартса парасшăн. Тиляр пачах йынша хур чĕппи мар, вăл — улăп, паттăр. Кирпĕч çурт лартма унăн укçа çителĕклĕ. Амăшĕ çĕре кĕрсен унăн туприне аппăшĕпе иккĕшĕ çурмалла валеçнĕ. Халĕ ăна кил ырăнĕ — паçма кирлĕ. Ăна ял çыннисем пухура татса парĕç. Тата унăн тепĕр питĕ хивре ĕç пур — Праски Çеменне таварасси. Унран судпа алимент шыраса илесси. Суд хĕрарăм майлă пуласси куçкĕрет, ара, Праски Çеменĕ «ача ашшĕ — эпĕ» тесе çыру çырнă Тиляр патне. Ку вăл — документ.

«Куççуль тăкаççĕ ĕнтĕ, — ăшĕнче кулать Тиляр, — выртса йĕрĕç укçи-тенкине хĕрхеннипе. Çав кирлĕ вĕсене. Кашни çын хăй пакăç ĕç тунишĕн явап тытмалла».

Тăрăшса ĕçлет Тиляр. Унашкал ĕçчене халăх час курать, пуçлăхсем те ун йышши çынна çул уçса параççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ бухгалтер хисеплĕ çынсен ретне тăма пултарчĕ. Ферма, уй-хир ĕçченĕсем, ял хуçалăх инженер-техникĕсем юлашки уйăхсемшĕн ĕç укçи илчĕç. Çакăншăн

бухгалтера тав тăваççĕ. Юнашар ялсенчи артельсенче ĕçлекенсене уйхи-уйхипе ĕçшĕн тӳлеймеççĕ.

Пĕррехинче ял-йышăн черетлĕ пухăвĕнче Тилярăн ыйтăвне те пăхса тухрĕç. Çурт-йĕр çавăрма ăна участок парас тесе йышăнчĕç.

Ĕççи пуçланиччен кирпĕч тиесе килчĕ вăл, ниме туса кăшкарне хăparттарса лартрĕ. Тăрăшакан çынна Турри те пулăшать тесе ахаль каламан-тăр.

Ĕç юхса пырать Тилярăн. Хальхи вăхăтра çын пурнăçĕнче чи кирли — укçа. Ăна пулăшакансем самант тупăнчĕç, пӳрт ăш-чиккине майлаççĕ. Нумай та вăхăт иртмĕ, хуçи çĕнĕ çурта пурăнма куçĕ.

Кил-çурт выльăх-чĕрлĕхсĕр çара. Тиляр ĕне туянма ĕмĕтленет. Сысни, сурăхĕ те вите-картана тултарĕç. Вĕсене çитерме апат кирлĕ. Уя акнă чĕкĕнтĕре пăхса ӳстерме колхоз ял çыннисене валеçсе парать. Тиляр та çынсенчен юлмарĕ, тăвату йăран йышăнчĕ. Ĕçĕ сахал мар, пилĕке авмалăх пур. Кĕркунне кăларсан колхоз виçĕ пайран пĕрне пăхса ӳстерекене парать.

Утă çулас вăхăт çитсен Тиляр та улăха çава йăтса тухнă. Чашлаттарнă ешĕл сĕткенлĕ курăка, айккинче тăсăлса юлнă сарлака паккус.

Анчах бухгалтера шут ĕçĕ пусмăрласах сĕтел хушшине лартать. Уйра тăрмашакансене ĕç укçи памалла.

Ирхи кӳлĕм. Тиляр шут шăрçисене каллĕ-маллĕ шакăртаттарать кăна. Алăка шаккаççĕ.

— Кĕрĕр! — ирĕк пачĕ Тиляр.

Пӳлĕме яш каччă кĕрсе тăчĕ. Сывлăх сунчĕ.

— Бухгалтер эсир пулĕ? — терĕ хайхискер.

— Тем кирлĕччĕ?

— Эпĕ геолог. Пирĕн йыш сирĕн колхоз çĕрĕ çинче нефть шырать, — ăнлантарать хайхискер. — Колхоз кайкай, çĕр улми уйăрса панă пире. Мĕн чухлĕ тӳлемеллине бухгалтер шутласа парать терĕç. Тав турра, аранах тĕл пултăм. Вырăнта яра кунах лармастăр ахăр.

— Урăх ĕçсем те тыткăнлаççĕ. Халех шутлăпăр мĕн чухлĕ тӳлемеллине, — терĕ Тиляр геолог çине куç хĕррипе пăхса. Сасартăк ăна палласа илчĕ. Тăван ял шкулĕнче пĕр класра вĕреннĕ, вара Хусан хулине пĕрле вĕренме кайнă — çаксем самант асне килчĕç. Çинçешке арçын ачаран

сарлака ҫан-ҫурăмлă йĕкĕт пулса тăнă. Хĕвелпе пиҫсе хуралнă хăй. Куҫĕсем ҫеҫ улшăнман — кăн-кăвак. Вĕсем ĕлĕкхи пекех ăшшăн пăхаҫҫĕ.

— Салам, Янук Тайнаров! — терĕ Тиляр. — Паллаймастăн та-и?

— Чим-ха, — хăйса шăтарасла пăхрĕ хайхискер. Палларĕ те кăшкăрсах ячĕ: — Ай-уй! Тиляр, эсĕ-иҫ ку! Сана кунта тĕл пуласси асра та ҫук.

— Кĕркуннехи куян пек шупкаланнă ахăр. Ватăлнă, — текелерĕ Тиляр йăпăштин кулкаласа.

— Апла мар-ха. Унччченхинчен ытла чечекленнĕ ху. Пăхса ытармалла мар — хитре.

— Хĕрарăм хăҫан чиперленет? Юратакан пур пулсан.

— Ăнлантăм.

— Йăнăшан. Эсĕ ман пурăнăҫ пирки ним те пĕлместĕн.

— Илтнĕччĕ-ха, аннӳ ҫĕре кĕнине пула медфака вĕренме таврăнайманнине, аппу патне куҫса кайнине, ҫемьеленнине...

— Упăшка манран тарчĕ. Хусаххăн пурăнатăп.

— Шахвăртса калаҫан-тăр.

— Эпĕ нăйăлти хĕрарăм мар. Сана ҫĕнĕ ҫурт ĕҫкине чĕнетĕп.

— Хăҫан?

— Нефть тупасси ҫăмăл мар. Сирĕн ĕҫ паян-ыран пĕтмест. Вăхăт ҫитсен пĕлĕн. Кӳр документусене.

* * *

Ҫĕр каҫах тĕв тытнă шухăш Тиляра ир-ирех вăратрĕ. Пӳлĕме тул ҫути кĕнĕ. Васкасах чӳрече патне пычĕ вăл. Пăхрĕ кантăкран. Ăна ҫут ҫанталăк тĕлĕнтерчĕ. Тӳпен тап-таса та шуранкарах ҫеҫен хирĕнче пĕртен-пĕр япала куҫа илĕртет. Вăл — ҫап-ҫутă кĕмĕл ҫурла уйăх. Ун вĕҫĕнчех — ҫăлтăр. Калăн уйăх алка ҫакнă. Тиляр куҫĕ ҫĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ ҫĕрелле куҫрĕ. Унта хăмач тăрăхĕ каранă, хĕрлĕн ялкăшать. Урам урлă пахчари йывăҫсем пĕлĕтелле кармашнă, путех, хĕвел тухасса кĕтеҫҫĕ. Пилеш хăйĕн илемĕпе илĕртет. Ҫупкам-ҫупкам ҫырли саррăн-хĕрлĕн курăнать ешĕл ҫулҫăсем хушшинче. Шурă шупăрлă хурăнсем сарă тутăрпа пĕркеннĕ. Ҫил ачисем тин ҫеҫ вăраннă ахăр, йывăҫ тураттисемпе юлхавлăн выляҫҫĕ.

— Анне, (юлашки вăхăтра кил хуçи çапла чĕнет ăна), — вăратрĕ хĕрарăма Тиляр.

Кинеми самант тăрса ларчĕ. Каçхи калаçăва аса илчĕ те темле пăшăрхануллă сасăпа каларĕ:

— Праски Çеменне суда парасах тетĕн-и? Çынна култармăн-ши?

— Унне, тăмананне, ыйхине уçмалла. Тупăннă анра. Систĕр ача ашшĕ мĕн тути каланине. Çын пурнăçĕпе вылляма юрамасть. Ача пукане мар.

— Хăвăн ирĕкӳ, эппин. Чей вĕретме лартам, — кухньăна кĕрсе кайрĕ Укахви.

Тиляр васкасах тумланчĕ. Вăл хура вельвет шăлавар, сарă хăмăр сăран пальто тăхăнчĕ. Уринче утма çăмăл пултăр тесе аял кĕлеллĕ пушмак. Вăрăм сарă çӳçне çивĕтлемерĕ, тураса якатрĕ те çурăм хыçнелле ячĕ, пуçне шурă берет тăхăнчĕ. Укахви кинемей апат сахал çинĕшĕн мăкăртатса илчĕ. Хăй пăхса ытараймасть, мухтамасăр та тӳсеймерĕ:

— Тупата, эсĕ, Тиляр, каснă лартнă супăнь хучĕ çинчи майра.

— Ытлашши ырлан. Юратнă çыннăн кăлтăкĕ курăнмасть. — Тиляр хыпаланса килтен тухса вĕçтерчĕ.

* * *

Илтимĕр амăшĕ Минепи Ивановна кинĕ патне килмен кун иртмест. Мăнукне Энтюка чунтан юратать мар-и. Пушă алăпа çӳремест вăл нихăçан. Кучченеçĕ унăн: ĕне юр-варĕ. Пĕчĕк этеме сĕт, тăпăрч кирлине пĕлет асламăшĕ, унсăрăн ача-пăча вăй илмест.

Ку хутĕнче килте мăнукĕпе няни кăна.

— Кин ĕçре-тĕр? — текелесе сĕт тултарнă чĕресе хăех кухньăна кĕрсе сĕтел çине лартрĕ. Вара ăшă сĕте стакан çине ярса каялла тухрĕ. Ача пĕлет ăна асламăшĕ сĕтпе сăйлассине. Вылякансќере Минепи Ивановна аллине тытрĕ.

— Ух, мĕнле ӳснĕ эсĕ, пепкем!

Ачин мĕнпур сăмахĕ те ăх-х! ăх-х! Ку: «Асанне, эпĕ сана питĕ-питĕ юрататăп...» — тени пулĕ ахăр. Ача асламăш аллинчи сĕт тултарнă стакана ярса тытать, асламăшĕ пулăшнипе тути патне илсе пырать, сыпать. Лăнкăртлăнкăрт çăтать.

— Ёҫ-ёҫ, — хӗтӗртет ватти. — Тӳттӳ тутлӑ. Сӗт ӗҫсен вичкӗн каттиллӗ ӳсӗн. Катӑк шӑллӑ каччӑна хӗрсем тиркеҫҫӗ.

Укахви, хӑна умӗнче сӑмах пуҫласшӑн тӑпӑртатса тӑраканскер, аранах ҫӑварне уҫрӗ:

— Тӑхлачӑ, пӗлетӗн-и-ха эсӗ? Тиляр паян Праски Ҫеменне суда пама кайрӗ. Унран алимент шыраса илесшӗн вӑл.

— Ах, ҫав кине, мӗн-ма айванланать-ши? Ара, пӗлетиҫ, ача — хамӑрӑн. Клеме пур! — асламӑшӗ арки ҫинчи ачан уринчи чӑлхине антарчӗ те хайхи тур паллине кӑтартрӗ: — Пӑх, Укахви. Ҫак япала — пирӗн йӑх палли. Илтимӗрӗн те, Мӗтрин те, вӗсен ашшӗн те пур, шӑп ҫав вырӑнта. Мӗншӗн ҫыхланмалла ҫав ҫум ҫаккипе?

— Тиляр хӑй ачи пирки иккӗленет тетӗн-и-мӗн? — кулкаласа илчӗ Укахви. — Паллах ҫук. Ачи Илтимӗрӗнха. Икӗ хут иккӗ тӑваттӑ пулнипе пӗрех. Вӑл Праски Ҫеменне, карма ҫӑвара, тавӑрасшӑн, выртса макӑрттарасшӑн. Алиментне тӳлемеллех тусан Ҫеменпе амӑшӗ укҫине хӗрхенсе, тупата, хытӑскерсем, ҫакӑнса та вилӗҫ.

— Ним калама та пӗлместӗп, — тет ассӑн сывласа Минепи Ивановна.

— Ёҫ тухсан пӗҫ ҫапса кулӑпӑр, — каллех ахӑлтатрӗ Укахви.

— Кин ытла лара-тӑра пӗлмест. Мӗншӗн хӑйӗн ҫурт лартмалла пулчӗ-ха ун?

— Куншӑн ӑна ырламалла ҫеҫ. Ку упӑшкин ҫурт-йӗрне салатни мар, хӑй йӑва ҫавӑрать. Хакла хӑвӑн кинне.

— Укахви, санпа килӗшетӗп эпӗ, шухӑшу тӗрӗс сан, — куҫне мӑчлаттаркаласа илчӗ Минепи Ивановна кӗсйинчен пӗчӗк шурӑ тутӑр кӑларса тута хӗррисене сӑтӑркаласа. — Мур илмен Илтимӗре, пӗчӗккӗ чухнехи пек, купарча урлӑ чӗн пиҫиххипе ҫулса илӗттӗм. Ӑҫта пурӑнать-ши? Адресне пӗлсен кайса ҫавӑтсах киле илсе таврӑнӑттӑм.

— И-и-и, Минепи Ивановна, ҫамрӑксем пире итлӗҫ-и?! — кулянанҫи тӑвать Укахви. — Ӑс кӗрсен хӑех таврӑнать. Тилярпа иккӗшӗ чиперех пурӑнма тытӑнӗҫ. Чупан лаша та такӑнать теҫҫӗ.

— Тавтапуҫ сана, Укахви, — терӗ Минепи Ивановна. — Ырӑ сӑмах лайӑх кун пекех.

Энтюк, асламӑшӗ арки ҫинче лараканскер, икӗ карчӑка йӗрмӗшсе чӑрмантармарӗ. Вӑл ӗҫлӗ. Печени кӑшлать, теттипе вылять. Вӑхӑт самаях иртрӗ. Ача куҫӗ ҫине тӑмана чӗппи пырса йӑпшӑнать пулас. Ӑна тутлӑ ыйхӑ ҫупӑрлать. Пуҫне пӗкет те пӗкет вӑл. Вара асламӑшӗ пӗчӗк йӗкӗте кравать ҫине вырттарать. Ӑна лӑпкаса шӑппӑн юрлать: ачине, паппине...

— Пахӑр чунӗ, ҫывӑрса та кайрӗ. Ытла та кунӑҫлӑ, — мухтать Укахви ачана. — Амӑшне пӑхнӑ мар-и. Тиляр ылтӑн кӑмӑллӑ хӗрарӑм. Унашкал ҫынна кӑнтӑрла ҫурта ҫутса шырасан та тупаймӑн. Шӑпах — пӑрчкан.

— Илтимӗр ывӑлӑм та ылтӑн. Тилярпа иккӗшӗ чӑнчӑн ачӑлташпа-мачӑлташ. Пӗри теприне илем кӳрсе тӑратчӗҫ. Кун каҫа вӗсем пӗр-пӗрне: «Эпӗ сана юрататӑп», — тенине ҫӗр хут та илтеттӗм. Мӗн тӑвӑн, Турри ҫапла уйӑрӑлса каймалла ҫырнӑ пулӗ.

— Тӑхлачӑ, хыпса ҫунар мар-ха. Мирлешӗҫ.

— Ҫапла пултӑрччӗ. Эпӗ каям-ха.

— Чим-ха, — терӗ Укахви. Вӑл сӗтел ҫинчи кӑкшӑмран стакана сӑра ячӗ те Минепи Ивановнӑна тыттарчӗ, — ҫул курки.

Лешӗ хирӗҫлемерӗ. Пӑшӑрхануллӑ калаҫупа ӑш хыпнӑччӗ самаях. Тӗппипех ӗҫрӗ. Вара сывпуллашса тухса кайрӗ.

Укахви кил хуҫине, Тиляра ӗнтӗ, вӗри апатпа кӗтсе илесшӗн апат пӗҫерме лартрӗ.

* * *

Праски Ҫеменӗн амӑшӗ хӑйсен урамӗнче пӗр-пӗччен каллӗ-маллӗ утса ҫӳрет. Ҫанталӑк кӗр енне сулӑннӑ. Кассӑн-кассӑн кӑкӑра касакан хытӑ ҫил вӗрет. Ватӑ ҫынсене питӗрех тумтир тӑхӑнма хистет. Праски инке ҫийӗнче те ӑшӑ тумтир: тулӗ — пархӑт, ӑшне — ватин хурса ҫӗленӗ пиншак. Вӑрӑм вӑл, чӗркуҫҫине те хуплать. Уринче — калушлӑ кӑҫат. Аллинче мӑн туя. Унпа Праски инке умӗнчи ҫӗр ҫинче выртакан чул катӑкӗсене, тӑпра муклашкисене тӗккелесе вырӑнтан хускаткаласа илет. Кӑмӑлӗ ҫӗкленӳллӗ. Кашнинех хӑйӗн савӑнӑҫӗ ҫинчен каласа парасшӑн сӑмах пуҫлать. Ӗнтӗ кампа кӑна пакӑлтатмарӗ-ши? Аякранах асӑрхарӗ: акӑ ҫулпа татах тепӗр

хӗрарӑм килет. Ҫывхарсан палларӗ: Крахук, халӑх судӗнче ӗҫлет. Лешӗ ҫывхарнӑ-ҫывхарман сӑмахне вӗҫертрӗ:

— Таҫталла тапать?

— Сирӗн пата ҫитсе курас терӗм. Ҫемен ывӑлу килтехтӗр?

— Килте пулман тӑк ҫапла урамра ҫӳрӗп-и?

— Хӑваласа кӑларса ячӗ-и-мӗн?

— Калан та кирлӗ мара, чӗлхӳ ҫине ҫӑпан шӑтасшӗ. Халӗ килте туй умӗнхи уяв пырать. Ҫемен авланма шухӑш тытрӗ. Ҫитет асса ҫӳресе.

— Ывӑлу сан, чӑнах та, ытла йӑкӑс. Чаплӑ хӗр тупрӗ пулӗ-ха, — тӗпчет Крахук.

— Тупата, хавасланӑскер: качака путекки пек тӑрс-тӑрс! сиккелет, тиха пек кӗҫенет, ихӗлтетет, качча кайман-ха, Ҫемене ыталать, чуптӑвать.

— Хитре те пулӗ?

— Чечек пекех. Пӑхӑр ҫӳҫлӗ, вӗҫлеке янахлӑ, карӑш мӑйлӑ.

— Хамӑр ял хӗрӗ-и?

— Ҫу-ук! Ман пулас кин йышши пӑрчӑкан пек хӗр ӳстерес тӗк ял хӗрарӑмӗсен хӑйсен тепӗр хут ҫуралмалла. Вӑл учительница. Ют ҫӗршыв хӗрӗ. Ячӗ — Арук.

— Хальхи ҫамрӑксем ятсене кӗскетсе те хуҫкаласа аппаланаҫҫӗ. Пирӗн кантурта Матӗрне ятлӑ хӗр пур. Хӑйне вӑл Рона тесе чӗнтерет. Санӑн пулас кинӳн ячӗ тем тесен те — Марук. Акӑ сана — ют ҫӗршыв хӗрӗ. Вӑл тем тесен те — чӑваш.

— Ан кӳрентер мана. Ывӑлӑма ют ҫӗршыв хӗрӗсем тиркеҫҫӗ тесшӗн-и эсӗ? Вӑл манӑн пуса чечекӗ мар, чӑнчӑн пыршӑл. Пулас арӑмӗ ӑна ҫапла ачашлать: эсӗ чултан вартнӑ статуй! тет. Эпӗ унпа килӗшетӗп.

— Праски инке, аслӑк ҫинче авӑн ҫапаймӑн. Ывӑлу кирлӗ-ха. Кӗрем ун патне.

— Каларӑм-ҫке сана, Крахук. Вӗсен унта уяв, ан чӑрмантар ҫамрӑксене, — тет Праски инке.

— Эпӗ патшалӑх ӗҫӗпе ҫӳретӗп. Санӑн ывӑлна суда чӗнеҫҫӗ, — терӗ те Крахук вӗлт ҫеҫ хапхаран кӗрсе ҫухалчӗ.

Пӳртре акӑш-макӑш шав. Вун-вун ик ҫамрӑк. Хӑйсем йӑслаҫҫӗ. Пӗри, вӑрӑм ҫӳҫлӗскер, урай варрине тӑнӑ та сулахай урине ҫемӗ май тапа-тапа гитара калать. Юрлаканӗ юрлать, ташлаканӗ ташлать.

Кил хуҫи — Праски Ҫеменӗ диван ҫинче ларать сарӑлса. Ун арки ҫинче — чиперкки, шӑпах арӑмӗ пулма шутлаканскер ахӑр, унсӑрӑн Ҫемене мӑйӗнчен вӑрӑм аллисемпе ҫӗленле явса илмӗччӗ. Вӗҫӗ-хӗррисӗр чуптӑваҫҫӗ.

Чӑлан ҫумне тӗртсе лартнӑ сӗтел ҫинче ӗҫме-ҫиме лӑках.

— Ҫемен, — чӗнчӗ Крахук ун умне пырса тӑнӑ май.

— Мӗн кирлӗ сана? Мӗнле хайрӑн, сӗмсӗрккe, пирӗн пата шӑп ҫак вӑхӑтра кӗме? — хирӗҫет Ҫемен.

— Патшалӑх ӗҫӗпе ҫӳретӗп. — Крахук аллинчи кӗнекене уҫрӗ те пӳрнипе тӗллесе каларӗ: — Ҫакӑнта суда чӗнекен хута илтӗм тесе алӑ пус.

— Суда-а? Мӗншӗн чӗнеҫҫӗ? — кӑсӑкланчӗҫ пурте Ҫемен умне капӑрах пуҫтарӑнса.

— Алимент шыраса илесшӗн унран, — терӗ Крахук хӗр ытамӗнче ларакан Ҫемен унпа тӳрккес пулнӑран.

— Алимент?! — ҫак сӑмах пурин ҫӑварӗнчен те пӗр харӑссӑн пуля пек вӗҫсе тухрӗ.

Ҫемен шартах сикрӗ. Вӑл ура ҫине сиксе тӑчӗ. Яшкӗрӗм ахӑлтатать.

— Кам хӑять манран алимент шырама? — ӳхӗрсе ячӗ Праски Ҫеменӗ. — Мӑшкӑлласшӑн-и?

— Кампа ҫылӑха кӗтӗн, ҫав ӗнтӗ, — ахӑлтатать пӗри.

— Эсӗ, йӗксӗк, авланнӑскер иккен. Суйрӑн мана хусах тесе, — тытӑнчӗ качча тухма хатӗрленнӗ хӗр Праски Ҫеменне ҫупкӑлама. Алли ыратиччен кӳпкерӗ вӑл. Вара урай варрине ярт каҫӑрӑлса тӑчӗ те кӑшкӑрчӗ: — Тус тантӑшсем! Атьӑр тухса каяр ку калпай килӗнчен.

— Арук, ан ӗнен ку суя хыпара, — йӗрет ӳлесех Праски Ҫеменӗ. Юратнӑ хӗр упраҫне пырса ыталарӗ. Анчах лешӗ тӗксе ячӗ, ҫийӗнчен тапрӗ вирлех. Ҫемен авӑнса ӳкрӗ. Яш-кӗрӗм ахӑлтатса та йӗкӗлтесе тухса кайрӗ.

Кӑшт вӑхӑт иртсен амӑшӗ кӗчӗ пӳрте.

— Хӑнасем кайрӗҫ те-и? Сахал сӑйланчӗҫ-ҫке? Арукӗ те юлмарӗ-и? — ун-кун пӑхкаларӗ Праски инке ывӑлӗ чӗнменнине кура. Сасартӑк курах кайрӗ: лешӗ ахлатса выртa парать урайӗнче.

— Мӗн чухли-мухли пулчӗ? — хыпаланса ӳкрӗ хайхискер. — Хӗнесе хӑварчӗҫ-и-мӗн?

— Арук тапрӗ те антӑхнипе кайса ӳкрӗм.

— Ых-х, хура шӑна! Вӑл ҫавнашкал хӗр пулчӗ-и? Эпӗ

тек ăна урата урлă урине ярса пустармастăп. Тупата, чăнчăн йытă ами.

— Анне, ытла ан ятла-ха. Вăл Крахукран усал хыпар илтрĕ те чăтаймарĕ ĕнтĕ кӳренмесĕр.

— Крахук, çăхан этемми, мĕн пакăлтатрĕ вара? Курам кăна урамра, пуçне çапса çурам унне.

— Ун пекех ан вăрç-ха ăна. Вăл та айăплă мар.

— Ним те тĕшмĕртместĕп сана, ывăлăм.

— Илтимĕр арăмĕ Тиляр манран алимент шыраса илме суда панă. Крахук повестка килсе тыттарчĕ пĕтĕм çамрăксем умĕнче. Ăнлантăн-и ĕнтĕ? — кашкăр пек уласа йĕме тытăнчĕ Çемен.

— И-и-и! Ара, эсĕ, эппин, кĕрт йытти. Намăссăр! Тĕрĕс тапнă сана Арук кирлĕ çĕртен.

— Хуп çăварна! Кăвар сирпĕтен! Пушар мĕнрен тухнине пĕлместĕн ху! — ятласа тăкрĕ Çемен амăшне хăртнипе чун ыратни чарăнас пек. Вара урайĕнче выртаканскер тăчĕ те сĕтел умне пырса çур стакан эрех тултарса ĕçрĕ. Кун хыççăн амăшне те черкке тыттарчĕ. Лешĕ ĕçрĕ янках. Эрехшĕн чунне пама хатĕр-çке мĕскĕн. Сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ вăл. Тутине çĕленĕнех сас кăлармарĕ. Кĕтет ывăлĕ сăмах пуçласса.

Сехетĕн вăрăм йĕппи ăна-кăна чухламасть, шăвать те шăвать хăй майĕн. Вунă минут иртрĕ ав.

— Авланасси çырма леш енче купăс каласа иртсе кайрĕ, аннем, — терĕ Çемен.

— И-и-и, ара, ватăлса кăмака çине хăпарса выртас вăхăт çитмен-ха. Авланăн.

— Алиментщике кам качча тухĕ? Суд тӳлемеллех йышăнсан тĕнче тăрăх хутаç çакса çӳреме лекет. Шутла-ха эсĕ, вун сакăр çул, кашни уйăхра манран укçа ирĕксĕр тытса юлаççĕ-çке-ха. Пĕтетпĕр.

— Мĕншĕн ăна-кăна виçсе пăхман-ши эсĕ унпа çылăха кĕриччен? Эсир, йытă çимен арçынсем, ĕçне туса пултăр. Кайран унта çĕр çăттăр. Халĕ чавса çывăх та, çыртаймăн.

— Эпĕ йăнăшнă. Тиляр ачине çуралсанах ман ача тесе йышăнтăм. Хăтăлаймастăп ĕнтĕ.

— Итле, ăс парам, — терĕ амăшĕ кĕленчерен черккене эрех ярса ĕçсен: — Ачи хăвăн-и, хăвăн мар-и, ĕçе суда çитерсе намăс, шырлăх курассинчен хăтăлар.

— Мĕнле майпа?

— Качча ил Тиляра. Унашкал хитре, ăслă, пултаруллă, пуян хĕрарăм таврара çук. Вăл тата санран кĕçĕн. Тупата, ĕмĕр иртнине сисмĕн. Илтнĕччĕ-ха, вăл халь-халь хăй лартнă çуртне пурăнма куçать. Акă саншăн — рай. Çăкăрне пĕçернĕ хунă. Маччана сурса çеç вырт.

Праски инке чее хĕрарăм. Ывăлне хăварса картишне тухрĕ. Шухăшлатăр, чăрмантарма юрамасть ăна халь. Пахчине кĕчĕ. Кунта ĕнтĕ çуллахи илем çук. Улмуççисем самаях çаралнă. Тĕлĕнтермĕш! Варринчи ретре улмуççин çӳлти туратра пĕринче хĕп-хĕрлĕ пан улми ӳкмесĕр юлнă. Вуллине силлерĕ хуçа. Çук, ӳкмерĕ. Сивĕрен те, вăйлă çилсенчен те хăрамасть. Паттăрскер. Кирек мĕн курсан та пахча хуçин пуçĕнче — ывăлĕ. «Нӳрлентермен чуста-ха вăл. Шав унаса тăмалла». Акă вăл тарасаран пĕр витре шыв ăсса пӳрте кĕчĕ.

— Хывăн пилĕк таран. Çăвăн! — хушрĕ вăл ывăлне. Лешĕ хурулашмарĕ. Амăшĕ унăн алли çине шыв ярса тăчĕ. Унччен те пулмасть, куркари сивĕ шыва çурăмĕ тăрăх чаш-ш! сапрĕ. Кăшкăрса ячĕ Çемен. Калăн, амăшĕ ăна чĕрĕ хулăпа çунтарса илчĕ.

Сивĕ шыв вăл çамрăк йĕкĕтшĕн — эмел. Ыратни, йĕни, кӳренни, кăмăл хуçăлни — йăлтах сĕвĕрĕлчĕ. Вăй кĕнине чиперех сисрĕ Çемен.

Халь ăна амăшĕ чи чаплă тум тăхăнма ăс пачĕ. Çийĕнчех шифоньер уçрĕ. Çемен çекĕлтен вĕçертрĕ кирлĕ çипуç. Пĕтĕм дивана йышăнчĕ вăл. Калăн, лавкка сакки çине сутма сарса хунă тавар. Ав костюм, салат тĕслĕ, Çĕрпӳ ярмăрккинче туянни, шурă кĕпе. Путех, майне бабочка çыхать, ав вăл, хĕрлĕ бархăтран хатĕрленĕскер, кĕпи çинче выртать. Пушмакĕ вара çӳллĕ кĕлеллĕ (яштакарах курăнас ĕмĕтпе туяннăскер ĕнтĕ), хуп-хура, тĕттĕм пӳртрех йăлтăртатать, ара, вăл лаклă-çке-ха. Тумланчĕ. Çӳçне якатрĕ. Пуç тăрне шлепке лартрĕ.

— Тиркеме май çук сана, — мухтать Çемене амăшĕ. — Ăçтан тупайĕ Тиляр, ачаллăскер, санашкал илемлĕ йĕкĕт? Санашкаллисем, патька, çĕрте выртса çӳремеççĕ.

— Çитĕ, ытлашши ан мухта.

— Мĕн, тĕрĕс мар-и? Хамăн та пырас мар-и санпа? Тем тесен те иккĕн иккĕнех.

— Ухмахна кăтартса çӳреме-и? Лар килте кутна хĕссе.

Праски Çеменӗ алӑк патӗнчи йӑрхахран хура плащне вӗçертсе илчӗ те тӑхӑнчӗ. Вара сӑхсӑхсах тухса кайрӗ.

Утатчӗ-ха Праски Çеменӗ, ырӑ шухӑш-ӗмӗтсемпе авӑрланнӑскер, урампа. Юри мӑшкӑлланӑн кӗркуннехи куштан çил пахча картисем хушшинчен вӑш-вӑштӑр, ши-ши! шӑхӑрса вӗрчӗ. Тупата, вӑл ашкӑнчӑк çил. Ара, Çемен пуçӗнчи хура шлепкене вӑр-вар хывса илчӗ те айккинелле вӑш-ш! ывӑтрӗ. Ку çитмерӗ-ха, çил ачисем хайхи шлепкене йӑпӑр-япӑр ярса илчӗç те, мечӗк пек, пӗр-пӗрне перкелешсе вылярӗç кӑна. Вара кӑлтӑрмач пек кустарса çумӑрпа ислетнӗ пылчӑклӑ çул хӗррине лач! пӑрахрӗç.

Урам урлӑ каçнӑ йӗке хӳрене хӑваланӑн шлепке хыççӑн чупрӗ, унталла-кунталла пӑхмасӑр. Хуса çитрӗ Праски Çеменӗ хӑйӗн хура шлепкине. Ӑна илес шухӑшпа пӗшкӗнсе аллине тӑсрӗ. Мӗн амакӗ? Шӑп çак самантра шлепке çунатти хӗрри çинчен атӑллӑ ура çӗкленсе айккинелле пӑрӑнчӗ, анчах кӑмӑла хуçакан йӗр юлнӑ. Вӑл — пылчӑклӑ уçӑмсӑр ӳкерчӗк.

— Хи-хи-ик! Çемен, мӗншӗн тарать санран сомбреро? Аран тытса чартӑмӑр. Ха-ха-ха!

Пуçне каçӑртса пӑхрӗ те Праски Çеменӗ курах кайрӗ: ахӑлтатса кулаканни — Тиляр иккен. Ӑна хулӗнчен çавтӑнни — хайхи геолог. Çулла вӑйӑсенче те куркаланӑччӗ ку çынна. Çамрӑксем ӑна Янук Тайнаров геолог тесе чӗнетчӗç. Праски Çеменӗн хӑлхине пӗрре мар кӗнӗ: Тиляр хыççӑн чупать. Халӗ ку сӑмах-юмах тӗрӗс пулнине ӗненчӗ. Ӑшне мӗнле ан хывтӑр ара: хӑй куçӗпе хӑй курчӗ. Çук унӑн телейӗ. Каллех кая юлчӗ. Хаяр шӑпа татах хӗсне çӗклет. Иртсе кайрӗç. Каламаллаччӗ-и тен ӑшри сӑмаха? Чӗлхе çыхланчӗ, такам тутана çӑпата пек пысӑк çӑрапа питӗрчӗ.

Мӑшӑр утрӗ те утрӗ малалла, хушӑ вӑрӑмланнӑçемӗн вӑрӑмланчӗ. Кӑшкӑрсан та халӗ ӗнтӗ илтес çук Тиляр. Праски Çеменӗ шлепкине çӗртен илсе пуçӗ çине лартрӗ. Темшӗн куçӗ хуралса килчӗ, пуçӗ те çаврӑннӑ пек туять. «Эпӗ тӗлӗкре аташса çӳретӗп, — шухӑшларӗ Праски Çеменӗ. — Чӑн-чӑн пурнӑçра кунашкал йӳтеме кирлӗ мар».

* * *

Ульти тахçантанпах шӑл хӑйраса çӳрет Тиляра. Тӗл пулсан ӑна хӑртма мӗн-мӗн каламаллине хӑйӗн асне çыра-

çыра хучĕ. Çав самант çиттĕр çеç, алтăртан кăмакара типĕтнĕ хытă пăрçа тăкнăн сирпĕтĕ чĕрине касса татакан усал сăмахсем. «Йĕрсе ярĕ, — ихик! кулса илчĕ Ульти. — Юхтартăр вĕри куççульне. Çав кирлĕ. Анчах ăçта çӳретха вăл? Е йĕтеме, е хире, е фермăна, е шкула кайнă теççĕ. Калăн, бухгалтер мар, колхоз пуçлăхĕ».

Урамăн кашни кĕтесĕнчех Тиляра сыхлама тытăнчĕ Ульти. Икĕ яра кун иртрĕ. Виççĕмĕш кунĕнче тăп-тăр кăнтăрла ăнсăртран тенĕн, ним кĕтмен çĕртен, клуб умĕпе иртнĕ чух Тиляра, унтан тухаканскере, курах кайрĕ. Ун çийĕнче хӳхĕм тум: вăрăм хура пальто, пуçĕнче шерепеллĕ тутăр. Уринче çӳллĕ кĕлеллĕ атă. Çăлтăр пек ялкăшакан куçне Ульти çине ывăтрĕ.

— Тусăм, салам! — терĕ ăшшăн Тиляр.

Ульти хăйне темле ăшă хум лăпканăнах туйрĕ. Юлташĕн ырă кăмăлĕ ăна тыткăнларĕ, хăй те сисмерĕ — хĕве чикнĕ «чул муклашкисем» шăкăрах тухса ӳкрĕç. Анчах Тиляр чиперлĕхĕ ăна çийĕнчех шăртлантарчĕ — сар çу пек ирĕлме юрамасть. Тиляр — тăшман, савнине туртса илнĕ, хăйне чăртмах кăтартмалла.

— Сана сывлăх сунмастăп, — кăнттаммăн каласа хучĕ Ульти. — Эсĕ ахаль те çăмарта пек çап-çавракка.

— Тĕрĕс. Эпĕ çăмарта хăпартни. Эсĕ ав — пулă хуппи. Никам та ăмсанмасть сана.

Юлашки вăхăтра Тилярăн та чĕлхи хăйранă çĕçĕ пек вичкĕнленчĕ. Пурнăçĕ çапла пулма хушрĕ пулас, ара, унсăрăн шăши те хӳрипе çапса хăваратъ. Тупăнсах тăчĕç мар-и хаяр çынсем.

— Тиляр, эсир Илтимĕрпе уйăрăлса пĕтрĕр-и çак?

— Мĕн аташатăн эсĕ? Эпĕ Илтимĕрпе уйрăлма шухăшламан. Эпир пĕрле пыл та çу пурăнатпăр.

— Ан вĕçкĕнлен! Упăшку тухса тарни никамшăн та çĕнĕ хыпар мар.

— Таврăнать. Йытă та хăйĕн килĕ тĕлне пĕлет.

— Ют ачана пăхса ӳстерме-и?

— Мĕнле ют ача пирки сăмах ваклан эсĕ?

— Пăшатана михĕре пытарса усраймăн. Ачу ашшĕ Илтимĕр мар, Праски Çеменĕ. Ырăранах унран алимент шыраса илмĕн.

— Ха-ха-ха, — кулса ячĕ Тиляр. — Ара, Праски Çеменĕ

пирĕн Илтимĕрпе иксĕмĕрĕн ачана юратать. Кун пирки хăй ҫыру ҫырса янă ман пата. Укҫа кутран тапмасть теҫҫĕ.

— Ых-х, юхха! Икĕ упăшкапа пурăнасшăн!

— Манăн икĕ упăшка, санăн пĕрре те ҫук.

— Хуть тăвата упăшкапа пурăн, йытă ами. Анчах мана Турă ҫырнине тавăрса пар.

— Мĕн каларăн эсĕ мана? Сана суда памаллаччĕ. Эпĕ урăхла тавăратăп сана, — Тиляр унталла-кунталла пăхрĕ, ҫын курăнмасть. Вара чăмăрĕпе пĕтĕм вăйран хырăмĕнчен хăп! чышрĕ. Лешĕ хурах кăшкăрса авăнчĕ. — Хуп ҫăварна, — терĕ Тиляр, — унсăрăн санран нимĕр тăватăп. Эсĕ манран пĕр упăшкине пама ыйтатăн. Тархасшăн. Чармастăп Праски Ҫеменне илме.

— Ан йĕкĕлте! Мана вăл мар, — нăшăклатать Ульти. Халĕ вăл ыратнипе мар, чунĕ хурланнипе йĕрмешет, — Илтимĕр кирлĕ. Качча каймасăр ăна флотран таврăнасса кĕтрĕм. Эсĕ туртса илтĕн. Пар тавăрса ăна.

— Ха, вăл манăн кĕсьере лармасть. Шыраса туп. Пурăнăр, чармастăп.

— Ҫыру ҫырса пар, — тилмĕрет Ульти.

— Мĕн тесе?

— «Сана, Илтимĕр, пачах юратмастăп. Ультие качча ил», — тесе.

— Ах, епле чее эсĕ, — кулса ячĕ Тиляр. — Манран евчĕ тăвасшăн! Тасал куҫ умĕнчен.

Тиляр палт! ҫаврăнчĕ те тăкăрлăкалла пăрăнса туххăмрах куҫран ҫухалчĕ.

— Кайрĕ, — алне сулкаларĕ Ульти. — Тав тăватăп сана, Тиляр, шанчăк парнеленĕшĕн. Чун туять, Илтимĕр авланатех. Эпĕ унăн арăмĕ. Ҫак самантра вĕҫсе ҫитĕттĕм, анчах ҫунат ҫукки касать.

Хăйне Ульти халĕ ҫĕнĕрен ҫуралнăн, валакра лĕп шывра чăпăл тунăн, амăшĕ ăна шурă юркапа чĕркенĕн туйрĕ. Вăл паянах вăрăм ҫула тухасшăн. Илтимĕр Владивосток хулинче пурăннине илтнĕ вăл. Адресĕ ҫук ĕнтĕ. Кашни киле кĕрсе тĕпчесе тухасшăн. Ырă ĕмĕтпе йăпанса хур аҫи пек пĕр вырăнта тапăртатса илчĕ.

Тилярпа калаҫнă хыҫҫăн тепĕр икĕ кунтан ял ҫыннисем Ультие Канаш чугун ҫул станцийĕнче курнă, тухăҫалла пуйăспа ларса кайрĕ терĕҫ.

* * *

Повестка. Ав выртать вӑл Праски Ҫеменӗн килӗнче, сӗтел ҫинче. Хут татӑкӗ кӑна вӑл, анчах каткари пыл ҫине пӗр кашӑк тикӗт янӑн пӗтӗм пурнӑҫа пӑсать, чунчӗрене чарӑнусӑр ыраттарать.

Суд... Никама та сиксе ташлама хӗтӗртмест ҫак сӑмах тӗшши. Ӑна, Праски Ҫеменне, каччӑ шутӗнчен тухмансkере, суда чӗнеҫҫӗ, Тиляр унран алимент шырать. Тӗнче мӑшкӑлӗ-ҫке ку! Ара, вӑл унпа пачах ҫывӑхланман. Эппин, мӗншӗн судлашмалла? Ят каять-иҫ. «Чим-ха, — чарчӗ Праски Ҫеменӗ шуйланнӑ шухӑшне ҫырма тӗпӗнчи вак чулсем ҫийӗн шӑнкӑртатакан шыв юххине тӑпра сапса пӳлнӗн, — эпӗ мар-и вара шурӑ пир тӑрӑх лапӑртаннӑ атӑпа утса тухаканӗ? Таҫтан Ульти тупӑнчӗ хура ӗҫ тума, ҫав ӗслетрӗ Тиляр патне ҫыру ҫырса унӑн пепкине хамӑн ача тесе йышӑнма. Тӗл пулсан, тупата, хӑлха чикки тыттарма тиветех ӑна. Йӑнӑшнӑ эпӗ. Тепӗр тесен, пуриншӗн те юрату айӑплӑ. Ҫавӑ ыррине те, усаллине те тутараканӗ. Тиляр мана юратмарӗ, Илтимӗре качча тухрӗ. Мӗншӗн? Эпӗ унран япӑх-и? Мана та Тур папай ӑс-хакӑлтан, сӑн-сӑпатран, пӳ-сирен катӑк туман. Пурте пур. Специальность тесен — строитель. Илтимӗр кам? Килчӗ флотран, ҫӳрерӗ карттус ҫумне ҫыпӑҫтарнӑ йӑрӑм-йӑрӑм лентине вӗҫтерсе. Моряк! Тупӑнчӗ хӗрсен чунне тыткӑнлакан. Ҫӑмӑлчак! Юратса пурӑннӑ-ҫке-ха ӑна Ульти. Ҫу-ук, унпа килӗшмерӗ. Лекрӗ унӑн капкӑнне ҫамрӑк айван хӗр — Тиляр. Пурӑнӑҫ вӑл хӑй евӗрлӗ: юратупа юнашарах хаяр тавӑру чуптарать. Кам хӗрхенчӗ мана кӑвар ҫине пӑрахнӑ ӑман пек авкаланнӑ чух? Никам та. Мӗн тумаллаччӗ манӑн? Ирӗксӗрех мӑшкӑла, чун ыратӑвне вӗсене те тутантарас килчӗ».

Ҫырчӗ вара Тиляр патне элеклӗ ҫыру, ӑна мар, тӗрӗссипе каласан, унӑн упӑшки Илтимӗре вулама. Ҫак таса мар ӗҫпе Тиляра хӑй майлӑ ҫавӑратӑп терӗ-ши?

Пурте тӑрӑхласа шӑл йӗреҫҫӗ халӗ Праски Ҫеменӗнчен.

— Эй, алиментщик!

— Ӳлӗм асра тыт: ют арӑм алӑк умӗнче — капкӑн.

— Тӗкӗнмен эпӗ Илтимӗр арӑмне, — хирӗҫлесе ҫитереймест мӗскӗн йӗкӗлтекенсене.

Хӗрсем ӑна хӑйсен ҫывӑхне ямаҫҫӗ.

— Ан ҫулӑх, ман ята варлан! — тет пӗри.

— Кăтарт-ха ачуна, куçĕ санăнни пек-и? — тет тепĕр чиперукĕ.

— Курман, — урăх сăмах та тупаймасть çын.

Юлашки вăхăтра ыйхă вĕçрĕ Праски Çеменĕн. Аптранă енне турăш умĕнче кĕлтурĕ: «Эй, Пӳлĕхçĕм, мана алимент-ран хăтар, лăпкă ыйхă пар».

Утиял айне чăмрĕ хайхискер. Кĕтет канлĕ ыйхă çупăр-ласса. Чăнах та, тахăш вăхăтра куç хупанкисем усăнчĕç. Тытăнчĕ чиперех хуп турттарма. Тĕлĕк, кино пуçланчĕ. Тĕп геройĕ — хăй. Юнашар ялти фермер патĕнче ĕçлеççĕ пек. Тырă упрамалли кĕлет туса пĕтерчĕç. Хуçа ĕçшĕн укçа тӳлерĕ. Чи нумай укçа илекенĕ вăл — Праски Çеменĕ. Хĕпĕртет çын, ихĕлтетсе кулать, ытарайми пăхать укçа тăрмакласа тытнă ывăçне. Унччен те пулмасть, пĕтĕрĕнчĕк мăйăхлă хура тете унăн укçаллă аллине кап! ярса тытрĕ.

— Халех ирĕклĕн панă пул! — хăмсарать хурах. — Ку йăлт алимент укçи!

— Кунта манăн тăватă пин тенкĕ! — ăнлантарасшăн Çемен, сасси тухманнипе хăшкăлать. — Ку шутран мĕнпурĕ те пин çеç тӳлемелле.

Хăлăхсăр этем ниме те уямасть, тăпăлтарать кăна.

— Ху-ра-а-ах! — кăшкăрса ячĕ Праски Çеменĕ. Ку хутĕнче сасси янăравлах тухрĕ ун.

Амăшĕ ывăлĕ кăшкăрнипе вăранса кайрĕ.

— Ай турах! — выртăнĕ çинчен сиксе тăчĕ. — Вăрăсем кĕнĕ! — çари-и çухăрса ячĕ, ывăлĕ çывăракан пӳлĕме тĕлкĕштерсе пырса кĕчĕ. Ун-кун пăхкалать, анчах никам та курăнмасть. Ывăлĕ выртăнĕ çинчех. Вăл хăрушла хă-рăлтаттарать темшĕн. — Вĕлерчĕç-и-мĕн? — ӳлесе йĕрсе ячĕ хайхискер. — Çемен?! Сывлатăн-и эсĕ?

— Анне! Эсĕ-и ку? — куçне-пуçне чарса пăрахрĕ. — Лешĕ, пĕтĕрĕнчĕк мăйăхлă хура çын, ăçта?

— Нимле çын та курмарăм. Тухса тарчĕ ахăр. Мĕн хĕстерчĕ-ши? — çутă çутрĕ Праски. — Тăр, ывăлăм, пăхка-ла, мĕн çук.

— Ан пăшăрхан, анне, — терĕ ывăлĕ, — тĕлĕк курнă эпĕ. Ĕçшĕн тӳленĕ укçана пĕтĕмпех алимент тесе тытса илесшĕн тăрмашрĕ.

— Эх, ухмах этем, — куляннипе ахлатрĕ амăшĕ. — Ямăт укçана тытса илме пурте ухута.

Лайӑххӑн ҫывӑрасси пулмарӗ ҫав каҫ.

Майӗпен тул ҫутӑлчӗ. Ку — суд пулмалли кун. Амӑшӗ какайпа ҫӗр улми ӑшаласан канӑҫсӑр ҫывӑракан ывӑлне ыйхӑран вӑратрӗ.

— Тӑрсам, Ҫемен. Суд таврашӗ кая юлнине касармасть. Штраф тӳлеттерсе тинкелентерӗҫ, — мӑкӑртатать Праски. — Ах, пуриншӗн те укҫа, укҫа пар. Хӗрарӑмӗпе те ирӗклӗн выляма памаҫҫӗ. Япала пулать-и ҫак?

Апатлансан Ҫемен чи хитре тум тӑхӑнчӗ: шурӑ кӗпе, чӑпар галстук, ҫырма хӑйӑрӗ тӗслӗ костюм, хура плащ, шлепке. Унӑн тӗсӗ те — хура.

Тухрӗ Ҫемен ҫула. Утать. Ял хыҫа юлнӑҫем юлать.

Ҫул тӑршшӗпех Праски Ҫеменӗ хыҫалалла-малалла пӑхрӗ тинкерсе. Кӑлӑхах. Тиляра курмарӗ. Шел, тӗл пуласса шаннӑччӗ. Ӑҫта вӑл? Тен, суда пымасть? Енчен те... нинай. Путех, район центрне ӗнерех вӗҫтернӗ, ҫӗр выртрӗтӗр унта.

Акӑ ҫитсе тӑчӗ Праски Ҫеменӗ кирлӗ ҫурт умне. Паянччен ку тӗлтен тротуар тӑрӑх вӗлт! ҫеҫ иртсе кайнӑ. Нихӑҫан та чарӑнса тӑман, тинкермен ҫурт ҫумӗнчи вывескӑра мӗн ҫырнине, ҫапах та куҫ хӗррипе пӗр сӑмахне курнах, вуланах — суд. Нихӑҫан та ҫак ҫурт алӑкне уҫса шалалла кӗме тивессе пуҫа шухӑш пырса кӗмен. Хавалӑ пурнӑҫпа киленнӗ самантра кам шырлӑх пирки пуҫа ватать? Суд тытӑмӗ уншӑн мар, урӑххисемшӗн, палламан путсӗр этемсемшӗн, кирлӗ тенӗ. Халӗ ӗнтӗ Праски Ҫеменӗ хӑй те ҫав ӑҫтиҫук ҫынсенчен пӗри пулса тӑчӗ. Кӑмӑлӗ хуҫӑлчӗ шутсӑрах. Куҫӗсем кӳлле путрӗҫ. Вӑштӑр ҫил сӗртӗнсе иртрӗ темшӗн. Эрешлӗ юр пӗрчи куҫ хӑрпӑкӗсене чӑрӑш йӗпписем терӗ-шим, ларчӗ пырса. Куҫҫуль тумламӗ, хӑйӗн вӗри чунӗпе мӑнаҫланчӗ-шим, ӑна самант ирӗлтерчӗ, вара пит ҫӑмарти тӑрӑх ҫийӗнсе юлнӑ шырланкӑри шыв пек йӑр-р! йӑрлатрӗ.

Ҫурӑмӗ хыҫӗнче ура сасси илтӗнчӗ. Картлашка тӑрӑх пӗри хӑпарать. Праски Ҫеменӗ ҫаврӑнса пӑхма вӑтанчӗ. Хӑй йӗнине ҫынна кӑтартасшӑн мар. Вӑл ывӑҫ тупанӗпе питне шӑлма тытӑнчӗ. Ҫак самантра ун ҫумне сӗртӗнсех иртнӗ хайхи ҫын — хӗрарӑм. Вӑл йӑпӑрт алӑка уҫрӗ те куҫ хупса иличчен шалалла кӗрсе ҫухалчӗ.

— Чим, — ыйхӑран вӑраннӑн туйрӗ хайхи Ҫемен, —

ара, ку Тиляр пулчĕ-иç! Мĕнле вара пĕр сăмах та хушмарĕ? Хам та тăм камит евĕр хытса юлтăм.

Плащăн сулахай çанни вĕçне хăпартрĕ вăл, пăхрĕ алă тунине çыхнă сехете. Палăртнă вăхăт çывхарать. Эппин, кĕмелле. Вара ун хыçĕнчен алăк шатлатса хупăнчĕ. Пӳлĕм алăкĕсем çумне çырса çапнă тăрăх тупрĕ суд пулмалли пӳлĕме.

Малалла ĕç-пуç тĕлĕкри пек тĕр-тĕр пулса иртрĕ.

Чи малтан судья Тилярăн заявленине, унтан Праски Çеменĕн çырăвне, лешне, Тиляр ачин ашшĕ эпĕ тесе пĕлтернине, ара, вуларĕ.

— Хирĕçӳ тавраш çук пулĕ тетĕп? Пурте паллă, — терĕ судья.

— Йă-нă-ша-тăр! — кăшкăрчĕ Праски Çеменĕ. Сасси ăша кайнипе судьясем ăнланмарĕç пулас ăна. Вĕсем, судья тата икĕ заседатель, тăчĕç те хыçри пӳлĕме кĕрсе кайрĕç. Куç хупса иличчен каялла тухрĕç те. Судья хучĕ çине пăхса вуларĕ. Праски Çеменĕн çак самантран пуçласа Тиляр ачине пăхса ӳстерме, урăхла каласан, вун сакăр çула çитиччен, кашни уйăхра алимент тӳлесе тămалла. Сывлăшĕ пӳлĕнчĕ унăн. Ара, çăлăнаймарĕ, типшар курчĕ. Чăнах та, вăйăран вăкăр тухрĕ.

Суд çыннисем, ĕçне вĕçленĕскерсем, çийĕнчех урăх пӳлĕме кĕрсе çухалчĕç. Зал та пушанса юлчĕ. Урама тухрĕ алиментщик. Ăçталла каймаллине чухлаймасăр ытахальтен пăхкаларĕ йĕри-тавралла. Тротуар çине ярса пусрĕ. Шăп çак вăхăтра ун çумĕнченех Тиляр, пĕр яш-кĕрĕмпе çавтăннăскер, иртсе кайрĕ. «Йĕкĕчĕ кам? Илтимĕр таврăннă-и-мĕн?» — шăтарасла тинкерчĕ Праски Çеменĕ. Палларĕ: геолог иккен.

— Ых, сыпăксăр кĕпçе, — мăкăртатса юлчĕ Çемен. — Пĕринчен алимент илет, тепринпе ыталанса çӳрет!

* * *

Минепи Ивановна, хăйĕн мăнукне Энтюка чунтан юратаканскер, кашни кунах кĕрсе тухать кинĕн çĕнĕ тăпăлтăпăл кил-çуртне. Тиляр тĕлĕнтерчĕ ял халăхне паттăрлăхĕпе. Маттур хĕрарăм теççĕ ăна. Тĕрĕсех, унăн пӳртне кĕрсен тухас килмест, ара, ытла хăтлă. Пурнăç вĕресе тăнине туйтарать. Мĕн кирли пурте пур. Йăлтах е туяннă, е

хăй аллипе тытса тунă. Упăшкин çуртĕнчен ним те, улăм пĕрчи те, илсе килмен.

Амăшĕ Илтимĕр ывăлĕн кирпĕч çуртне пăхкаласах тăрать. Кĕрсе тухмасăр чунĕ тӳсмест, анчах кашнинчех куççуль шăпăртатать унăн. Пĕрле пĕтĕм пӳрт ăш-чикки ӳлет пек. Вара йĕри-тавра пăхкалать васкавлăн. Пурте хăй вырăнĕнче. Часах алăк хупăнать шалтлатса.

Мăнукĕ Минепи Ивановнăн чиперех ӳсет. Ĕнтĕ утакан та пулчĕ. Асламăшне юратать, арки çине хăпарса ларать йăпăр-япăр.

Мăнукĕ патне Минепи Ивановна кăнтăрла пырать, ятарласа кинĕ апата пынă вăхăтра. Хальхинче те шăп çапла пулчĕ. Мăнукне чăкăтпа сăйлама тытăннăччĕ кăна, Тиляр таврăнчĕ те. Сывлăх сунчĕç пĕр-пĕрне. Вăл алă çукаланă вăхăтра Укахви кинемей сĕтел çине кăмакара пиçнĕ купăста яшки антарса лартрĕ. Яшка хыççăн сăйламалли Укахвин тутли пур — какайпа пĕçернĕ шаркку.

Апатра та сăмах-юмах шăпланмарĕ.

— Паян хыçалти урамри Матви Михали патне кайса килтĕм, — терĕ Тиляр. — Вĕсем ĕнине сутаççĕ. Туянас шухăшăм пур. Тата икĕ уйăхран пăрулать иккен.

— Вĕсен ĕнин сĕчĕ çăра. Çу лайăх ӳкет тесе пуплетчĕ арăмĕ. Туянма юрать, анчах икĕ киле пĕр ĕне çитмĕ-ши?

— Анне (Тиляр Минепи Ивановнăна «анне» теме пăрахман. Ку пăянамăшне чунтан савăнтарать), халĕ те хăвăр çиес юр-вара пирĕн пата çĕклетĕр. Эпĕ çамрăк, мана ĕне пăхма çав териех йывăр пулмĕ.

Кинĕпе пăянамăшĕн калаçу татăлчĕ. Алăка шаккарĕç. Почтальон кĕчĕ пӳрте.

— Укçа илсе килтĕм, — терĕ хайхискер.

— Мĕнле укçа? — кăсăкланчĕ Тиляр.

— Тахши санăн ятупа куçарнă. Мейĕр, — хут тыттарчĕ почтальон Тиляра. — Вулăр та алă пусăр.

— Э-э-э, ара, алимент, — терĕ Тиляр тыттарнă хута вуласан. — Укçи ытлашши сахал.

— Миçе тенкĕ? — тĕпчет Укахви кинемей йăл-йăл кулкаласа.

— Виç çĕр тенкĕ çеç.

— Çитет, — хутшăнчĕ калаçăва Минепи Ивановна. — Ку çын кĕсйине алă чиксе вăрланипе пĕрех.

Почтальон калаçăва хутшăнмарĕ. Манăн ĕç мар терĕ ĕнтĕ. Вăл часах тухса кайрĕ.

Хайсем çеç юлсан сăмах-юмах çĕнĕрен чĕрĕлчĕ.

— Виç çĕр тенкĕ ытла сахал. Алимент темелĕх те çук, — пуçне сулкаларĕ Тиляр.

— Эх, кинĕм, нивушлĕ сан çак кĕлмĕç укçине илсе тăрас килет? — тет Минепи Ивановна кăмăлсăррăн. — Луччĕ хам парса тăратăп ытах начар пурăнатăр пулсан. Халĕ эпĕ пуян. Хăмла сутрăм хаклă хакпа. Праски Çеменĕнчен алимент илсе çылăха çеç кĕрен. Ачи унăн мар. Энтюк пирĕн. Пăхăр клейми çине, — асламăшĕ арки çинче ларакан мăнукĕн сылтăм уринчи тур паллине кăтартать каллех.

— Энтюк ăçтан Праски Çеменĕн ывăлĕ пултăр? Эпĕ унпа çывăрман. Ман чунăм таса. Анчах вăл хăйĕн ирсĕр ĕçĕшĕн асап тӳсет. Мана варлама тытăнса патак икĕ вĕçлĕ пулнине маннă. Ирсĕр ĕçшĕн явап тытмаллах.

— Праски Çеменĕ хыт кукар, амăшĕ пекех, — калаçăва хутшăнмасăр тӳсеймерĕ Укахви кинемей. — Вăл укçине хĕрхеннипе кунĕн-çĕрĕн йĕрет имĕш. Чире кайнă, вырăнпах выртать. Тиляра ылханаççĕ тет.

— Ман еннелле кăларса янă ылхан йĕпписем хăйсен чĕрисенех каялла пырса тăраннине сисĕç-ха.

— Укçипе мĕн тăватăн? — кăсăкланчĕ пăянамăшĕ. — Нивушлĕ ача валли мĕн те пулин туянан?

— Пĕр пусне те тĕкĕнмен, тĕкĕнместĕп те. Тăлăх ачасен çуртне кайса паратăп.

— Сур ун укçи çине. Пар хăйне тавăрса. Малашне алимент илме чарăн. Халĕ çынсем пурте Энтюк унăн ачи тесе шутлаççĕ. Капла çын умне тухма намăс.

— Кам чăрмантарать Праски Çеменне, туптăр алимент тӳлеттермелле мар сăлтав, — кулкаласа илчĕ Тиляр.

* * *

Минепи Ивановнăн ăшĕ çунать, ара, Илтимĕрĕ пачах сас-хура памасть-çке-ха. Вилмен-ши? Чĕрĕ пулсан çыру çырмасăр мĕнле тӳстĕр?

— Мĕтри, килсе лар-ха ман çума, — чĕнчĕ вăл кĕçĕн ывăлне.

— Санпа ларма вăхăт çук. Клуба каятăп.

— Нумай тытмастăп. Пĕр сăмах çеç ыйтса пĕлетĕп.

— Мĕн-ха? — амăшĕ çумне тĕршĕнчĕ Мĕтри.

— Кала-ха тĕрĕсне: пиччун адресне пĕлместĕн-и?

— Çу-у-ук, — суйрĕ ăна ывăлĕ. Тилярпа Праски Çеменĕ, Ульти çинчен йăлт çырса тăрать хăй. Илтимĕртен те икĕ хутчен çыру илчĕ. Кун пирки никам та пĕлмест, ара, çырăвне кил адресĕпе мар, район центрĕнчи почтăна «До востребования» тесе ярать. Пиччĕшĕн шухăшне Мĕтри çеç пĕлет. Тиляр алимент илнине пĕлсен питĕ кулянчĕ. Ят кайрĕ-çкеха. Праски Çеменне те ятлать. Ачи унăн маррине судра кăтартса парайман. Мемме вăл. Халăх Тиляр ачи чăнахах та Праски Çеменĕн тесе йышăнчĕ ĕнтĕ. Халĕ ĕнтĕ арăмĕ патне таврăнма хăюлăх çитмест. Пите кĕççе çĕлесе яла пырса кĕреймĕн. Намăс. Тата çĕнĕ хыпар чĕрине шăрпăк пек тăрăнчĕ. Мĕнле геолог çӳрет Тиляр патне? Сасартăк ăна качча тухсан? Йĕп çинчи пек пурăнать Илтимĕр.

— Ульти пиччӳ патне тухса кайнă теççĕ. Кутемĕн çитрĕ-тĕр.

— Ненай. Вăл Илтимĕр адресне пĕлмест-иç.

— Тен, вĕсем çыхăну тытнă. Тухса каять тенине илтсен мĕн-ма курса калаçмарăм-ши? Илтимĕр патне чиперех çитсен ман пата çыру яр вара темеллеччĕ. Адресĕ пулсан киле килме илĕртсе çыру çырăттăм. Таврăнатчех.

Ирхи апат хыççăн, чашăк-тирĕк çунă чух, сасартăк кăвак хуппи уçăлнăнах туйрĕ Минепи Ивановна. Хап! хыпса илчĕ ăна çĕнĕ шухăш хĕлхемĕ. Ялкăшать вăл, кăчăк туртса илĕртет. Пĕр тăхтаса тăмасăр çитмелле. Тумтир тăхăнса тухрĕ вăл килĕнчен. Çĕркаç тăман асрĕ. Çул çине ав епле кĕрт хывса хăварнă тĕл-тĕл. Тĕллев çавăтнă васкакан çынна çул такăр марри нимĕн чухлĕ те тарăхтармасть. Кăчăртаттăрах, нăтăртаттăрах ура айĕнче юр. Тен, вăл пуплет? Юр пĕрчисем ĕçпе утакан асаннене ăнăçу сунаççĕ. Хирĕç тулли лав килет. Фермăна ĕнесем валли апат турттараççĕ ĕнтĕ. Лавçи сывлăх сунчĕ тилхепине карт-карт турткаланă май. Çул çинче çуна çинчен тăкăнса юлнă тăлăмсем хура алса тулĕ евĕр курăнаççĕ. Çерçисемпе чаксемшĕн — ырлăх. Чакаланаççĕ кăна. Апат шыраса тупаççĕ мар-и утă-улăм пĕрчисем çинче.

Акă курăнчĕ Минепи Ивановна кĕрес кил-çурт. Хапхи патне çитмелли сукмака юр хӳсе кайнă. Ăна хырса ĕлкĕрей-

мен. Ашма тиврĕ. Кăçат кунчинчен юр кĕнине те уямарĕ вăл. Унччен те пулмасть, алăка уçса кĕрсе тăчĕ пӳрте.

— Салам, Çемен! — сывлăх сунчĕ Минепи Ивановна. — Пĕчченех тем? Анну́ — Праски тăхлачă килте çук-и-мĕн?

— Ĕнер Çĕнкасри хĕреснанне патне кайнăччĕ. Тăманран хăрарĕ пулас, таврăнаймарĕ. Хам йăшнă-ха. Ним те ыратмасть, анчах ăш çунать, ĕç патне алă пачах пымасть.

— Эппин, санăн чуну хавшанă.

— Ăçтан тӳсес? Санăн йĕлмевĕс кину́ пустаях алимент тӳлеттерет.

— И-и-и, ан та кала. Çăм çакки! Ытлашши кулянни-пе шуралăн та. Кăвакарсан хĕрсем те юратма пăрахĕç.

— Тахçанах пăрахнă. Пĕри те тепри алиментщик тесе сывăха ямаççĕ. Тӳсмелле мар йĕкĕлтеççĕ, — Праски Çеменĕ ӳлесех йĕрсе ячĕ.

— Ăнланатăп сана, ывăлăм. Тепле пулсан та санăн çав алиментран хăтăлмаллах. Куççуль тăкнинчен мĕн усси, тăрăшмалла.

— Тытăнатпăр. Анне Тиляра пăсса парас тесе кайнă-ха хĕреснанне патне. Вĕсемпе юнашар темле тухатмăш карчăк пурăнать тет, — Çемен ахлаткаласа аякĕ çине çаврăнса выртрĕ.

— Эсрелсемпе çыхăнни сире нимле усă та парас çук. Ку ĕçе саккунпа тумалла. Тăнла, сана хаклă ăс парам: суд хушнипе Тиляр ачин юнне тĕрĕслеттермелле.

— Мĕнле апла? Ăнланмарăм.

— Тухтăрсем юна тĕрĕслесе ачан ашшĕ эсĕ маррине пĕлеççĕ.

## 8

Аякри-аякри, çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ çĕрти, аэродромран çĕкленнĕ самолет ишет сывлăш океанĕнче. Малтан мала каять-ши вăл? Салонра ларакан питĕ васкакан Илтимĕршĕн самолет пĕр вырăнта тăнăнах туйăнать. Вăл вĕçме пикенсе çеç моторсене çаварса кĕрлеттерет пуль-и?

Мĕн-ма мĕшĕлтетет? Хыпалансамччĕ! Тӳсĕмсĕрленнĕ Илтимĕр мăйне иллюминатор еннелле пăрчĕ. Самолет тулашĕнче шурă мамăк сарнă уй-хир сарăлса выртать, анчах унта ешĕл çулçăсемлĕ йывăççем çук. Ав мамăк капан шĕвĕр тăррине сенкер тӳпенелле кăнтарнă. Чим, ишĕ-

лет тем. Унӑн пайӑркисене ҫил таҫталла хӑвалать. Куҫ хупса иличчен пӑх та тӑр: ҫӳллӗ-ҫӳллӗ тусем, шурӑ сараппан тӑхӑннӑскерсем, лараҫҫӗ шӑкӑрин умлӑ-хыҫлӑ. Ҫавӑнтах хӑйсен кӳлеписене пир тӑрӑхӗ евӗр ярт! тӑсрӗҫ. Таҫтан-муртан камит тухать. Вӑл кукша пуҫлӑ папай, шурӑ сухалӗ вӑрӑм-вӑрӑм — пӗр чалӑш.

Илтимӗре йӑлӑхтарчӗ самолет чӳречинчен тулалла пӑхма. Ларчӗ юсанса. Куҫне хупрӗ ҫеҫ, каллех сырӑнчӗҫ тӗрлӗрен шухӑшсем, ывтӑнчӗ вара ашкӑрса ӳсекен сухӑр вӗлтрен ҫине. Ах, чӗпӗтет! Иртнӗ кунсен алӑкӗ яриех уҫӑлчӗ.

...Тинӗсри шыв ҫулӗ тӑрӑх ишсе килнӗ карап кирлӗ порта ҫитсе вырнаҫрӗ. Ӗҫне вӗҫлесе тухрӗ карапран Илтимӗр. Тӳрех чупрӗ почтӑна. Ӑна кунта шӑллӗ янӑ ҫыру кӗтет. Алла илнӗ конвертран туртса кӑларчӗ хут листи. Сарчӗ. Вара урайне тӑкӑннӑ хытӑ пӑрҫана пӗрчӗн-пӗрчӗн пухнӑнах ҫӑтрӗ хыпар хыҫҫӑн хыпар.

«...Пичче, тимлӗн вула!

Суд Праски Ҫеменӗнчен (унӑн ҫырӑвне ӗненсе) Тиляр валли алимент шыраса илмелле тунӑ. Ахальтенех укҫа тытса илнине тӳсеймен енне лешӗ вилесле чирленӗ.

Ӑна хӗрхенекенсем тупӑннӑ та ӑс panӑ: эсӗ чӑнахах та ача ашшӗ мар пулсан унӑн юнне тӗрӗслеттер. Суд унӑн ыйтӑвне йышӑннӑ.

Тухтӑрсем чӑнах та Энтюк ашшӗ Праски Ҫеменӗ маррине кӑтартса панӑ.

Анне Энтюка питӗ юратать. Хамӑрӑн ача вӑл тет. Унӑн уринче клеме — тур палли пур. Вӑл пирӗн йӑх палли. Ҫав тур палли манӑн та, анне каланӑ тӑрӑх, санӑн та пур. Кур!»

* * *

Илтимӗр почтӑран тухсан айккинерех пӑрӑнчӗ те шӑлаварне тавӑрса куҫӗ ури тӑрӑх хӑпарчӗ. Курчӗ вара хӑйӗн тур паллине, ясмӑк пысӑкӑш хӑмӑрскере. «Ача ашшӗ паллах — эпӗ!» — ҫирӗплетрӗ хӑй шухӑшне. Ҫырӑва малалла вулама тытӑнчӗ.

* * *

«Энтюк чиперех ӳсет. Тиляр вӑл ҫулталӑк тултарнине паллӑ турӗ. Уявӗнче пирӗн анне те сайланнӑ. Ҫынсем

чылай пухăннă, пурте парнепе. Тилярăн тусĕсем сахал мар. Вăл колхозăн тĕп бухгалтерĕ-çке-ха. Хусанта вĕренекен (ун çинчен çырнăччĕ, эсĕ паллан та пулас ăна) лешĕ геолог та пулнă. Ячĕ ун Янук Тайнаров. Хăйсен ялĕ, унпа вăтам шкултан пĕрле вĕренсе тухнă имĕш. Илемлĕ йĕкĕт. Çулла çаплах пирĕн ял тавра нефть шырарĕç. Часчасах ăна Тилярпа çÿренине кураттăмăр. Ял-йыш хушшинче хавха çÿрет: çав геолог Тиляра качча илесшĕн. Татах инкек-синкек пуличчен киле таврăн».

* * *

Мĕтри шăллĕ çырнă йĕркесем Илтимĕре вĕрилентерсе пăрахрĕç.

«Хамăн арăма никама та памастăп! Юрататăп ăна. Çитет, пĕри çыпăçса шар кăтартрĕ. Пастай-ха, сасартăк Тиляр мана йышăнмасан?»

Çак шухăш Илтимĕре шĕл кăвар çине пăрахрĕ. Çунать, ăшталанать. Тахçанах шăллĕ çырни асне килчĕ. Вăл килтен тухса кайнă кун Тиляр çапларах каланă пулать: «Илтимĕр паянах киле таврăнмасан тек вăл ман упăшка мар». Чăнах та вăл мана йышăнмасан? Ăçти шăтăка сикĕп вара? Мĕншĕн тухса кайрăм-ха? Пирĕн телейлĕ пурнăçа йĕксĕк пырса кĕнишĕн арăм айăплă терĕм-ши? Мăшăр вырăнне хурса хисеплет, юратать пулсан Тиляр мана шыраса анне патне пырса киле таврăнма ÿкĕтлеме чупса пырĕ терĕмши? Айван эпĕ. Тиляра чунтан юрататăп, вăл та мана юратнине туйнă, киленнĕ. Урăхла пулнă тăк мана качча тухас çукчĕ, ывăл çуратса парнелемĕччĕ. Эпĕ, айванскер, юратупа ÿсĕрĕлнĕскер, ним те хаклама ăс çитерейменн. Кун пирки иккĕленмен. Кутăнлану — ман инкек. Çав килтен çавăтса тухрĕ. Тиляр халĕ йышăнмасан та пултарать мана. Ара, пурнăçра тавăрусăр çырлахмасть. Тивĕçлипе асапланатăп. Тилмĕретĕп, шăпам, Тиляр кÿренĕвне сир, таварса пар мана юратнă арăмпа ачама.

Çаплах вĕçет-ха сывлăшра тăпăл-тăпăл «тимĕр кайăк». Унăн ăшĕнче лараканнисенчен пĕри питĕваскать. Вăхăтра ĕлкĕрмесен ĕмĕтне усал йăх-ях тăмпа шăлса хытарасран пăшăрханать.

Хирĕçле çиле çĕнтерсе вăркăнать тÿпере лайнер...



# ЮНТАРНӐ ПӖЛӖТ

Тытатӑп та манатӑп сана,
Анчах мӗнле манмалла-ши сана?

*Р.Сарпи*

## 1

Шухӑ каччӑсем улахран киле ирхи кӳлӗм таврӑнаҫҫӗ. Хӗр ытамӗнче йӗкӗте ыйхӑ тутлӑ пулӗ ҫав. Тута хӑпарса тухиччен чуптуса тул ҫутӑлса килнине сисместӗн те ӗнтӗ. Мӑнтарӑн яшлӑхӗ, тем те тӳстерет.

Хӗвел тухӑҫра хӑйӗн лампине йӑлтӑр-р ҫутрӗ. Пӗлӗтпе ҫӗр пӗрлешнӗ аякри тӑрӑхра вара ҫур кӑшӑла вырнаҫнӑ пӗлӗт хӗп-хӗрлӗ хӗрелчӗ.

Атӑл хӗрринчи тӑкӑрлӑкра халӑх хӗвӗшме тытӑнманха. Кунта кӑнтӑрла та ҫын сахал ҫӳрет, ара, ҫӗнӗ урамра мӗн пурӗ те ик-виҫ ҫурт ҫеҫ.

Тута хӗрри хура мӑкпа витӗннӗ Янаш Паланов такамран шикленнӗн унталла-кунталла тинкерӳллӗн пӑхкаларӗ. Унччен те пулмасть, таҫтан муртан сикрӗ тухрӗ ума пӗр ҫамрӑк йӗкӗт. Ун ҫине куҫ айӗн пӑхса йӑл-л кулнӑн туйӑнчӗ. Мӗн-ма пит чӗвен тӑрас? Юрату ҫынпа мӗн виличчен пӗрле пурӑнать.

Вӑрӑпа тытӑнасран хӑранӑнах Янаш йӗри-тавралла шикленсе пӑхкалать. Хӗвелӗ те мӑшкӑллать ахӑр, унсӑрӑн пӗлӗт татӑкӗсем хушшипе ӑна тинкермӗччӗ. Вӑл те кулать, те юнать?

— Ҫылӑхлӑ эпӗ, ҫылӑхлӑ, — мӑкӑртатать Янаш сӑмса айӗн. — Тепӗр тесен, эпӗ ҫав териех айӑплӑ та мар. Пурнӑҫӑма Тунисса чиперкке айӑн-ҫийӗн пӑтраштарать.

Кӗтрӗ, кӗтрӗ Паланов юратнӑ пикине. Кунсем иртрӗҫ те иртрӗҫ. Вӑл, мур илесшӗ, таврӑнмарӗ. Мӗн тумалла?

Туниссана манас шутпах авланчĕ, ара, ĕмĕр пĕччен пурăнаймăн. Мĕн усси? Пурпĕрех ăш çунтармăш пуçран тухса ӳкмест. Халĕ çылăха кĕнĕ сăлтавĕ те унпах çыхăннă.

Кĕтмен çĕртен тенĕн пĕр йĕкĕт хирĕç пулса иртрĕ. Вăл йăл кулнăн туйăнчĕ Янаша. Кӳренчĕ. «Çынран кулсан хăвăн кутна çыпăçать тенĕ ваттисем», — мăкăртатрĕ вăл.

Йĕкĕт куçран çухалчĕ, шухăшсем каллех пуçа сырăнчĕç. Унăн халĕ тата урăх хĕрарăмпа ача çуралчĕ. Кун пирки арăмĕ Лида пĕлмест-ха. Иккĕмĕш хут ăна килтисем çухатрĕç. Малтанхи хут виçĕ талăк киле таврăнманччĕ. Сăлтавĕ тӳрре кăлараканни тупăнсаччĕ ун чухне. Арăмĕ кӳренмен, анчах ăна шыраса Лида ăшне хыптарнă.

— Турра шĕкĕр. Тупăнтăн! — тесе вăл упăшкине алăк уçса хваттере кĕрсенех пырса ыталарĕ. — Эсĕ шыва путрăн пулĕ тесе сехĕрлентĕм. Шыраман вырăн, ыйтса пĕлмен паллана çын хăвармарăм.

— Аплах пăшăрханма кирлĕ марччĕ, — тӳрре тухма пикеннĕччĕ вăл. — ГЭС умĕнчи шыв тарăнăшне виçсе пăхма тиврĕ. Çӳрерĕмĕр вара Атăл тăрăх. Каçар, начальник питĕ хăвăрт кăларса ячĕ те сана систерейменрĕм.

Арăмĕ ĕненчĕ. Ара, упăшки ГЭС инженерĕ-çке-ха. Вăл халĕ мăшăрĕ киле тĕрĕс-тĕкел таврăннăшăн савăнчĕ. Ун чухне пуçри ырă мар шухăшсем чиперех сирĕлчĕç. Хĕпĕртенипе ыталасах чуптурĕ ăна.

Ку хутĕнче Янаш пилĕк кун киле таврăнман. Арăмне мĕн каласа суймалла? Ара, суеç тени — янă кăмрăк. Вăл путмасть, çӳрет çиелте ишсе. Чăннине пĕлтерме тиветех ахăр. Мĕнле пытарма хăймалла кун пеккине. Унăн çĕр чăмăрĕ евĕр пысăк савăнăç: ача çуралчĕ. Хăйĕн ачи! Иртнĕ хутĕнче Шерпикене ача çуратмалли çурта ăсатнăччĕ. Хальхинче вара çав çуртра, тĕлĕнтермĕш, Янаша кап! тыттарчĕç пиеленĕ пĕчĕк çын! Темле ура çинче тытăнса тăма вăй çитерчĕ. Унччен те пулмасть, çумри хĕрарăм пепке питне витнĕ чăлт шурă кипкине сирчĕ те ăшшăн пуплерĕ:

— Ывăлăм, эсĕ мана таçтанах палласа илетĕн. Эпĕ — аннӳ. Санăн аçу та пур. Халĕ эсĕ шăпах унăн аллинче.

Янаш шартах сикрĕ.

Пепке, ашшĕне палласа илес тенĕн, тĕлĕнтермĕш, куçне яриех уçрĕ. Пичĕ çинче самант икĕ пĕчĕк çăлтăр

йăлтăртатса илчĕ. Анчах тем килĕшмерĕ пĕчĕк этеме, тытăнчĕ найкăшма. Янаш хăраса ӳкрĕ.

— Шерпике, ме-ха, хăвах тыт папака, — терĕ вăл ача амăшне. — Ман алăра канлĕ мар-тăр ăна.

— Кӳр-кӳр, — терĕ Шерпике аллине тăсса. Вăл пепкине сыхланса тытрĕ, унпа ачашшăн пуплерĕ: – Ывăлăм, сана найкăшни пĕртте килĕшмест. Эсĕ пулас паттăр...

Анне алли ылтăн сăпка тесе ахальтен каламан пулĕ çав халăхра. Ача шăпланчĕ. Вăл куçне хупнă, паппа тăвать.

Амăшĕпе ачине Янаш киле таксипе илсе таврăнчĕ. Хваттерĕ иккĕмĕш хутра. Виççĕн тан кĕчĕç пӳлĕме. Сывлăш йывăрланнă, ара, темиçе кун кунта кĕрсе тухакан пулман. Шерпике ачине диван çине вырттарчĕ те чӳречесене уçса ячĕ. Шурă-шурă çеçкепе капăрланнă çамрăк çĕмĕрт çакна çеç кĕтнĕ тейĕн. Вăл тавралăха систермесĕр кармашрĕ те çепĕç турачĕсене чĕтрентерсе пăхрĕ уçă чӳречерен. Курчĕ: ав вăл — тĕнчене тин çеç килнĕ пĕчĕк этем! Йăл кулать, тĕлĕкĕнче амăшне курать ахăр. Çамрăк çĕмĕрт чăлт! сапрĕ хăйĕн тутлă шăршăллă духине. Пӳлĕмре ĕнтĕ сывлăш уçă. Кăмăл çĕкленӳллĕ.

Шерпике савăнăçлă. Унăн хваттерĕнче икĕ хăна — икĕ арçын. Тĕлĕнет, хĕпĕртет. Нумаях пулмасть вăл уй варринчи тăлăх йывăç пек пĕр-пĕччен пурăнатчĕ-çке-ха. Халĕ унăн çемье пур, ăна апат çитересшĕн. Пурин те хырăм выçнă. Часах ав çатма чăшăлтатрĕ те.

Пӳлĕмри сĕтел майĕпен сăйпа тулчĕ. Паллах, хĕрлĕ эрехсĕр мар. Унăн хăнисем — пĕр-пĕрне шутсăр юратакан «хĕрпе каччă». Сĕтел хушшине вырнаçрĕç вĕсем. Капла куçран куçа пăхма меллĕ. Черккесем тăп-тулли. Янашпа Шерпике ура çине тăрса вĕсене алла тытрĕç. Часах икĕ алăри черккесем пĕр-пĕринпе перĕнчĕç те пӳлĕмре шăнкăрав евĕр çепĕç сасă илтĕнчĕ: чăнк-чанк!

Ĕçиччен малтан ваттисен йĕркипе сăмах тытмалла. Ăна, паллах, Янаш пуçлать:

— Сана, Шерпике, тĕнчене йĕкĕт парнеленĕшĕн чунчĕререн тав туса саламлатăп! Вăл Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулса ӳстĕр, ашшĕ-амăшне хисеплетĕр.

— Эпĕ те, Янаш, сан сăмахусемпе килĕшетĕп, — терĕ Шерпике. — Ывăлăм, илтсем, пурнăçунта эпĕ — чи çывăх тусу. Сана чунтан юрататăп. Ман юрату ĕмĕре тăсăлĕ.

Черккесене татах шаккарĕç. Ĕçрĕç çӳçенкелесе. Вара пуçланчĕ апат. Пĕр кана алари вилкăсем кăна вылянчĕç.

Ача найкăшни илтĕнчĕ, çавăнтах шăпланчĕ те.

— Шыва кĕресшĕн пулĕ-ха эсĕ, ывăлăм, — пуплерĕ Шерпике. — Тӳс кăшт. Сĕтел хушшинчен тухма ирĕк пар.

— Тутлă апатшăн тав, пăрчăканăм, — ура çине тăчĕ те Янаш алă пачĕ Шерпикене.

— Тиркеменшĕн савăнтартăн, — терĕ кил хуçи.

— Яланах эсĕ пĕçернине çиесчĕ ман.

Шерпике ăшшăн кулчĕ кăна.

— Туртса ярам-ха эпĕ, — текелесе уçă чӳрече еннелле утрĕ Янаш.

Янаш пируса ĕмме тытăнчĕ. Çăвартан вĕрсе кăларнă ункăллă-ункăллă тĕтĕмĕ кантăк умĕнче ӳсекен çамрăк йывăçсем тăррисенчен сĕртĕнсе сапаланать.

Шухăшсем çакна çеç кĕтнĕ пулас. Пуçа кĕрсе вĕсем чуна хускатаççĕ. Янаш ваштах йăмраллă яла çитрĕ те ав. Акă асламăшĕпе аслашшĕн килĕ. Пӳртре асламăшĕ пĕччене, вăл уйран уçлать. Тĕпелти сак çинче вĕри кăмакаран тин çеç кăларнă çавра çăкăрсем. Сĕтел çинчи чей чашкинче çу кăпăкĕ. «Мăнукăм, — тет асламăшĕ, — вĕри çăкăр сăмсипе çу пусса çи-ха».

Хăй тĕллĕн йăл-л кулса илчĕ Янаш. «Сана, асанне, пĕр-пĕр хамăн чăн-чăн ывăлăма пырса кăтартăп-ха. Тульăк унччен пурăн. Эсĕ ăна çавăтса тухăн пӳрт умĕнчи çерем çине. Чуптăр çара уран...»

— Атте!

Янаш çак сасса илтрĕ те шартах сикрĕ. Вăл çаврăнса тăчĕ. Каллех сасă янрарĕ.

— Атте, килсем мана чăпăл тума.

Янаш чĕннĕ çĕре çывхарчĕ. Тĕлĕнтермĕш курав: сак çинче шыв янă валашка. Ун тĕпĕнче — шурă тутăр. Диван çинче кипкесенчен сирнĕ çарапакка ача выртать. Вăл çинçешке урисемпе кулăшла тапкаланать.

— Ай-уй, — тĕлĕнет Янаш, — ача ытла та пĕчĕккĕ!

— Часах ӳсетĕп эпĕ, атте! — тет амăшĕ пепке каланăн.

— Шывĕ ăшă-и-ха?

— Лĕп пулма кирлĕ. Чавса чиксех тĕрĕслерĕм, — унтан Шерпике ачана алла илчĕ. Чи малтан питне çурĕ, вара валашкана вырттарчĕ.

Амӑшӗ пепкипе ҫаплах евӗклӗн пуплет: «Нянял, шывран хӑрама кирлӗ мар. Шыв ҫыншӑн питӗ хаклӑ япала. Эпир ӑна ӗҫетпӗр, унпа ҫӑвӑнатпӑр. Пире вӑл сывлӑх парать. Пысӑк юхан шыва кӗрсен ишме пӗлмелле. Ӳссен эсӗ те шывра пулӑ евӗр ишӗн. Атӑл урлӑ та ним мар ишсе каҫӑн-ха. Ӳс кӑна. Илтрӗн-и? Шывран ан хӑра, унӑн тусӗ пул. Халӗ ҫӑвӑннӑ хыҫҫӑн канлӗ паппа тӑвӑн».

Янаш валашка умӗнче сехӗрленсе тӑрать.

— Шерпике, пепкемӗре тирпейлӗ тыткала, — асӑрхаттарать. — Асту, ан ӳкерех.

Ача амӑшӗ чунтан савӑнать, кӑмӑлӗ ҫӗкленӳллӗ. Ара, вӑл ҫуратнӑ ачана хӗрхенекен, юратакан ҫын пур-ҫке-ха тӗнчере. Унтан ҫинҫе сасӑпа, ывӑлӗ пек пулса каларӗ: «Атте, ывӑҫласа шыв сап ман ҫине».

Акӑ тамаша! Янашшӑн нихӑҫан ӗҫлемен ӗҫ ку. Вӑтӑр ҫула ҫитсе те пепкене шыва кӗртсе курман. Шикленет пулин те ухатапах кӗрӗшрӗ хушнӑ ӗҫе тума. Малтан аллине кайса ҫурӗ. Вара валашка умне пӗшкӗнчӗ те йӗкӗрлесе тытнӑ таса аллипе шыв ӑсрӗ, ача ҫине чаш-ш! сапрӗ. Хӑй шутсӑр сехӗрленчӗ пӗчӗк ҫын ҫари-и! ҫухӑрса ярасран. Кӑлӑхах. Пепке хирӗҫленине нимпе те систермерӗ.

— Ӑмӑрт кайӑкӑм, ҫитӗ сана рехетленсе, — тет Шерпике пепкине, — ыран каллех валашка пӗвере ишӗн, — ҫапла калаҫкаласа ачине шывран кӑларчӗ.

— Сивӗ мар-и ӑна? Асту, ан шӑнтах, — пӑшӑрханать Янаш. Вара вӑл Шерпике хушнипе пепкене ҫӑмламас ал шӑллипе витет. Халӗ ӗнтӗ диван ҫине вырттармалла. Типтӗр. Кайран тин ятарласа сарнӑ шурӑ кипке ҫине куҫарчӗҫ ӑна. Пиелесен, ашшӗ-амӑшне тӗлӗнтермӗш, пулчӗ тӑчӗ — пукане. Ваксасах тата ӑна утиялпа чӗркемелле, унсӑрӑн шӑнать.

Пепкене ыйхӑ пусать. Ашшӗпе амӑшӗ савӑнӑҫлӑн куларҫӗ. «Ах, паттӑр!» — тееҫҫӗ. Йӗрмешет. Хырӑм выҫҫи канлӗх памасть мар-и.

— Юрӗ, халех ӗмӗн, — текелесе Шерпике диван ҫине ларса ачана кӑкӑр ҫумне тытать. Пӗчӗк этем тилмӗрттермест, тытӑнчӗ нӑчлаттарма. Амӑшӗ вӑтанчӑк хӗрарӑм. Вӑл кӑкӑрӗ ҫине шурӑ тутӑр витрӗ.

— Маттур, пурӑнӑҫ ҫынни, — мухтать пепкене Янаш хыпалансах ӗҫе тытӑннӑшӑн мухтаса.

Унтан вăл ачана чăпăл тунă шыва кайса тăкрĕ, валашкине типĕтме стена çумне сĕвентерсе хучĕ. Çапла айкашнă май килти ачисем аса килчĕç. Вĕсене ваннăйра çăвать. Пĕррехинче мунчана та илсе кайнăччĕ ывăл ачине. Вăхăт иртнĕçем ку та ӳсет, ăна та лешсем пекех çăвĕ.

Ёнтĕ çывăракан ачине амăшĕ хăй кравачĕ çине хучĕ. Иккĕшĕ диван çине юнашар ларчĕç.

— Ачана мĕн ят хурăпăр? — терĕ Янаш шухăшлăн.

— Ун валли тахçанах ят шухăшласа тупнă.

— Мĕнле?

— Эливан, — терĕ мăнаçлăн Шерпике. — Чĕнессе Ива тесе чĕнĕпĕр.

— Хурламастăп. Ива! Ива! — ачашшăн умлă-хыçлă каларĕ Янаш. — Ыран ывăлăмăр валли сăпка туянатăп.

Шерпике ним те шарламасть. Вăл — шухăшра. Ывăлне Эливан ят пачĕ. Сăлтавсăр мар-çке-ха. Хальлĕхе иртнĕ кунсем пирки шарламарĕ, ӳлĕме хăварчĕ.

...Савнă каччă пурччĕ унăн — ялти пускил çамрăкĕ — Эливан. Пĕрле ӳснĕ, вăтам шкул пĕтернĕ. Шупашкар хулине пĕрле кайнă. Вăл паха çурт-йĕр лартас ĕмĕтлĕччĕ. Çавăнпа та техникума вĕренме кĕчĕ. Шерпикен ĕмĕчĕ пачах урăхла. Пĕчĕккĕллех хаçата шкул пурнăçĕ çинчен çырса тăма хăнăхрĕ. Ӳсерехпе ĕмĕт çуралчĕ — журналист пулас. Университета илчĕç ăна. Халĕ вăл хаçат редакцийĕнче ĕçлет.

Шерпикен юратнă каччи Эливан шăпи телейсĕр пулчĕ. Ăна, техникумра вĕренекенскере, çара илчĕç. Чечня вăрçине лекрĕ. Пĕр çыру çеç çырчĕ вăл унтан. Ашшĕ-амăшĕ часах хурлăхлă хыпар илтрĕ. Кĕçех килне тупăк илсе килчĕç. Пытарчĕç вара ăна ял масарĕ çине.

Унтанпа темиçе çул иртрĕ. Хуйхă-суйхă пайтах çунтарчĕ Шерпике ăшне. Качча кайма тĕллев лартман вăл. Анчах ун ячĕпе ача çуратма ĕмĕт тытнă. Халĕ ĕнтĕ кĕтни çумра: ача çуралчĕ. Ăçтан ĕнтĕ ывăлне ун ятне ан патăр?! Ялан асра тытнине пĕлтерет ку, тата унăн ĕмĕрĕ тăсăлнине, тепĕр майлă каласан — манманнине те систерсе тăрать.

Пурнăç паянхи кун тумхахлă-ха. Паллă мар пачах, ача хăйĕн ашшĕ çумĕнче ӳсĕ-ши? Пĕрле кун кунлас вăхăтсем ытла та ула-чăла. Ара ăна «атте» тесе чĕнекенсем татах та пур. Халĕ Янаш хăйĕн чăн-чăн ывăлне мĕншĕн Эли-

ван ят панине те чухламасть. Пӗлсен, тен, кӑренӗ те-ха. Тепӗр тесен, вӑл ӑнланма тивӗҫ, ҫав териех айван ҫын мар. Чи пахи — ачи хӑйӗн.

Хӗвел вӑл тухать те анать. Кунсем ӑсанаҫҫӗ каялла таврӑнмасӑр. Янашпа Шерпике ачине саккун йӗркипе ят хучӗҫ.

Тӗлӗнтерет ҫак пурнӑҫ. Тӗнчене ҫын килнӗ пурӑнма. Эсир — ашшӗ-амӑшӗ. Эппин, туса парӑр ӑна йӗркеллӗ ӳсмелли майсем. Хальлӗхе ӑна, пӗчӗкскере, мӗнпурӗ те хырӑма тӑрантма тӑттӑ тата паппа тума сӑпка кирлӗ. Аталан ӗнтӗ — пӗчӗк няня.

Темиҫе кун иртрӗ. Янашӑн киле каймалла. Ӑшӗ ҫунать ҫыннӑн. Вӑл сӗм вӑрманта ҫул тупаймасӑр аташса ҫӳрет. Пуҫра сухӑрлӑ шухӑшсем кӑна. Каллӗ-маллӗ уткаланӑ хыҫҫӑн аптранипе ачана кӑкӑр ӗмтерекен Шерпике ҫумне пырса ларчӗ.

— Ан пӑшӑрхан, — терӗ ӑна Шерпике. — Ку таранччен эсӗ мӗнле пурӑннӑ, малашне те сан урапу ӗлӗкхи йӗрпех чупӗ.

— Йӑнӑшан, хаклӑ юратӑвӑм, — сӑмах хушрӗ Янаш. — Пурнӑҫ улшӑнчӗ. Тӗрӗсех, умра юплӗ-юплӗ ҫул. Йӑнӑшма юрамасть, пӗртен-пӗр ҫул суйласа илмелле. Улталансан хӑшӗ те пулин юсанайми аманать.

Ҫак самантра Ивана тем юрамарӗ, хирӗнсе илчӗ те увва-увва йӗрмӗшрӗ.

— Чухлатӑн-и, чунӑм, вӑл мана кӑларса ярасшӑн мар, — пуплешрӗ Янаш. — Сирӗн мана йышӑнмах тивет.

— Пирӗн кунашкал килӗшӳ пулман, — сӑмах хушрӗ ача амӑшӗ. — Санӑн хӑвӑн ҫемье пур.

— Кунта манӑн тӑван ывӑл — пӗртен-пӗр ывӑлӑм. Ӑна мӗнле расна усрас?

Шерпике ачине вырттарчӗ те ҫумрах тӑракан Янаша ыталарӗ. Вара иккӗшӗ те ытарайми пӑхрӗҫ паппа тӑвакан ачана.

— Ырӑ тӗлӗк кур, ывӑлӑм, — терӗ Янаш.

Унӑн ашшӗпе амӑшӗ ыталаннипех алӑк еннелле утрӗҫ. Уйрӑлма йывӑр. Юлашки хут чуптурӗ те Янаш аранах алӑк уҫса тухрӗ.

Утать, утать... Ытахальтен пуҫне ҫӳлелле каҫӑртрӗ те кура пачӗ: тӳпе юнтарнӑ пӗлӗтпе каранӑ. Куҫ умне Ту-

нисса пикене килсе тăратрĕ. Турă ăна парнеленĕ çак тӳпен пĕр пайне. Куçне, юнтарнă пĕлĕт тĕслĕскерне, çиçтерсе пăхатчĕ Янаш çине. Ăçта кайса çухалчĕ-ши? Пурăнатех пулсан хăш тĕлти тинĕс хумĕ лăпкакан çыран хĕрринче кун кунлать-ши? Ăна мичманпа троллейбуса кĕрсе ларнине хăй куçĕпе курчĕ-çке. Янаш тăкăрлăка çитсен тунката выртнине курчĕ те ун çине ларчĕ. Куç умĕн иртеççĕ Туниссапа паллашни, ăна çухатни...

## 2

Чи малтан Янаш Паланов çав вутăшпа ăçта тĕл пулнине пĕлесчĕ... Тупата, юри шухăшласа кăлараяс çук. Кинора мар. Ташлама çӳремен. Хулара, ялти пек, хĕл кунĕсенче хĕр упраç улах лармасть, çу кунĕсенче те ешĕл çеремлĕ урама вăййа тухмаççĕ, темиçе ял çамрăкĕ вăрман уçланкине аслă вăййа пухăнмасть. Хула çамрăкĕсен пĕр-пĕринпе паллашасси самай кансĕр. Вĕсем акă тĕл пулнă, паллашнă. Çапах та ăçта? Пасарта! Çук, çук, вĕсем (Янаш та, Тунисса та) суту-илӳпе çыхăнман. Чăнах та ĕнтĕ хальхи вăхăтра хăш-пĕр хĕр упраç пасарта тем сутать, туянать. Анчах Тунисса ун йышши мар. Вăл таса чунлă пике. Суту ĕçĕнче тупăнатех çынна чике таран лартасси е пилĕк таран юшкăна путасси.

Янаш Паланов çар хĕсметĕнчен таврăнсан Шупашкар ГЭСĕнче инженерта ĕçлеме тытăнчĕ. Унтанпа икĕ уйăх çеç иртнĕччĕ-ха, çиййĕнчи тельняшкине те хывма ĕлкĕреймен. Вăл тата институт пĕтерсен виçĕ çул Тинĕс Çар флочĕн çыранти службинче тăнă. Таврăнсан çывăх юлташ тупма та ĕлкĕреймен. Чи ырри — хваттер пачĕç. Ăна тирпейлесе вăхăт самай иртрĕ. Килти ĕç патне ал пымасть. Пĕррехинче тунсăх ăна тĕп хулана илсе çитерчĕ. Урамсенче яланхиллех халăх хĕвĕшет. Ытахальтен вăл лавккасене кĕчĕ, тухрĕ. Çӳлĕкĕсем çинче тавар лăках. Анчах ним туянма та кăмăл çук. Каллех — урама. Çынсем хыççăн утрĕ те утрĕ Янаш. Ăçта куçать ку халăх? Умра кĕтменни — пасар. Шалта — хурт вĕлли! Хĕвĕшет халăх, сĕрлет. Сисмерĕ те Паланов, хăй те чăмрĕ çав юхха. Иртет речĕпех карнă палатăсем умĕн. Лавккаçисем сĕнеççĕ хăйсен таварĕсене туянма. Ăна хальлĕхе ним те ним те: ни кĕпе-йĕм, ни калуш-пушмак, пусма-пурçăн кирлĕ мар.

Туянакансем çук мар. Куç илĕртмĕш япаласене тыта-тыта пăхаççĕ, енчĕкĕсенчен укçине кăлараççĕ, шутлаççĕ...

Палатăсем аранах хыçа юлаççĕ. Умра — тĕлĕнтермĕш! Сутуçсем хăйсен шăкăр-макăр таварĕсене çĕр çинех (хăшпĕри — чăнах ĕнтĕ, шăналăк сарнă) майласа хунă. Пасарăн лаптăкĕ пĕр пусăмлăх та усăсăр выртмасть иккен. Хуçисем хăйсен таварĕсенчен вăтаннăн кăшкăрашса сĕнмеççĕ, тăраççĕ çăварĕсене хупса чĕмсĕррĕн. Тĕрĕсех, мĕнле сăлтава пула çын хăлхине йӳçĕхтерес?

Çурхи шыв çиййĕн юхакан пăр катрамĕ кукăра пырса тăрăннăн кап! чарăнса тăчĕ Янаш Паланов инженер. Куç тĕлне тĕлĕнтермĕш япала лекрĕ. Илĕртекенĕ — тĕнчери паллăран та паллă картина. Ăна хашакана вырнаçтарнă.

— Хуçа, кала-ха, ку картинăна сутма мĕнле нуша хăвалать сана?

— Эх, ырă çыннăм, мĕн-ма çав териех тĕлĕнен? Укçа кирлĕ самантра хăвăн çумăнти арăмна та çĕрĕк çăпатапа улăштарăн, — шӳтлĕ-мĕнлĕ пуплерĕ сутуç.

— Апла пулĕ те-ха, ку ӳкерчĕк — чаплă художник ĕçĕ, — ĕнентересшĕн Янаш тĕрĕслĕхе.

— Камшăн мĕн хаклă. Тепĕр тесен кунашкал тĕссĕр картинăсене килĕштерместĕп.

— Хăй вăхăтĕнче мĕншĕн туяннă эсĕ ăна?

— Асаттен тупри вăл! — тет хайхискер ĕнентерме тăрăшса. — Хам пулсан кунашкал япалашăн кити-митти тăкакламăттăм. Вăл çамрăк чух морякра çӳренĕ. Вăтăларах парсан та тинĕс тенине яланах ӳкерчĕксем тăрăх та пулин куç умĕнче тытас кăмăлĕ пысăк пулнă-тăр. Халĕ ĕнтĕ хăй леш тĕнчене куçнă. Картини никама та кăсăклантармасть.

— Санăн аслаçу, юлташăм, пысăк культурăллă çын пулнă. Ку картинăна ырăссен паллă художникĕ Айвазовский çырнă. Каланă пек, ку оригинал мар, фотоӳкерчĕк çеç, — ăнлантарма пикенчĕ Янаш. — Хакне кала, туянатăп.

Лешĕ пĕлтерчĕ. Вăл мăнаçланнăн пысăк хашакаллă картинăна пурне те курăнмалла пукан çумне тĕрентерчĕ.

— Ме, тыт!

Шăп çак самантра Янаш хыçра такам калаçнине илтех кайрĕ.

— Ай-уй! Ку «Бермудский треугольник»-ҫке! Ав, ав! Карап путать! Мачтисем ҫеҫ курӑнаҫҫӗ. Ах, мӗнле хӑрушӑ! Тинӗс хумӗсем пӗлӗте ҫити ҫӗкленеҫҫӗ. — Кӑштах тӑхтасан каллех мӑкӑртатрӗ: — Эй, Турӑҫӑм, тинӗсе путасран хӑтарах ӑна.

Янаш пуҫне сасӑ илтӗннӗ енне пӑрчӗ те курчӗ: ун ҫумӗнче тӑра парать вӑрӑм ҫивӗтлӗ палламан сарӑ хӗр. Вӑл хайхи картинӑна тинкерсе пӑхать. Сасси пӑшӑрхануллӑ.

— Чиперук, ку картинӑра «Бермуд виҫ кӗтеслӗхӗ» мар. Айвазовский ӳнерҫӗ хайӗн ҫакӑ картинине «Волна» ят панӑ. Чӑвашла ӑна «Хум» темелле пулӗ. Авторӗ Хура тинӗс хӗрринчи Феодоси хулинче ҫуралса ӳснӗ. Кунашкал хумсене ҫеҫ мар, тата вӑйлӑраххисене пайтах курнӑ тӑр. Курнӑ ҫеҫ те мар, пир ҫине ӳкернӗ.

— Хура тинӗсре ҫакнашкал хӑрушла хумсем ҫӗкленеҫҫӗ пулсан, паллах, лере, таҫти-мурти тӗнче вӗҫӗнчи океанра, асар-писер хумсем хӗвел патне ҫитеҫҫӗ ӗнтӗ. Ҫавӑнпа карапсем путаҫҫӗ. Ку ҫеҫ-и, ҫав асар-писер хум ӗнтӗ сывлӑшра вӗҫекен самолетсене ҫӑтать.

— Ай-уй! Мӗнле майпа пурне те пӗлен? — тӗлӗненсҫи пулчӗ Янаш.

Вӗсен куҫӗсем йӑлмакланчӗҫ те, каччӑн чӗри тӑлт-тӑлт тапса илчӗ. Ара, пикен сайра тӗл пулакан куҫ: каснӑ лартнӑ юнтарнӑ пӗлӗт — ялтӑркка.

— Мӗнле пӗлем мар? Журналсем вулатӑп тӑтӑшах, — пуплерӗ пике. Вӑл та тинӗс хумне ӳкернӗ картинӑна туянакан йӗкӗте сӑнарӗ: хура тутлӑ, сулахай пичӗ ҫӗвӗклӗ. Ку ӑна нимӗн чухлӗ те пӑсмасть, пӑсма мар, темле хайне май илем те парать. Темшӗн ӑна, кӑкӑр ҫийӗн, кӗпе ҫухави уҫӑлнӑ вырӑнта, матрос тельняшки курӑнса тӑракан ҫак ҫамрӑк йӗкӗт ҫулталӑкри йытӑ ҫури пек туйӑнчӗ те унӑн кӑпӑшка ҫӳҫне тураса якатас, ачашлас килчӗ.

Сутӑҫ рамӑллӑ картинӑна хутпа чӗркесе шпагатпа ҫыхрӗ, туянакана тыттарчӗ.

Халӗ ӗнтӗ текех пасар тӑрӑх ҫӳреймӗн иртен-ҫӳрене чӑрмантарса, тата ӑнсӑртран мӗнпе те пулин лектерсе картинӑна та ватӑн.

Паланов пасар хапхи патнелле утрӗ. Тӗлӗнтермӗш хӗр пӗрчи унран шит те юлмасть. Янаш пикене мӗнле чӗннине те ыйтса тӑмарӗ, хай ят пачӗ ӑна: «Юнтарнӑ пӗлӗт». Ытлашши чӗвӗлтискер ку хӗр.

— Мĕншĕн туянтăн çак картинăна?
— Тинĕсе, унăн вăйлă хумĕсене ытараймастăп.
— Эсĕ моряк-тăр?
— Тинĕсе юратма моряк пулни кирлĕ мар.
— Ух! Çав тинĕсе!.. Курăймастăп. Вăл çынсене путарать. Юлнисен пурăн вара кулянса, куççуль юхтарса. Эсĕ моряк мар-и тата?
— Мар терĕм-çке. Эпĕ — ГЭС инженерĕ. Çĕнĕ Шупашкарта пурăнатăп.

Чиперкке пĕлчĕ ĕнтĕ çын ăçталла çул тытнине. Вăл пĕр шит юлмасть, утать Янашпа юнашар. Çитменнине, шпагата ярса тытнă.

Тĕлĕнтермĕш «Юнтарнă пĕлĕт» Çĕнĕ Шупашкара каякан автобуса кĕрсе Янашпа юнашар ларчĕ. Юрать-ха, каçару ыйтма ăс çитерчĕ. Вăл хваттере те кĕресшĕн, килтисем ятламасан стена çумне çаксан картина çинчи тинĕс хумĕ мĕнлерех курăннине пăхасшăн.

— Чим-ха, эпир паллашма маннă. Мана Тунисса тесе чĕнеççĕ, — алне тăсрĕ вăл Янаш енне. Лешĕн вара ирĕксĕрех алне тытса ячĕпе хушаматне пĕлтерме тиврĕ.

Питех те кирлĕ ĕçе ăнăçлă вĕçленĕн самантлăха шăпăрт пулчĕç вĕсем. Чŭречерен пăхкаларĕç. Çул хĕррипе ŭсекен ешĕл çулçăллă йывăççем вĕлт-вĕлт ирте-ирте юлаççĕ.

Хваттере пырать пĕччен йĕкĕт патне, халиччен курман-илтмен хĕр. Тен, юххаскер ку?
— Эсĕ, Тунисса, ĕçлетĕн-и, вĕренетĕн-и?
— Паянхи куна илсен — ирĕклĕ çын. Унччен университетра филологи факультетĕнче вĕреннĕ. Диплом ĕçне пиллĕкпе хакларĕç.
— Çăмăл тема лекрĕ пулĕ-и?
— Асту. Студентшăн çăмăл тема çук-тăр.

Тунисса калаçнă тăрăх çакна ăнланчĕ Янаш: университет ăна, ăна çеç те мар, хăй аркинчен антарнă нумай яш-кĕрĕме алăкне уçнă та кăларса янă. Чăн-чăн чăх чĕпписем. Никам та çунат айне илмен пирки çŭреççĕ шиплетсе. Шкулсен алăкĕсем вĕсемшĕн уçăласшăнах мар, пур çĕрте те вĕрентекенсем лăк имĕш. Ĕçлеме йышăнсан та кăмăл çук вĕсен ретне тăма — ĕç укçи ытла та сахал. Тата шкулсенче пур çĕрте тенĕ пекех филологсем çителĕклех.

Халĕ тин çеç асăннă сăлтавсене пула çӳрет-ха Туниссa ирĕклĕн.

— Уни-куни ĕçе кĕме васкамастăп, — тет хĕр. — Ара, хам юратнă ĕç патне тăма пилĕк çул хушши ахаль вĕрентĕм-и? Юрĕ, ĕçлеме васкам мар-ха, тăраниччен канам.

Умри çын ăна ĕненесшĕнех маррине туйрĕ. Вара сумкине йăпăр-япăр уçса хайĕн дипломне туртса кăларчĕ те Янаша тыттарчĕ.

— У-у! Кунта сан шăкăрах «пиллĕк». Маттур, — мухтарĕ ăна йĕкĕт. Унтан тĕпченĕн ыйтрĕ: — Ăçта пурăнан эсĕ?

— Шупашкарта.

— Хăш урамра?

— Нихăш урамра та мар. Паян пĕрин, ыран теприн патĕнче. Юлташсем манăн нумай.

Кил хуçи хăнана тек ыйтусем пама чарăнчĕ. Картина валли вырăн шырарĕ вăл. Шухăш ăна самант кукашшĕ патне, яла, илсе çитерчĕ. Астăвать-ха, пĕррехинче вăл каскаласа йывăç хашак ăсталарĕ. Самай пысăкскерех пулчĕ. Сĕтел ещĕкĕсене, кĕнекесем хушшинче упранакан сăн ӳкерчĕксене пухрĕ те çав хашака лартрĕ. Ăна икĕ чӳрече хушшинчи стена çумне çакрĕ.

Янашăн икĕ чӳрече хушшинче кантăклă балкон алăкĕ.

— Дивана хирĕçле стена çумне çак, — сĕнӳ пачĕ Туниссa. — Ларакансене пăхма меллĕ.

Кил хуçи килĕшрĕ.

Тĕрĕсех, картина хайĕн вырăнне тупрĕ темелле, ара, вăл çиййĕнчех хĕвел пайăркисене илĕртрĕ хай çийĕн йăлял выляма. Ăна пăхнăçемĕн хăвна тинĕс хĕрринче тăнăнах туятăн, унăн шавне илтетĕн, пĕлĕте çити çĕкленекен хумсем карапсене айккинчен айккинелле чалăштарнине куратăн.

Урай çӳпĕленчĕ. Кил хуçи шăпăр илсе килчĕ. Шăласшăнччĕ. Анчах хăна ирĕк памарĕ. Çуса пӳлĕме уçăлтаратăп терĕ. Кам чартăр ырă ĕç тума? Тархасшăн.

Ку хĕр чăваш çемйинчех ӳснĕ-тĕр. Аллине вараласинчен хăрамарĕ. Тытрĕ те çурĕ. Çын туман ĕç мар. Урай хăмисем чăпăл тунă хыççăн çуталчĕç, чăлха вĕççĕн çӳреме кăмăла илĕртрĕç.

Хăна диван çине ларчĕ. Кантăр. Унăн куçĕсем картина çинче. Хай хуйхăллă пек те. Калаçмасть. Мĕнле

шухăш амаланать-ши ун пуçĕнче? Ăна хăйсĕр пуçне кам пĕлтĕр? Тен, каланă пек, пурнăçра пуласси тинĕспе çыхăннă?.. Ӳлĕмхин чӳречи çук витĕр пăхса курма. Унччен те пулмасть, ура çине яш! сиксе тăчĕ пике.

— Уттарас пулĕ, — терĕ вăл сăмса айĕн.

— Мĕншĕн апла сасартăк? – терĕ кил хуçи, шкапĕнче тем майлаштараканскер.

— Ара, хырăм хыр тăрне кайрĕ.

— И-и, уншăнах-и? Пире паçăрах апат кĕтет, — терĕ Янаш. Кухньăна кĕрсен вăл холодильника уçрĕ. Çăмарта илсе хĕре тыттарчĕ те ăна ăшалама хушрĕ. Хăй сăй сĕтелĕ хатĕрлерĕ. Сыр, колбаса, батон касрĕ, сарă çу та пур. Ĕнтĕ çăмарта хăпартни хатĕр. Ларчĕç апата.

— Пĕр япала çитмест-çке! — пĕсне аллипе çат! çапса илчĕ кил хуçи.

— Мĕн кирлĕ тата? — тинкерсе пăхрĕ сĕтел çине Тунисса.

— Акă çак! — терĕ Янаш холодильникран коньяк кăларса.

— Турă çырлах! Кун пек япалана ăша ямастăпах.

Пурпĕрех сĕтел çинче ĕнтĕ тулли икĕ черкке. Чăпăрт сыпса памах тивет унăн, унсăрăн кил хуçи кӳренĕ мăн кăмăллă хĕр вырăнне хурса.

Апат хыççăн, пуçтарнă сĕтел-пукана хăй вырăнне шуçтарсан, иккĕш те пӳлĕме тухрĕç. Тунисса диван çине ларчĕ. Янаш чӳрече патне пырса урамалла пăхрĕ те шухăша кайса тăчĕ.

— Янаш, кил, ларсам манпа юнашар, — кăчăк туртрĕ ăна хĕр. — Темшĕн кичем пусасшăн.

— Апла пулсан мĕнле йăпатма пĕлем-ши сана? — теколесе хĕр çумне пырса ларчĕ те тӳрех ыйту пачĕ: — Санăн каччу ăçта пурăнать?

— Путех килĕнче.

— Килĕ ăçта, Шупашкарта-и?

— Мĕн ма çав териех пĕлесшĕн?

— Систересшĕн ăна: унăн савнине эпĕ юратрăм.

— Тĕрĕсех-ши? — йăпăштик кулса илчĕ чиперкке.

— Чăн сăмахăн суйи çук, — терĕ те Янаш хĕре ытамласа чуптуса илчĕ.

Тĕлĕнтермĕш! Ăна хĕр çупкă туянтармарĕ. Кун хыççăн

йĕкĕтĕн хăюлăх хутшăнчĕ. Мĕн пулĕ малалла? Ах, ăçтиçук хĕрĕ темерĕн. Çитменнине, çĕр выртма юлчĕ. Çук, çук! Кил хуçи тилмĕрес шутпа çăвар уçман. Тĕрĕсне тĕрĕсех каламалла: çук, çылăха кĕмерĕ. Качча каймасăр хĕрлĕхе çухатма килĕшмест имĕш. Унашкал пикене епле тивен.

Ирхине уйрăлчĕç. Янаш ĕçе, пике — таçта, хăй пĕлекен çĕре ĕнтĕ. Каçалапа Тунисса каллех килчĕ, çĕр выртрĕ. Тепĕр кун та, тата тепĕр кун та çаплах çывăрчĕ.

Пĕррехинче Янаш чиперккене ĕçе илсе кайрĕ. Шлюз витĕр пăрахут мĕнле шуса тухнине кăтартрĕ.

Пĕрле ĕçлекенсем тытăнчĕç лĕкĕртетме.

— Эсĕ, Паланов, сар кайăк тытнă-çке!

— Куçĕ мĕнле хитре!

— Манăн савнине ан пăхăр ăмсанса, — терĕ Янаш кулкаласа, — куç ӳкеретĕр.

— Авланатăн-и? Унсăрăн хам качча илетĕп ăна, — шӳтлерĕ çывăх юлташĕ.

— Çывхарма хăй кăна! — чăмăрне кăтартрĕ ăна Янаш.

— Ку хĕре вĕçертсен ухмах пулан, — терĕ татах лешĕ.

Çакăн хыççăн Паланов, чăнах та, мăшăрланма шухăш тытрĕ. Ĕмĕте варана хăвармарĕ. Калаçу часах тапранчĕ.

— Тунисса, качча тух мана. Вăхăт çитнĕ авланма. Институт пĕтернĕ, çарта пулнă, хваттер пур, ĕçĕм-хĕлĕм мăй таран.

— Килĕшетĕп! — ача пек тринкки-тринкки сиккелесе илчĕ пике. Ĕнентерсе чуптурĕ.

Пĕр вырăн çине выртса çывăрчĕç. Çураçнă хĕр каллех парăнмарĕ. Янаш тулăксăрланма пултаратчĕ, анчах ăнланать, апла юрату илемĕ пăсăлать, тути-масипе те килейместĕн. Пикен кăмăлĕпех килĕшме тивет. Çырăннă хыççăн чăн-чăн арăм ретне тăрасшăн вăл. Загса шăмат кун кайма килĕшрĕç. Çав кун аякра мар, хĕвелĕн мĕнпурĕ те тухăçран виçĕ хут хăпармалла.

Çураçнă хĕр Янаш патне таврăнмарĕ. Ку çеç-и? Тек пачах килмерĕ. Ăçта çухалчĕ? Мĕнле шухăш ун пуçĕнче? Тен, вăл чирлесе ӳкнĕ? Янаш кайĕччĕ ун патне, анчах ăçта пурăннине пĕлмест. Хĕр упраç тени чăн-чăн тилĕ. Чее, ара. Пулас упăшкине систермесĕр туя хатĕрленет ахăр. Загса пыма капăр кĕпе çĕлет пулĕ. Паллах, шурă пурçăнран. Йăли çапла: качча кайнă чух шурă кĕпе тăхăнсан

хёр хӑй тасине пӗлтерет. Укҫа ыйтмарӗ Янашран. Хӑйӗн енчӗк тӗпӗ яка иккенне такам та чухлать. Ара, вӑл университет тин ҫеҫ пӗтернӗ-ҫке-ха. Мӑшӑрӗн ашшӗпе амӑшне пама парне кирлӗ тата. Хальлӗхе алӑ тутри тыттарсан та ҫырлахӗҫ. Тепӗр тесен, Янаш парнелӗх япаласене хӑй укҫипе туянма хатӗр.

Ҫитрӗҫ тӗпӗр-тӗпӗр кунсем. Пуҫа черетсӗр-мӗнсӗр пин шухӑш явӑнса кӗрет. Сасартӑк кӑвак хуппи уҫӑлать каять. Янаш куҫ умӗнче — икӗ ылтӑн ҫӗрӗ! Турӑ ҫырлах! Вӑл ывӑҫ тупанӗпе ҫамкине ҫатлаттарса илчӗ. Хӑвӑртрах туянмалла, хӑй валли те, ҫураҫнӑ хӗр валли те. Халиччен авланман та, пурне те астума хӗн. Ҫӗрӗсем кирлӗ ҫыраннӑ чух пӗр-пӗрин пӳрнине тӑхӑнтарма. Пӳрне ылтӑн ҫӗрӗллӗ. Пӗлтерӗшӗ питӗ пысӑк. Ун патне ютти ҫывхараймасть. Вӑл ӗнтӗ хӑйӗн чунчӗрине урӑххине, тепӗр тӗслӗ каласан, чи юратнӑ ҫынна парнеленӗ.

Загса каймалли кун ҫывхарнӑҫем ҫывхарать. Унччен хӗвелӗн мӗнпурӗ те тухӑҫран икӗ хут тухмалла. Вӑхӑт кӗске, ӗҫӗ мӑй таран. Юрать-ха холодильникра ӗҫме-ҫиме туллиех. Ку ҫеҫ-и, укҫа-тенки те сахал мар. Анчах хӑй хатӗр-и-ха пикепе загс сӗтел умне пырса тӑма? Шифоньер алӑкне пырса уҫрӗ. Курчӗ: унта ҫӗнӗ тум пачах ҫук. Эппин, туянма тивет. Лавккасем тӑрӑх ҫӳреме вӑхӑчӗ кӗске, кашни кун ӗҫе тухмалла. Вара Янаш ирӗксӗрех пуҫлӑхсем умӗнче хӑйӗн савӑнӑҫне уҫса пачӗ. Кунашкал самантра кам хирӗҫ пултӑр. Ирӗк пачӗҫ. Пилӗк кун ӗҫе тухмасть. Сӑлтавӗ: авланать.

Тухса кайрӗ вара пулас кӗрӳ лавккасем тӑрӑх. Чи малтанах икӗ ылтӑн ҫӗрӗ туянчӗ. Хӑйне пысӑкраххи, тепри пӗчӗкреххи. Те виҫеллӗ пулӗ ӗнтӗ ӑна? Хыпӑнса ӳкмерӗ, кайран улӑштарма та пулать. Тепӗр ҫӗрте хӑй валли хура костюм, шурӑ кӗпе, чӑпар галстук, пушмак, носки туянчӗ. Киле таврӑнсан йӑлт тӑхӑнса пӑхрӗ. Пурте юрӑхлӑ. Тӗкӗрте хӑйне килӗштерчӗ Янаш. Хура кӑпӑшка ҫӳҫӗ ҫӗнӗ тумпа пӗр килсе пит-куҫа, пӳ-сие илем парать.

Кӗтнӗ кун ҫитрӗ. Паланов ир-ирех вӑранса ҫула тухма хатӗрленчӗ. Хӑйӗн хӑлхи шав сыхӑра. Сасартӑк алӑка уҫтарма шӑнкӑрав янӑрать. Тен, загса пӗрле кайма Тунисса вӗҫтерсе килет. Кӗтрӗ, кӗтрӗ, анчах усӑсӑр пулчӗ. Янаш пурпӗрех ӑна тӳрре кӑларать. Ара, хӗр упраҫ ӑҫтан

ёнтĕ илĕм-тилĕмпех вăранса ун патне килтĕр? Çулĕ те сывăх мар-иç.

Кухньăна кĕчĕ Янаш. Мĕн çимелле? Апат анмасть. Çапах та пĕр стакан вĕри кофе ĕçрĕ. Тĕкĕр кăчăк туртать ав. Ун умĕнче тумланчĕ те одеколон сирпĕтрĕ хăй çине. Юлашкинчен хăй çине пăхрĕ чăрлаттарса. Мĕнех, аптрамасть — чип-чипер яш каччă. Хура костюм, шурă кĕпе галстукпа ăна чăннипех те сăн кĕртет.

Вăл ёнтĕ хатĕр венчете тăма. Хваттерне питĕрсе урама тухрĕ Янаш. Тухăçра хĕвел çĕкленме пикенет. Тӳпен çеçен хирĕ паян тăрă мар, хуçи çуса тасатман тăрă шывпа, тинĕсри пăр катрамĕ евĕр шурă пĕлĕт татăкĕсем ишеççĕ хĕвел çулне пӳле-пӳле.

Утрĕ Янаш Паланов автовокзал еннелле. Унччен те пулмасть, сулахай енчи карта çумĕнче ӳсекен сарлака çулçăллă хупах айĕнчен сикрĕ тухрĕ хура кушак. Вăл Янаш умĕнченех çул урлă каçса кайрĕ.

— Прис! — хăй те сисмерĕ Янаш — кăшкăрса ячĕ. Кушак самант куçран çухалчĕ. Тарчĕ мур илесшĕ. — Э-эх! Пулин. Ёненместĕп. Мĕншĕн телей ан пултăр манăн?! Хĕр тиркеме эпĕ япăх каччă-и? Пĕвĕм-сийĕм хыр вулли — яштака.

Янаш Паланов ларнă машина часах çитес çĕре çитрĕ. Шупашкар хули ытла шавлă. Хула тăрăх çӳрекен автобусран тухсанах аллипе пиншакăн шалти кĕсйине хыпашларĕ документсене тĕрĕслеме. Тупрĕ: пурте йĕркеллĕ. Вара утрĕ те утрĕ, Карл Маркс урамне тухрĕ. Тротуарсем таса та яка. Вăл васкамасть. Палăртнă вăхăтчен сехет йĕппи икĕ хутчен çаврăнмалла. Правительство Çурчĕ умĕнчи аллейăна кĕрсе ларас шухăшлăччĕ Янаш. Çул урлă каçрĕ. Шăп çак вăхăтра троллейбус пырса чарăнчĕ. Унтан халăх тухрĕ палкаса. Ёнтĕ малалла каякансем тытăнчĕç троллейбуса кĕме. Унччен те пулмасть, курах кайрĕ Янаш: черетре — Тунисса. Аллинче унăн — чăматан. Хыçĕнче — мичман тумне тăхăннă çын. Вăл Туниссана картлашкасем тăрăх хăпарма пулăшать. Чупса пычĕ Янаш. Анчах троллейбус алăкĕ хупăнма ĕлкĕрчĕ.

— Тунисса-а! — кăшкăрчĕ Янаш.

Алăка шаккарĕ. Кăлăхах. Сас памарĕç. Троллейбус тапранса малалла ыткăнчĕ. Хĕр анса юлмарĕ.

Урасем тымар янӑн тапранаймасӑр тӑчӗ Янаш пӗр вырӑнта. Пуҫӗнче пин шухӑш явӑнать. Ҫынсем каллех пуҫтарӑнчӗҫ. Ӑҫта каяҫҫӗ? Ӑна тӗрткелеҫҫӗ пӗри те тепри. Шухӑшсен хыпкӑчи аранах лӑш-ш пулчӗ. Вара вӑл тӑптап пускаласа пӑрӑнчӗ айккинелле. Ӑҫта каяс? Ленин палӑкӗ йыхӑрнӑн утрӗ вара ун патнелле. Унтан пӑрӑнса аллейӑналла кӗрсен йывӑҫсен айӗнчи саксене асӑрхарӗ. Пырса ларчӗ вара пӗрин ҫине. Умра чечек йӑранӗсем. Куҫа илӗртеҫҫӗ вӗсем хӗвел пайӑркипе чӗлтӗртетсе. Вӗсен ҫийӗнче хӗрлӗ, кӗрен, чакӑр, сарӑ, шурӑ сараппан. Чечек ҫунатне лӑпкӑ ҫил сӗртӗнсе чӳхерӗ ахӑр, унсӑрӑн таврана тутлӑ шӑршӑ сарӑлмӗччӗ. Вӗсен пурах-тӑр асамлӑ вӑй.

Янаш пуҫне ынатлӑ шухӑш пырса кӗчӗ. Чарӑнура тин ҫеҫ курни тӑн амакӗ, куҫ суйи пулмарӗ-ши? Юратнӑ пики ӑна, тен, паҫӑртанпах загсра кӗтет? Пит-куҫа вӗри юн ҫапрӗ. Сиксе тӑчӗ те чечексен тыткӑнӗнчен вӑркӑнса тухрӗ. Урамра халӑх хӗвӗшет. Акӑ мыскара. Ҫанталӑк палӑрмаллах тӗттӗмленчӗ. Атӑл енчен тӳпенелле хура пӗлӗт катрамӗ йывӑррӑн йӑраланса хӑпарать. Паллах, хӑй ҫине ҫумӑр касмӑкӗ лартнӑ. Унччен те пулмасть, хура пӗлӗт хуҫи тӑсса ячӗ ҫутӑ хӗҫҫине! Эх! Суллать йӑр-яр-р, йӑл-ял! Таҫта, аякра, тем шартлатса кисренчӗ. Вара пӑрҫа сапнӑн пӑтти-патти ташласа иртрӗҫ ҫумӑр пӗрчисем. Ӗнтӗ тӳнчӗ шыв катки! Эх! Йӑтӑнчӗ! Унта та кунта пӗчӗк кӳлӗ. Ҫийӗсенче куҫланнӑ хӑмпӑсем ишеҫҫӗ.

Янаш аран-аран ҫынсем хыҫҫӑн пӗр ҫурт крыльцине кӗрсе пытанчӗ. Тӑнӑҫем ӑшра вут чӗрӗлчӗ, тытӑнчӗ хӗмленсе ҫунма. Лере ӑна ҫураҫнӑ хӗрӗ кӗтет. Пӑрахса та кайӗ. Вара мӗн пулӗ? Каҫару ҫук. Тухрӗ хӳтлӗхрен урама. Пӑх та кур! Ҫумӑр чарӑннӑ. Хӗвел пӑхать. Тӗнче ҫапҫутӑ! Урам тӑрӑх ав шыв юххи чупать. Пулас упӑшка ниме уямасӑр йӑлтти-ялтти сикет, сикет кӳлленчӗксем урлӑ. Брюки йӗпенчӗ ҫеҫ те мар, вараланчӗ те. Хыпаланнипе чӑм шыва ӳкрӗ хӑй. Пашкать. Акӑ загс ҫурчӗ. Ҫитрӗ. Кӗчӗ. Анчах алӑка хупас шухӑш-и? Уҫӑлса юлчӗ яриех. Халӑх самаях чылай. Янашӑн куҫӗ самант ҫынсем пичӗсене хыпалашса тухрӗ. Унта та кунта мӑшӑрсем тӑраҫҫӗ пӗр-пӗрне ыталаса. Вӗсем, телейлӗскерсем, ҫырӑнма килнӗ. Кунтан упӑшкипе арӑмӗ пулса тухаҫҫӗ. Анчах курма ӗмӗтленнӗ хӗр ҫук та ҫук. Ӑҫта-ши вӑл? Унталла-

кунталла уткаларӗ. Хупӑнса тӑракан пӳлӗмсем те пурмӗн-ха. Кашнин алӑкне уҫа-уҫа пӑхрӗ вара. Тен, ҫумӑра пула кунта ҫитеймен? Кӗтмелле эппин. Тӳсӗм, тӳсӗм, чӑтсам, ан пӗт тархасшӑн. Унсӑрӑн юрату шат! ҫурӑлӗ хӑмпӑ пек. Урама тухрӗ вӑл. Тӑчӗ куҫне унталла та кунталла вылятса. Пат персе ҫитӗ акӑ пӗр-пӗр тӑкӑрлӑкран. Вара хирӗҫ ыткӑнӗ. Ӑна ыталӗ, чуптӑвӗ.

Ӗнтӗ хӗвел чӑн тӳперен анӑҫ ҫулӗ ҫине паларнӑ-паларман тухрӗ. Вӑхӑт иртет. Загс алӑкӗ уҫӑлчӗ, хупӑнчӗ. Мӑшӑрланнисем алкумӗнче хӑйсен ҫывӑх ҫыннисемпе сӑн ӳкерчӗҫ, ӳкерчӗҫ. Вара хаваслӑ йышпа асран кайми куна паллӑ тума килӗсене е ресторан таврашне кайса пӗтрӗҫ. Загс ҫурчӗ пушанса юлчӗ.

Пурин кӑмӑлӗ те канӑҫнӑ. Янаш кӑна тӑрса юлчӗ пӗрпӗччен. Никам та кӑсӑкланмарӗ унпа. Суйрӗҫ мӗскӗне, чике тӑршшӗ лартрӗҫ. Юратнӑ пикине, ӑна качча тухма килӗшнӗскере, тахши вӑрларӗ. Пурнӑҫланмарӗ унӑн ӗмӗчӗ. Мӗн тӑвас? Атӑла кайса сикеймӗн.

Киле таврӑнчӗ каччӑ. Хваттер пуш-пушах. Ларчӗ, тӑчӗ, утса ҫӳрерӗ каллӗ-маллӗ. Тӳсме ҫук чун ыратать. Хӗвел пайӑркисем пӳлӗмрен тарнӑ. Тӗмсӗлсе пӑхрӗ Янаш стена ҫумӗнчи Айвазовский ӳкерчӗкне. Вӑл та тӗксӗмленнӗн туйӑнчӗ. Тинӗс хумӗсем, Турӑ ҫырлах, халичченхи пек мар, вӗсем ытларах тулашаҫҫӗ тата ҫӳлерех чӗвенленеҫҫӗ пек.

— Лӑпланӑр, — терӗ Янаш картина енне алне сулса. — Тунисса кайнӑ. Вӑл нихҫан та таврӑнмасть.

Ним тума аптранӑ енне Паланов чӳрече патне пырса тӑчӗ. Тулта самай тӗттӗмленнӗ, ҫапах та иртен-ҫӳрен аванах курӑнать.

— Мӗн-ма кӗтес? Хур шӑмминче миме пулмасть. Эх, эсӗ те ҫав, юнтарнӑ пӗлӗтӗм, кӑмӑла хуҫса хӑвартӑн.

* * *

Сасартӑк йытӑ вӗрни илтӗнчӗ. Шартах сикрӗ. Вӑл, Шерпике патӗнчен таврӑнаканскер, тунката ҫине ларнӑччӗ. Пирус туртнӑ май шухӑшсем иртнӗ кунсене сӗтӗрсе кайнӑ. Халӗ Янаш хӑйне тарӑн кӳлӗри сивӗ шывран ишсе тухнӑн туйрӗ. Ҫӳҫенсе илчӗ. Вара пулса иртнине такама ӑнлантарнӑн сасӑпах каларӗ: «Тунисса пурӑнать пулӗ

хайён мичманёпе пёр-пёр тинёс хёрринче. Ман пата ахальтен çӳремен. Вăл Айвазовскин «Хум» ӳкерчӗкӗнче хайён мичманне шыранă. Чипер пурăн. Эх, пёлесчё санăн: манăн ывăл çуралнă. Ăна Ива ят патăмăр. Кам пултăн эсё? Мён паян кунччёнех пёлместёп сана, Тунисса. Путех пулчё пулё — чун ултавё. Анчах сана тав тăватăп. Эсё мана чăн-чăн чун юратнине тупма пулăшрăн.

Хёвел хăпарать те хăпарать. Ачасем вăранчёç пулё. «Атте ăçта?» — тесе пăшăрханаççё-тёр. Арăмё, паллах, тутине тăснă. Шерпике патёнчен часах тухаймарё-çке-ха...

## 3

Шерпике... Мёнле тупнă-ха ăна Янаш Паланов?

Çав кун çанталăк калама çук тӳлекчё. Ир-ирех тухрё Янаш ёçрен. Хёвел тин хайён хёрлё çунатне сарма пикенет. Атăл кăчăк туртма ёлкёрнё те хёвел пайăркине. Ав епле йăл-ял вылятать хайён çийёнче.

Янаш çыран хёрринче чарăнса тăчё. Курчё Атăл варрипе анаталла ишекен виçё палубăллă шурă теплохода. Аякка кайма ёлкёрнё, анчах инçете мар. Вăл чăн-чăн лăпкăн ишекен шурă акăш. Пăхса ытарайми илем. Янаш мăнаçланса тăчё. Ара çав «акăша» тин çеç хайне, инженера, пăхăнакан шыв ёçченёсемпе шлюз витёр кăларса ячёç. Тёлёнтермёш самант вăл. Çын ăсласа тупнă чаплă мел. Чылайччен тăчё вăл мён курнипе киленсе.

Радио тытăнчё юрăсем шăрантарма. Паян — уяв. Ёçчен халăх Республика кунне паллă тăвать.

Шыва кёрсе чӳхенмесёр Атăл хёрринчен мёнле пăрахса кайăн? Янаш та чăмрё шыва. Ишрё пулăсемпе ăмăртса. Тухмастчё пулё-ха лёп шыв ырлăхёнчен, анчах уяв курма каяс ёмёт Атăлпа сывпуллаштарать ăна. Çын хушшинче ним шухăшсăр çӳрес терё. Ара, уяв кунёнче килте пёччен ларма кичем. Арăмё виçём кунах ачасене ертсе яла амăшё патне кайрё.

Шывран ишсе тухнă Янаш тăрать-ха çыран хёрринче Атăла ытарайми пăхса. Хайне çăмăллăн туять. Ăçта кайса кёчё-ши çёр каçа ёçлесе ыванни? Çурăмё, кăкăрё тăрăх юхаççё вётё-вётё тумламсем. Хёвел хайён кăпăшка алшăллийёпе унăн ӳт-пёвне ачашшăн шăлса типётет. Куç

ытаменче шыв, шыв! Тупата, тинĕс пулĕ ку? Леш ен ав епле аякра. Инçетре — ешĕл вăрман. Кăчăк туртать вăл хăй патне çырла, кăмпа татма, сим пыл тутипе сывлама. Ытарайми Атăл! Мĕн йышши ырăпа тулнă-ши вăл? Ун шывĕ, чăнах, халиччен этем шухăшласа кăларайман эмел; Атăл, ун тавралăхĕ — çĕр çинчи чи паха çăтмах.

Килне таврăнчĕ Янаш. Яланхиллех Айвазовскин «Хум» картини умĕнче кăшт чарăнса тăчĕ, вăл тем çĕнĕ хыпар пĕлтерес пек. Халĕ çав картина хăй ятне улăштарчĕ. Унпа кил хуçи çынпа калаçнă пек калаçать: «Эй, юнтарнă пĕлĕт, мĕнле пурăнан?» — тет те пăрăнса каять.

Халĕ те çав мыскараллă йăла пулса иртрĕ. Вара тин апатланчĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх юлашкинчен пĕр стакан кофе ĕçрĕ, унсăрăн тăранман пек туйăнать.

Ĕнтĕ капăрланма вăхăт. Шифоньерта тум çителĕклех. Çулланма тытăннă мар-и. Студент чухне тăхăнмалли пулман. Джинс туяннă та мĕн институт пĕтериччен хывман ăна, ара, хура-шурри палăрман. Халĕ темиçе костюм, тĕрлĕ тĕсли. Вăл çăрхахран шуррине вĕçертрĕ. Кĕпине те чăлт шуррине илчĕ. Галстукĕ чакăрри килĕшĕ. Тумлансан тĕкĕр умĕнче чарăнса тăчĕ. Пăхрĕ вара хăйне нихăçан курманла. Хура кăпăшка çӳçре курăнмаççĕ-ха шурă пĕрчĕсем. Пит-куçĕ пĕр кăлтăксăр таса темĕн. Сăмса кăкĕнче тахши çип çапнă ав. Сулахай пит çăмартинче çĕвĕк пур. Ăна нихăçан та çухатас çук. Пĕчĕккĕ чух инкек пулса иртнĕччĕ.

Ашшĕ, геолог, пĕррехинче ăна, пĕчĕкскере, лаша çине утлантарса нефть шыракансемпе пĕрле хире илсе кайнă. Темрен хăранипе-çке лаша ĕрĕхнĕ. Çавăн чухне Янаш чул çине ӳкнĕ те пит çăмарти çинче ĕмĕрлĕх клеме çапăнса юлнă. Институтра вĕреннĕ вăхăтра час-часах хĕр упраç йĕкĕлтесе тăрăхлатчĕ: çав çĕвĕк ăна килĕшет, тепĕр тĕслĕ каласан, чиперлетет имĕш.

Уява кайма хатĕр ĕнтĕ. Юлашкинчен «Хум» картина умне пычĕ те: «Юнтарнă пĕлĕт, сывă пул!» — терĕ.

Вăхăт самаях иртрĕ. Килтен темшĕн ялан часах хăпса тухаймастăн. Çĕнĕ Шупашкар çулĕ çатма тĕпĕ пек яка. Автобус кăрлаттарчĕ кăна. Самант çитерчĕ вată Шупашкара. Урам тăрăх халăх куçать. Театр умĕнче — концерт. Юрă ян та ян янăрать. Залив тăршшĕпех — карнă

палатăсем. Вĕсенче суту-илӳ пырать. Пăчă. Сывлама хĕн. Калăн, çынсем кислорода ним юлмиччен сывласа пĕтернĕ. Хăтăлма ĕнтĕ алли пыран мороженăй çуллать. Ку та хătaраймасть çав. Пур-ха тарланă пит-куçа вăштăр çилпе çупăрлаканни. Вăл — Атăл! Янаш унталла çул тытрĕ те. Ав вăл! Тăп-тулли шывлăскер, ялтăртатать çутă кĕмĕллĕ çи виттипе пĕркеннĕскер. Çыннисем тăрса тухнă карлăк умне. Аякран пăхсан телефон пралукĕ çине ларса тухнă чĕкеçсен ретне аса илтерет.

Атăл каррипе пăрахут ишет. Ăна пăхма карлăк çумне пырса тăраймарĕ Янаш. Çав териех тăрăшмарĕ те, пăрахут курман çын мар-çке, ĕçленĕ чух вĕсене е çӳлелле, е аялалла шлюз витĕр пайтах кăларса янă. Кунта раснах мĕн пит курмалла тет. Пĕр шухăшлисем те йышлă. Ун пеккисем е пĕччен, е ушкăнпа утаççĕ унталла та кунталла. Паланов хăш-пĕрисем хыççăн çӳлелле шурĕ. Куçсем пурпĕрех темшĕн çав карлăк çумĕнче тăракансем çинелле ывтăнса пыраççĕ. Чиперех ерипен кăна утаччĕ-ха. Сасартăк пĕр хĕр ун çине çавăнса йăш! пăхса илчĕ. Куçсем пĕр-пĕринпе çиçĕмле хăвăртлăхпа тĕл пулчĕç. Янаш шартах сикрĕ. Ун чĕрине темшĕн йĕп тăрăнчĕ. Темле палланăскер, шутсăр çывăхскер пек туйăнчĕ. Кам пулчĕ? Урасем тăлланчĕç. Çав хĕр çине шăтарасла, тĕмсĕлсе пăхрĕ. Шел, пичĕ курăнмасть. Ара, вăл Атăл çине пăхать-çкеха, хыçалтан ăçтан паллăн çынна? Лайăхрах тинкерчĕ Янаш. Хайхин çивĕтленĕ сарă çӳçĕ, пăяв евĕр, çурăмĕ тăрăх усăннă. Чĕрене вĕри хум пырса çапрĕ. Ку Тунисса-çке! Çав, çав! Мĕнле тӳрех паллайман? Çӳçĕ ĕлĕкхи пекех хӳхĕм. Хушăран вăл çӳç пайăркисене хулпуççи тăрăх усăнтаратчĕ. Тепĕр чух, хальхи пек, çивĕтлетчĕ те çурăм тăрăх усатчĕ. Кĕпи те ун чухнехиех — кăвак чеченлĕскер. Çав кун, загса пымалли кун, мур çимен çавра çилĕ ăçта çĕклесе кайрĕ-ши сана, Юнтарнă пĕлĕтĕм?

Янаш кăшкăрасшăн. Çăварне уçрĕ. Турă çырлах, сасă тухмасть. Ярса пусрĕ ăна ыталас шухăшпа. Мĕн курни тăлласа лартрĕ. Çак самантра пĕр арçын, шлепкеллĕскер, унпа юнашар пычĕ те тăчĕ. Тем тесен те — упăшки! Урăх кам пултăр? Палановăн пуçĕнче тӳнтерле шухăшсем пĕтĕрĕнсе илчĕç. Тепĕртакран ачи-пăчи кĕшĕлтетсе килĕ. Пулма пултарать, ара, унтанпа вăхăт иртнине суса кăлараймăн. Хайне

хай шеллерӗ Янаш. Телейсӗрскер. Ним кӗтмен ҫӗртен тӗл пулчӗ ӑнсӑртран ҫухалнӑскере, анчах сӑмах хушма май ҫук! Чим! Хайхи юнашар пырса тӑнӑ этем упӑшки мар-тӑр, пӗр сӑмах хушмасӑр пӑрахса кайрӗ. Ҫул усӑ. Ӑна тахҫан качча тухма сӑмах панӑ пике халӗ — умра. Иккӗшӗн хушшинче пулсан пулӗ ҫур утӑм. Тӗлӗнтермӗш, халӗ мӗнле тӳрре тухӗ-ши? Ӑҫтан пӗлес, тен, вӑл чирленӗ? Тен, ӑна тахши, усал чунлӑ этем, вӑрланӑ та ҫӗр шӑтӑкӗнче хупса усранӑ, халӗ ӗнтӗ эсӗ ирӗкре. Янаш ӑна малашне ҫӑтмах пахчине ертсе кӗрӗ.

Тӗмсӗлсе пӑхрӗ вӑл умри хӗрарӑмӑн ҫурӑм тӑрӑх усӑннӑ ҫивӗтне, тытса ҫупӑрлас килчӗ. Чим, капла тункаta пек хӑҫанччен тӑрас? «Тунисса!» — вӗҫерӗнчӗ чӗлхерен. Хӗр ҫаврӑнса пӑхмарӗ-ха. Элле, илтмерӗ хӑямат? Хай танлӑхне кӑтартать мар-и. Ӗлӗк те пурччӗ унӑн кутӑнлӑхӗ. Татах чӗнчӗ ӑна Янаш.

Хыҫра такам тахшине чӗннине илтсе хайхи хӗр хыҫалалла ҫаврӑнса пӑхрӗ. Курчӗ. Хыҫра тӑра парать шурӑ костюмлӑ, кӑпӑшка хура ҫӳҫлӗ ҫамрӑк ҫын.

Янаш именчӗ. Васкасах сӑмах хушрӗ вара:

— Каҫарӑр. Тунисса пулӗ тенӗччӗ. Йӑнӑшрӑм.

— Питӗ шел, — йӑпӑштин кулчӗ хӗр. Унӑн шап-шурӑ тикӗс шӑлӗсем илемлӗн курӑнчӗҫ.

— Йӑнӑшрӑм. Курнӑҫманни тахҫан, — терӗ татах Янаш. — Тупата, хыҫалтан пӑхсан эсир каснӑ лартнӑ Тунисса.

Ҫак вӑхӑтра Шерпике айккинелле шурӗ те ҫынна хӗсӗнсе тӑмалӑх вырӑн турӗ. Вӑл ҫынпа ним калаҫмасӑр кунӗҫӗ-и? Унра журналист чунӗ ларать ҫав. Журналист тени кирек камра та тӗлӗнтермӗш шырать. Вара хайпе юнашар тӑма вырӑн панӑ ҫынна сӑмах хушма васкарӗ:

— Паллашар, — аллине тӑсрӗ, — мана Шерпике тесе чӗнеҫҫӗ.

— Мана — Янаш Паланов.

— Каҫарӑр та-ха, кам вӑл Тунисса? Арӑм е савни?

— Ҫук, ҫук, арӑм мар, — васкасах пӗлтерчӗ Янаш. — Тахҫан ӗлӗк, хай вӑхӑтӗнче, эпӗ ӑна юратнӑччӗ. Кӗтмен ҫӗртен ҫухалчӗ.

«Ку ҫынсен пурнӑҫӗ кӑсӑклӑ. Очерк ҫырма пулать», — тесе шухӑшларӗ те Шерпике ҫапла каларӗ:

— Паланов юлташ, уткаласа çӳрер мар-и?

— Хаваспах. Анчах хăлха чикки тыттармĕç-и?

— Хăвăнтан килет. Çемçеккейсене, паллах, кӳпкеççĕ.

Янаш ĕнсине хыçкаласа илчĕ кулкаланă май. Вара утрĕç те утрĕç юрату сăмсахĕ еннелле.

Çак самант, хĕвел анăçалла сулăннă кун, пулчĕ вĕсемшĕн ӳлĕмхи чăн-чăн пурнăçăн пуçламăшĕ.

Утаççĕ-ха Янашпа Шерпике. Çук, вĕсем çавтăнман, юнашар кăна пыраççĕ. Анчах аллисем перкеленсе илеççĕ ăнсăртран тенĕн.

Янаш хĕр ыйтнине тивĕçтерет-ха. Пуçĕнче хăй çеç пĕлсе тăмалли ыйтуллă шухăшсем явăнаççĕ. Çак хĕр ăна темшĕн Туниса пек туйăнать. Ун пекех яштака пӳ-силлĕ, чипер, хăюлăхĕ те пур, пуплеме те ӳркенмест. Ыйтусем парса калаçăва тăсас пултарулăх пурри палăрать. Куçĕ çеç Туниссан мар — хăмăр.

Шерпикен ăшĕнче çивĕч тĕллев амаланать. Журналист тĕллевĕ — ĕçре. Тĕпчерĕ те тĕпчерĕ хайпе юнашар утакан çынна. Пуçĕнче ĕнтĕ самай тĕрленчĕ новелла.

....Айвазовскин «Хум» картинине пасартан Янашпа Туниса пĕрле йăтса килнĕччĕ киле. Каярахпа пике çак картина умĕнче тăтăшах шухăша кайса тăнă. Мĕн хĕтĕртнĕ ăна ют арçын патне кашни кун килме? Путех, вăл çавăн чух тинĕс çар хĕсметĕнчи хăйĕн каччи çинчен шухăшланă. Тинĕсĕн хăрушла хумĕсем ăна сехĕрлентернĕ, çавăнта мичман путасран хăранă. Çитменнине, вăл савнă хĕрĕ патне темле сăлтава пула çыру çырманни паллă. Сăлтавсăр мар ĕнтĕ. Тен, нумай вăхăт хушши ăна тинĕсре ишме тивнĕ. Пĕлменлĕх хĕр чунне ыраттарнă, тĕрлĕрен шухăшлаттарнă. Çавăнпа «Хум» картинăна килĕштермен.

Янаша юратнă-ши вăл? Качча каятчех-ши? Тепĕр тесен вăл сумлă йĕкĕт. Ăна ним енчен те тиркеймĕн. Анчах юрату тени ăнланмалла мар туйăм, ырринех тиркеттерет, усаллинех юраттарать.

Аван-ха. Телейĕ пулнă Туниссан. Йăнăш утăм тумалли кунсенчен пĕринче савниĕ мичман килсе çитнĕ. Вăхăчĕ кĕске пулнă-тăр, пулас арăмне хăвăртрах илсе кайнă. Ăçта? Тен, ашшĕ-амăшĕ патне, тен, тӳрех хăй хĕсметре тăракан аякри тинĕс çар чаçне. Кун пирки Янаш чухлаймасть, тен, ӳлĕм те пĕлеймĕ. Пике мĕнпурĕ те ăна

асӑнмалӑх парне хӑварнӑ — юнтарнӑ пӗлӗт тӗслӗ кусӗпе пӑхни. Халӗ Янаш утать Туниссана аса илтерекен чиперккепе. Калаҫать чарӑнайми. Вӑхӑтӑн та хӑйӗн ӗҫӗ. Вӑл тӳпене ерипен карать те карать сенкер шӑналӑкпа. Ӗнтӗ ӑсатрӗ Янаш темиҫе самант каялла паллашнӑ пикене.

Тунсӑх. Янашӑн арӑмӗ ачисемпе киле таврӑнман-ха. Ӗҫе тухрӗ. Вӑл никама та асӑрхамасть. Пуҫра ула-чӑла шухӑшсем явӑнаҫҫӗ. Чим-ха, кам вӑл Шерпике? Хӑй патне кӑчӑк туртать те туртать.

Икӗ кун иртрӗ. Тек тӳсме хал ҫук. Кӗтет-ши вӑл ӑна? Ниме уямасӑр пырса кӗчӗ вӑл Шерпике патне. Пушӑ алӑпа мар, кучченеҫпе. Янаш мороженӑй кӑларса хучӗ сӗтел ҫине. Ҫинӗ май Шерпике сӗнӳ пачӗ.

— Милӗк касма вӑрмана каяр-и? Халь хатӗрленӗ хурӑн милӗкӗ хӗлле мунчара ҫапӑнма ытла селӗм.

— Ухатапах пыратӑп, — килӗшрӗ Янаш.

Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, пуҫтарӑнса килтен тухрӗҫ. Тӳлек ҫанталӑк. Хӗвел ытлашши хӗртме тытӑнман-ха. Вӗсем вӑрмана ҫитичченех ҫуран утма килӗшрӗҫ. Калаҫу юхать шӑкӑл-шӑкӑл. Анчах Шерпикен хӑйӗн тӗллевӗ. Новелла ҫырма унӑн Янаш мӗнле ҫуралса ӳснине те пӗлмелле.

Янаш ыйту ҫине кӗскен ҫеҫ хуравларӗ:

— Атте — нефтяник; анне — бухгалтер. Авланнӑ. Манӑн икӗ ача. Калама мантӑм: институт пӗтернӗ, ҫарта пулнӑ.

Ывӑҫ тупанӗ ҫинчи евӗр йӑлт паллӑ.

Шел, Янаш хӑйӗн пурнӑҫӗнчи тӗп самантсене пачах пӗлмест. Чӗнеймен вӑл хӑйне ҫуратнӑ хӗрарӑма анне тесе.

## 4

Янаш усрав ача. Кун пирки вӑл пачах пӗлмест. Кам унӑн амӑшӗ, кам унӑн ашшӗ? Халӗ ӗнтӗ никам та ӑна ӑнлантараймӗ. Ҫапах та пӗррехинче иккӗлентерекен, хӑратакан хыпар илтме тиврех ӑна.

...Вӗсем Удмурт Республикинчи Ижевск хулинче пурӑнаҫҫӗ. Ашшӗ — нефтяник. Институт пӗтерсен ӑна ҫавӑнта ӗҫлеме янӑ.

Пӗр ҫуллахи ӑшӑ кун ашшӗ хӑйӗн ҫемйине яла, тӑван килне, ашшӗпе амӑшӗ патне ӗнтӗ, хӑнана илсе кайнӑ. Апатлансан Янаш урама тухать. Кӳршӗре хӑй пекех шкул

çулне çитеймен ачасем сахал мар. Паллашрĕç. Тытăнчĕç лапталла вылямa. Ытла та хавaслă-çке, чăнах, туссемпе пĕрле. Пĕр-пĕрне хăваласа çитмелле вылянă чух ăна пĕр кинемей тытса чарчĕ.

— Эй, амитке, пĕлетĕн-и эсĕ çакна? Антунпа Натали санăн аçупа аннӳ мар. Вĕсем сана ача çуртĕнчен усрава илнĕ. Телейӳ пур сан. Эсĕ лайăх çемьене лекнĕ. Турра тав ту.

Янаш мĕн илтнине çийĕнчех манчĕ. Ăна юлташĕ кӳлĕ хĕррине чĕнет хур чĕпписене хăваласа килме. Иккĕшĕ те чăн-чăн тиха, тĕпĕртеттерчĕç урам тăрăх.

Кунсем иртрĕç. Янаш ашшĕ-амăшĕпе тахçанах хăнаран киле таврăннă. Кунсем хаваслă иртеççĕ.

Вăрмантан кăмпа татса таврăннă кун темшĕн питĕ ывăннине туйрĕ ача. Вырăн çине выртнă-выртман çывăрса кайрĕ. Тĕлленчĕ. Вăл ялта пек. Урамра ачасемпе вылять. Унччен те пулмарĕ, хайхи сурпан сырнă, хура сăхман тăхăннă кинеми тĕл пулчĕ.

— Эй, эй, — туйипе пуçран шак-шак шаккать пек. — Эсĕ Антунпа Натали ачи мар. Вĕсем сана усрама ача çуртĕнчен илнĕ.

— Суян! Сана ĕненместĕп! — кăшкăрса ячĕ Янаш. Вара хурланнипе ӳлесе йĕме тытăнчĕ. — Аттене калатăп! Вăл сана суйнăшăн хытах ятлĕ. — Унтан амăшне чĕнчĕ: — Анне-е! Анне-е!

Натали чупса пычĕ.

— Янаш! Янаш! Мĕн-ма йĕрен? — терĕ ача çамки çине ал лаппине тытса. — Тупата, вăрманта хирĕç-хаяр лекрĕши вара? Чирлерĕн-и-мĕн?

Антун та ачи патне пычĕ. Арăмĕпе шăппăн калаçрĕ.

— Вĕрилентерсе пăрахман-и таçта? — кăсăкланчĕ вăл.

— Çамки лĕп çеç. Температура çук.

— Ĕнер уроксем пĕтнĕ çĕре киле илсе кайма ятарласа шкула кайрăм. Учительници хурламарĕ ăна. Янаша хăйне те вĕренме килĕшет. Çул тăршшĕпех мăкăлтатса пычĕ. Вĕрентекене те, хăйĕн тантăшĕсене те килĕштерет. Ĕç-пуç аван пек туйăнать.

— Вăрманта çӳресе ытлашши ывăннă. Сăлтавĕ, ахăр, çакăнта. Çывăрсан пурте иртет. Ав мăшлаттарать.

— Паппа тутăр эппин.

Алăка хупса иккĕшĕ те пӳлĕмрен тухрĕç.

* * *

Янаш хăйĕн тĕлĕкĕ пирки ашшĕ-амăшне ним те шарламан. Анчах манса кайнă пăтăрмах тĕлĕкре çĕнĕрен ишсе тухнă. Хайхи лешĕ, ялта тĕл пулнă кинемей, ун умне пырса тăчĕ пек те каллех çавнах калать: «Антунпа Натали санăн аннӳпе ачу мар. Санăн хăвна çуратнă аннӳ пур». Мур илесшĕ, ача чунĕнче кӳренӳ йăва çавăрчĕ. «Суян, суян!» — тесе кăшкăрчĕ ăна хирĕç ача. Хăранипе те тарăхнипе йĕрсе ячĕ, амăшне чĕнчĕ: «Анне! Анне!»

Хăйне чĕннине илтсе амăшĕ пӳлĕме чупса кĕчĕ. Янаш вăранса кайрĕ. Анчах вăл хăй тĕлĕкĕ пирки каллех чĕптĕм те асăнмарĕ. Çав усал кинемей сăмахне ашшĕ-амăшĕ пĕлесрен сехĕрленчĕ. Сиссен-тусан, ĕненсен ăна килтен хăваласа кăларса ярĕç. Ăçта кайĕ вара вăл пĕчĕкскер? Ун пек ан пултăрах. Вăл ашшĕ-амăшне шутсăр юратать. Çĕнĕрен чун хурланса килчĕ те нăшăклатса тытăнчĕ йĕме. Куççуль юхрĕ, юхрĕ. Ĕненместех кинемей каланине. Ашшĕпе амăшĕ сĕтел хушшине апата ларсан та ун турилкки çине чи тутлине хурса параççĕ. Канихвет, премĕк, печени сĕтел çинчен татăлмасть. Кирек те мĕн чухлĕ çи, никам та чармасть. Çийĕнче те вĕсем туянса тăхăнтарнă хӳхĕм тум. Майкăсем темиçе. Акă шкула çӳреме ятарласа костюм илсе пачĕç. Тетрадьсем, кĕнекесем, хут-кăранташ сĕтел çинче тем чулах. Ăна ашшĕ пĕр хутчен те патакламан. Куркаланă-ха вăл, хăш-пĕр юлташĕсене ашшĕсем ним шелсĕр хулăпа е чĕн пиçиххипе вĕтеççĕ. «Мĕнле вĕсен ачи пулам мар? Ялта тата асаттепе асанне те пур. Вĕсем те юратаççĕ».

Чуна килĕшмен хыпар пĕлтернĕ кинемее кӳренес килет. Анчах халăхра калаççĕ-çке: чăн сăмахăн суйи çук. Пурнăç тени яланах пуçран шăлса тăмасть, хăш чух хаяр та пулать. Малтан тĕрĕссине пытарса усрать-усрать те ним кĕтмен çĕртен хап! чăнни патне çавăтса пырать.

Чăннипе, Янаша пăхса ытармалла мар çĕмĕрт куçлă, яштака пӳ-силлĕ, çап-çамрăк хĕр çуратнă. Алюк тесе чĕннĕ ăна, кукамăшĕ пăхса ӳстернĕскере. Ашшĕ-амăшне астумасть. Вĕсем çамрăклах çĕре кĕнĕ.

Алюк шкулта лайăх вĕреннĕ. Кирек мĕнле института та кĕме пултарнă, анчах ватă кукамăшĕ, чухăнскер, укçатенкĕпе пулăшайман. Кĕркунне аслă шкула вĕренме кĕни-

сем çеç мар, ытти çамрăксем те ялта юлман ĕç çук пирки. Çавăнпа та пурте хулана тапаççĕ. Алюк та Шупашкарти кирпĕч туса кăларакан завода ĕçлеме кĕрет. Нумай кĕттермерĕç, часах общежити пачĕç. Пÿлĕмре тăвата хĕр тытăнчĕç пурăнма. Пурте хаваслăскерсем, пĕр вырăнта лара-тăра пĕлменскерсем. Клуба çÿреме пуçларĕç. Юрлас, ташлас тесен чунне пама хатĕр.

Ĕçĕ вĕсен ытлашши йывăр та, ытлашши çăмăл та теме çук. Кирпĕче вĕри кăмакара хĕртеççĕ. Шăпах çак ĕçре тăрмашнă та ĕнтĕ Алюк юлташĕсемпе.

Цехра электриксем те пулнă. Çавсенчен пĕри, Мĕтри ятли, Алюка хытă юрататъ. Чуптумасăр чарăнĕ-и? Хĕр тути — пыл, ăна ĕмсе киленет. Алюк чараймарĕ йĕкĕте. Чĕри яш! чиксе илчĕ. Мĕне пĕлтерет? Сасартăк ырă мара? Шăпаран иртме çук теççĕ те-ха. Юрататъ Мĕтри хĕре, анчах авланаймасть, унăн арăм пур.

Алюк ывăл ача çуратать. Хăйĕн астуман ашшĕне асăнса Янаш ят парать. Ватă кукамăшĕ патне яла йывăр çын чухне те, кайран та, çуратсан, кайман. Именнĕ.

Вăхăт шăвать ниме уямасăр. Алюк ача çуратнă хыççăн çич-сакăр уйăх аванах çÿрерĕ темелле. Çынсем ăна-кăна асăрхамарĕç. Çын çинчи — турат çинчи теççĕ çав. Ачине ашшĕсĕр ÿстерме тивнишĕн ытлашши кулянчĕ-ши? Кунран-кун тытăнчĕ йăшма. Утмалăх ура вăйĕ юлмарĕ унăн. Пульницана кайрĕ. Тĕрĕслерĕç. Чирне тупрĕç вара. Онкологи уйрăмне вырнаçтарчĕç ăна. Унăн сывалма май çук чир — юн ракĕ. Кам хăтăлайтăр ĕнтĕ çавнашкал хăрушла чиртен?

Вилчĕ çав тери чечен хĕр, качча кайса упăшкапа пурăнаймасăрах, ывăлне ÿстереймесĕрех. Тăлăх Янаша ватăватă кукамăшĕ килне илсе каяймарĕ, пурăнăç сулĕ вĕçне çитсе çĕре кĕчĕ. Ашшĕ пур-çке Янашăн. Алюк ывăлĕ — унăн ывăлĕ. Ачана хăй патне илме хирĕçех мар (ÿлĕм те тăван ача алла тытса та кураймĕ, арăмĕ хĕсĕр), анчах хăрушла сăлтав хăратать: амăшĕн чирĕ ывăлне те куçма пултарать. Çак усал сăлтав Мĕтрин чунне тимĕрпех витрĕ, аллине çыхрĕ. Ним те шарламарĕ. Пĕчĕк Янаша вара ача çуртне вырнаçтарчĕç. Вăл амăшĕ вилнине ăнланман, пурпĕрех татăлса йĕнĕ. Няньăсем шелленĕ, йăпатнă тăлăх турата. Лăплансан Янаш хавaслă ачаччĕ. Ахăлтатса кулатчĕ вылянă чух.

Темиҫе уйăхран ача ҫуртне Натали (Янашăн хальхи амăшĕ) пырса тухнă. Ача усрава илесшĕн вăл. Врач ăна шăпах Алюк ачине кăтартнă. Питĕ килĕшет ăна ҫак пĕчĕк йĕкĕт. Вăл хăйĕн упăшки Антун сăнлă. Ун пекех хура куҫлă. Арăк ҫинче тытса ларнăҫемĕн ҫак пепкене хăй ҫуратнăнах туйрĕ. Вара тытăнчĕ ăшĕ ҫунма. Часрах ăна хăйĕн килне илсе каяс килчĕ. Анчах хăп! тенипех ҫырма урлă каҫаймăн. Ĕҫĕ-хĕлĕ самаях пур. Чи малтан упăшкине кăтартмалла. Ку чи кирли. Вăл мĕн тейĕ? Ҫук, ҫук, хирĕҫ пулас ҫуках.

Натали ача ҫуртĕнчен тухрĕ. Юрать-ха, Шупашкарта тăван-пĕтен пур. Унта хăналанĕ. Ҫула май телеграфа кĕрсе упăшкине шăнкăравларĕ. Вĕсем Пушкăртра пурăнатчĕҫ. Халĕ Удмурт Республикинчи Ижевск хулине куҫаҫҫĕ, ачапа. Унта никам та вĕсен усрав ача иккенне пĕлмĕ. Тĕллевĕ ҫапла. Килĕшмен сăмах-юмах пурăнма, ачана кирлĕ пек ӳстерме чăрмантарать. Капла хăйсем ҫуратниех тейĕҫ.

Палăртнă вăхăта Антун килсе ҫитрĕ. Арăмĕ ăна ача ҫуртне ертсе кайрĕ вара. Ывăлпа пулас тĕлпулу иккĕшне те хумхантарать паллах. Пулас ача амăшĕ ҫаплах хăй килĕштернĕ пепке пирки пуплерĕ: ҫулталăк тултарайман, пуплеме пĕлмест-ха. Чупать. Чи кирли — сăнĕпе пулас ашшĕ пек. Янаш ятлă. Усрама илес-тăвас пулсан ятне улăштарас мар тесе йышăнчĕҫ, тăван амăшĕн пилĕ ĕмĕре тăсăлтăр.

Кĕтнĕ тĕлпулу. Янаш — пулас ашшĕн аллинче. Антун ăна йăпатрĕ, ачашларĕ, вылятрĕ. Ача чунĕ сисĕмлĕ ахăр, ырăпа усала туйма пĕлет пулĕ ҫав, унсăрăн савăнмĕччĕ, ахăлтатса кулмĕччĕ.

Пĕр-пĕрне килĕштернĕ. Ку пĕчĕк этеме ача ҫуртĕнчен илсе кайма кĕнекинче акă мĕнле хутсем кĕрсе юлчĕҫ: медицина справкисем. Янаш — сывлăхлă. Антун Паланов — сывлăхлă, Хусанти университетран вĕренсе тухнă — нефтяник; Наталия Паланова — аслă пĕлӳллĕ бухгалтер.

Ĕнтĕ Янаш — ашшĕ-амăшĕллĕ. Антунпа Натали — ачаллă. Тытăнчĕ ҫемье ҫĕнĕ хулара пурăнма.

Мăшăрсем ача ҫĕклесе чылай вăхăт яла каймасăр тытăнса тăчĕҫ. Нумайччен пурнайăн-и пытанса? Аптрине михĕре пытарса усраймастăн теҫҫĕ. Халăхра вичкĕн чĕлхесем тупăнаҫҫех. Шăлĕсене хăйраса усал сăмахсем тухаҫҫĕ вирхĕнсе.

Пĕррехинче, Янаш ун чухне шкул ҫулне ҫитнĕччĕ, яла кайсан пĕр кинемей чĕлхи кĕҫĕтнине тӳсеймен. Янаша

тытса чарнă та каланă: «Пĕлетĕн-и, эсĕ усрав ача. Сана Антунпа Натали ача çуртĕнчен илнĕ».

Ача, паллах, ун сăмахне ĕненмен. Илтнĕ те маннă та тееймĕн. Анчах хăш-пĕр чух çав йĕксĕк çын сăмахĕ тĕлĕкре те пулин çĕлен пек сăхса йĕртет. Пурнăç йĕркеллĕ чух усал элексем чуна амантаймаççĕ.

Янаш ӳссе çитĕнчĕ ырă мăшăр йăвинче. Институт пĕтерчĕ. Ĕçлет. Шупашкар урамĕсем тăрăх çӳренĕ чух хăйне çуратнă чăн-чăн ашшĕпе амăшĕн ура йĕрри çине пусать пулĕ. Ку çеç те мар, тен, вăл тăван ашшĕне тĕл пулса иртнĕ. Анчах вĕсем пĕр-пĕринпе нихăçан та сăмах чĕнсе калаçаймĕç.

## 5

Шерпике малтанах калав мар, очерк çырмалăх та Янаш пурнăçĕ пирки пĕлеймерĕ. Ырă ашшĕ-амăшĕ çумĕнче ӳснĕ, ним кăлтăксăр. Çавă çеç. Пулать-çке, хăш-пĕр çынна çăварне шĕшлĕпе хайăрса уçсан та пуплеттерейместĕн. Хальлĕхе унпа Тунисса хушшинче пулса иртнĕ пăтăрмахсем çинчен кăна пĕлкелет. Янаш авланнă, икĕ ача ашшĕ. Ку енĕсемпе халĕ вăл — çын пырса кĕмен сĕм вăрман. Пĕтĕмпе çынна витĕр пĕлсен кĕнеке çырма ĕмĕт çуралчĕ ун. Çавăнпа та ăна тĕксе ямарĕ, вăрттăн, сисĕнчĕксĕр кăчăк туртрĕ, тĕл пулмассерен пĕр тумлам тенĕн кăмăлне уçрĕ.

Шерпике хăй те сисмерĕ Янаша хăнăхса пынине. Килмесĕр тăрсан вăл пăшăрханма, тунсăхлама тытăнчĕ. Темиçе кун иртнĕ хыççăн килсе кĕрсен вара вăл ниçта кайса кĕме пĕлмест савăннипе. Мĕн ку? Чĕрене юрату йăпшăнса кĕмест пулĕ те? Унăн никама та юратма юрамасть. Ку иртнине, Тăван çĕршыва хӳтĕлесе пуçне хунă савнине, малтанхи юратăва, сутни пулĕччĕ.

Çапла, пулнă Шерпикен чăн-чăн юратнă, каланă пек, уншăн вутра та çунма хатĕр савни. Анчах тӳперен çутă çăлтăр яр шуса анчĕ çав. Пурнăç чечекне сиксе вĕрекен шывпа сапрĕç те шантарчĕç, вара хăрса хытрĕ. Хăрах çунатлă чĕкеç пурăнчĕ вĕçеймесĕр.

Шерпикен юратнă каччи — Эливан хăйсен ялсемехчĕ. Шкулта мĕн вĕçне çитичченех пĕрле вĕреннĕ. Юрату тăххăрмĕш класра пуçланнă, пĕр пăтăрмах хыççăн.

...Ялта пĕрисем вăкăр усранă. Ял çыннисем хăйсен

ёнисене вёсем патне чуптарма илсе пынă, паллах, укçалла. Пĕррехинче хайхи вăкăр хапха шашулккине мăйракипе хирсе уçать те урама тухать. Малтанах вăл карта çумĕнчи ешĕл куракăа çырткаласа çӳрет. Йĕри-тавра мĕн пуррине асăрхамасть те темелле. Анчах та апла мар иккен. Çак вăхăтра çулпа Шерпике иртсе пынă. Ун çийĕнче — хĕрлĕ куртка. Мĕнле асăрхама ĕлкĕрнĕ-ши çакна выльăх тени. Хĕрлĕ тĕс вăкăра самант уртарать. Куçне тавăрса пăрахать хайхискер, хăрушла мĕкĕрет, урипе çĕр чавма тытăнать. Халь-халь ыткăнать хĕрлĕ тĕс патне.

— Шерпике-е! — хăйне чĕннине илтрĕ хĕр, — курткуна хыв часрах, хăвна ав вăкăр сĕкесшĕн. Чуп хăвăртрах.

Çаврăнса пăхрĕ те хыçалалла, пĕр вăхăтрах вăкăра та, Эливана та курчĕ. Шартах сикрĕ. Сехĕрленнипе шари-и! çухăрса ячĕ.

Эливан аллинче патак, вăл вăкăра хăратма пултарчĕ. Ăна ăçтан тухнă, çавăнта — кӳршĕ картишне — хӳтерсе кĕртрĕ. Турра шĕкĕр, инкек сирĕлчĕ темелле.

Çав каçхине Шерпикепе Эливан тĕл пулчĕç урамри вăйăра.

— Эс паттăр иккен, — мухтарĕ Шерпике каччăна.

— Юратнă хĕршĕн вăкăра çĕнтерни сахал, — терĕ Эливан. — Унăн кăмăлне хам майлă çавăрасчĕ, вара хама паттăр тенине йышăнаттăм.

— Тытăнса пăх, — ихĕлтетрĕ хĕр.

— Шерпике, мĕн тума хушатăн ăна? — кăсăкланчĕ ушкăнти пĕр хĕр ача, Юля ятли. Ун сăмахне илтсе ыттисем те вăранчĕç темелле. Ăнлантарса пама ыйтаççĕ.

— Вăрттăнлăх, — тет Шерпике. — Пурне те пĕлсен час ватăлатăр.

— Эливан — санăн савни! — кăшкăрчĕ Юля.

Юрать-ха, ушкăнра пĕри юрă пуçларĕ. Вара Шерпикене манчĕç.

Ыттисем манчĕç пулĕ, анчах Эливанăн юратăвĕ чечеке ларма папка кăларчĕ. Çак каçран пуçласа хĕрĕн хапха умĕ Эливан утнипе такăрланчĕ темелле. Мĕн вĕренсе тухиччене çаплах килне ăсатрĕ вăл Шерпикене. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем пĕр-пĕрне юратни палăрчĕ.

Вăтам шкултан вĕренсе тухсан аслă пĕлӳ илес шухăшпа иккĕшĕ те Шупашкар хулине кайрĕç.

Шерпике шкулта вĕреннĕ чухнех ача-пăча хаçачĕпе çыхăну тытнă. Пĕчĕкренпех çуралнă ĕмĕт унăн — журналист пуласси. Маттур! Кĕме пултарчĕ вăл университетăн журналистика факультетне.

Эливанăн та хăйĕн ĕмĕчĕ — çурт-йĕр лартакан ăста пуласси — университета çитерчĕ. Анчах шел. Кирлĕ пек экзамен тытаймарĕ. Çапах та строительсен техникумне вĕренме кĕчĕ-кĕчех.

Вăхăт нумаях та иртмерĕ — пурнăçра çĕнĕ улшăну: Эливана çара илчĕç. Умра — уйрăлу. Тÿсмелле.

— Ан пăшăрхан, Эливан, эпĕ сана çартан таврăнасса кĕтетĕп. Вара каллех эпир — пĕрле. Эсĕ университета вĕренме кĕретĕнех. Эпĕ ĕçлĕп. Пыл та çу пулĕ пирĕн пурнăç.

— Шанас килет ÿлĕмхи ырă ĕмĕтсем пурнăçланасса, — тет Эливан ассăн сывласа.

Ăсатрĕ Шерпике юратнă каччине çара. Анчах вĕсем ĕмĕрлĕхех уйрăлнине нихăшĕ те пĕлмерĕ. Пурнăç тени хăй урапин йĕрĕпе чупать çав. Ăна хăйне кирлĕ пек никам та пăркалаймасть.

Эливана нумай тытмарĕç, Чечня вăрçине ячĕç. Пуçне çирĕç — вĕлерчĕç. Яла илсе килсе пытарчĕç. Вăл вилчĕ те выртрĕ, юлаканĕн — тÿсмелле. Хăраха юлнă Шерпике йĕчĕ. Пухнă пулсан куççулĕпе пысăк витре тулатчĕ ахăр.

Салтака пытарнăранпа тăватă асаплă çул иртрĕ. Майĕпен чун ыратăвĕ сÿнсе пычĕ. Çак иртсе юлнă çулсенче вăл çĕнĕрен килекен юратăва чĕртмен. Анчах çынра вăрттăн туйăм пурăнать пулĕ çав, вăл пурна киле çиеле ишсе тухатех. Ăна пытарма, айккинелле тĕртсе яма никамăн та вăй çитеймест. Шерпикепе те çапла пулса тухрĕ. Ытахальтен тенĕн Янашпа сăмах хушрĕ. Кăшт паллашнипех юнашар утрĕ, унтан — хваттерне кĕртрĕ. Сăлтав тупрĕ: ун пурнăçĕ тăрăх калав хайлас терĕ мар-и? Ĕлкĕреймерĕ çав çырма. Иккĕшин те сасартăк чĕре тĕпĕнчен чăн-чăн юрату палкаса хăпарчĕ. Тек пĕр-пĕринсĕр пурăнма пултараймарĕç. Халăхра ахаль каламаççĕ çав: вăрттăн юрату ытла хăватлă пулать имĕш. Тĕрĕс пулĕ, ĕненмех тивет. Ара Шерпике ывăл çуратрĕ-çке-ха.

Янаш чăн-чăн тăван ачине хăй пăхса ÿстересшĕн. Апла пулсан пĕрлешмелле. Шерпике ав килĕшмест, ăна çемйинчен уйăрасшăн мар.

## 6

Янаша кётмен çёртен авлантарчёç. Тёрёссипе каласан ăна химкомбинатра ёçлекен инженер-химик Лида хăйне качча илтерчё. «Качча кайнă», «авланнă» сăмахсем вырăнлă та мар, ара, вёсем саккун хушнă пек çырăнман та, венчет те тăман.

Ёçлеме пуçласан çулталăка яхăн пёр каччă çулăхмарё унпа паллашас шутпа. Лида пăшăрханма тытăнчё: капла ним мар пёччен юлма пулать. Пёр тăхтамасăр качча каймалла. Пурнăç урапи мăшăрсăр чупаймё. Мăшăр кирлех. Çăпата кантри те мăшăрлă тенё ёлёк ваттисем. Шырамасан каччă тенине никам та çатан тăрантас çине лартса илсе килес çук.

Шырав кинона çÿреме тытăнниччен пуçланчё унăн. Умлă-хыçлă виçё кун кайрё кинона. Тарăхмалла пулса тухрё. Иçмасса, пёр хутчен çума çамрăк çын ларинччё. Çук çав. Юнашар шав мăшăрсем вырнаçрёç. Шанчăк çухалчё. Ăçта вара çамрăксем? Аптрани ăна клуба çул тыттарчё; ташăра тупăнассăн туйăнчё упăшка. Хавaслă музыка янăрать. Акă ташă пуçланчё. Мён курăнать? Кёвё май тапăртатакансем, вёлтёр-вёлтёр çаврăнакансем, тринкки-тринкки сикекенсем йăлт — чёчё пăрушёсем, тута хёрринче амăшён сёчё типеймен шăкăр-макăрсем. Ăçта çÿреççё вара пиçсе çитнё йёкётсем? Хăш тёлте шыраса тупмалла? Ир те, каç та чуна чăрмалать çак шухăш.

Комбинат Лидăна çамрăк специалист тесе пёр пÿлёмлё хваттер пачё. Кирлё пек капăрлатрё ăна: сётел-пуканё те, диванё те пур. Тёкёр те ăна саламлать. Чи кирли — упăшка çук. Ăçта çÿрет-ши? Пёррехинче тёлёкре курчё ăна. Илемлё сарă каччă. Хăтлă хваттерте савăшрёç вара. Вăранчё те — çумра хайхи пурнăç çук та. Чунё ыратрё. Шухăша путрё. Ёлёк хёрсене евчё упăшка тупса панă. Мён тума пăрахăçа кăларнă çав йăлана? Пуçра сасартăк евчё тупас шухăш амаланма тытăнчё. Ку чаплă ёмёт пёр эрне каялла çуралнă пулсан аванах ăнăçаччё ахăр. Ёçре сётел урлă ларакан, самай çуланнă хёрарăм Алла Ивановна пулăшма пултарнă. Вăл юмăç-тухатмăшсемпе туслă. Пурах унăн евче пултаракан пёр-пёр япшар хёрарăм. Хёрарăмăн тата чёлхи яка. Пёр-пёринпе аванах юмахласа пурăнчёç-ха. Юлашки вăхăтра самана пăсăлчё. Ватти-

сем ахальтен каламаççĕ çав: хăвăн чĕлхӳ — хăвăн тăшману. Ним çукран урлă-пирлĕ пулчĕç. Пĕррехинче Алла Ивановна патне ĕçе мăнукĕ нумаях пулмасть ӳкернĕ ӳкерчĕкне ачине çĕклесе пычĕ. Курас текенсене пурне те кăтартрĕ вăл хăйĕн пепкине. Лида та айккинче тăрса юлман. Ачана ырларĕç. Теприсем тутине çыртрĕç. Ку вара тӳррине калана:

— Алла Ивановна, сан мăнукăн куçĕ ылмаш.

— Çын ачинче кăлтăк тупса хурличчен хăвăн çуратмаллаччĕ, — терĕ пепкен кукамăшĕ сиввĕн, — тен, сан ачу кушак çури пек суккăр çуралĕ.

Çакăн хыççăн Алла Ивановна пачах калаçма пăрахрĕ Лидăпа, ăна тăшмансен ретне кĕртрĕ.

Вăхăт иртет. Çут çанталăкăн этемпе ним ĕç те çук, вăл хăй саккунĕпе пурăнать.

Акă çуркунне çитрĕ. Юр ирĕлсе пĕтрĕ. Ял халăхĕ уя акана тухать, пахчара çимĕç лартма хатĕрленет.

Лида амăшĕнчен çыру илчĕ. Киле чĕнет. Пулăшмалли ĕçсем пур. Кайрĕ вара ĕçрен ирĕк илсе. Амăшĕ ăна нӳхреппрен вăрлăхлăх çĕр улми кăларттарчĕ. Ытлашши йывăр çĕклени юрамарĕ пулĕ çав — пилĕкĕ хускалчĕ ун. Хăйĕн ĕçне таврăнсан та ыратни çаплах систерсе тăчĕ ăна. Çынсен умĕнчех ай-ай текелесе пилĕкне яра-яра тыткаларĕ.

— Пульницăна кай! — терĕç ăна пĕрле ĕçлекенсем.

— Пилĕкна лайăх юсас тесен сана ку тĕлĕшпе чапа тухнă çынпа паллаштарма пултаратăп, — пĕлтерчĕ ĕçри йышран пĕри. — Анчах ку укçаллă япала.

Лида килĕшрĕ. Вăхăта аякка ямарĕç, хваттере илсе пычĕç ăстаçăнă. Вăл — пиçсе çитнĕ хип-хитре хĕр. Чăнах, пăхса ытармалла мар ăна. Халăхра ахаль каламаççĕ çав: кашни чечек хăйне евĕр чечен. Хĕр упраç та çавах.

Алă тытсах паллашрĕç. Васнар тесе чĕнеççĕ-мĕн хăйне. Тӳрех ĕçе тытăнчĕ хайхискер. Вăл Лидăна хул айĕнчен ярса тытрĕ те вашт! çĕклерĕ. Çурăм шăммисем илтĕнмеллех шатăр-р! шатăртатрĕç. Ретрен тухнă шăмăсем хăйсен вырăнне ларнă пек туйрĕ. Унтан ăна ӳпне выртарса тытăнчĕ массаж тума. Хăй ĕçне лайăх пĕлни туйăнать. Чăнах та, ыратни пачах сисĕнмест.

Ĕç вĕçленсен Лида сывалнăшăн савăнса «ăстаçăна» сăй сĕтелĕ хушшине лартрĕ.

Васнар калаçма юратаканскер. Кил хуçи пĕр наччасра

ун пурнăçĕ çинчен йалт пĕлчĕ. Вăл республикăри чаплă спортсменсене массаж тăвать иккен. Чиперлĕхĕ унăн ытлашшипех. Анчах хитре пулни те телей памасть пулĕ çав. Ара, чаплă çул çине тăнăскерĕн ăнăçлăхĕ пат татăлать.

...Пĕчĕккĕ чухнех вăл çамрăксен керменне çӳреме тытăнать. Çăмăл хусканăвне кура ăна ташă кружокне илеççĕ. Хăвăрт ăнкарать хĕр ача ташă техникине. Ăна вара арçын ачапа ташлама хăнăхтараççĕ. «Пултаруллă мăшăр» тенĕ вĕсене кĕвĕ майăн ытла та тĕрĕс хусканусем тума çăмăллăнах хăнăхса пынăшăн. Вăхăт иртнĕçемĕн вĕсем валли кашни ташă валли костюм çĕленĕ. Вара майĕпен халăх умне, çцена çине кăларнă. Куракансем тăвăллăн алă çупнă, тепĕр хут ташласа пама тилмĕрнĕ. Çамрăк ташăçăсем туртăнса тăман, тепĕр хут сцена çине тухнă, ара, мăшăр нумай халăх ташшисене ăста ташланă.

Вăхăт хăй йĕркипе иртнĕ те иртнĕ. Васнар та ташă юлташĕпе вун çичче туртăннă. Халĕ ĕнтĕ вĕсем бал ташшисене илтереççĕ. Республика шайĕнче иртекен конкурссене хутшăнса пĕр хут кăна мар куракансене тĕлĕнтернĕ. Ăмăртури пĕрремĕш вырăн ялан вĕсен.

Ах, çав пурнăç урапи тени! Ялан тикĕс çулпа кăлтăртатмасть. Ташă ĕмĕрĕн юлашки тапхăрĕ Васнарăн ытла хурлăхлă килсе тухнă.

Вĕсем Раççей шайĕнче иртекен конкурса хутшăнма Мускав хулине кайма хатĕрленнĕ. Паллах, сахал мар тар юхтарнă. Ташăри пĕр хусканăва çĕр хут тĕрĕсленĕ. Ыран тухса каяс тенĕ чух сиксе тухать хăрушла инкек. Ăна кӳршĕсем чие çырлипе хăналанă. Такам та пĕлет унăн сĕткенĕ чуна ыррине. Тупата, çисе тăранаймастăн. Унччен те пулмасть, вар хăрушла касса каять. Калăн: çĕçĕпе чикеççĕ, хĕçпе тураççĕ. Ыратнине тӳсмелле мар. Илсе каяççĕ вара ăна пульницăна. Выртарнă сĕтел çине — каснă. Ку çеç çитмен, татах, татах операци тунă ыратни иртменнипе. Кайран пульницаран тухнă, анчах тек ташлама хăват юлман, юраман та. Вăхăт иртнĕ, ташă ăсталăхĕ сӳннĕ. Ташăçăн ăста ташлас тесен кашни кун ал-урана туптаса тăмалла.

— Лида, эсĕ мĕншĕн пĕччен пурăнан? — кăсăкланчĕ Васнар.

— Ма качча каймастăн тесшĕн-и? — ассăн сывласа илчĕ кил хуçи. — Вăхăт çитнĕ мăшăрланма. Пĕлместĕп, ăçта çӳрет-ши манăн пулас упăшка? Тупата, пĕлсен-тусан ун çулĕ çине тухса тăрăттăм.

— Кунта, хулара, пĕр-пĕрне шыраса тупма ансат мар. Унта-кунта тухса çӳре.

— Çӳрерĕм, — йăл куланçи турĕ Лида. — Кинона кайнă, клуба. Пĕр юрăхлă йĕкĕт тĕл пулмарĕ.

— Атя ресторана. Вайпитти арçынсем, кĕсье тулли укçаллисем, унта ĕçсе-çисе лараççĕ, — хăлаçланчĕ Васнар алă çупса. — Сан пек чиперккесене савса тутлă апатпа, сăра-эрехпе сăйлаççĕ. Чим-ха, пĕр тĕлĕнтермĕш хыпарлам.

...Çуралса ӳснĕ чипер кăна пике хулан пĕр урамĕнче. Малтан шкулта, унтан институтра пĕлӳ пухнă. Каччăсемпе çӳреме вăхăт çитмен. Кайран, ĕçлеме пуçласан, вăл шкулта ачасене вĕрентнĕ, каллех ирĕклĕх кӳлĕнсе ларнă. Акă ĕнтĕ вăтăр çул алăкĕ сисмесĕрех уçăлать. Пит-куç çине пичет çапăнать — «кĕрченĕ хĕр». Савăнтармасть ку. Ватлăх алăкне пĕччен уçма ытла та мăшкăл. Хĕрарăм тени мăшăрлă пулмалла. Эппин, кăмăл-туйăма ирĕке ярса шырама тивет. Шăпах ресторанра тупать те вăл упăшка тенине. Кăли-кали çын мар — моряк. Пысăк карапăн капитанĕ. Хăй вăл Шупашкар çынниех, амăшĕ патне курма килнĕскер. Туй хыççăн капитан ăна Инçет Хĕвел тухăçне илсе кайнă. Карап çинче упăшкипе пĕрле тинĕссем тăрăх ишсе çӳрет пулĕ-ха.

— Каяр мар-и ресторана? — терĕ Лида.

— Мĕнех, эпĕ хирĕç мар, — килĕшрĕ Васнар. — Çĕнĕ вырăссем, тепĕр тĕслĕ каласан — пуян арçынсем, ресторана канмалли кун умĕн пухăнаççĕ.

Каланă — тунă. Лидăпа Васнар ресторанта чӳречесем енчи ретре тăваттăмĕш сĕтел хушшине вырнаçрĕç. Урам каç тĕттĕмĕпе пĕркеннĕччĕ, кунта вара çутă, пысăк лампăсем хăйсем — хĕвел. Официант вĕсем патне тӳрех пымарĕ. Путех сĕтел туласса кĕтет. Нумай та вăхăт иртмерĕ, вĕсем йышăннă сĕтел хушшине икĕ арçын вырнаçрĕç. Лидăпа юнашар пукана йышăннă этем ăна шиклентерсе пăрахрĕ. Унăн сăнĕ хура. Вăл чикан пулинех. Аялти тути çурăк. Киносенче курнă каснă лартнă тинĕс пирачĕ. Унпа

пӗр сӗтел хушшинче ларма хӑрушӑ. Тухса тарма та хирӗҫ мар. Вара вӑл хӑй кӑмӑлне Васнара хӑлхинчен пӑшӑлтатса тепӗр сӗтел хушшине куҫас пирки пӗлтерчӗ. Лешӗ ура ҫине вӑрттӑн пусрӗ ҫеҫ. Ку ӗнтӗ килӗшменнине пӗлтерет. Чисти сехре хӑппи. Вӑхӑт иртнӗҫемӗн паллашма пикенчӗҫ хайхискерсем. Мускав хулинчен командировкӑна килнӗ имӗш. Хайхи, ҫурӑк туталли, алӑ тытрӗ, хӑй ятне каларӗ:

— Рамис!

Сӗтел хушшинчи хайхи ҫынсем — хаваслӑскерсем, шӳтлесе култараҫҫӗ. Васнар ахӑлтатать кӑна. Лида чикан пек хура ҫын килӗшменнипе тутине тӑп тытса ларчӗ. Кулмасть те, сӑмах та чӗнмест. Акӑ официант пычӗ вӗсен сӗтелӗ патне. Кашниех хӑйне кирлӗ апат илсе пыма хушрӗҫ вӗсем умне стакансем лартрӗҫ. Лида куҫ илмесӗр сӑнать. Акӑ шӑкӑр-шӑкӑр тулчӗҫ савӑтсем. Йӗкӗтсем хайсен сӗтелӗ хушшинчи хӗр упраҫа та хӑналама шутлаҫҫӗ-мӗн. Шутарчӗҫ вӗсен умне тулли черккесене. Кун пек чух мӑнкӑмӑлланса лараймӑн. Вара пурте пӗр-пӗрне тав туса ӗҫрӗҫ. Лидӑн кӑмӑлӗ ҫемҫелчӗ. Ыттисемпе пӗрле кулать, калаҫать. Хушнӑ апата — бифштекс илсе килчӗҫ. Ҫиме пуҫӑнаймарӗҫ, музыка янраса кайрӗ. Ташша ухутисем урай варрине siксе те тухрӗҫ. Эх, ҫаврӑнаҫҫӗ пӑлтӑр-пӑлтӑр, тапӑртатса та илеҫҫӗ. Лидӑпа Васнара та ҫӗнӗ кавалерсем ташша чӗнчӗҫ. Унтан сӗтел хушшине ларчӗҫ. Ҫирӗҫ, ӗҫрӗҫ, калаҫрӗҫ, шӳтлерӗҫ-кулчӗҫ, каллех ташларӗҫ, ҫирӗҫ, ӗҫрӗҫ эрехне. Ҫывӑхланчӗҫ. Калӑн — савнисем. Чуптӑваҫҫӗ чӑп! та чӑп! Лида хӑйӗн тӗллевӗн урапи ҫинче. Вӑл ҫак пӗр сӗтел хушшинче ларакан чикан пек хура, катӑк туталлӑ этеме юратрӗ, ӑна, хӑй килӗшсен, паянах упӑшка тума хатӗр. Хӑй пуян пурӑнни ҫинчен мухтанма тытӑнчӗ. Унӑн хваттерӗ те чаплӑ.

— Эсӗ ӑҫта тата кам пулса ӗҫлен? — тӗпчет катӑк тута.

— Эпӗ — инженер. Чи пысӑк ӗҫ укҫи тӳлеҫҫӗ мана. Эпӗ хӳхӗм хӗр. Ман пеккине ниҫта тупаймӑн.

— Лайӑх упӑшка кирлӗ сана. Ман пекки, — кулкалать чикан. Ихӗлтетет Лида. Савӑнӑҫлӑн юрласа ярать:

Эпир урпа акман-и,
Урпа сӑри ӗҫмен-и?
Эпир чипер пулман-и,
Чипер ятне илтмен-и?

Чикан пек хура çын та мухтанать. Вăл Мускавра пурăнать. Пысăк ёç укçи тӳлеççё имёш ăна. Кунта ăна ёçпе командировкăна янă. Лидăна качча илме пулать. Сётел хушшинчисем вёсене саламлаççё, черкке шаккаса эрех ёçеççё. Каллех чуптăваççё.

Çутă сӳнсе илчё. Эппин, ресторан хупăнать.

Шавласа тухрёç урама. Утрёç. Малта — Васнар. Вăл ресторанра юнашар ларнă арçынпа çавтăннă. Вёсен хыçёнче — Лида, хайхи катăк тутапа. Чуптăваççё. Анчах ыталанма Лида хулпуççи урлă çакнă сумки чăрмантарать. Вара хайхи çын хёртен ирёк ыйтмасăр-тумасăр ăна хывса илет те хăйён çийёнчи плащ кёсйине чикет. Лида арçын ытамёнче лăпсăр пулчё, ёшеннипе ăна-кăна сисмерё.

Васнар, хăйёнпе кёлентёрленсе утакан арçынпа чылай малта пыраканскер, такси тупрё. Вёсене Çёнё Шупашкара çитерме пулать. Вара вăл хыçалтисене кăшкăрсах васкатрё.

Акă ёнтё икё хёрпе икё йёкёт сывпуллашрёç. Ыран каллех ресторанрах тёл пулма килёшрёç. Ёнтё хёрсем кёрсе вырнаçнă такси хускалчё те малалла шыв пек юхтарчё.

Пикесем ним те шарламарёç. Чунра иртни явăнать. Лида çав саманта сёвемён-сёвемён суйлать. Катăк тута авланман. Качча кайма та юрать ăна. Кăмăллă, ачашлама ăста. Тата вăл çёрме пуян çын. Темле фирма пуçлăхё тет. Чи пахи — вăл Шупашкарта мар, Мускавра пурăнать. Çёршывăн тёп хулинче кăлин-калин утса çӳреме кам ăмсанмё?

Машинăра юнашар ларакан Васнар чавсипе кăлт-кăлт тёккелерё те çапла каларё:

— Тусăм, килёш: паян ман патăмра çывăрăпăр. Пуплемелли мăй таран. Юрё-и?

— Килёшетёп, — терё Лида йăл-йăл кулкаласа.

Хулана пырса кёрсен Васнар таксиста хăйён адресне каларё. Вара нумай та вăхăт иртмерё — машина çитсе те чарăнчё темиçе хутлă çуртăн пёр пысăк алăкё умёнче. Часах çул укçи мён чухлё тӳлемеллине пёлчёç. Хăнăхнă йёркепе Лида хулпуççи урлă çакнă ридикульне хыпашларё. Тупаймасть. Мён амакё? Сасартăк аса илчё: ара, ăна чи хёрӳллё чуптунă самантра Рамис хулпуççинчен хывса хăйён плащ кёсйине чикрё-çке. Каялла илме маннă.

Таксиста вăрахчен тытса тăма юрамасть. Çул укçине вара Васнар тӳлерё ятла-ятла.

Машина каялла вёҫтерчӗ, хыпӑнса ӳкнӗ икӗ хӗрарӑм тӑраҫҫӗ тапранаймасӑр. Ним тума аптраҫҫӗ вӗсем. Шупашкара каяс, ара ӑна, катӑк тутана, ӑҫтан тупӑн? Хӑш хӑна ҫуртӗнче вырнаҫнӑ-ши? Ыйтса пӗлмен Лида. Сасартӑк ридикюлӗн вӑрттӑн кӗсйине вӑтӑр пин тенкӗ укҫа чикнине аса илчӗ те ахлатса ӳлеме тытӑнчӗ. Вӑл ҫав укҫана кӗрӗк туянма упратчӗ.

— Ҫаратрӗ, хурах! — кӑшкӑрать вӑл.

— Ан ӗрлеш-ха. Ҫынсем илтсен тем калӗҫ, — тет Васнар юлташне. — Ыран каллех ресторана ҫул тытӑпӑр. Вӗсем те пырӗҫ. Лешӗ сана ридикульне тавӑрса парӗ. Ахалех пӑшӑрханан.

— Тем пекехчӗ, — тет Лида куҫҫульне тутӑрпа шӑлашӑла. Анчах ӳлеме чарӑнаймасть.

— Тепӗр тесен, йӗрсем хытӑрах, — сӗнет Васнар, — куҫҫулӗпе хуйхӑ-суйхӑ юхса тухать.

Ӗнтӗ тӑваттӑмӗш хута хӑпарса хваттере кӗчӗҫ. Вӑхӑт тул енне сулӑннӑ пулин те пӳлӗмре тӗттӗм-ха, лампа ҫутма тиврӗ. Вырӑн сарчӗ Васнар капӑр тумӗсене хывсан. Ыйхӑ ҫук, каллех сӑмах тӗвӗнет.

— Ресторана мӗншӗн ҫавӑн чухлӗ укҫа чиксе пынӑ? Тупата, ытла айван эсӗ, — ятлать Васнар юлташне.

— Эпӗ ӑна леш эрнерех лавккана кӗрӗк туянма каяс ӗмӗтпе ридикюле чикнӗччӗ, — куҫҫуль юхать Лидӑн, — кӑларса хӑварма маннӑ.

— Ытлашши ан кулян-ха, — тет Васнар юлташне лӑплантарас шутпа. — Ыран каллех ресторана каятпӑр та хайхи сӗтел хушшинех ларатпӑр. Лешсем те ҫӗмӗрттерсе пырӗҫ. «Ме укҫуна», — тейӗ Рамис.

— Темӗн, пӗр вӗҫерӗннӗ кайӑк тыттарӗ-ши, — ахлатать Лида. — Иҫмасса хам адреса каламарӑм. Ыйтрӗ. Эпӗ, пур, ихӗлтетсе сӑмаха пӑртӑм. Ҫынни, чикан сӑнпитлӗ пулсан та, пӗрре те шульӑк пек туйӑнмарӗ. Вырӑсла таса калаҫать. Хӑй ытла евӗклӗ. Ачашлама ӑста. Мӗнле лайӑх чуптӑвать! Антӑхтарса ярать, тупата.

Асаилӗвӗн вӗҫӗ-хӗрри ҫук. Анаслаҫҫӗ хӑйсем. Ыйхӑ ҫынран вӑйлӑрах, ялан вӑл ҫӗнтерет. Хӗрсем ав сисмерӗҫ те хӑйсем кӑтӑш пулнине. Ыйхӑ вӑл тутлӑ, ырӑ, сӑпки ҫине вырттарать те сиктерет никам илтмен юррине ӗнӗрлесе.

Этемре пуранатех ҫав сыхлах салтакĕ. Темĕн пек пылак ыйхăран та вăл вăратать. Сиксе тăчĕҫ хайхи хĕрсем, ҫинĕ-ҫимен тухса ыткăнчĕҫ ĕҫе.

Кун иртрĕ. Лидăпа Васнар хăйсен тĕллевне пурнăҫлама тухса кайрĕҫ ресторана. Ĕнерхи сĕтел хушшинех вырнаҫрĕҫ вĕсем. Вăхăт шăвать те шăвать. Катăк тутапа унăн юлташĕ килмерĕҫ. Ых-х, мур ҫименсем! Пымарĕҫ тепĕр кунне те, тата тепĕр кунне те.

Юхса кайрĕ Лидăн ăшă кĕрĕкĕ. Ку нимех те мар. Чи кӳренмелли — упăшка пулмалли этем тупăнмарĕ.

## 7

Вăхăт ҫын кăмăлне пăхăнмасть. Хĕвел аршăнлать унăн ĕмĕрне ҫĕрпе куна улăштарса. Хĕл иртсе кайрĕ, каллех ҫу пуҫланчĕ.

Пĕр уяр кун, ирхи кӳлĕм, Васнар пырса кĕчĕ Лида патне. Тупата, хăй вăл ҫуркунне катара ӳсекен ҫăмарта куракĕн сап-сарă чечекĕ. Ара, ҫӳҫне ҫеҫ мар, тутине те, куҫ харшипе хăрпăкне те сарă писевпе сăрланă. Ҫакна пулах куҫ шăрҫи вырăнне чечек папки вырнаҫнă тейĕн. Унăн тĕсĕ та сарă хăмăр. Ҫиййнче те сарă тĕслĕ сараппан, уринчи пушмакĕ те ҫав тĕслех. Пуҫ тăрне вара, темшĕн-ҫке, симĕс тĕслĕ елпешке беретка лартнă.

— Лида, пуҫтарăн халех, пляжа каятпăр, — терĕ Васнар. Хăй ташланăн йалт-ялт сиккелесе ҫаврăнса илчĕ. Унăн сарă сараппан арки сывлăшра вĕл-вĕл чӳхенчĕ. — Паян сана пулас упăшкупа паллаштаратăп.

— Чăнах та-и? — хĕпĕртенипе куҫне чарса пăрахрĕ юлташĕ. Мăйĕ хăйĕн пăрҫа тултарнă ансăр хутаҫ евĕр илемсĕррĕн карăнчĕ, пĕчĕк янахĕ таҫта путрĕ. Сурчăкне ҫăтрĕ та тытăнчĕ ыйтусем пама: — Мĕнле ҫын? Ăҫта ĕҫлет? Хитре-и?

— Чиперри мĕн тума кирлĕ сана? Илтмен-и вара эсĕ: «Хитре упăшка санăн мар, еркĕнĕн савниййĕ».

— Ăҫта ĕҫлет?

— ГЭСра. Инженер.

— Мĕн ятлă?

— Янаш.

— Эсĕ ăна мĕнле майпа пĕлен?

— Прокурор мар пулӗ те эсӗ, ыйту хыççăн ыйту паран. Виталипе (манпа ташланă йӗкӗт) туслă вӗсем. Ӗнер виççӗмӗр пӗрле кинона кайрăмăр. Эпӗ ăна унччен ăçта курнине аса илтӗм.

— Кала хăвăртрах! Ăçта тата мӗнле майпа?

— Патшалăх Канашӗн суйлавӗнче.

Васнар тӗрӗсех калать. Вăл ун чухне суйлав комиссийӗнче ӗçленӗ. Пыракансене пӗрне те теприне бюллетень панă вăл. Акă татах тепри ăна паспорт тыттарать. Саккун хушнă йӗркепе ятне-шывне тӗрӗслет: Янаш Паланов. Миçемӗш çулта çуралнине те пăхать. Ăçта пурăннине те пӗлет. Яшӗ хитрескер. Хӗр упраç ăçтан тӳстӗр пӗлмесӗр. Пăхрӗ паспорт страницисене татах уçкаласа. Мăшăрланнине паллă туни çук, эппин, вăл — каччă.

Унăн ячӗ суйлав списокӗнче пулман. Çын хыпăнса ӳкет.

— Мӗн тăвас ӗнтӗ ман? — тет.

— Ан пăшăрханăр, суйлава хутшăнмасăр юлмастăр терӗм те кампа калаçмаллине кăтартса ятăм.

— Чим-ха. Эсӗ ху юратан-иç ку йӗкӗте?

— Унашкал каччăна савсан та çылăх мар, — куçне йăлкăштарса илчӗ Васнар. — Анчах Витали мана унпа çавтăнса кайма ирӗк памӗ.

Лидăн чӗлхи чарăнмасăр палкать пулин те хăй васкасах пуçтарăнать. Пуçне улăм шлепке лартсан аллине сумка тытрӗ. Унта шыва кӗмелли костюм, ал шăлли — татах тем те пӗр.

Тухрӗç урама. Ӗçе каякан çынсем пекех васкаса утрӗç Атăл хӗрринелле.

Пляжа кӗриччен, унăн алăкӗ умӗнче, вăрăм сак пур. Васнар сӗннипе унта ларчӗç.

— Кӗтни ума çитӗ-ши? — тет тӳсӗмсӗррӗн Лида. — Витали чăнахах та асăннă çынна ертсе килӗ-ши?

— Васканă турăх уйран пулнă тет, — сăмах хушрӗ Васнар. — Лăпкă пул.

— Ман урăхла калассăм килет хама: «Тупăн, тупăн, пулас упăшкам».

Унччен те пулмасть, тахăш кӗтесрен икӗ йӗкӗт тухрӗ тăчӗ хӗрсем умне. Алă тытсах паллашрӗç вӗсем. Эй, çырлах! Мӗнле каччăсем пулчӗç? Сăмах вакласа пăртак тăрӗçин. Çук çав. Пляжа кӗчӗç те кайрӗç. Хӗрсем тăчӗç те

юлчӗҫ. Вӗсен ӑшне вут хыпрӗ! Тӑраҫҫӗ уй варринчи тунката пек, ни унталла, ни кунталла.

— Атя утар вӗсен хыҫҫӑн, — йыхӑрать Лида.

— Ҫапла туса хамӑр ята ярар-и? — Васнарӑн сӑмахӗсем шӑл витӗр тухрӗҫ. Вӑл та тарӑхрӗ ӗнтӗ. Шан-ха ӑна савни тесе. Тен, унӑн чӗринче урӑххи йӑва ҫавӑрнӑ.

— Текех кунта тӑнинчен мӗн усси! — йӗрмешет Лида. — Янашне тӳрех юратса пӑрахрӑм. Чунӑм йӑскать ырӑ мара сиссе. Ют хӗрсем ҫавӑрӗҫ те илӗҫ, эпир тӑрса юлӑпӑр типпе.

— Тен, вӗсем ытти хӗрсене чӗннӗ пӗрле шыва кӗме, — тет Васнар.

— Эпир никамран малтан пырса тӑрӑпӑр вӗсен умне. Пире курӗҫ те пӑрӑнӗҫ вӗлтӗрккисем. Акӑ сана каччӑсем — пирӗн.

Тӗрӗссипе илсен Васнара ют пикесем питех пӑшӑрхантармаҫҫӗ. Витя ташӑпа унта та, кунта та пулать, нумай хӗр упраҫ курать. Анчах ку тарана ҫитсе те кӑтартман вӑл сивӗннине. Тен, Янаш хӑйӗн савнине кӗтет? Ҫакнашкал шухӑшсем кӗрсе тухрӗҫ Васнар пуҫне. Вара вӑл юлташне ҫавӑтрӗ те пляжа ҫул тытрӗҫ. Тӳрех утрӗҫ хывӑнмалли хӳтлӗхе. Унтан шыва кӗмелли тумпа тухрӗҫ. Куҫсем тытӑнчӗҫ ухӑ йӗпписем вӗҫтерме! Ӑҫтарах-ши вӗсем? Часах тупӑнчӗҫ те. Турра шӗкӗр — иккӗш ҫеҫ. Выртаҫҫӗ ӳпне. Тем ҫинчен каҫса кайсах калаҫаҫҫӗ.

— Ав-иҫ лешсем! — терӗ Васнар.

— Ӑҫта? — куҫне пӑрҫа евӗр сапаларӗ Лида тавраналла. — Э-э, куртӑм. Атя вӗсен ура вӗҫне вырнаҫар.

Юлташӗ килӗшрӗ.

Хӑйӑр вӗриленмех ӗлкӗрнӗ. Хӗрсем хӑйсемпе илсе килнӗ ҫӳхе утияла ҫӗр ҫине сарчӗҫ те выртрӗҫ месерле.

Вӑхӑт шӑвать те шӑвать. Хайхи каччӑсем вӗсене курманилтмен пекех хӑтланаҫҫӗ. Мӗн ҫав териех сӳтсе яваҫҫӗ-ши?

— Нумайччен тӳсмелле-и ку мӑшкӑла? — чӗркуҫленчӗ Лида. — Пирӗн пата килме вӑтанаҫҫӗ ахӑр, эппин, хамӑр кайса выртар юнашар.

— Ан аташ! — хӑмсарчӗ ӑна Васнар.

— И-и, ара! Акӑ — вӗсене! — терӗ те тултармӑш мӑйӗ кӗскелсе хӗсӗнчӗ, сылтӑм алли шак чул тӑрмаласа илчӗ. Вара вӑркӑнтарчӗ умрах выртакан каччӑсем еннелле. Хӑй кӑшкӑрчӗ: — Хура-ах! Чуллӑ ҫумӑр ҫӑвать!

Çийĕнчех хăйсем сиксе тăчĕç те çыран хĕрринелле ыткăнчĕç.

Виталипе Янаш аранах пуçĕсене çĕклерĕç. Ăнланчĕç хăйсене пикесем кăчăк туртнине. Кун хыççăн ăçтан тӳсчĕр ĕнтĕ хускалмасăр. Сиксе тăчĕç те ыткăнчĕç ихĕлтисем хыççăн.

— Халех ярса тытатпăр урăрсенчен! — кăшкăрчĕ Витали. — Путаратпăр! Пултăр апат акулăсем валли.

— Вутăшсене тытма ăсталăх кирлĕ! – кăшкăрчĕ Васнар.

Лидăн, тупата, магнит туртăмĕ пур ахăр. Унсăрăн Янаш тӳрех ун патнелле ишсе пымĕ. Элле пуласлăх çапла туртрĕ-ши ăна? Çук, вăл вылямалла путарас шухăш тытмарĕ. Шыв тени аташнине юратмасть. Ытла та шала ишнине асăрхарĕ, вара кăшкăрчĕ:

— Каялла-а! — хушрĕ хĕре. Лешĕ итлерĕ ăна. Вара иккĕшĕ те, Атăл варринех çитнĕскерсем, каялла çаврăнчĕç. Ишрĕç, ишрĕç юнашар мăшăр дельфин евĕр. Ăнăçлах çитрĕç çыран хĕррине.

Васнарпа Витали шывран чылай малтан тухнă та пачăр сарнă утиял çинче выртаççĕ. Часах йыш хушăнчĕ. Кăшт типсе тăнă хыççăн Лидăпа Янаш та вĕсемпе юнашар пырса выртрĕç. Пуçланчĕ калаçу. Мĕн çинчен-и? Ним çинчен те мар. Камăн пуçне мĕнле шухăш килет, чĕлхе вĕçĕнче çав тĕвĕнет. Лида калаçăва ытлах хутшăнмасть. Унăн пуçĕнче урăх шухăш явăнать. Çак Атăл каччине вĕçертме юрамасть, вăл — упăшка тумалли чăн-чăн çын. Ĕмĕт вулкан хĕлхемĕ евĕр сирпĕнет. «Иккĕмĕш хут çав çул варринче выртакан чул муклашкинчен такăнса ӳкмĕп», — тет вăл ăшĕнче. Каччăпа çывăхланмалли мел те тупрĕ.

— Туссем, итлĕр-ха, — чарчĕ вăл хĕрсех тем çинчен калаçакан юлташĕсене, — ман лайăх сĕнӳ пур.

— Кала, итлетпĕр, — терĕç.

— Сире хам патăма хăнана чĕнетĕп. Кăнтăрла иртсен, шăп икĕ сехетре, ман алăк сирĕншĕн яр уçăлĕ. Хваттерĕн пӳлĕм варринче апат-çимĕçпе тулнă сĕтел пулĕ. — Пурин çине те чăр-р пăхрĕ Лида. Кашниех ăна куçĕпе тĕлленĕ-мĕн. — Ну, мĕнле? Килĕшӳ пур-и?

— Ай-яй, кун пеккинчен кам пăрăнтăр? — кулкаласа илчĕ Витали. — Ырă йыхравран пăрăнма хал çук. Эпĕ пыратăп.

— Чӗннӗ ҫӗре каймасан алтӑр ҫӑлтӑр шывпа сапать имӗш, — терӗ Янаш.

— Савӑнтартӑр, — йӑл-йӑл кулкаларӗ Лида хӗпӗртесе. Тек вӑл самант та тӑраймӗ. Килнелле ярса пусас умӗн Васнара хӑйпе пыма йӑлӑнчӗ.

— Ан та тилмӗр, — кутӑнлашрӗ лешӗ. — Тепӗр хут шыва кӗмесӗр ниҫта та тапранмастӑп.

Ҫынна ирӗксӗр ҫавӑтса кайма ҫук. Ҫакна ӑнланчӗ Лида. Пляжран пӗчченех тухса кайрӗ. Ҫула май вӑл лавккана кӗрсе мӗн кирлине йӑлтах туянчӗ. Йывӑр сумкине аран-аран йӑтрӗ вара. Кӑмӑл ҫӗкленӳллӗ. Юрӑ ӗнӗрле-ӗнӗрле сӗтел тирпейлерӗ. Тулли турилккесем хушшине эрех кӗленчи те вырнаҫрӗ. Юлашкинчен сайлӑ сӗтеле аякранах кайса пӑхрӗ. Куҫа илӗртмелӗх пур. Кӑмӑлне килӗшрӗ. Вара сасӑпах юрласа ячӗ:

Кӗмӗл ҫӗрӗ, ахах куҫ,
Ҫаврӑнать пӳрне майӑн...

Шӑнкӑрав сасси янӑрарӗ. Васнар килчӗ-мӗн.

— Мӗншӗн пӗччен эсӗ? — пӑшӑрханчӗ Лида. — Ыттисем ӑҫта?

— Ан кулян, — терӗ Васнар йӗри-тавра тишкерме ӗлкӗрсе. — Килеҫҫӗ. Кунашкал сӗтел хушшине лармасӑр пӑрӑнмӗҫ. Эпӗ сана пулӑшас ӗмӗтпе васкаса килтӗм. Куратӑп: санӑн пурте хатӗр. Эппин, эпӗ кая юлнӑ. Ан кӳрен, ӳлӗм ун пек тумӑп.

— И-и, кирлӗ мара ан пупле, — ихӗлтетсе илчӗ кил хуҫи. Унтан куҫӗсене вылятса сӑмахне тӑсрӗ: — Ан ман чи кирлине: эсӗ — евчӗ. Янаш мана питӗ килӗшрӗ. Вӑл ман упӑшка пулмалли каччӑ.

— Куҫу курать сан. Паллах, ку лешӗ, катӑк тута мар ӗнтӗ.

— Текех ан аса илтер-ха ун пирки. Пурнӑҫра кам йӑнӑшмасть? Манар, — ассӑн сывласа илчӗ Лида.

Вӑл ҫав пӑтӑрмах пулса иртнӗ кунсенче милицие те кӗрсе тухнӑ. Ҫук, ҫав ҫын вӗсен аллине лекмен. Анчах тавҫӑрчӗ: хайхи чикан чӑн-чӑн шулӗк, тыттарман тилӗ, паян кунта чыссӑр ӗҫ тӑвать, ыран урӑх хулара аллине ҫӑвать.

— Тусӑм, кала-ха: ман, евчӗн, малашне мӗн тумалла? Ӑнлантар.

— Янаш кăмăлне ман енне çавăр. Ĕç тухсан кĕрĕк туянса паратăп.

— Тăрăшăп, — терĕ Васнар. — Асту, панă сăмаха ан ман вара.

Хĕрсен нумай кĕтме тивмерĕ, каччисем килчĕç. Вĕсене чи чаплă хăна вырăнне хурса Лида ăшшăн, хĕвел пек çиçсе йышăнчĕ, хыпалансах сĕтел хушшине лартрĕ. Лешсем, Янашпа Витали, апата айлантарнă май шав пуплерĕç пĕр-пĕрне нихăçан курманла. Сăмах-юмахĕ — Атăл шывĕ пирки. Вĕсен калаçăвĕ хĕрсене пачах кăсăклантармасть. Çавна та тавçăраймаççĕ-ши айвансем? Юхтарасчĕ вĕсен юрату хăймине. Васнар евчĕ те йĕкĕтсен калаçăвне пĕр сăмах лартаймасть.

Сĕтел пушансан хайхискерсем тухса кайрĕç. Юратьха, тав тума манмарĕç. Чĕнсен каллех килесшĕн хăйсем.

Кил хуçипе евчĕ иккĕшех тăрса юлчĕç. Кăмăлĕсем пăсăк.

— Чăн-чăн сӳтĕксем, — хакларĕ кил хуçи йĕкĕтсене.

— Ан пăшăрхан, — йăпатать ăна Васнар. — Хăвăрт пулнă ĕçĕн çирĕплĕхĕ çук. Янаша алăран вĕçертместпĕр. Вăл ĕнтĕ тимĕр читлĕхри кайăк.

— Ăнăçлăх санран килет. Асту!

— Пĕлетĕп. Ан пăшăрхан. Кайăкĕ читлĕхре ĕнтĕ. Унтан вĕçерĕнеймест, — çапла шантарса хăнаран тухса кайрĕ Васнар.

Темиçе кун иртрĕ. Никам та ним шарламасть. Çапла хăналаннă хыççăн мĕншĕн Янашăн хĕр патне кĕрсе тухас мар? Çул усă. Ăнланмасть-ши çакна? Хăçанччен кĕтмелле? Алă усса ларма юрамасть. Кĕтекен кĕтĕк пулнă теççĕ. Ăна тапăнакан чиперккесем, паллах, йышлă. Ара каччи — ăмăрт кайăк. Турри ăна пурне те парнеленĕ. Сăн-питне пăхса ытармалла мар. Хура куç, кăпăшка çӳç, яштака пӳси. Çарта пулнă. Эппин, пиçсе çитнĕ арçын. Аслă пĕлӳллĕ. Инженер. Ĕç вырăнĕ тата! Чи кирли — хусах. Авланман.

Ăна упăшка тума пĕтĕм вăйне кӳлме шутларĕ Лида. Ара, хальхи вăхăтра кунашкал каччă тупма çăмăл мар. Шухăшланăçем сасартăк хăй чунне такам хытах чĕпĕтсе илнине туйрĕ. «Чим-ха, — терĕ вăл, — ара, капла Васнара çеç шанса пурăнни кĕсменсĕр кимĕ çинче ларнипе пĕрех-иç. Нихăçан та майлă çил варкăшне çĕнтерсе çыран

хёррине тухаймӑн. Хамӑн пӗтӗм вӑя хурса тӑрӑшмалла». Ҫирӗп шухӑшне ҫапла тӗвӗлерӗ вӑл. Мӗнех, ӗмӗтленни ӗмӗре кӗскетмест теҫҫӗ. Ӗҫе хӗрӳллӗн тытӑнчӗ. Ҫынран илтнӗ хыпара хупса усрама Лидӑн чӗринче уйрӑм ҫӳпҫе пур, уҫрӗ унӑн виткӗчне. Тытӑнчӗ иртнӗ самантсене пӗрчӗн-пӗрчӗн суйлама. Асаилӳсем хатӗр. Хӑнара чух Янаш ӑҫта пурӑннине, ӗҫленине каланӑччӗ. Телефон пирки те вӑл пӗлтерме манман. Акӑ пикенчӗ ӗҫе. Чи малтан шӑнкӑравларӗ. Ҫын ӗҫре ҫук. Хытах чирленӗ имӗш. Хыпар хӗре кулянтармарӗ, хӗпӗртеттерчӗ кӑна. Капла ун патне кайма сӑлтав пур, ара, халсӑрланнӑ этеме пулӑшмалла. Тытӑнчӗ апат-ҫимӗҫ хатӗрлеме. Тухса каяс умӗн тӗкӗр умне ятарласа ларчӗ питне писевсем сӗрсе сӑн кӗртме. Куҫ кӗски кӑтартакан сӑн-пит килӗшмерӗ ӑна. Лида хӑй ватӑлма пуҫланине курчӗ. Куҫ айӗсем кӑвакарнӑ, ҫип ҫапнӑн икӗ ҫинҫе йӗр ҫамка урлӑ карӑннӑ. Ватӑлма ирха. Ку — хуйхӑ-суйхӑ тӳснин паллисем. Тивнӗ-ҫке-ха ӑна тӳсме инкек капкӑнне! Халӗ аса илни пачах усӑсӑр. Упӑшка пулма тивӗҫ ҫын тупнӑ вӑл. Ыттисем ҫавӑтса кайиччен Янаш патне ҫитмелле.

Пуҫра хивре шухӑшсем явӑннӑ чух Лида ӗҫри сӗтел хушшинчеччӗ-ха. Юрать, чӑрмантаракансем тупӑнмарӗҫ. Атту пӗри те тепри чупа-чупа пыраканччӗ. Тем те кирлӗ. Пӗрне цех тӑкакӗ кӑсӑклантарать, тепри пӗр-пӗр ӗҫшӗн тупӑш мӗн чухлӗ пухӑннине пӗлесшӗн. Ӗҫе вӗҫлес вӑхӑта йӗп ҫинче ларнӑн аранах кӗтсе илчӗ. Пуринчен малтан тухса шурӗ вара. Чи малтан ресторана кӗрсе икӗ порци ӑшаланӑ какай, лавккара — эрех татах тем те пӗр тупанчӗ. Йывӑр сумкипе ваштах ҫитсе тӑчӗ кирлӗ алӑк умне. Шӑнкӑравларӗ. Сасӑ илтӗнчӗ:

— Кам унта?

— Эсӗ кӗтнӗ хӗр! — терӗ Лида.

— Тунисса, эсӗ-и?!

Ҫӑраҫҫи шӑнкӑртатрӗ те — алӑк яриех уҫӑлчӗ. Ун умне савӑнӑҫлӑ Янаш тухса тӑчӗ. Куҫӗсем — чӑн ҫӑлтӑр. Тӑчӗҫ йӑл кулӑра. Анчах ҫын самант улшӑнчӗ. Ҫил-тӑвӑл лӑскаса иртнӗ хыҫҫӑн ҫаралса юлнӑ юман евӗр курӑнать халсӑрланнӑ каччӑ.

— Э-э-э, ку эсӗ-мӗн, — терӗ Янаш кӑмӑлсӑррӑн.

— Эсӗ кӗтни пулмарӑм-и? — кӑмӑлсӑрланнӑ пек тути-

не пӗрчӗ Лида. — Ан пăшăрхансам, эпӗ ăна улăштарма пултаратăп.

— Йăнăшан. Ăна улăштарма пултаракан тӗнчере çуралман.

— У-у-у! Мӗнле пысăк хак пама пултаран. Маттур çын. Анчах йăнăшан!

Лида чӗнессе-тăвасса кӗтмерӗ, урата урлă каçрӗ те кил хуçине сирсех урай варринче ларакан çавра сӗтел умне пырса тăчӗ. Унтан сумкинчен апатлă савăтне хăпăл-хапăл кăларса лартрӗ. Хваттерте тутлă шăршă сарăлчӗ.

Янашăн, пӗр-ик кун йӗркеллӗ апат çименскерӗн, варӗ касăлнăччӗ-ха. Сӗлеки юхрӗ. Алăкне хупсан сӗтел умне пырса тăчӗ.

— Мӗне пӗлтерет ку? — ыйтам пек турӗ апат-çимӗçе курса.

— Чирлӗ çынна пăхни, — терӗ Лида тутине пăркаласа. — Сана апат пӗçерсе паракан çук пулӗ терӗм.

— Çывăхрах çук çав.

Çапла каларӗ Янаш. Вара хӗр айкашнине пăхса тăчӗ.

Хайхискер ӗмӗр кунта пурăннă пекех хăюллăн хăтланать. Илсе килнӗ апат-çимӗçне сумкинчен йăлт кăларса лартрӗ. Турилккине, кашăк-вилкăсене кухньăран кайса илчӗ. Юлашкинчен эрех кӗленчине те кăларчӗ.

— Тархасшăн, Янаш, апата чӗнетӗп, — терӗ хайхискер пуканне кирлӗ пек сиктерсе лартнă май.

Янаш кутăнланса тăрӗ-и?

Иккӗш те ӗнтӗ сӗтел хушшинче. Кашăк-вилка шăкăртатать, черккисем чăнклатаççӗ.

Хӗрсех кайрӗ хӗр. Тӗпчемесӗр тӳсеймерӗ.

— Кала-ха, Янаш, — терӗ хайхискер. Хăйӗн куçӗ çуталса илчӗ: — Кам вăл Тунисса, арăму-и?

— Авланаймарăм. Эпӗ — хусах. Тунисса — эпӗ питӗ юратнă хӗр.

— Вăл Шупашкартах пурăнать-и?

— Çӗршывăн хăш кӗтессинче утса çӳренине чухлаймастăп. Анчах вăл кирек хăш самантра та ман пата килсе кӗме пултарать. Тăп-тăр кăнтăрла-и, тӗп-тӗттӗм çур çӗрте-и — эпӗ ăна уçса кӗртетӗп.

Янаш хăй те пӗлмест юратнă хӗрӗ ăçта çӳренине. Ку качча́на тăлламалла пулнине тавçăрчӗ Лида. Пуçӗнче

хăюллă шухăшсем шăрçаланчĕç: паянах çĕр выртма юлмалла. Çумма выртнă хĕрарăма тĕксе яракан арçын тĕнчере çуках. Акă эсĕ качча кайнă, эсĕ — Янаш арăмĕ.

Шухăшран уйрăлнă Лида йăл кулчĕ те черккесене эрех тултарчĕ. Пĕрне Янаша тыттарчĕ, вара йăл-йăл кулса сăмах вĕçертрĕ:

— Сав мана, Янаш.

Ĕçрĕç. Лида васкасах вилка вĕçне çаклатнă хăяр татăкне Янаша хыптарчĕ. Çул уçăлчĕ вара. Черккесем татах пушанчĕç. Ик-виç кун лайăххăн апат та çименскерĕн пуçĕ анкă-минкĕленчĕ. Алне сулса илчĕ те тăнкки-танкки пускаласа утрĕ пĕчĕк пӳлĕмнелле. Кунта унăн кравачĕ. Паш-ш! кĕрсе выртрĕ вара.

Сĕтел хушшинчи хăна чылайччен ларĕ-и пĕччен. Ара, унăн тĕллевĕ пурнăçланса пырать хăй майĕпе. Хăюллăнах кĕчĕ пĕчĕк пӳлĕме, чĕнмен пулин те. Хăпăл-хапăл хывăнчĕ. Кĕрсе выртрĕ каччăпа юнашар. Ыткăнчĕ, чуптурĕ. Ăçтан ан вăрантăр ĕнтĕ арçыннăн туйăм тени.

Ирхине вăрансан хăюллăнах пĕлтерчĕ Лида чи кирлине: «Янаш, ĕнтĕ эпĕ санăн арăму». Лешĕ хирĕç ни апла, ни капла сăмах чĕнмерĕ. Тепĕр каç та килчĕ, çĕр выртрĕ. Кил хуçи хирĕçсе хăваламасть. Пуçăнчĕç арлă-арăмлă пурăнмах. Ĕç хыççăн Лида килне кĕрсе тухать те хыпаланса кунта килет.

Вăхăт малалла шăвать те шăвать. Янаш шарламасть ним те. Ăна качча илме шутлать-и вăл? Хăçан авланас тет-ха? Хĕрĕн пĕрлешес килет хăвăртрах. Кайрана хăварсан тем сиксе тухать-ха унта? Чăвашсем ахаль каламан ĕнтĕ: кая юлсан каю шăтать тесе. Чееленмелле. Йăпăлтатмалла тата, ара, ăшă сăмах хăй — çурхи кун.

Иртнĕ каçсенчи пекех, Лида каллех кĕрсе выртрĕ Янаш çумне. Ыталарĕ ăна тĕллев пусми çине чеен пусса. Лешĕ те тунката мар ĕнтĕ. Мĕнле арçын хĕрарăм çумĕнче ан хĕртĕр.

— Юратнă çыннăм, ман сан валли ырă хыпар пур. Итлес кăмăлу пур-и? — чăп чуптуса илчĕ ăна хайхи хĕрарăм.

— Юхтар эппин, — терĕ Ямаш пуçне çĕклесе.

Лида унăн ал лаппине ярса тытрĕ те хăйĕн варĕ çине хучĕ, вара каларĕ:

— Паллаш пепкӳпе.

Кĕтмен хыпар Янаша тăлласа лартрĕ, чĕлхи çухалчĕ, пĕр сăмах та вĕçертеймест. Вара кравать хĕррине тăрса

ларчĕ, пирус чĕртрĕ. Ёмет, ёмет. Çăвартан вĕрсе кăларнă тĕтĕм ункăланса мăччаналла вĕçет пулĕ, анчах куçа курăнмасть, пӳлĕмре тĕттĕм.

— Ма чĕнместĕн? Хăраса ӳкмерĕн пулĕ те? — кулам пек турĕ Лида. — Пурнăçăн йĕрки çапла вăл: ку — вырăн çинчи савăнăçăн тăсăмĕ. Манăн шутсăр амăшĕ пулас килет. Алăра санăн тăван пепкӳ. Кунтан ытла савăнăç çук тĕнчере.

Ку ĕнтĕ «ача çуратакăпах» тени пулчĕ.

Янаш çаплах ларчĕ те ларчĕ кравать хĕрринче пирус мăкăрлантарса. Куç умне Тунисса ишсе тухрĕ. Вăл тăрать пек каллех Айвазовскин «Хум» картинине пăхса. Шухăшран сасă уйăрчĕ ăна.

— Янаш, Янаш, тетĕп!

— Мĕн-ке? — Янаш вырăн çинче выртакан хĕрарăма тарăхрĕ. Анчах шăлне çыртрĕ.

— Сана ача кирлĕ мар-и-мĕн?

— Мĕншĕн кирлĕ ан пултăр? Эсĕ ăна çак самантрах çуратмастăн пулĕ?

— Паллах, çак самантрах мар. Унччен çырăнмалла, туй тумалла ваттисен йĕркипе.

Кĕтменччĕ Янаш пурнăç урапи çапла каялла кусасса. Мĕн тăвăн? Ача йыт çури мар, ăна çырмана кайса пăрахаймăн. Ярăнтăн пулсан çунине туртмаллах.

Çĕнĕ çын ваштах пуçĕнче чĕнтĕрлĕ кĕпер хыврĕ. Пурте йĕркеллĕ, пурте хăй вырăнĕнче. Вăл мăшăрлă пурăнăç пуçлама, килсе тăран çутă кунсене кĕтсе илсе ырăпа ăсатма хатĕр.

Лида пуç тулли ырă шухăш-ĕмĕтпе вырăн çинчен сиксе тăчĕ, тунката пек ларакан Янаша чуптурĕ. Хăй çине халат уртса ярсан хутпа кăранташ илчĕ те сĕтел хушшине вырнаçрĕ. Загса памалли заявленине Янаша çыртарĕха. Хăй туй иртterme иккĕшин ашшĕ-амăшне те чĕнсе йыхрав хатĕрлĕ.

— Янаш, килĕшетĕн пулĕ тетĕп: туйне тепĕр эрнерен çитекен шăмат кун тăватпăр, — пĕлтерчĕ «арăм». — Юлташсем сăмахпа чĕннипех килсе тулĕç. Паянхи çынсем ĕçес-çиес тесен çурхи шывпа тулнă Атăл урлă çуран каçĕç.

Пулас упăшка ним те хирĕçмест, тĕлĕнтерет кăна кунăçлăхĕпе.

* * *

Хайён тăван пепки патёнчен киле таврăнакан Янашăн Лидăпа арлă-арăмлă пулнă самантсем пуçне кĕчĕç.

## 8

Алăкран кĕрсенех Янаша пĕчĕк ывăлĕпе хĕр ачи сырăнчĕç:

— Атте!

— Атте!

Ашшĕн уринчен ыталарĕç.

— Чимĕр-ха, пепкемсем, хывăнам.

Тумтирне йăрхаха çакрĕ те кресло çине ларчĕ. Ĕнтĕ ачисене ирĕк: иккĕшĕ те арки çине вырнаçрĕç, пĕри те тепри чуптăвать ашшĕне.

— Мĕн калăн? — сиввĕн сăмах хушрĕ Лида. — Ăçта çӳрерĕн?

— Халĕ ĕнтĕ манăн хамăн тăван ывăлăм пур, — терĕ Янаш арăмне. — Унпа вăхăт ирттертĕм.

— Манран уйрăласшăн-и?

— Паллах. Икĕ арăмпа кам пурăнать? Ывăлăма тăван ашшĕпе амăшĕ кирлĕ.

— Ку ачасене ăçта хуран?

— Пăхса ӳстер. Сана ачасем кирлĕ.

— Мана приют ачисем кирлĕ мар.

— Приют ачисене тиркен пулсан хăвăн çуратмаллаччĕ. Суйрăн эсĕ мана, чике тăршшĕ лартрăн.

Чăн сăмахăн суйи çук теççĕ халăхра.

* * *

Пĕрле пурăнма тытăнсан, пĕр эрнесем иртсен, Лида чирлерĕ. Тĕрĕссипе вара йăшма сăлтавĕ те çук. Унăн черетлĕ уйăх хушши килнĕ.

— Манăн хырăм ӳкрĕ пулас, — пĕлтерчĕ вăл упăшкине. — Ытла йывăр çĕклерĕм çав.

— Хăçан, мĕн йатрăн?

— Хамăн хваттертен япаласем тултарнă пысăк чăматан йатса килни юрамарĕ ахăр.

Пĕр кана кулянчĕç. Вăхăт малалла шурĕ. Янаш арăмĕ ача çуратаймасть те çуратаймасть.

Ах çав упăшка тени, чипер юхан пурнăçа пĕвелеме ухута.

— Ача çуратса пар мана, — тытăнчĕ Янаш арăмне анратма.

— Эпĕ хам та ачашăн-ха, — тет мăшăрĕ.

Мĕншĕн ача юлмасть? Лида хăй те тĕлĕнет. Ара, вăл институтра вĕреннĕ чух арçынпа икĕ каç сывăрсах пĕтĕленнĕччĕ. Тен, айăп Янашра? Анчах мĕнле калас-ха ăна тухтăр патне кайса тĕрĕсленме? Чи малтан упăшкине ĕнентерес шутпа Лида хăй тухтăр патне кайрĕ.

— Хĕрĕм, сан ача пулмасть, — терĕ ватă тухтăр.

— Ĕненместĕп! — кӳренчĕ вăл. — Эпĕ сывă хĕрарăм, йывăр çын пулса курнă.

— Тĕрĕс. Анчах ачуна çуратман, аборт тунă!

— Пурнăç çапла килсе тухрĕ-çке-ха ун чух, — йĕрсе ячĕ Лида.

— Хăв сывлăхна хăв пăснă. Хырăм ӳкересси — ача вăййи мар.

— Кашни хĕрарăм аборт тăвать, пурпĕр çуратаççĕ.

— Кашни хĕрарăмăн организмĕ пĕр мар.

— Ун чухне... — ĕсĕклеме тытăнчĕ Лида.

Пуçланă сăмахне тăсма хăяймарĕ. Пуçне усса тухрĕ вара поликлиникăран. Çула май парка кĕчĕ. Çаралса юлма тытăннă йывăç айĕнчи сак çине ларчĕ. Шухăшсем сырăнчĕç те ăна темиçе çул каялла ыватрĕç.

...Вăл Хусанти химипе технологи институтĕнче вĕренетчĕ. Тăваттăмĕш курсра вĕсене практикăна салатрĕç. Кам ăçта. Лидăн вара Элиста хулине каймалла. Çитнĕ кунах ĕçри хĕрсем хваттер тупса пачĕç ăна. Хуçисем — упăшкипе арăмĕ, вăтăр урлă каçнăскерсем. Пуплеме юратаççĕ. Эрне ытла пурăнчĕ çапла. Сасартăк кил хуçи хĕрарăмĕ чирлесе ӳкет. Ăна пульницăна хураççĕ. Пĕрремĕш çĕрех унăн упăшки Лида çумне пырать те вырттать. Хĕр ăна хăй çумĕнчен тĕксе яма хăяймарĕ. Пулчĕ вара мĕн пуласси. Ун пек чух çапла каласçĕ: «...халăх куласси çеç юлчĕ». Аскăн кил хуçи чарăнмарĕ, ытти каçсенче те хĕр ытамне чăмрĕ. Практика вĕçленчĕ. Кил хуçин Лидăна: «Сана качча илетĕп, пăрахса ан кай», — тесе каласси асĕнче те çук. Тухса кайрĕ, пĕччен мар, иккĕн. Анчах кун пирки вăл хăй те тĕшмĕртмен. Каникул вăхăтĕнче намăс-симĕсрен хăтăлчĕ пысăк хулара, палла-

кан çын сахал çĕрте, эппин. Çак вăрттăнлăха Лида тимĕр арчара усрать. Анчах вăхăт çитрĕ, унăн хĕскĕчĕ тӳсмелле мар чуна хĕстерет. Калаççĕ-çке-ха: путакан çын улăм пĕрчине ярса тытса хăтăласшăн. Сĕмсĕрленчĕ вара...

— Пирĕн ача пулманшăн эпĕ айăплă мар, — куçне айккинелле тартрĕ вăл. — Кайса кил-ха тухтăр патне. Тĕрĕслеччĕр.

— Э-э, тупнă арçын пуçăмпа тухтăрсем тăрăх сĕтĕрĕнсе çӳреме, — алне сулчĕ Янаш. — Илер акă пепке ача çуртĕнчен.

Лида, çакна кĕтменскер, çăмăллăн сывласа ячĕ. Тути йăл сарăлчĕ савăннипе. Шутламанччĕ ĕç-пуç çапла хĕвел майĕн çаврăнасса, упăшкасăр юлмасть.

— Эпĕ, Янаш, санпа килĕшетĕп. Каяр ыранах ача çуртне, — сĕнӳ пачĕ арăмĕ. — Суйлăпăр хамăра килĕшекеннине.

* * *

Эрнесем иртрĕç. Шухăш улшăнмарĕ. Пĕр вырсарни кун вара Лидăпа Янаш пырса кĕчĕç ача çуртне. Ырă ĕмĕтпе килнĕскерсене кунта ĕçлекенсем тарават йышăнчĕç.

— Пăхăр, ав выляççĕ вĕсем, — сĕнчĕ тухтăр килнĕ çынсене. — Ывăлĕ те, хĕр ача та. Хăшĕ кирлĕ?

— Хĕр ача! — пат татса каларĕ Лида.

— Чим-ха, эпĕ ывăл ача кăмăллатăп. Пур-и-ха сирĕн ывăл? — тухтăр куçĕнчен пăхрĕ Янаш.

— Пур, пур! — терĕ лешĕ пуçне сĕлтсе.

Пĕр хут килнипех нихăçан та ĕç тухмасть. Пайтах çӳреме тиврĕ. Килĕшекенни тупăнмасть те тупăнмасть. Ĕмĕте пăрахăçлас патнех çитрĕç. Кăмăл-туйăмсене тавçăрнă тухтăр вĕсене çăлчĕ темелле.

— Пĕр харăс икĕ ача илеймĕр-и? — терĕ вăл Янаш куçĕнчен уйрăмах пăхса.

— Мĕнле апла? — ăнланаймарĕ вăл тӳрех.

— Пирĕн кунта пĕчĕккĕскерсем ывăлпа хĕр ача — йĕкĕрешсем пур. Ашшĕпе амăшĕ катастрофăра вилнĕ. Виçĕм кун çав ачасем виçĕ çул тултарчĕç.

— Вĕсемпе паллашма питĕ хавас.

— Чим-ха, Янаш, ачисем ытлашши пĕчĕккĕ мар-и? Ĕрес-

келлех ан килĕш, — асăрхаттарчĕ арăмĕ. — Икĕ ача пăхма йывăр пулĕ.

— Курар-ха малтан.

Тухтăр çухалчĕ. Кăшт тăрсан вăл пÿлĕме икĕ ача çавăтса кĕчĕ.

— Акă — эпир, — йăл-йăл кулкаларĕ тухтăр. — Паллашсамăрччĕ пирĕнпе.

Тухтăр çумĕнчи пепкесем йăлт-ялт сиккелеççĕ.

— Акă ку пирĕн кавалер — Энти. Пикине Ука тесе чĕнеççĕ.

— Ăçтан çапла хитре ятсем тупса панă? — тĕлĕнет Янаш. — Хăйсем те ытармалла мар чипер. Çитменнине — пĕр сăнлă. Каснă лартнă пуканесем.

Ачасен çăлтăр евĕр куçĕсем Янаша тÿрех Туниссана аса илтерчĕç: шăп юнтарнă пĕлĕт. Çÿçĕсем те унăнни пекех сарă пулĕ.

Ирĕк илсе Янаш ачасене канихвет пачĕ. Лешсем, ытти ачасем пекех, канихветшĕн каçсах кайрĕç.

Ĕнтĕ няня ачасене тепĕр пÿлĕме илсе кайрĕ.

— Ху-у-у! — ассăн сывласа илчĕ Янаш. — Эпĕ çак пепкесен ашшĕ пулатăп. Чунтан килĕштертĕм вĕсене. Сăмах паратăп: ÿстерсе çын тăвăп. Эсĕ, Лида, — вĕсен амăшĕ.

Арăмĕ пĕр сăмах та чĕнеймерĕ. Ăшĕнче хирĕçÿ вĕрет. Тÿрех икĕ ача пăх-ха. Йывăр.

— Пирĕн саламласси кăна юлать сире, — ал çупкаласа илчĕ тухтăр. — Ăнăçу, телей сунатăп!

Ачасене киле илсе таврăниччен вăхăт пайтах иртет. Ĕçĕ сахал мар. Кирлĕ документсем хатĕрлемелле. Чи кирли тата чи йывăрри — йĕкĕрешсене хăйсене хăнăхтармалла, ашшĕ-амăшĕ пулнине ĕнентермелле.

Акă Янашпа арăмĕ килте сĕтел хушшине ларчĕç. Тĕплĕн канашлама тиврĕ. Хушăран тавлашса та илчĕç, ара ĕçĕ ытла явăплă-çке-ха. Мĕн-мĕн тумаллине хут çине çырса хучĕç. Унсăрăн чи кирли манăça тăрса юлма пултарать. Питĕ аван. Аслă ĕç тепĕр куннех пуçланчĕ вара.

Хăйсем выртса тăракан пĕчĕк пÿлĕме пĕр япала хăвармиччен пушатрĕç. Вара тара тытнă малярсем килчĕç те мăччана çуса, сăрă ярса сенкерлетнĕ пурă шывĕпе шуратрĕç. Стенисене те урăх сăн кĕчĕ. Вĕсене ав часах хĕвел

куҫ хыврӗ — вӑй вылять: вӗсен тӗсӗ сарӑ, каснӑ лартнӑ хӗвел ҫавранӑш чечекӗ.

Калама ҫеҫ ҫӑмӑл, ӗҫ тени кунсене ирттерет те ирттерет. Ҫак хушӑра ача ҫуртне, йӗкӗрешсем патне, кайсах тӑчӗҫ.

Пӗррехинче ывӑл ҫав тери савӑнтарчӗ Янаша.

...Ҫав кун уявччӗ — Ҫимӗк. Халӑх канать. Пӗрисем Атӑл хӗрринче унӑн илемӗпе киленеҫҫӗ. Теприсем — вӑрманта, ҫут ҫанталӑк техӗмӗпе рехетленеҫҫӗ. Палановсем вара ирех ача ҫуртне ҫул тытрӗҫ. Шӑпӑрлансем вӗсене кӗтмен мар. Хаваслӑн чупса пырса ыталарӗҫ, чуптурӗҫ. Тупата, ӑҫтан ан пар ӗнтӗ вӗсене шоколад. Вара ирӗк илсе парка кайрӗҫ тӑваттӑшӗ те. Савӑнмалли нумай кунта. Вылярӗҫ-кулчӗҫ, каруҫҫел ярӑнчӗҫ. Энти уйрӑмах тиха ҫине утланма килӗштерчӗ.

Виҫеллӗ вӑхӑт ытла кӗске, часах каялла таврӑнма тиврӗ. Уйрӑлун юлашки самантӗнче пӗчӗк ывӑл Янаш мӑйӗнчен ҫатӑрласа тытрӗ те йӗме тытӑнчӗ:

— Манӑн та киле каяс килет! — тет.

— Маттур, ыран пырӑн, — тет ӑна Янаш пысӑк ҫынна каланӑн. — Тӳс кӑшт.

Ука йӗкӗреш хӑраххи тӑванне ыталать. Ан йӗрсем тет ӗнтӗ. Ача кӑмӑлӗ — ҫурхи хӗвел. Вӑл ӗнтӗ ахӑлтатсах кулать мар-и?

Ачасене няня шалти пӳлӗме илсе кайрӗ. Палановсем вара киле кайма тухрӗҫ. Утрӗҫ те утрӗҫ урам тӑрӑх шӑкӑлшӑкӑл пуплесе.

— Лида, эсӗ хамӑрӑн пулас ачасене шутсӑр килӗштернине туймастӑп, — сӑмах тапратрӗ Янаш. — Пӗчӗк ҫынсене юратмастӑн-и е урӑх сӑлтав пур?

— Шухӑшлаттарать хытах, — ӳсӗркелесе илчӗ арӑмӗ. — Ара ман ӗнсе ҫине пӗр харӑс икӗ ача ларать. Ытла йывӑр-ҫке.

— Эпӗ сан ҫумӑнтах-иҫ, — тет упӑшки. — Иксӗмӗре пӗрер ача. Ним хӑрамалли те ҫук. Хӑш-пӗрисем улт-ҫич ача ӳстереҫҫӗ. Эпир мӗнрен кая? Мана ывӑл ытла килӗшет. Эпӗ унран чӑн-чӑн ҫын тӑвӑп. Ука та лайӑх хӗр ача. Сана пулӑшакан сӑпайлӑ пике пулса ӳсӗ.

Ачасен пулас амӑшӗ хавассӑр. Ӑшӗ ҫунать. Калӑн: ун ӑш-чиккине савукӗпех вӗри кӑвар сапнӑ.

Янаш пурна киле тӗлӗнтермӗш кунсем ҫитессе шанать.

— Икĕ туйра ура хуҫса ташлăп! — тет йăл-йăл кулкаласа.

«Ан ман, шыв йăранĕ тĕрексĕр», — ют ачасенчен ыррине кĕтеймĕн тени пулчĕ ĕнтĕ ку Лидăн. Анчах уҫăмлăнах: «Кирлĕ мар мана ют ача», — теме хăрарĕ. Вăл тӳрех хăртса пăрахĕ: «Тăван ача — паха. Вăл ҫук. Пулмасть те. Эсĕ хĕсĕрри пĕтерет...»

Сăмах вара пине ҫитмесĕрех арăмăн ҫăварĕ ҫĕленчĕ ҫипсĕрех.

Татах канмалли кун ҫитрĕ. Килте Лида пĕчченех. Вăл апат хатĕрлет. Унччен те пулмасть, чӳрече витĕр курах кайрĕ: подъезд умне тиевлĕ грузовик килсе чарăнчĕ. Кузов ҫинчен Янаш сиксе анчĕ. Вăл пĕччен мар-мĕн, темле арҫынсемпе. Хайхискерсем тытăнчĕҫ ĕҫе. Хваттере икĕ пĕчĕк кравать, пĕр сĕтел, икĕ пукан, шкап илсе кĕрсе пĕчĕк пӳлĕме вырнаҫтарчĕҫ. Кил хуҫине пулăшнă этемсем часах тухса кайрĕҫ. Янаш вара ачасен пӳлĕмĕнче чылайччен тăрмашрĕ.

Пĕчĕк пӳлĕмĕн алăкĕ уҫăлчĕ те — Лида курăнчĕ.

— Хырăму та выҫмарĕ-и сан? — терĕ вăл. — Апат хатĕр. Атя ҫиме. Атту сивĕнет.

— Кĕр-ха, кĕр! — чĕнчĕ ăна Янаш, урам енчи стена ҫумне лартнă тăпăл-тăпăл пĕчĕк кравать патĕнче тăракансКер. Вăл стена ҫумне ҫакнă хашакланă ӳкерчĕке пӳрнипе тĕллесе ыйтрĕ: — Мĕн куран? Чаплă-и?

— Чапли качки... Картина... Пысăк куҫлă хĕр ача пукане тытса ларать. Ҫавă ҫеҫ.

— Хă, — сасă кăларчĕ Янаш кăмăлсăррăн. — Камăн ĕҫĕ? Ҫавна кала эсĕ мана.

— Ăҫтан пĕлĕп? Пĕр-пĕр ӳнерҫĕ ача ҫуртне пынă-тăр та ӳкернĕ пулĕ. Эсĕ ку Ука тесшĕн мар пулĕ те?

— Тупата, эсĕ ытла тĕттĕм ҫын, — тесе хучĕ. Вара вăл тытăнчĕ лекци вулама.

Ҫын кăмăлне хуҫма шутламарĕ арăмĕ, тăчĕ итлесе. Ăнланчĕ вара: ку картинăна вырăссен паллă ӳнерҫи Тропинин ӳкернĕ. Вăл XIX ĕмĕртех пурăннă.

Энти кроватьне лартнă стена ҫумĕнче те ӳкерчĕк — пăхса ытармалла мар шурă шупăрлă хурăн ращи. Ку Левитан ĕҫĕ.

Янаш ывăл ачине илемлĕхе хаклакан ырă кăмăллă ҫын

туса ўстересшĕн. Астăвать-ха вăл пĕр тискер ĕçе курнине. Пурччĕ паркра çамрăк хурăнсен аллеи. Пăхса ытармалла мар илемлĕччĕ. Шăкăр-р ларатчĕç. Вĕсен хушшинче кăкăр уççăн сывларĕ. Ешĕлскерсене хаяр çын ăмсаннă. Ретри темиçе хурăна пуртăпа лачлаттарса каснă. Мĕнле алли çĕкленнĕ-ши? Ешĕл çулçăллă турачĕсене илсе кайнă. Путех, милĕк туса мунчара çапăнса киленчĕ-тĕр. Киленчех-ши вара? Ĕненме хĕн. Хурăн тункатисем ăна хăйсен çумĕпе иртнĕ чух кăмăлне хуçнах-тăр.

* * *

Высарни кун. Ача çурчĕн хапхинчен тухнă çăмăл машина хула урамĕ тăрăх йăрлатать. Машинăра хаклăран та хаклă пассажирсем. Вĕсем ашшĕпе амăшĕ арки çинче ларса пыракан икĕ пепке тата ача çуртĕнчи пĕчĕк этемсен хаклă çынни — тухтăр.

Иртсе юлакансем — паллакансем те, халиччен курманнисем те — пурте саламлаççĕ. Алă сулмаççĕ пулин, пурпĕрех кăмăллăн пăхса ăсатаççĕ иртсе каян машинăри çынсене. Клумбăсенче чĕлтĕртетекен шурă, сарă, хĕрлĕ, кĕрен, сенкер, чакăр чечексем юлаççĕ ав тутлă шăршă пĕрĕхсе. Ку та вĕсен саламĕ, çĕнĕ пурнăç пуçлакансене телей сунни.

Çитес çĕре паçăрах çитмеллеччĕ ĕнтĕ. Ара, паян пысăк уяв-çке-ха, ĕмĕр асра юлмалли кун. Ун пек чух, паллах, пĕчĕк паттăрсен ярăнмалла. Пăхса çитермелле мар иртсе юлан çўллĕ те капмар çуртсене, урамри ешĕл çулçăллă йывăççене, çул çинчи машинăсене, тротуар тăрăх утакан папак çĕкленĕ хĕрарăмсене... Атăл хĕррине мĕнле çитмĕнха тата? Илĕртет-çке вăл кирек кама та. Тулли шывĕ çырана лăпкать. Явкаланса юхнăран çивĕчĕ ытла та вăрăм теес килет.

Çисен-çисен пыл та йўçĕ, йĕпхĕртет теççĕ. Çитсе чарăнас эппин кирлĕ çĕре. Акă тухрĕç машинăран пĕр çўллĕ те хитре çурт умĕнче. Çакăнти пĕр хваттерте пурăнмалла ĕнтĕ, çитĕнсе ачаран пысăк çын пулмалла. Кирлĕ хутра лифтран тухрĕç. Шăнкăрав пама тивмерĕ. Шăв-шав илтнĕ хăнасем (Янаш уява ашшĕпе амăшне чĕнсе илнĕ) хваттер алăкне уçрĕç.

— Ырă сунса кĕтетпĕр! Кĕрĕр, кĕрĕр, — саламларĕç вĕсем.

Ни Энти, ни Ука малалла иртмерĕç. Тăраççĕ урисем тымар янăн.

— Ачасем, эсир килте, — терĕ Янаш. — Чупăр, выльăр.

Вара вăл пукане лартнă тетте машинăна тĕксе урай тăрăх кустарса ячĕ.

Ачасем самант вăранчĕç тейĕн. Тетте хыççăн чупрĕç шуйхашса.

Нумай та вăхăт иртмерĕ, Янаш амăшĕ хатĕрленĕ сăй сĕтелĕ хушшине ларчĕç.

Çак самантра пуçланчĕ Палановсен ача-пăчаллă пурнăçĕ.

Янаш амăшĕ Натали самай вăхăт хăналанма килĕшни çинчен пĕлтерчĕ. Куншăн савăнчĕç кил хуçисем, ара, ачисене те питĕ кирлĕ çын — асанне. Çапла вара пĕтĕм çемье пĕр эрне хушши килте ирттерчĕ, пĕр-пĕрне хăнăхмалла-çке-ха. Тепĕр эрне Янашпа арăмĕ ылмашса ĕçе çӳрерĕç. Ĕнтĕ асламăшĕн черет.

— Анне, вăй çитерейĕн-и ачасене астума, — пăшăрханать Янаш, — вĕсем лара-тăра пĕлмен халăх.

— Эпĕ ача ӳстермен çын мар та-ха. Темле, — текелет ватти. — Кăкăр ачисем мар-çке вĕсем, чупакан, юмахлакан шăпăрлансем. Мĕн каланине ăнланаççĕ.

Натали малтанах ывăлĕ патĕнче пĕр уйăх хăналанма сăмах пачĕ. Куншăн ытларах кинĕ хĕпĕртерĕ. Ăна çăмăлрах пулать ачасемпе хутшăнма. Тепĕр тесен, ача-пăча тени асаннесемпе варлă.

Пĕр эрне хушши Янашпа арăмĕ ĕçе çӳремерĕç. Пĕчĕккисен хăнăхмалла ашшĕ-амăшне, кунсăр пуçне — çĕнĕ çĕрте пурăнма та. Каярахпа, çемье чăмăртансан, кашни хăйĕн вырăнне тупĕ: пĕчĕккисем садике чупĕç, аслисем — ĕçе.

Тĕрĕсех, сиссе те юлмарĕç — вăхăт хăвăрт иртрĕ. Янаш та, арăмĕ те ĕçе кайрĕç, ачасемпе асламăшĕ юлчĕ. Ватти чухлать: вĕлтĕрккесене кăсăклă вăйă тупса памалла, унсăрăн тытăнĕç йӳнсĕрленме. Акă вăл диван çине хĕрлĕ тутăр, шăрçа ярăмĕ, пукане тата тетте машина, мăлатук хучĕ. Выляма кам мĕн илет? Сăнать ватти. Чи малтан диван патне Ука чупса пычĕ. Чăр-р пăхрĕ япаласем çине. Унччен те пулмасть, тутăрпа шăрçа ярăмне илчĕ те тӳрех тĕкĕр умне пырса тăчĕ. Умне шăрçа çакасшăн чылайччен

аппаланчĕ, çук, май килтерейместь. Тутăрне те çыхаймасть-ха. Муталантăрах. Энтие Ука аллинчи япаласем нимĕн чухлĕ те кăсăклантармаççĕ. Вăл, тупата, арçын пулсах çуралнă, унсăрăн мăлатукпа машинăна алла илсе пӳлĕмĕн пĕр кĕтессине лармĕччĕ. Мăлатукпа шак-шак! шаккать те машина урапине юсать. Йăл-л кулать Натали, авăк чĕнмесĕр тăрать сăнаса. Халăхра ахаль каламаççĕ çав: арçын аллинчен паллă, пике — питĕнчен. Икĕ ача — икĕ тĕслĕ. Ку ĕнтĕ çут çанталăк ĕçĕ — чуста унасси ашшĕ-амăшĕн ĕçĕ.

Янаш пĕчĕк чухнехи асне килчĕ Наталие. Пĕлет-ши вăл хăйне ача çуртĕнчен илсе ӳстернине? Паян кунччен те кун пирки калаçу пулман.

— Асанне, асанне, — чĕнет Наталие Ука, — ман пуканене тутăр çыхтар-ха.

— Халех. Кӳр пуканипе тутăрне.

Ача кăмăлне хуçма юрамасть, ватти кăна лайăх чухлать мар-и.

Ĕнтĕ килте ларса çитет. Асламăшĕ мăнукĕсене тирпейлесе урама илсе тухать. Унăн икĕ енче те ача. Парк еннелле уттарать пĕчĕккисемпе. Унта сывлăш уçă, каруççел илĕртет. Ярăнĕçин. Вĕсен кăмăлĕсене хуçмĕ.

Ачасем вылянине ытарайми пăхакан Наталин пуçне шухăшсем тăвăнса кĕреççĕ. Вăл Янаша хĕрхенет. Çавăнтах арăмĕ ача çуратайманни асне килчĕ. Хăй те çуратаймарĕ-çке-ха. Çук, ун пек-кун пек аташса пурăннишĕн мар, ăшра ача пулмалли тĕвĕсем çитĕнсе çитеймен терĕç тухтăрсем. Янаша питĕ юратса ӳстернĕ вăл. Унтан ытла хăй çуратнине мĕнле юратма пулать-ши вара? Çав туйăма пĕлме мар, чухлаймасть те. Янашпа арăмĕ те пурна киле çак усрава илнĕ ачасен чăн-чăн ашшĕ-амăшĕ пулĕç, вĕсемшĕн хыпса çунĕç, сиввĕн пăхма хăяймĕç. Пĕчĕккĕлех пурăнăç вĕсене çапла çапса хуçнăшăн ачасем айăплă мар. Çак килте вĕсен телей тупмалла. Ачасен ырă пуласлăхне Натали шанать. Янаш ырă кăмăллă çын. Кинĕпе те йĕкĕрешсем пирки пайтах калаçрĕ вăл.

Шăкăл-шăкăл пупленĕ кунсем иртрĕç те иртрĕç. Ĕнтĕ ырă та хаваслă асанне килне каять. Автобус тапрансан та чылайччен ал сулчĕç ашшĕ-амăшĕпе пĕрле Энтипе Ука. Вĕсем пысăк ĕмĕтпе юлчĕç: асанне патне хăнана каясси.

Ёмӗт тени темшӗн-ҫке час пурнӑҫланмасть. Ҫулталӑк самант иртсе кайрӗ. Ку путех пӗр-пӗрне хӑнӑхмалли тапхӑр пулчӗ ахӑр. Энтипе Ука уйрӑмах ашшӗне юратрӗҫ. Киле таврӑнсан Янаш диван ҫине лартӑр ҫеҫ, вӗсем йывӑҫ ҫине хӑпарнӑн кӗрмешеҫҫӗ. Пӗри хулпуҫҫи ҫинче, тепри — арки ҫинче.

* * *

Пӗр ҫуллахи кун Лида ачасене пухса асламӑшӗ патне хӑнана тухса кайрӗ.

Шӑп пӗччен юлнӑ ҫак кун ӗнтӗ Янашӑн ӑш хыптармӑшӗ пуҫланчӗ. Вӑйӑран вӑкӑр тухрӗ темелле пулӗ. Вӑл уяв кунне тӗп хулана Шупашкара кайрӗ те Атӑл хӗрринче карлӑк ҫумне тайӑннӑ юнтарнӑ пӗлӗт куҫлӑ Туниссана курчӗ пулӗ терӗ. Хыпаланса унпа юнашар пырса тӑчӗ вӑл. Анчах хупларӗ суя ёмӗт. Ку пачах урӑх пике. Сӑмах епле хушмӑн. Паллашрӗҫ. Ячӗ унӑн — Шерпике.

Пуҫран тухма пӗлмен Тунисса пирки каласа парас килни, ахӑр, чиперккепе утса ҫӳреме хӗтӗртрӗ. Калаҫу ҫыхӑнса пычӗ. Килте пӗччен кичемрен-ши, тепӗр кун каллех тӗл пулма ыйтрӗ Янаш. Хӗр килӗшрӗ темшӗн. Пӗр-пӗрин патне туртӑну сӳнес вырӑнне вӑйланнӑҫемӗн вӑйланса пычӗ. Ӗнтӗ Янашӑн ҫемйи те хӑнаран таврӑннӑ тахҫанах. Анчах вӑл такӑрлатнӑ сукмакран пӑрӑнаймарӗ. Шерпикепе иккӗшӗ пӗр-пӗрне чунтан юратрӗҫ. Юратуран ача ҫуралчӗ — ывӑл Эливан, чӗнеҫҫӗ Ива.

## 9

Уйра ылтӑн шывӗпе пӗрхӗннӗ тыр-пул пиҫсе саралнӑ. Куҫа курӑнман ҫут ҫанталӑк хуҫи вӑрӑм шалчине тӑсса ячӗ ахӑртнех. Ҫапла туса вӑл ҫу кунӗсене ӗрӗхме чарчӗ, кӗре ҫул уҫса пачӗ пулӗ. Хресчен ҫав самантра Питрав ҫитрӗ тесе паллӑ тӑвать, така пусать. Ара, малта йывӑр ӗҫ — тырпул пухса кӗртмелле, эппин, какай ҫисе вӑй пухмалла.

Питрав кунне чысласа пасарлӑ ялсенче, хуласенче те ярмарка уҫӑлать. Капӑр сараппанлӑ каруҫҫел музыка ҫемми майӑн хӑй тавра ҫаврӑнать. Тетте ларкӑчӗсем ҫине вырнаҫнӑ ватти-вӗтти катаччи ярӑнать.

Янаш арӑмӗ Лида унӑн ашшӗ-амӑшӗ Питрав кунне

мӗнле ирттернине аса илчӗ те ҫӗр хута тултармӑш пӗҫерчӗ. Тутлӑ пулчӗ-ши амӑшӗнни пекех? Тутанса пӑхма кӑмӑл туртмарӗ. Ҫӑвар тути те ҫук хыпса ҫуннипе. Икӗ тултармӑшне те пысӑк тирӗке хучӗ. Ҫийӗҫ-ши? Ачисем хаваспах чӑмлаҫ-ха. Упӑшки вара тепле? Ӗҫ пӗтнӗ хыҫҫӑн Лида сӗтел ҫине чавсаланса ларчӗ. Ҫӗр каҫа та чӗптӗм ыйхӑ тӑвайманскер куҫне хупрӗ. Шухӑшсем ҫакна ҫеҫ кӗтнӗ тейӗн. Юлашки вӑхӑтра Янаш килте пачах ҫывӑрмасть. Айккинче тӑван ача ҫуралнӑ унӑн. Энтипе Укана ҫывӑрттарма вырттарать те васкасах тухса шӑвӑнать. Ирхине, вӗсем вӑраниччен, таврӑнать. Мӗн кӗтет малашне ҫемьене? Паллах — аркану.

Янаш приютран илнӗ ачасене пӑрахса хӑварать-ши вара? Нивушлӗ пӗчӗкскерсене хӗрхенмӗ? Вӗсем Янаша ашшӗ выраннех хураҫҫӗ, юратаҫҫӗ. Лида чунтан сехӗрленет Янаш ачисене унпа пӑрахса хӑварасран. Пӑхса ӳстерме хал ҫитерейменнине чухлать вӑл.

— Мӗн нушипе ман вӗсемпе асапланас? — сасӑпах мӑкӑртатать Лида. Ҫийӗнчех хӑйне тӳрре кӑларать. — Эпӗ вӗсене ҫуратман, ку урапа ҫинчен анатӑп, ара, ватӑлсах ларман. Качча та кайӑп. Тен, тухтӑр йӑнӑшнӑ. Пурнӑҫра пулать ун пекки те. Ҫуратӑп та парӑп ача. Ахаль каламан тӗнчере тӗрлӗрен кӗнчеле тесе.

Янаш ӑна сӑлтав тупса ятламасть, килтен кӑларса ярассипе те хӑратмасть. Хӑш чух усрав ачасене эсӗ пӑхса ӳстер текелет ҫеҫ. Анчах ҫав сӑмахсене чунтан каламанни сисӗнет. Пӗрле пуӑннӑ пурнӑҫӑн вӗҫӗ мӗнле килсе тухассине ҫапах та чухлаймасть Лида. Тен, Янаш тӑван ачине амӑшӗпе пӗрле хӑй патне пурӑнма илсе килет? Мӑшкӑл. Вара ирӗксӗрех унӑн тухса кайма тивет. Ӑҫта? Эй, ҫырлах! Атӑ тӑхӑннӑ шухӑшсем пуҫра урай хӑми авӑнасла тӑпӑртатаҫҫӗ, шухӑшпа хӳме умне пырса тухрӗ Лида. Пӑхрӗ хушӑкран. Курах кайрӗ пӗр ҫынна. Палланӑскер. Анчах камччӗ-ха ку этем? Э-э-э, ара, лешӗ, практика вӑхӑтӗнче пурӑннӑ хваттер хуҫи: чирленӗ арӑмне пульницӑна ӑсатнӑ кунах ун ҫумне, вырӑн ҫине, кӗрсе выртнӑ арҫын. Ҫав! Аса илчӗ те ҫав саманта — ҫамка ҫине тар тапса тухрӗ, ытла айван пулнӑшӑн хӑйне ҫилленчӗ. «Ара, мӗншӗн ӑна ҫума выртма ирӗк панӑ? Мӗншӗн ӑна йытӑлла ҫыртса ҫурман?» Ҫав самант тепӗр хут ҫаврӑнса килес

тĕк кăтартĕччĕ ăна, йĕксĕке, ашкăрса ӳсекен вĕлтрен çумĕнчи хурăн çырлине мĕнле татмаллине. Халĕ чавса сывăх та, çыртаймăн. Пиçен пек йĕплĕ шухăшсем канăç памаççĕ, йĕпписем шав чуна йĕплеççĕ, таçта хăвалаççĕ. «Мĕнле таçта?» — шухăш юххине пĕвелерĕ асаилӳ. Тӳрех çав телее çурса ывăтнă çын умне пырса тăрас. Вăл парăмлă мана. Укçа ыйтмастăп, патăр мана пурнăçăн чӳречесемлĕ керменне!»

Юлашки вăхăтра çак шухăш амаланчĕ те амаланчĕ. Лида чунĕнче ăш-чик тулса çитнĕ. Сĕвем çиппе татрĕ. Паян вăл килтен тухса каять. Кирлĕ япаласене чăматана ĕнерех чикрĕ. Вăл тĕттĕм чăланта. Çыру та çырнă упăшки патне: «Янаш, эпĕ санпа тăван ывăлу хушшинче тĕпсĕр çырма пулса выртасшăн мар. Чунăм тĕпĕпех кĕлленсе лариччен каям-ха хама пӳрнĕ çулпа. Мана ан кĕт, ан шыра. Сана юратакан Лида».

Çырăва кухньäри сĕтел çине хучĕ. Янаш кунта кĕрсен курать ăна.

Çул тумĕ — çире. Юлашкинчен ачасен пӳлĕмне йăпшăнса кĕчĕ. Пĕчĕккисем тутлă ыйхăра. Вĕсем лăпкăн сывлаççĕ. Вăратасран пăшăрханнипе чуптумарĕ нихăшне те, ăшĕнче кăна пăшăлтатрĕ: «Сывă пулăр! Мана ан ятлăр. Пурнăç çапла килсе тухнăшăн эпĕ айăплă мар. Ӳссен хăвăрах ăнланăр-ха. Сире телей сунатăп». Ун куççуль юхса анчĕ пит çăмарти тăрăх. Ӳлесе ярасран хăранипе Лида ачасен пӳлĕмĕнчен васкаса тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ ăна ним те тытса тăмасть.

Кăкăрта тăвăр. Пăчă. Сывлăш çитмест сывлама. Хăвăртрах урама тухмалла. Йĕри-тавра пăхрĕ Лида. Чунĕ ăшă килпе сывпуллашать. Кайран, тепĕр хут çаврăнса çитне çĕре, тен, ларĕ пӳлĕм варринче пăр капанĕ сивĕ хум сирпĕтсе.

Васкамалла. Чăлантан чăматанне кĕрсе илчĕ, йăрххахран плащне вĕçертсе хулпуççи урлă уртрĕ, вара хваттертен тухса алăка питĕрчĕ, уççине сумкине чикрĕ. Картлашкасем тăрăх аялалла чупсах анчĕ вăл. Тав Турра, никам та тĕл пулмарĕ, алăк уçса ыйту паракан та тупăнмарĕ. Урам та пушах. Пурте çывăраççĕ мар-и. Ку илĕмтилĕм вăхăтра çынна темле нуша çеç хуса тухать пулĕ çав. Лидăн пытанмалла. Ун Янаш киле килнине курмал-

ла-çке. Сасартăк темле сăлтава пула вăл киле таврăнмасть пулсан? Капла ачасем вăранĕç те, килте никам çуккине кура тытăнĕç йĕме. Вĕсемпе тем пулас, тем килес. Инкек тени куçа курăнса килмест теççĕ. Ирĕксĕрех киле таврăнма тивет. Халĕ пытанас шухăшпа вăл йĕри-тавра пăхса илчĕ: карта çумĕнче йĕкĕр хурăн ӳсет. Ун хыçне пытанма меллĕ. Вăштах кĕрсе тăчĕ вăл суйланă вырăна. Кĕтнĕ чух вăхăт — чăн-чăн тимĕр шапа. Куçĕ те ывăнчĕ унăн тилмĕрсе пăхнипе. Çаплах курăнмасть кĕтнĕ çын. Ĕнтĕ акă çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ тĕлте хĕвел куçне йăлтăр-р уçрĕ. Унăн çутă хĕлхемĕсем çĕр питне çутатса тӳпенелле сирпĕнчĕç. Çутă кăлтăрмач хăй картлашкипе васкасах хăпарать. Унччен те пулмасть, Лида курах кайрĕ: çурт хыçĕнче, сукмак çинче, Янаш курăнчĕ. Килет. Васкать пулас, хăвăрт утать ав. Сасартăк чарăнса тăрса йĕри-тавра тимлĕн пăхса çаврăнас пулсан, йĕкĕр хурăн хыçĕнче арăмĕ тăнине курма та пултаратчĕ-и тен. Анчах ун пуçĕнче урăх шухăш амаланнă çав: киле çитес те çемье вăраниччен вырăн çине выртма ĕлкĕрес. Кăшт çывăрса илсен те аван. Янаш хăй пурăнакан крыльца патне çывхăрчĕ, вара часах алăкран кĕрсе куçран çухалчĕ.

Лида ĕнтĕ пытаннă çĕртен тухрĕ. Унăн кăмăлĕ хуçăк. Чунра иккĕленӳ хĕлхемĕ чĕрĕлчĕ. Янаш хыççăн киле чупса кĕрес килчĕ унăн. Анчах та тепĕр шухăшĕ çийĕнчех чарчĕ ăна. Тытнă тĕллев вĕçне тухмаллах. Çак шухăш ăна хăй пурăннă çурт умĕн авкаланса иртекен çул çине илсе тухрĕ.

Утать хĕрарăм малалла. Акă çурăмне çил çупăрларĕ лăпкаса. Хайхискер умне иртрĕ шăхăрса. Унччен те пулмасть, пĕтĕрĕнчĕ, пĕтĕрĕнчĕ те пулчĕ тăчĕ — юпа! Çут çанталăк мыскари темерĕн çав. Мĕне пĕлтерчĕ ку? Ырра е шырлăха? Анчах чухлать-ха вăл: каялла çул çук, умри — тĕтреллĕ. Ăна çил кăларса сирмелле. Ку ĕнтĕ хăйĕнчен килет. Çакна ăнланать Лида.

* * *

Чи малтан пĕчĕккисем вăранчĕç. Чупса тухрĕç вĕсем пӳлĕмрен. Курчĕç: ашшĕ çывăрать. Савăнчĕç.

— Атя атте çумне вăрттăн кĕрсе выртар, — кăчăк туртрĕ Энти Укана.

— Юрать. Анчах эсӗ ун урлӑ каҫса кай. Вырт хыҫала.

Хайхискерсем тытӑнчӗҫ ӗҫе. Янаш вӗсем пӳлӗмрен тухсанах вӑранчӗ-ха, анчах ҫывранҫи пулса мӑшлатса выртать.

Лешсем ашшӗ ҫумне пӗри пӗр айккине, тепри тепӗр айккине йӑпшӑнчӗҫ. Ыталаҫҫӗ, ҫупӑрлаҫҫӗ. Тих-тих! кулаҫҫӗ хайсем.

Унччен те пулмасть ашшӗ йӑшӑлтатса илет те калать:

— Камсем мана ҫывӑрма чӑрмантараҫҫӗ? Халех тытатӑп!

Шӑпӑрлансем ихӗлтетсе утиял ӑшне чӑмрӗҫ. Унтан пӗри те тепри ашшӗ ҫине утланчӗҫ, но-но! теҫҫӗ. Ашшӗ тӑрасшӑн пек тӑвать, лешсем ирӗк памаҫҫӗ-ха. Пуҫланчӗ вара савӑнӑҫлӑ тӗркӗшӳ. Янаш пӗрне, теприне кӑтӑклать, хӑй ҫинчен сирет. Ачасем каллех ун ҫине хӑпарма пикенеҫҫӗ. Вӗсене айкашма никам чаракан ҫук.

Юлашкинчен Янаш яш тӑрса ларчӗ.

— Эй, вӗт халӑх! Вырӑн ҫинчен марш!

— Тата пӑртак выляр-ха, — тет Энти.

— Эпӗ ӑҫта? — кӑшкӑрать утиялпа витӗнме ӗлкӗрнӗ Ука.

— Ҫитет, ҫитет, юлташсем, ашкӑнма! Тӑма вӑхӑт.

Ачасем ашшӗн сассинчен туйрӗҫ: вӑйӑ вӗҫленчӗ.

— Вырӑнӑрсене майлана-и? — ыйтать ашшӗ.

— Ӗлкӗреймерӗмӗр-ха. Эпир — халех! — кравать ҫинчен анса хӑйсен пӳлӗмне чӑмрӗҫ.

Ашшӗ те хӑйӗн вырӑнне тирпейлет. Унтан хайхисене чӗнет:

— Шӗшпӗлтӗксем, атьӑр ҫӑвӑнма!

Ҫак вӑхӑтра виҫҫӗшӗ те амӑшӗ ҫуккине асӑрхарӗҫ.

— Ӑҫта вара анне? — йӗри-тавра пӑхса илчӗ Ука.

— Вӑл диван ҫинче паппа тӑваканччӗ, — тет Энти, — халӗ унта ҫитарӗ те ҫук.

Ачасем Лидӑшӑн ытлашши хыпса ҫунмаҫҫӗ, вӗсемшӗн ашшӗ пултӑр ҫумра.

Янаш кухньӑна кӗчӗ. Сӗтел ҫинче хуҫлатнӑ хут листи выртать. Вуларӗ арӑмӗн ҫырӑвне. Вӑл ӑҫта кайнине пӗлеймерӗ. Ырлӑха-и, шырлӑха-и? Чухлаймарӗ. Ҫакна ҫеҫ каларӗ пӑшӑлтатса халиччен хи сӑмахне: «...хӑв айӑплӑ.

Параймарӑн мана ача ҫуратса. Эсӗ пӗлен: халӗ ман хамӑн тӑван пепкем пур. Ӑна айккинче тӑлӑх ӳстерме манӑн ирӗк ҫук».

Кухньӑран тухрӗ те ачисене пӗлтерчӗ:

— Аннӗр ялa кайнӑ. Эпир унсӑрӑн улах тӑвӑпӑр.

— Улах! Ур-ра! — хӑлаҫланчӗҫ шӑпӑрлансем.

Ӗнтӗ ҫемье сӗтел хушшине ирхи апата ларчӗ. Янаш ҫӑмарта хӑпартни туса ҫитересшӗнччӗ. Ӑнсӑртран тенӗн тирӗк виткӗчне уҫрӗ те унта тултармӑш курчӗ. Айлантарчӗҫ вара ӑна виҫҫӗшӗ те питӗ кӑмӑлласа. Юлашкинчен пӗрер стакан вӗретнӗ сӗт ӗҫрӗҫ. Хырӑм тӑранчӗ те.

Паян шӑмат кун. Ыран та канаҫҫӗ пысӑккисем.

— Атте, парка каятпӑр-и? — тет Ука.

— Атьӑр Атӑл хӗррине, — чӗнет Энти.

— Тусӑмсем, сире паян пӗчӗк шӑллӑрпа паллаштарасшӑн, — терӗ Янаш. — Вӑл сире питӗ юратать, хӑй патне пырасса кӗтет.

— Вӑл мӗн ятлӑ? — чӑр-р пӑхрӗ Ука ашшӗ куҫӗнчен.

— Ива, — терӗ Янаш мӑнаҫлӑн.

— Тӳпелешекенскер мар-и вӑл? — пӑшӑрханчӗ ҫийӗнчех Энти.

— Мӗнле калас? Хӑйне тӑрмалакана маххӑ памӗ тетӗп. Ал чӑмӑрӗсем унӑн ай-яй-яй! Ан пӑшӑрханӑр, вӑл тӳлек ача, вӑрҫаканскер мар.

Йӗкӗрешсен ҫӑварӗ хупӑнмасть. Судья евӗр тӗпчеҫҫӗ кӑна. Ӗнтӗ Ива ӑҫта пурӑннине те пӗлчӗҫ. Вара кӗшӗлтетсе часах Ива патне кайма тухрӗҫ. Хӗвел самай хӑпарнӑ. Урамра халӑх хӗвӗшет. Янаш икӗ ачине ҫавӑтса машинӑсем чарӑнакан ҫӗрелле утрӗ. Троллейбуса кӗрсен ачасем ашшӗне манчӗҫ тейӗн, вӗсем чӳрече патне ыткӑнчӗҫ, ара, унта, тулта ӗнтӗ, тем те вӗлт-вӗлт иртсе юлать-ҫке-ха. Сӑнама шутсӑрах кӑсӑклӑ.

Шерпике вӗсене ӑшшӑн йышӑнчӗ. Виҫҫӗшне те ытала-ытала чуптурӗ, тӗпелелле иртсерсе хывӑнтарчӗ. Малтан йӗкӗрешсем хӑйсене хӑюсӑртараххӑн тыткаларӗҫ.

— Энти, Ука, килӗр-ха сӑпка умне, — чӗнчӗ вӗсене Шерпике.

Ива ачасене курасшӑн пек куҫне уҫрӗ.

— Ҫакӑ-и вӑл — Ива? — ыйтрӗ Энти.

— Ийя.

— Ай-уй, ытла пӗчӗккӗ-ҫке вӑл. Чупаймасть те-и?

— Часах тытӑнать, — тет Шерпике.

— Чим-ха, — Энти куҫне чарса пӑрахрӗ, — вӑл манпа ҫапӑҫасшӑн тем? Ух, аллине мӗнле чӑмӑртанӑ!

— Ахаль ҫеҫ хӑратать вӑл сана, — кулкалать ашшӗ.

Ука сӑпка умӗнче тапӑртатса тӑрать. Вӑл Ивана алла тытасшӑн.

— Йывӑр-ҫке вӑл, — тет Шерпике. — Пултарӑн-и ҫӗклеме?

— Эпӗ ӳкерместӗп ӑна, — тет Ука.

Шерпике Ивана сӑпкаран илсе хӗр ачана тыттарать.

Вӗсене капла сыхласа ҫитерме хӗн. Амӑшӗ урайне ҫи витти сарчӗ те Энтипе Укана унта лартрӗ, теттесем пачӗ. Юнашарах Ивана алла тытнӑ ашшӗ вырнаҫрӗ. Пуҫланчӗ вара айкашу.

Кил хуҫин сӑй сӗтелӗ хатӗрлеме тиврӗ.

Апат ҫинӗ хыҫҫӑн пӗчӗккисем тӳнчӗҫ. Выляса ывӑннӑ хыҫҫӑн ыйхӑ тени ытла тутлӑ ҫав.

Пысӑккисен хӑйсен калаҫӑвӗ.

— Ӗнер ирхине, эпӗ ҫитиччен, Лида килтен тухса кайнӑ, — терӗ Янаш. — Пирӗн Ива тата ку йӗкӗрешсем ӑна-кӑна ӑнланма пуҫличчен пӗрлешмелле.

— Тепле тусан аван, — ассӑн сывласа илчӗ Шерпике. — Ывӑлӑм ҫурма тӑлӑх мар, унӑн ашшӗ те пур. Ку йӗкӗрешсем пирки мӗнле?

— Тӗлӗнтермӗш ачасем! Вӗсемсӗр эпӗ ҫутӑ тӗнчере пурӑнаймӑп та.

— Эпӗ татах ҫуратсан? — Шерпике чӑрлаттарса пӑхрӗ Янаш куҫӗнчен.

— Турра тав тӑватӑп, — тет Янаш. — Эпӗ вунӑ ача пӑхса ӳстерме те хатӗр.

Калаҫрӗҫ, калаҫрӗҫ вӗсем, таҫта та ҫитрӗҫ. Юлашкинчен пӗр шухӑш патне пырса тухрӗҫ — пӗрлешес.

Ачасем вӑрансан йышпа Атӑл хӗррине кайса килчӗҫ. Кун иртрӗ. Янашпа ачасем Шерпике патӗнчех ҫӗр каҫрӗҫ. Тепӗр кунне, каҫ кӳлӗм, тин киле таврӑнчӗҫ вӗсем.

Тунти кун Янаш йӗкӗрешсене ача пахчине ӑсатрӗ. Ҫул тӑрӑх шав калаҫрӗҫ пӗчӗкскерсем хӑнара вӑхӑта мӗнле иттерни ҫинчен.

— Атте, паян каллех кайăпăр-и Ива патне? — тет Энти. — Питĕ кăсăклă Ива.

— Эпĕ те юратрăм. Ăна çĕклесе çӳрес килет, — пĕлтерет хăйĕн кăмăлне Ука.

— Чимĕр-ха, юлташсем, — тет Янаш ачасене çурăмран çупăрласа, — тен, Ивăпа амăшне хамăр пата пурăнма илсе килер? Мĕнле шутлатăр?..

Савăннипе тринк-тринк сиккелесе илчĕç ачасем.

— Эпĕ ăна ялан çĕклесе çӳрĕп, — тет Ука.

— Эпĕ Ивăна хамăн тетте тихана парнелĕп.

Янашăн чунĕнче ырă-ырă. Ăшĕнче кĕлтурĕ: «Пӳлĕхçĕм, çав самант хăвăртрах çиттĕрччĕ!»

## 10

Хăвăрт хатĕрленчĕ Янаш Паланов çула тухма. Тăхтама юрамасть, вутлă çумăр çуса тăрсан та унăн ашшĕ-амăшĕ патне çитсе килмелле. Унта хăвалакан сăлтавĕ ăнланмалла мар, анчах чуна пăшăрхантарать. Пĕррехинче Шерпике ăна выляса ыталанă чух тепле майпа-çке кăкăрта мăкăль пуррине асăрхать. Вăл Янаша ним тăхтаса тăмасăр тухтăр патне кайма хĕтĕртсе ячĕ.

Поликлиникăна лексен пуçланать вара кабинетсем тăрăх çӳресси. Темĕн тĕпчеççĕ, тем шыраççĕ.

— Сирĕн йăхра юн чирĕпе аптраса вилнисем пулман-и? — терĕ пĕр врачĕ.

Турă çырлах, мĕнле хăрушла ыйту!

— Илтмен, — терĕ Янаш. — Мĕншĕн кирлĕ ку сире?

— Онкологие ямалла мар-и тетĕп. Юрĕ. Малтан пĕлĕрха. Вара куç курĕ. — Тухтăр тата тепĕр хут хыпашласа пăхрĕ Янаш кăкăрĕнчи мăкăле. — Вăхăта нумая ан ярăр, тепĕр тăват-пилĕк кунран килĕр.

Тĕрĕсех, тăвансенчен кама мĕнле чир çĕр пичĕ çинчен шăлса тăкнипе Янаш кăсăкланман. Ашшĕпе амăшĕ пĕлеççех. Эппин, ним тăхтаса тăмасăр вĕсем патне çитсе килмелле.

Акă мĕнле сăлтав Янаш Паланова çула кăларать. Арăмĕ Шерпике ваттисем валли кучченеç хатĕрленĕ. Чăматана пысăк чăмакка шăрттан тата парне: амăшĕ валли шурă мамăк тутăр, ашшĕ валли ăшă шарф хучĕ.

Амăшĕн ĕçне ачисем куç илмесĕр пăхса тăраççĕ.

— Атте, — пырса ыталарĕ Энти Янаша, — мана илсе кай-ха асаттепе асанне патне.

— Мана та ан хăвар, — тилмĕрет Ука та.

— Эх, юратнă пепкесем, илсе кайăттăм сире, — ыталарĕ Янаш ачисене, — тулта Хĕл Мучи кĕрт тăрăх çӳрет. Аллинче ун туя. Сăлтавсăр çӳрекен ачасен сăмсисене чĕпĕтсе тăм илтерет. Тата сире шкулта вĕрентекенсем кĕтеççĕ. Эсир парта хушшинче ларманнине курсан тытăнĕç пăшăрханма. Çулла вара пурте пĕрле кайăпăр асаттепе асанне патне хăнана.

Шĕвĕрккесем кунĕленчĕç. Вĕсене васкаса тумланма хушрĕç. Халиччен Янашпа Шерпике ачисене шкула çитиех ăсатаканччĕ, паян вара вĕсене хăйсем тĕллĕн кайма ирĕк пачĕç.

Янаш та арăмне хăйне ăсаттармарĕ. Ара, Шерпикен вăхăчĕ çук. Унăн, редакцинче ĕçлекенскерĕн, химкомбината та каймалла, ĕçре малта пыракан рабочи çинчен очерк çырмалла.

Урамра, çул юппинче, уйрăлчĕç вĕсем пĕр-пĕрне чуптуса.

Утрĕ Янаш автобуссем чарăнакан çĕрелле. Аллинчи чăматанĕ самай йывăррине туйрĕ вăл. Мĕн чиксе тултарнă-ши унта Шерпике? Хăйĕн ăна пулăшма вăхăчĕ пулмарĕ çав.

* * *

Такси ярăнать кăна йăр-р та йăр-р тĕл-тĕл юрпа витĕннĕ асфальтлă çулпа. Хăш тĕлелле çитсе иртнине те чухлаймастăн. Малти кантăка шофер хăй тата унпа юнашар ларакан çын хуплаççĕ.

Канлĕхе чăрмантаракан шухăш пуçра пĕрре — пуйăсран юлас марччĕ. Турра шĕкĕр теççĕ ун пек чух: ĕлкĕрчĕ. Вăл шăп кăтартнă вăхăтра станцăна çитсе чарăнчĕ. Кĕрсе ларчĕ Янаш вакуна. Халĕ ĕнтĕ Ижевск хулине çитмесĕр те, ашшĕпе амăшĕ çаплах çак хулара пурăнаççĕ, вырăнтин тапранмалла мар.

Купе пушах темелле. Чăнах ĕнтĕ, Янашсăр пуçне тепĕр çамрăк вырнаçрĕ. Вăл та Ижевска каять имĕш.

Хĕллехи кун ытла кĕске, тĕттĕмленчĕ те. Маччара электричество лампи чĕлтĕр-р ҫуталчĕ. Вăл тунсăх пĕрĕхрĕ тем? Унсăрăн кичем чаршавĕ карăнмĕччĕ.

Янаш ҫамрăк ҫине ăшă кăмăлпа пăхса илчĕ-ха. Анчах чĕлхе вĕҫĕнчен сăмах вĕҫерĕнесшĕн мар. Лешĕ те чĕмсĕрскер пулас, шарламасть.

Пĕр евĕр кăлтăртатакан вакун кустăрмисен юрри ытла та ҫепĕҫ, чуна ачашласа лăпкать те сăпка ҫине вырттарать. Тĕрĕсех, ав яш-кĕрĕм сак ҫине тăсăлса выртма та ĕлкĕрнĕ. Курăс хуппи турттарать мар-и.

* * *

Янаш Паланов купере. Вăл Ижевск хулине ашшĕпе амăшĕ патне каять кирлĕ хыпар пĕлме. Ыйхă ҫук. Пуҫ шавлать хĕссех. Акă ăна шухăшсем иртнĕ кунсене илсе ҫитереҫҫĕ. Пурнăҫри хăш саманта шĕкĕлчемелле-ши? Куҫ умне ав Шерпике ишсе тухрĕ. Вăрăм ҫӳҫне ĕнсе хыҫне ярт тăсса янă. Юлашки вăхăтра вăл ҫивĕтне ĕнсе хыҫне чăмакка туса майлать. Пĕрлешнĕ самант. Йĕкрешсем сăпкари Ива умĕнче тĕркĕшеҫҫĕ. Юратаҫҫĕ вĕсем пепкене. Тен, Янаш хăй ачишĕн хыпса ҫунни ҫавсене куҫрĕ? Шерпике патĕнчен тухасшăн мар хăшкăлаҫҫĕ. Ива та вĕсемпе чунтан йăпанать. Янашăн кăмăлĕ те тулса ҫитнĕ, вăл тек уйрăм, хăйĕн тăван ывăлĕсĕр, пурăнасшăн мар.

— Юратăвăм, пĕр хăма тăрăх утма вăхăт ҫитрĕ, — тет Янаш. — Элле йĕкĕрешсенчен хăран? Мĕн, эсĕ те вĕсене Лида пек приюта каялла партарасшăн?

— Ҫын ачи-пăчи — ютах пулĕ. Чуна хăратать. Ман сана вĕсенчен хăтарас шухăш ҫук. Хам пирки иккĕленетĕп. Пултарăп-и вĕсен амăшĕ пулма?

— Пултаран! — терĕ Янаш ҫирĕппĕн. — Пĕлетĕп-ҫке, кăмăлу сан ырă. Эпĕ куллен пулăшса тăрăп.

— Укапа Энти сана юратни, сансăр пурăнма пултараймanni таҫтан паллă. Сана вĕсенчен сивĕтни — ҫылăх.

— Чăнах, шăпăрлансене эпĕ чунтан юрататăп. Анчах ҫумăмра хамăн тăван чĕппĕме — Ива ывăлăма та усрас килет. Ан турткалан.

Пĕр-пĕрне ĕненсе те шанса Ива ҫур ҫул тултарнă тĕле Янашпа Шерпике пĕрлешрĕҫ. Малтан, пĕр виҫĕ уйăха

яхăн, çемье Ива амăшĕ патĕнче кĕшĕлтетрĕ, унтан, туслăх вăя кĕрсен, ашшĕ пурне те хăй патне куçарса кайрĕ.

Кунсем чупрĕç те чупрĕç. Пурте килте чух ачасем чупса çӳреймеççĕ. Çумра ырă çынсем пур чух савăнăç килетех. Паланова, пысăк çемье пуçлăхне, ГЭС инженерне, унăн пултарулăхне хакласа пилĕк пӳлĕмлĕ пысăк хваттер пачĕç. Çитрĕ вара хĕпĕртемелли самант. Укан хăйĕн уйрăм пӳлĕм. Вăл хĕр пĕрчи-çке-ха. Ăна хисеплемелле. Йĕкĕтсем те пайсăр юлмарĕç. Аслисем килте чух хăйсен вăхăтне яланах пысăк залра иртереççĕ. Кунта радиоприемник, телевизор. Юлашки хыпарсем итлеççĕ, сериалсем пăхаççĕ.

Янаш телейлĕ. Çемйипе кăмăллă вăл. Ачисем савăнтараççĕ кăна. Арăмĕ кунĕ. Вĕсен хушшинче юрату кунтан-кун чечекленет.

Лида куç умне килсе тăчĕ. Тухса кайнăранпа та тĕл пулман ăна. Унăн тусĕ Васнар каланă тăрăх, вăл юрату таврăнасса кĕтет имĕш. «Айван, — пăшăлтатрĕ Янаш. — Çукки нихăçан та таврăнмасть». Ара, Паланов нихăçан та юратман ăна. Туниссашăн юншăхланă вăхăтра Лида йăпшăнса кĕчĕ унăн пурнăçне. Яланах çапла: суя çĕнтерӳшĕн кайран чуна тĕлкĕшекен кăвар çине пăрахма тивет. Ăçта пурăнать-тĕр? Химпромран тахçанах тухса кайнă. Юлашки хут Васнар патне Ĕпхӳ хулинчен çыру янă имĕш.

Пуйăс вăхăтран вăхăта чарăнать, унтан каллех малалла танкăртаттарать. Купене никам та кĕмест. Çынсен нуша çук чух çĕрле ниçта та каяс килмест пулĕ çав.

Янаш тепĕр енне çаврăнса выртрĕ. Ыйхă килмест. Асаилӳсен тĕрки сӳтĕлсе пĕтмен. Акă ишсе тухрĕ Тунисса. Ял-л! пăхрĕ. Пысăк куçĕ — юнтарнă пĕлĕт. Паланов, ӳссе çитĕнсе те никампа та тĕл пулманскер, пырса тăчĕ хĕрпе çума-çумăн пасарта Айвазовский художникăн «Хум» картинин фотокопине, хашакана вырнаçтарнăскере, туяннă чух. Сарă вăрăм çӳçĕ çурăм тăрăх сапаланнă. Пăшăрхануллă сасăпа сăмах вĕçертнĕччĕ вăл:

— Ай-уй! Ку «Бермудский треугольник»-çке!

Паллашсан самай вăхăт вăл Янаш патне çӳрерĕ, çĕр каçма та юлчĕ. Анчах тасалăхне çухатмарĕ. Темшĕн шухăшлăн пăхса тăратчĕ стена çумне çакнă «Хум» картина çине. Янашăн тавçăрма ăсĕнче çук. Хĕр флотри каччишĕн тунсăхланă-мĕн. Çарти моряксен чи çывăх çынна

та пӗлтерме май ҫук ҫӗрте пулма тивет. Ара тинӗссен тӑрӑхӗсем вӗҫӗ-хӗррисӗр-ҫке.

Тунисса качча тухатчех-ши Янаша мичманӗ вӑхӑтра килсе ҫитмен пулсан? Кун пирки Турӑ ҫеҫ пӗлет ӗнтӗ.

— Эпӗ ӑна ун чухне юратнӑ пек те туяттӑм, — хаш-ш сывласа илчӗ мӑкӑртатнӑ май Паланов, купе сакки ҫинче выртаканскер. — Атӑл хӗрринчи карлӑк ҫумӗнче тӑракан Шерпике патне Тунисса пулӗ тесе ҫумне пырса тӑтӑмҫке. Енчен те вӗсене иккӗшне юнашар тӑратса суйлама хушсан эпӗ, паллах, Шерпикене туртса кӑлараттӑм. Юрату мӗн иккенне мана вӑл туйтарчӗ. Пулнӑ-иртнӗ теҫҫӗ кун пек чух халӑхра, анчах ҫырӑнса юлнӑ пурнӑҫ кӗнекин пӗр страницинче. Ҫав ҫеҫ. Сайра хутра, пурнӑҫ куккри-макрине кӗрсен ҫеҫ, куҫ умне ишсе тухать иртни. Халь хӑй, Тунисса, кӗрсе тӑрас-мӗн пулсан, чӗрене ухӑ йӗппи пырса тӑрӑнатех.

Анчах Янаш унӑн мӑкӑнь тутине чуптума шырамӗччӗ. Туйӑмсем ӗнтӗ сӳрӗлсе саланнӑ. Унтанпа хӗвел тӳпене миҫе хут хӑпарса анман-ши?! Вӑхӑт сурана юсать тесе ахаль каламан-тӑр. Тепӗр тесен, вӑл мар-и вара Шерпикене парнелекенӗ? Кӑшкӑрсах ҫирӗплетӗ Янаш: вӑл!

Янашӑн кӳлепи ҫеҫ кунта, Ижевск хулине ҫитерекен пуйӑсра, анчах чунӗпе таҫта, такампа...

Шухӑшсем канӑҫ памаҫҫӗ ҫынна. Мӗн-ши вӑл шухӑш тени? Темшӗн вӑл чӗрӗскер теес килет. Анчах тытса пӑхма алла лекмест, витӗр куҫпа курасчӗ — тӗсӗ ҫук. Шухӑшсем тем йышши те пур. Хӑшӗсем ырӑ, пылак. Чуна ҫу сӗрсе савӑнтараҫҫӗ. Тепӗр йышши шухӑшсем — шӗл кӑвар, ашкӑракан ҫулӑмлӑ. Вӗсем ҫынна ҫатма ҫине хурсах ӑшалантараҫҫӗ, вилмеллех типӗтеҫҫӗ.

Янашӑн чун хапхи умӗнче тӑрать-ха пар лаша. Тӑрантасӗ ҫинче — тӳсмелле мар усал хыпар. Уҫса кӗртмест. Тен, пӑрӑнса кайӗ айккинелле. Ҫапла пултӑрччӗ. Анчах мӗнле хыпар парнелӗҫ ашшӗпе амӑшӗ?

Ассӑн сывласа илчӗ Янаш. Сасартӑк ун хӑлхине йӗс шӑнкӑравлӑ ача-пӑча сасси пырса кӗчӗ. Тинӗс хӗрринче илтни, курни те — йӑлт урӑхла.

...Ҫак ҫу Янаш ҫемйине Хура тинӗс хӗррине илсе ҫитерчӗ. Ива ывӑлӗ шкул ҫулне ҫитнине ҫапла паллӑ тӑвас терӗҫ вӗсем.

Суйласа илнӗ вырӑна, Анапӑна ҫитсен — кунта тавралӑх ача-пӑча сывлӑхӗшӗн ҫав тери сиплӗ — хваттер тупрӗҫ. Майлашсан васкасах утрӗҫ тинӗс хӗррине. Тӑчӗҫ ҫитсе. Ачасен куҫӗсем чарӑлчӗҫ, ара, умра нихӑҫан курманни — вӗҫӗ-хӗррисӗр выртать шыв сарӑлса. Янаш Палановшӑн ку ҫӗнӗ япала мар, унӑн ҫар хӗсмечӗ тинӗс хӗрринче иртнӗ, апла пулин те вӑл илӗртме пӑрахмасть. Ачасем те ӑна телевизор экранӗ ҫинче курнӑ. Умри тинӗс пачах урӑх, вӑл — чӗрӗ, чӑнни! Пурне те самант тыткӑнларӗ вӑл. Кӳлӗ теес, анчах ӑҫта унӑн тепӗр вӗҫӗнчи ҫыранӗ? Унти ҫыранӗ пӗлӗт-ши-мӗн вара? Кунта, ура вӗҫӗнчи ҫыранра, тинӗс шывӗ чӳхенет, шӗпӗлтетет. Калаҫать ахӑр. Этем ун чӗлхине пӗлмест ҫав. Ав ҫап-ҫавракана вак чулсем выртаҫҫӗ шывра. Хумсем выляҫҫӗ вӗсемпе тӗккелесе. Тетте чулсен ачасене илӗртекен илем пур. Ӑҫтан пӗшкӗнсе алла илмӗн? Янаш ачисем хутаҫҫипех пухрӗҫ, киле илсе таврӑнчӗҫ.

Шерпике ачисене малтанхи кун тинӗсре шыва кӗме чарчӗ. Ҫул ҫинче ывӑннӑ. Ку — пӗрре. Тата ку таврари ҫанталӑка малтан хӑнӑхмалла. Ашшӗ куҫӗнчен тилмӗрсе пӑхни те пулӑшмарӗ. Мӗн тӑвӑн, атте-аннерен иртме юрамасть.

Ырлӑх, чӑнах та, тепӗр кунне пуҫланчӗ. Тинӗс хӗррине ансан пиллӗкӗшӗ те аллисене йӗпетрӗҫ. Шывӗ — лӗп. Кам ҫапла ӑшӑтнӑ-ши ӑна? Тӗлӗнеҫҫӗ пӗчӗк этемсем. Унтан иккӗшӗ утӑм турӗҫ. Тинӗс тӗпӗ хӑйӑрлӑ мар, шӑкӑрттин — чул. Пӗр катрамӗ Укан ура пӳрнине перӗнсе кӑшт ыраттарчӗ те-ха. Тӳсмелле. Найкӑшмарӗ.

Энти те, Ука та ишме пӗлеҫҫӗ-ха. Атӑл ачисем — чӑнчӑн пулӑ. Иккӗшӗ те малалла ишсе кайрӗҫ. Шыв ҫӗкленӗн туйрӗҫ вӗсем. Ашшӗ те ишет вӗсем хыҫӗнче.

— Буйран иртме юрамасть, — асӑрхаттарать вӑл ывӑлӗпе хӗр пӗрчине.

— Ай! — кӑшкӑрса ячӗ Ука.

— Мӗн пулчӗ? — хӑраса ӳкрӗ ашшӗ.

— Кӑкӑра лӑймакаллӑ шлепке пекскер перӗнчӗ.

— Э-э, ан хӑра, вӑл — медуза, ҫынна тивмест.

Шерпикепе Ива ҫыран хӗрринчен хӑпаймаҫҫӗ.

— Асту, ывӑлӑм, шалалла ан кӗр, путан, — асӑрхаттарать ӑна амӑшӗ.

— Манӑн та ишес килет, — найкӑшать ача.

Çынра тăрăшни пур пулсан ёмĕт пурнăçланать.

Тинĕсĕн çынна тĕлĕнтермелли лăках.

Пĕррехинче хĕртĕнетчĕç çыран хĕрринче. Сасартăк Ива кăшкăрса ячĕ:

— Шывра темĕскер ишет. Çутă ункăсем йалт-ялт сикеççĕ.

Пурте пăхрĕç тинкерсе.

— Э-э-э, пулă кĕтĕвĕ вăл, — терĕ ашшĕ. — Пулăсем шывран çапла сике-сике тухаççĕ.

— Мĕншĕн? — кăсăкланчĕç ыттисем те.

— Сывлама. Вĕсене сывлăш кирлĕ.

Тинĕс хĕрринче каннă кунсенче Энти сăвă çырчĕ. Янаш Паланов халĕ те астăвать-ха унăн йĕркисене. Пăшăлтатрĕ вара:

> Хура тинĕс тесе ят панă,
> Çийĕ те кĕмĕл тĕслĕ сараппан.
> Шыву сыпмалла мар тăварлă,
> Пуллусем çав-çавах ĕçсе тăранман.

Сăвă пуласси, паллах, аякра. Чи кирли — ача чунĕнче илемлĕх тĕнчи çуралма пикенни паха.

Тинĕс хĕрринче хĕртĕнсе вĕсен ўт те кĕреленчĕ, киле кайма вăхăт çитет. Юлашки каç, çĕрле, шав çĕкленчĕ. Янаш пĕлет — ку тинĕс тулашни. Ирхине çемйипех тинĕспе сывпуллашма кайрĕç. Ачасем шыва та кĕресшĕнччĕ юлашки хут. Анчах тинĕс — урнă. Таçтан-таçтан çўллĕ хумсем çĕкленсе килеççĕ те çырана пырса кĕрслеттереççĕ. Вак чулсемшĕн — вăйă. Вĕсем хумпа çўлелле вăркăнаççĕ, чуччу ярăнаççĕ мар-и çапла. Хум каялла чакать çĕнĕрен килекеннине хирĕç: вак чулсем те юлмаççĕ, юхаççĕ хум хыççăн юрласа: чăштăр-р, чăштăр-р...

Сасартăк Янаша, купе сакки çинче выртаканскере, çав вак чулсемпе пĕрле тинĕс варринчен мăкăлтатса килекен хума хирĕç юхнăнах туйăнчĕ. Вăл тăрса ларчĕ. Пуçĕ çаврăнать. Вăй пĕтсе килчĕ. Кунашкал халсăрланнине пĕр хутчен тўссе курнă-ха. Кĕр пуçламăшĕнче пулчĕ çав инкек, ĕçрен тухса киле кайнă чух. Лапка-лапка юр çăватчĕ. Тавралăх пир сарнăн шап-шурă. Çул хĕрринче ўсекен йывăçсем те тураттисене шурă укапа капăрлатнă. Янаша самант журналта вулани асне килчĕ: йывăçсем çынна вăй пама пултараççĕ. Вара вăл юр ашса пĕр йывăç патне çывхарчĕ

те унӑн тӗксӗм хупӑллӑ вуллине икӗ аллипе ыталарӗ. «Хурама тусӑм, ӳкес марччӗ ман, пулӑшсам, пӑртак вӑйна парсам», — тесе ӳкӗтлерӗ. Мӗн тейӗн? Тӗрӗсех! Кӑшт вӑхӑт иртсенех хӑйне аван туйрӗ. Кунта, пуйӑсра, йывӑҫ ӳсмест. Ним тума аптранӑ енне вӑл куперен тухса вакун чӳречи патне пырса тӑчӗ. Мӗн мурӗ? Унчченхи пекех ним те ыратмасть, анчах хӑвна тӑвӑр арчана хупнӑн туятӑн. Вакун ураписем нӑйкӑшаҫҫӗ, вӗсене тахши йӗкевпе хӑйранӑнах туйӑнать.

Вакун коридорӗнче никам та ҫук. Ҫӗрле ҫывӑраҫҫӗ мар-и. Эмел ӗҫмелле-тӗр. Анчах мӗнлине? Халиччен ҫумра эмел чиксе ҫӳремен. Пӗркун тухтӑр патӗнче пулчӗ-ха вӑл. Эмел ӗҫмелли пирки ним те шарламарӗ лешӗ. Иртессе шанчӗ. Тӗрӗсех. Лӑпланчӗ вӑл. Мӗнле чир-чӗр, нумая тӑсӑлманскер?

Ҫитес ҫӗре ҫитрӗ Янаш Паланов. Ашшӗпе амӑшӗн савӑнӑҫӗн вӗҫӗ-хӗрри ҫук. Чунне кӑларса пама хатӗр юратнӑ ывӑлне. Пӗри те тепри ыйту хыҫҫӑн ыйту параҫҫӗ. Вӗсен ачасем пирки йӑлт пӗлмелле. Хуравӗ пӗрре: сывӑ, шкулта вӗренеҫҫӗ, чупаҫҫӗ, выляҫҫӗ-куласҫҫӗ.

— Калӑр-ха, пирӗн йӑхра юн чирӗпе чирлесе вилнисем пур-и?

— Пулман унашкал инкек, — терӗ ашшӗ.

— Манӑн атте-анне те ватӑлса ҫӗре кӗнӗ, — сӑмах хушрӗ амӑшӗ те.

— Шӗкӗр Турра! — савӑннипе Янаш ача-пӑча пек ҫатҫат алӑ ҫупса илчӗ. — Хама ҫӗнӗрен ҫуралнӑнах туйрӑм.

Анчах ашшӗне пӗҫертсе пӑрахрӗ. Ӑна приютри калаҫу асне килчӗ.

— ...Ку ача тӑлӑхскер-и? — ыйтнӑччӗ вӑл тухтӑртан.

— Ашшӗ такам, паллӑ мар. Анчах амӑшӗ юн ракӗпе чирлесе вилнӗ.

— Ракӗ ачине куҫмӗ-и?

— Пӑшӑрханма кирлӗ мар. Ачине ҫуратсан тин халсӑрланнӑ амӑшӗ.

Антунпа Натали тухтӑр сӑмахне ӗненсе Янаша усрава илнӗ. Ача чиперех ӳсрӗ. Пӗр хут та чирлемен.

Приютри ҫав калаҫӑва халӗ Янаша каласа памалла марши? Анчах чуна уҫса пама тепӗр сӑлтав чӑрмантарать. Ара, вӑл ку тарана ҫитсе те хӑйне ача ҫуртӗнчен усрава илнине

пӗлмест. Каламан. Ют ҫынсем ӑна-кӑна пӗлмеҫҫӗ. Янаша приютран илсе тухнӑ кунах урӑх хулана пурӑнма куҫнӑ. Халӗ ҫак икӗ ҫӗнӗ хыпара пӗлтерсен чӗри ҫурӑлмӗ-ши? Шарлас мар терӗ вара. Арӑмӗ ӑна куҫран пӑхсах ӑнланчӗ.

Ашшӗ пӗр авӑк чӗнмесӗр тӑхтанӑ хыҫҫӑн ыйтрӗ:

— Мӗн тума кирлӗ пулчӗ сана йӑхра юн чирӗпе асапланса вилнисем ҫинчен пӗлни?

— Тухтӑр хушрӗ. Вӑл тем иккӗленет пуль-и? Кӑкӑр ҫинче мӑкӑль ман. Шерпике йӗрсех аптратнипе кайнӑччӗ те больницӑна...

— И-и, ара, ҫу парӗ пулӗ, — хутшӑнчӗ Натали те калаҫӑва. — Сывлӑхшӑн сиенлӗ мар.

— Эпӗ те ҫапла шухӑшлатӑп, — килӗшет Янаш. — Тухтӑр тени ялан тем шырать ҫынра. Тек ура ярса пусмастӑп ун патне.

— Чим-ха, ывӑлӑм, апла юрамӗ, — терӗ ашшӗ. — Тухтӑр патне кайма сӗнетӗп сана киле ҫитсенех.

Шӑкӑл-шӑкӑл калаҫу нумая тӑсӑлчӗ.

Икӗ кун хӑналанчӗ Янаш. Хаваслӑ кӑмӑлпа уйрӑлчӗ вӑл. Анчах та ашшӗпе амӑшӗн ӑшне шӗл кӑвар сапса хӑварнине ӑнланмарӗ.

— Антун, тӗрӗссине уҫса памасӑр тӗрӗс турӑмӑр-ши? — кулянать Натали.

— Темле ҫав, — ассӑн сывлать упӑшки. — Вӑхӑтсӑр пӗлни ырӑ тумӗ терӗм. Ӑҫтан тӳсӗ чӗре пӗр харӑс икӗ кӗтмен хыпара?

— Амӑшӗ пекех вилӗ-ши вара пирӗн ылтӑнран та хаклӑ, юратнӑ ывӑлӑмӑр? Ах, Турӑ сыхлатӑрах, — ӗсӗклесе йӗрсе ячӗ Натали. — Юратса пӑхса ӳстертӗмӗр. Хӑй те пире ырӑ кӑмӑлӗпе ӑшӑтса пурӑнчӗ. Турӑ ҫырлах, юнӗ тасалтӑрах.

Апла-капла пулса тухсан асламӑшӗ йӗкӗрешсене пурӑнма хӑйсем патне илсе килесшӗн. Ивӑна амӑшӗ хӑйӗнчен уйӑрмӗ. Тен, Укапа Энтие те хӑй ӳстерсе ҫын тӑвасшӑн ҫине тӑрӗ.

— Эсӗ, карчӑкӑм, ытлашши мала каятӑн, — терӗ ӑна старикки. — Янашӑн чӑнах та юнӗ пӑсӑлнӑ пулсан сыватӗҫ те. Ара халь рак чирне парӑнтараҫҫӗ тесе ҫыраҫҫӗ.

— Турра кӗлтӑватӑп. Ах, сывалтӑрччӗ, — Натали асанне сӑхсӑхса илчӗ.

* * *

Янаш автобусран тухнă чух хĕвел анманччĕ-ха. Куртăм ĕнтĕ эсĕ киле çитнине тенĕн вăл лупас пек мăн пĕлĕт айне самант кĕрсе пытанчĕ. Çук, тек тухмрĕ вăл, канать ахăр. Ашшĕ-амăшĕ патĕнчен киле таврăнакан Паланов пекех ĕшеннĕ-тĕр: ара, яра кун çĕр çине çутă уçласа тăнă-çке-ха.

Алăка арăмĕ уçрĕ. Вăл килте пĕчченех.

— Мĕнле кайса килтĕн, ăмăрт кайăкăм? — терĕ Шерпике упăшкине ыталаса чуптунă май.

— Аванах. Аттепе анне сывах пурăнаççĕ, — пуплерĕ Янаш. — Сана питĕ пысăк салам калама хушрĕç. Пире пурсăмăра та хăнана пырасса кĕтеççĕ.

— Кайăпăр-ха. Хăйсен килесчĕ пĕрер, — тет Шерпике упăшкине хывăнма пулăшса.

— Халĕ хĕл сивви хăратать вĕсене.

Çул кирĕкне çуса тасатнă тĕлелле ачисем таврăнчĕç катокран. Виççĕшĕ те шавлăн ашшĕне ыталарĕç. Янаш кашнинех пуç тӳпинчен чуптуса тухрĕ.

— Амăшĕ, кала-ха, эпĕ çук чух ку яш-кĕрĕм иртĕх-мерĕ-и? — тĕпчет Янаш.

— Пирĕн ачасем сăпайлине хăвах пĕлетĕн, — йăл-йăл кулкаларĕ Шерпике. — Сансăр питĕ тунсăхларĕç вара. Шкултан «пиллĕк» паллăсем илсе килчĕç.

— Эппин, асламăшĕпе аслашшĕ парнине тивĕçлĕ, — терĕ те ашшĕ чăматанне уçрĕ. Ачисем куç илмесĕр тин-кереççĕ, ара, парнене курасшăн мар-и.

Чи малтан хĕрлĕ свитер туртса кăларчĕ.

— Ива, ку — сана. Тыт, — терĕ ашшĕ. Ача çийĕнчех парнене тăхăнма тытăнчĕ.

— Ку, çутă кăвакки, Энтие килĕшмелле. Ме! — ывăтрĕ ăна ача хулпуççийĕ çинелле. Лешĕ ăна яп! ярса тытрĕ те айккинелле пăрăнчĕ.

Ука тӳсĕмсĕррĕн тăпăртатса тăрать. Парне илме халĕ ĕнтĕ ун черет. Акă ашшĕ юр пек шурă свитер кăларчĕ.

— Ку хамăрăн пĕртен-пĕр пикемĕре, — пуплерĕ ашшĕ. — Тăхăнсам.

— Тавтапуç, аттем, — çапла пулчĕ хĕр пĕрчин сăмахĕ. Укана свитер тăхăнма амăшĕ пулăшрĕ.

— Хĕрĕм, — терĕ вăл, — ан варала, тирпейлĕ пул.

Çамрăк яш-кĕрĕм тĕкĕр умĕнче тĕпĕртетнĕ вăхăтра ас-лисем диван çине ларчĕç.

— Мĕн терĕç аçупа-аннӳ? — пĕлесшĕн çунать Шер-пике.

— Пирĕн йăхра юн чирĕпе аптраса вилнисем çук, — мăнаçлăн пĕлтерчĕ Янаш. — Хăйсем сып-сывах.

— Мăкăль мĕнле?

— Ларать хăй ырăнĕнчех. Çу парĕ пулĕ терĕ анне. Тухтăр патне каймастăп, — пуплерĕ Янаш. — Вăл мана онкологи пульницине ярасшăнччĕ. Унта хама, тасаскере, рак ерĕ. Юлашки вăхăтра рак ерекен чир тесе те ка-лаçаççĕ.

— Хăрама юрамасть, шикленекене чăнах та чир çыпă-çать тет.

— Анчах та чирлĕ çынпа юнашар выртас килмест.

Янаш хăйне сывă çын ретне тăратрĕ. Сăлтавĕ пур: йăх — таса. Ашшĕ-амăшĕ çапла каланă. ГЭСри ĕçĕ те ăна сӳрĕкленме памасть. Шыв çулне уçма хатĕрленеççĕ.

Ĕç нумай. Шыв пӳлмелли хатĕрсене, дебаркадера та юсамалла, çĕнетмелле. Йывăçне те чутлама, тимĕрне те хăйрама, çунакан вутра хĕртме тивет, тата ытти те — пин тĕрлĕ ĕç. Тупата, çаксем ĕçлекенсене тинкелентереççĕ. Çуркунне ГЭС çыннине канма памасть.

Анчах Паланов Янаш ĕçре халтан кайма пуçларĕ, ура-ран урине аран ирттерет. Вăл туя тытмах тăрать, анчах вăтанать.

Столовăйĕнче пĕр сĕтел хушшинче ларнă çулланарах панă рабочи сăмах пуçларĕ:

— Инженер юлташ, эсĕ чирленĕ тем. Пачах сăн пăрахрăн. Мĕн ыратать?

— Ним те ыратмасть, анчах вăй çукки аптратсах çитерчĕ.

— Ав епле-е. Тухтăр патне кайнин усси çук. Вĕсем ним те пĕлмеççĕ, — пуплет хайхискер. — Кайăр акă халăх сиплевçи патне. Вăл икĕ кунтан ура çине тăратать, кача-ка путекки пек сикекен пулăн.

Хайхи рабочи сиплевçĕн адресне те пачĕ.

Ытла илĕртӳллĕ, ара, камăн хăвăрт сывалас килмĕ? Кил-те ку ыйтăва сӳтсе яврĕç. Арăмĕ те чармарĕ, унăн та упăш-кине хăвăртрах сыватас килет.

Сиплевçĕ чиперех йышăнчĕ Янаша. Калаçтарчĕ, темĕн пуçне сулкаларĕ вăл. Анчах та хăй патне укçапа килнĕ çынна вĕçертес килмерĕ ахăр.

Кунсем чупрĕç пĕр-пĕрне хăваласа. Янаш та йăшнăçем йăшрĕ. Вырта тăрать. Ирĕксĕрех бюллетень илме тухтăр патне каймалла, ĕçе тухаймасть çын.

— Капла уруна тăсатăн-иç, — йĕрет арăмĕ.

— Кăшт чирленĕшĕн кам вилтĕр? — тет Янаш. — Манăн ним те ыратмасть, вăй çеç çук.

Шерпике такси тытсах ăна поликлиникăна илсе кайрĕ.

Шлюз витĕр пĕрремĕш карап кăларса янă хыççăн Янаш Паланов инженер онкологи пульницине сывалма выртрĕ.

Çапла, çын чирлĕ, анчах унăн ырă ĕмĕчĕ калама çук пысăк.

Янаш палатăри уçă чўрече умне пыра-пыра тăрать. Кашнинчех тинкерсе пăхать вăл сурпан пек ярт тăсăлса выртакан пульница çулĕ çине. Ун тăрăх арăмĕ виçĕ ачипе ăна, вилĕмрен хăтăлнăскере, киле илсе кайма килес пек туять.

## ТУПМАЛЛИ


УЙĂХ ÇИНЧИ ПИКЕ КУРНĂ... . . . . . . 3

ПЕПКЕ ÇУРАЛСАН... . . . . . . . . . 87

ЮНТАРНĂ ПĔЛĔТ . . . . . . . . . 179

*Литературно-художественное издание*

Для детей
старшего школьного возраста

**Валентина Эльби**
**(Валентина Андреевна Андреева)**

**ПЕПКЕ ÇУРАЛСАН...**

**ПОСЛЕ РОЖДЕНИЯ МЛАДЕНЦА**

Повести

*На чувашском языке*

Редактор *О.Л.Васильева*
Художник *И.В.Алексеев*
Художественный редактор *И.Е.Калентьева*
Технический редактор *Л.К.Егорова*
Корректоры *Н.П.Печникова, Р.И.Крысина*
Компьютерная верстка *Е.Е.Фоминой, Е.Л.Карпеевой*

Общероссийский классификатор продукции ОК 005-93—95 3003.
Изд. лиц. №06317 от 26.11.01. Подписано к печати 30.01.06. Формат 84x108 1/32. Бумага офсетная. Гарнитура Школьная. Печать офсетная. Усл. печ. л. 13,44. Учетно-изд. л. 13,53. Тираж 2000 экз.
Заказ № К-6006. Изд. № 22.

ГУП «Чувашское книжное издательство».
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Отпечатано в ГУП «ИПК «Чувашия».
428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.



Чӑваш кӗнеке издательстви